81
С32
4-39365

В.И. Сергеев

# ЧĔЛХЕ ВĔРЕНТĔВĔН ИСТОРИЙĔ

Вĕренӳ пособийĕ

Шупашкар 2004

Национальная библиотека ЧР
4-039365

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

К
Обязат. экз.
С 32
кр

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТŸ
ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

В.И. Сергеев

# ЧĔЛХЕ ВĔРЕНТĔВĔН ИСТОРИЙĔ

Вĕренŭ пособийĕ

Шупашкар 2004

81г(о)я73

ББК Ш 1г(о)я73
С 322

Рецензенты:
д-р филол. наук, профессор Г.Е. Корнилов,
д-р филол. наук, профессор Л.П. Сергеев

**Сергеев В.И.**
**С 322** История лингвистических учений: Учеб. пособие. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004. 208 с. (На чув. яз.)

ISBN 5-7677-0789-8

Освещены этапы развития мирового языкознания, раскрывается своеобразие всех лингвистических направлений и школ, которые были характерны для прошлых столетий.

Для студентов V курса дневного отделения, VI курса заочного отделения и аспирантов факультета чувашской филологии и культуры.

Ответственный редактор: канд. филол. наук, доцент В.В. Андреев

Утверждено Редакционно-издательским советом университета в качестве учебного пособия

4-39365

ISBN 5-7677-0789-8

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

ББК Ш 1г(о)я73
© Сергеев В.И., 2004

**Сергеев Виталий Иванович**

**ИСТОРИЯ ЛИНГВИСТИЧЕСКИХ УЧЕНИЙ**
**Учебное пособие**

ПРОВЕРЕНО
20 10

Редактор О.М. Садовникова
Корректор О.А. Хлебкова
Верстка А.Ю. Храбровой

Подписано в печать 10.09.2004. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Печать оперативная. Усл. печ. л. 12,09. Уч.-изд. л. 12,0. Тираж 500 экз. Заказ № 547.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

# КӐРТĔМ

Аслă вĕренӳ заведенийĕсен филологи факультечĕсенче «Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн» курсне 1963 çулта вĕрентме пуçланă. «Чĕлхе пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ» («Введение в языкознание») курс вара маларах пулнă. «Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ» «Чĕлхе пĕлĕвĕн кӳртĕмĕнчен» чылай анлăрах, вĕрентессе те «кӳртĕмне» кĕçĕн (I е II) курссенче вĕрентеççĕ, чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне вара студентсем аслă курссенче алла илеççĕ. Вĕрентĕве çапла йĕркеленине тĕрĕс тесе шутламалла: малтан илнĕ пĕтĕмĕшле пĕлĕве студентсем уйрăм дисциплинăсене вĕреннĕ май анлăлатса пыраççĕ, аслă курссенче пĕлӳ шайĕ çӳллĕрех пулнăран вĕсем чылай кăткăс пулăмсене хăйсем тĕллĕн ăсласа илме пултараççĕ.

Чĕлхе пĕлĕвĕ икĕ тĕрлĕ пулать: пĕр-пĕр уйрăм чĕлхен пĕлĕвĕ тата пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ. Уйрăм чĕлхе пĕлĕвĕ чĕлхе пулăмĕсене пайрăммăн вĕреннипе, тĕпченипе çыхăннă, çавăн пекех кунта хурăнташ чĕлхесене пĕлни, чĕлхене танлаштарулла мелпе тĕпчени кĕрет. Чăваш чĕлхине ытти хурăнташ чĕлхесемпе танлаштарса тĕпчеме май пур. Уйрăм чĕлхене е хурăнташ чĕлхесене ӳкерчĕклетсе историн пĕр-пĕр тăрăмне (синхронире) е вĕсен аталанăвĕн анлă тапхăрне илсе (диахронире) танлаштарса çырса кăтартма пулать.

Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсĕнче чĕлхесене типологи тĕлĕшĕнчен те тĕпчеме пулать, кун пек чухне хурăнташ чĕлхе факчĕсене кăна мар, ют чĕлхесен материалне те танлаштармалла тата шайлаштармалла. Çапла майпа вĕсен хушшинчи уйрăмлăхсене кĕретĕн курма пулать.

Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ этемлĕх чĕлхин паллăрах уйрăмлăхĕсене тата пĕрпеклĕхĕсене çырса кăтартать: чĕлхе мĕнле пулса кайни, унăн пĕтĕмĕшле аталану саккунĕсем, функцийĕсем, чĕлхесене тĕпчесси мĕнле теори никĕсĕ çинче тата мĕнле меслетсемпе пулса пыни т.ыт.те. Хальхи саманара пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн тĕрлĕ шкулĕсем пур, чĕлхе теорийĕн ыйтăвĕсене ăнланасси вĕсен кашнин хăйне евĕрлĕ.

Чĕлхе – кăткăс пулăм, унăн функцийĕсем те расна. Чĕлхене тĕрлĕ енчен тĕпчеме пулать. Биологи, физиологи, логика тата психологи наукисем те хăйсен теорийĕсене чĕлхепе çыхăнтараççĕ. Кĕскен каласан, çĕр çинче мĕнле ăслăх (наука) пур, çавсем пурте хăйсен аталанăвне пĕр-пĕр чĕлхепе çырса кăтартаççĕ.

Чĕлхе пĕлĕвĕ тĕп хутшăну хатĕрне тĕпчекен пĕртен-пĕр ăслăх мар. Чĕлхе пулăмĕсемпе, уйрăмлăхĕсене философи, психологи, физиологи, социологи, кибернетикă наукисем те интересленеççĕ.

Чĕлхе философийĕ авалхи грексен ăслăлăх шкулĕнчен пуçланнă. Грексем чĕлхен философи ыйтăвĕсене кăна мар, грамматика ăнлавĕсемпе категорийĕсене те (ят, глагол, падеж) йĕркеленĕ.

Чĕлхе психологийĕ XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче аталанма пуçланă. Психологи чĕлхе тата калаçу уйрăмлăхĕсене, калаканпа итлекен хушшинчи психофизиологи механизмне тĕпчет. Психологи пулăмĕсен ретĕнче туйăм тата сисĕм, ăнкару тата туйăм, туйăм тата кăмăл, кăсăклăх тата кирлĕлĕх, пултарулăх тата кăмăл туртăмĕ, вăй-хал, ăс-хакăл пахалăхĕ тата характер (хавал) текен ăнлавсем пур, çавсене чĕлхепе çыхăнтарса çутатса парасси психологи наукин пĕр енĕ шутланать. Чĕлхене логика, форма тата диалектика енчен тĕпчеме пулать. Чĕлхе пулăмĕсене тĕпе хурса логик шухăшлав саккунĕсене тупса палăртма тăрăшать.

Çĕр çинчи чĕлхесен хисепĕ 3 пин ытла, çав вăхăтрах шухăшлав саккунĕсем пуриншĕн те пĕр. Чĕлхе тĕпчевçин тата логикăн пĕр вĕçĕмсĕрех çакăн пек кăткăс ыйтупа çыхăнма лекет: чĕлхе факчĕсен нумайлăхне шухăшлав саккунĕсен сахаллăхĕпе, ансăрлăхĕпе çыхăнтарасси, сăмахăн пĕлтерĕшĕпе ăнлав хушшинчи уйрăмлăха палăртасси. Логика чĕлхе пĕлĕвĕн ăслăхне аталантарма пулăшнă. Грамматика терминологийĕ те логика витĕмĕпе пулса пынă. Тĕслĕхрен, Аристотель çакăн пек грамматика терминĕсемпе усă курнă: субъект, предикат, объект, атрибут; вăлах пуплев пайĕсене пайламаллине те вĕрентнĕ.

Фонетика пуплеври сасăсене тĕпчесе çырса кăтартас тĕллев лартать. Чĕлхе пĕлĕвĕнче сасăсем (фонемăсем) паллă вырăн йышăнаççĕ. Сасăсем хăйсене уйрăм илнĕ чух пĕлтерĕшсĕр чĕлхе материалĕ шутланаççĕ, анчах вĕсем чĕлхе единицисен пĕлтерĕшлĕхне йĕркелеме пулăшаççĕ. Ку тĕлĕшрен илсен, сасăсем физикăпа (акустикăпа) тата физиологипе (пуплев органĕсен ĕçĕпе) çыхăннă.

Чĕлхен ытти пайĕсене (морфологи, лексикологи т.ыт.те) тĕпченĕ пекех фонетикăна (сасăсене) синхронире тата диахронире тĕпчеме пулать.

Чĕлхе пĕлĕвĕ семиотикăпа – паллăсен тата систерӳ (сигнал) системипе – çыхăннă. Семиотика чĕлхене ытти паллăсен (знаксен) системинче пăхать. Чĕлхе вăл – паллăсен чи кăткăс системи. Семиотика чĕлхене тӳрремĕн сăнас тĕллев лартать, анчах лингвистикăпа танлаштарсан, семиотика чĕлхене урăхла тĕллевпе тĕпчет: ăна паллăсен пĕтĕмĕшле пахалăхĕ çеç интереслентерет.

Çапла майпа, паллăсемпе (знаксемпе) систерӳ (сигнал) системинчи пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене тĕпчекен ăслăха *семиотика* теççĕ.

Чĕлхе вĕрентĕвĕн историне çакăн пек тапхăрсене пайлама пулать:

1) аваллăхри классикăллă филологирен XVIII ĕмĕрти чĕлхе вĕрентĕвĕн тăрăмне çитекен тапхăр;

2) танлаштаруллă истори чĕлхе вĕрентĕвĕ тата чĕлхе философийĕ çуралнă тапхăр (XVIII ĕмĕр вĕçĕ – XIX ĕмĕр пуçламăшĕ);

3) логикăллă тата психологиллĕ чĕлхе вĕрентĕвĕн аталанăвĕ (XIX ĕмĕр çурри);

4) неограмматизм тата чĕлхе социологийĕ аталаннă тапхăр (XIX ĕмĕр вĕçĕ – XX ĕмĕр пуçламăшĕ);

5) XX ĕмĕрти чĕлхе вĕрентĕвĕ тата структурализм (XX ĕмĕрĕн 30-60-мĕш çулĕсем);

6) социолингвистика, психолингвистика тата этнолингвистика аталанăвĕн тапхăрĕ (XX ĕмĕрĕн 60–90-мĕш çулĕсем);

7) антропоцентризм парадигми вăй илсе пыни: çын чĕлхи тата чĕлхере сăнарланнă этем, лингвокультурологи аталанăвĕ (XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсем, XXI ĕмĕр пуçламăшĕ).

Аваллăхри филологирен XVIII ĕмĕрти чĕлхе вĕрентĕвĕн тапхăрне виçĕ пая пайлама пулать: классикăлла тăрăм – аваллăхри филологи, вăтам ĕмĕрсенчи е ун хыççăнхи наукăпа искусство чĕрĕлсе аталанма пуçланă тапхăр тата XVII–XVIII ĕмĕрсенчи чĕлхе вĕрентĕвĕ.

## 1§. Аваллăхри классикăлла филологи

Чĕлхе пĕлĕвĕ – филологи наукин тĕп шăнăрĕ, аталанасса та вăл филологи никĕсĕ çинче аталанма пуçланă. Чĕлхе вĕрентĕвĕн аталанăвĕ малтанах философипе çыхăннă.

Авалхи Индире культура тата философи аталанăвĕ çӳллĕ шайра тăнă вăхăтрах чĕлхене тĕпчес ыйтусем çуралнă.

Çак çĕршыври çырулăх палăкĕсем – ведăсем – пирĕн эрăчченхи V ĕмĕрчченех упраннă. Ведăсем (вĕсем хушшинче чи палли – Ригведа) индуизм тĕнĕн кĕнекисем шутланаççĕ, вĕсене санскрит чĕлхипе çырнă. Ригведăра пысăк пахалăхлă тĕрлĕ сăвă виçипе çырнă 1028 илемлĕ лирика произведенийĕ. Санскрит брахмансен, ăслăхçăсемпе поэтсен чĕлхи шутланнă, вăл пирĕн эрăчченхи V ĕмĕртех кулленхи калаçу чĕлхи пулма пăрахнă. Санскрит литература чĕлхи шутланнă, кулленхи калаçу чĕлхисенчен (пракритсенчен) уйрăлса тăнă. Санскрит грамматикине тĕпчесси хăçан пуçланни паллă мар, веда литературин палăкĕсенчех (ведангăсенче) чĕлхе ыйтăвĕсене хускатни паллă. Сăмахран, ведангăсенчен пĕринче фонетикăпа орфографи ыйтăвĕсене, тепринче – сăвă çырас мелсене, виççĕмĕшĕнче – грамматика материалĕсене, тăваттăмăшĕнче – лексика ыйтăвĕсене хускатнă.

Авалхи Индири чĕлхеçĕсенчен пуринчен те паллăраххи – Панини, вăл пирĕн эрăчченхи IV ĕмĕрте пурăннă. Панинин грамматики “Аштадхьяи” (сакăр пайран тăракан грамматика правилисем), вырăсла – “Восьмикнижие” (4 пине яхăн сăвăласа çырнă правилăсенчен тăрать), вĕсене асра тытмалла ансат çырнă. Ку ĕçре санскрит чĕлхин морфологине тата сасă тытăмне тĕлĕнмелле тĕплĕн çырса кăтартнă.

Ку тапхăрта сăмах тĕпĕ тени сăмах тымарĕ тенипе пĕр пĕлтерĕшлех пулнă, çавна май Панини 1993 сăмах тымарне список туса çырса кăтартать. Çакăн пек çырса кайни пур сăмах та глаголтан пулса кайнă текен шухăша тĕпе хунинчен килнĕ. Ку, паллах, тĕрĕс шухăш мар, анчах та паянхи куна çитсе те çак туртăм этимологи словарьне йĕркелекенсене канăç памасть. Сăмахран, славян чĕлхисен этимологи словарьне (“Этимологический словарь славянских языков”. 1-20 т.) йĕркелекенсем çак шухăша тĕпе хурса чылай сăмахăн этимонĕ е архетипĕ глагол пулнине ĕнентереççĕ.

Панини грамматикинче синтаксис ыйтăвĕсене çутатман, вĕсене морфологи ыйтăвĕсемпе çыхăнтарнă. Грамматикăра 4 пуплев пайĕ пуррине палăртнă: ят, глагол (ĕçхĕл), предлог тата татăк. Япала ячĕ япалана,

глагол ĕçхĕле палăртнине кăтартнă. Местоименисемпе наречисене япала ячĕпе, ĕçхĕлпе пĕрле пăхнă.

Сăмаха тишкернĕ чух индиецсем сăмахсен тĕрлĕ формисене (кўлеписене) илнĕ те пĕр-пĕринпе танлаштарнă, çапла майпа сăмахсен пĕлтерĕшлĕ пайĕсене тупса палăртнă: сăмах тымарĕ, суффиксĕ тата вĕçлемĕшĕ (окончание). Каярах, инди грамматисчĕсен шухăшне тĕпе хурса, Европа чĕлхисен тĕпчевçисем те сăмахсенче сăмах тымарне, сăмах тăвакан, сăмаха улăштаракан морфемăсене палăртма пуçланă.

Япала ячĕн çичĕ падеж пурри çинчен Панини грамматикинчех çырнă, анчах вĕсене хальхи пек ятсемпе палăртман: пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш, улттăмĕш, çиччĕмĕш падеж тесе ят панă.

Индиецсен грамматикинчех шалашри флекси, нуль морфема пуррине палăртнă, пусăм (ударени) тата интонаци мĕнле вырăн йышăннине асăрханă.

Авалхи индиецсем фонетика тĕпчевĕсене никĕслекенсем шутланаççĕ. Авалхи грек ученăйĕсенчен маларах вĕсем чĕлхере хупă тата уçă сасăсем пуррине, сасăсен кĕскелĕхĕпе вăрăмăшне, çурма уçă сасăсем пуррине палăртнă, сăмахсене сыпăксем çине пайлама вĕрентнĕ.

Панини вĕрентĕвне малалла тăсакан нумай пулнă. Сăмахран, пирĕн эрăн XIII ĕмĕрĕнче Вопадева Инди грамматисчĕ санскрит грамматикине çĕнĕрен йĕркелет.

Авалхи Индири грамматистсен шухăшне юнашар тата аякри çĕршывсенче пурăнакан тĕпчевçĕсем те йышăннă. Буддизм сарăлнă май индиецсен грамматикин витĕмĕ Китая та çитет. Пирĕн эрăчченех çак чĕлхе пĕлĕвĕ Перси урлă авалхи Грецие пырса кĕрет. XVII ĕмĕр вĕçĕнче акăлчансем индиецсен чĕлхе пĕлĕвĕн вĕрентĕвне санскритпа паллашнă май ăша хывма пуçлаççĕ, вĕсем урлă чĕлхе пĕлĕвĕн вĕрентĕвĕ Европа тĕпчевçисене тыткăнлать. В.Джонс, акăлчансен тĕпчевçи, индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине никĕслекенсенчен пĕри шутланать. Вăл санскрит авалхи грек тата латин чĕлхисемпе хурăнташлă пулнине

палăртнă. Санскритпа паллашни танлаштаруллă истори чĕлхе пĕлĕвне никĕслеме май панă.

Усă курмалли литература
Тĕп литература

1. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979. – С. 7-10.
2. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М.: Высш. шк., 1974. – С. 6-8.
3. Березин Ф.М. История лингвистических учений. – М.: Высш. шк., 1984. – С. 6-18.

Хушма литература

1. Барроу Т. Санскрит. – М., 1976.
2. Димри Т.П. Панини и его "Восьмикнижие" // Народы Азии и Африки. – 1973. – №6.

## 2§. Авалхи Грецири тата Римри чĕлхе пĕлĕвĕ

Авалхи Индири чĕлхе пĕлĕвĕ тĕн гимнĕсене çырса кăтартнă май аталаннă пулсан, авалхи Грецире чĕлхе пĕлĕвĕ философи çинче никĕсленнĕ. Грецири философсенчен пĕрисем шухăшпа сăмах, япаласемпе вĕсен ячĕсем хушшинчи çыхăну пирки тавлашнă, теприсем логика категорийĕсем грамматика категорийĕсемпе шайлашнипе шайлашманнине сўтсе явнă (тавлашу аналогистсемпе аномалистсем хушшинче пынă).

Авалхи Грецири шухăшлавçăсене япаласене ят пани кăсăклантарнă. Пĕр енчисем (фюзей) япалана ят параcси çутçанталăкри пулăмсемпе тачă çыхăннă, тепĕр енчисем (тезей) япаласене çынсем хăйсем пĕр-пĕринпе килĕшсе ят парçĕ тенĕ.

Çак тавлашăва тытса пыракансен шутне Гераклитпа Демокрита кĕртеççĕ. Гераклит Эфесский (пирĕн эрăчченхи 540-480 ç.ç.) япалапа ун ячĕ хушшинче çирĕп çыхăну пуррине ĕнентерет. Демокрит (пирĕн эрăчченхи 460-370 ç.ç.) Гераклита хирĕçлесе япаласене ят параcси çынсем пĕр-пĕринпе килĕшсе туса пыни тесе палăртать. Çакна ĕнентерекен тĕслĕхсем чĕлхере нумай пулнине

кăтартса парать: 1) сăмахсем темиçе пĕлтерĕшлĕ, апла пулсан тĕрлĕ япаласене палăртаççĕ; 2) хăш-пĕр япаласен темиçе ят, апла пулсан ят парасси çут çанталăкри пулăмсемпе çыхăнман; 3) пурăна-киле япала тепĕр ят туянма пултарать; 4) чылай ăнлава ят пама май килмест.

Япалапа ун ячĕ хушшинчи çыхăну пирки пыракан тавлашу Платонăн (пирĕн эрăчченхи 428-348 ç.ç.) "Кратил" диалогĕнче палăрать. Ку диалога Гермогенпа Кратил хутшăнаççĕ, вĕсен тавлашăвне тӳре пулса татса параканĕ – Сократ. Платонăн шухăшĕ Сократ калаçăвĕнче палăрать. Вăл сăмах яланах япалан несĕллĕхне, тупсăмĕпе тĕшшине палăртать тенипе килĕшмест, анчах хăй сăмахсен этимологине япаласен характерлă паллисем урлă çутатса пама тăрăшмасть. Çавăнпа пĕрлех Сократ япалана ят парасси ăнсăртран пулнине те хирĕçлет, ун пек пулсан çынсем пĕр-пĕрне ăнланман пулĕччĕç, тет вăл. Вăл шутланă тăрăх, сăмахри сасăсемпе вĕсем палăртакан ăнлавсем хушшинче çыхăну пулнă (сасăсен символики, евĕрлев принципĕ). Сăмахран, Сократ шухăшланă тăрăх, ew "юх" тенĕ чухне чĕлхе хăй евĕрлĕ "юхать" (куçать). Фигула шухăшĕпе, vos (эсĕ) сăмаха каланă чух тута калаçакан çын еннелле тăсăлать имĕш.

Апулей ятлă Рим поэчĕ Hostis "Тăшман" сăмаха графика паллисемпе ăнлантарнă: Н саспалли вăрçакансен хушшинчи икĕ вĕçлĕ хĕçе аса илтерет иккен.

Платон вĕрентĕвĕнче пулăхлă шухăш тĕшши те пур пек туйăнать: вăл пуçласа сăмахсем евĕрлеврен (мимемăсенчен е имитативсенчен) пулса кайнине ĕнентерме тăрăшать. Малтанхи сасă символĕсенчен темĕн чухлĕ сăмах хунаса каять, кайрантарах вара çав сасăсемпе пĕлтерĕш е ăнлав çыхăнăвĕсене тупса çитерме те хĕн.

Мĕнле пулсан та çак тавлашу (диалог) чĕлхе пĕлĕвĕн аталанăвĕнче уйрăм вырăн йышăнать. Акă Платон логика (шухăшлав, ăнлав) тĕлĕшĕнчен чĕлхери сăмахсене ушкăнлама тăрăшать, сăмахсене икĕ категорие пайлать: ят сăмахсем тата ĕçхĕлсем

(глаголсем). Ят сăмахсем тесе вăл мĕне те пулин çирĕплетекен сăмахсене калать, предложенире подлежащи пулнине çирĕплетет. Ят сăмахсене глаголсем çирĕплетеççĕ, сказуемăй пулаççĕ.

Аристотель (пирĕн эрăччен 384-322 çç.) грамматика ыйтăвĕсене логикăпа çыхăнтарса çырса кăтартма тăрăшать. Логика тата поэтика ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçĕсем унăн паянхи кун та хăйсен хакне çухатмаççĕ. Аристотель "Поэтика" ĕçĕнче калава сакăр ушкăна уйăрать: элемент (сасă), сыпăк, союз, член, ят сăмах, глагол, падеж, пуплев (предложени – у.к. калаçу). Сасăпа сыпăксăр пуçне ыттисем пурте пĕлтерĕшлĕ.

Пуплев пайĕсем çинчен вĕрентнине Аристотель грамматика ыйтăвĕсемпе çыхăнтармасть пулин те ку вăл грамматика пулăмĕсенче никĕслемелли ĕç пулнă. Аристотель шухăшĕпе тĕп пуплев пайĕсем шутне ят сăмахсем тата ĕçхĕлсем кĕреççĕ.

Философ шухăшĕсене малалла тăсакансем стоиксен шкулĕн представителĕсем пулнă. Стоиксен шкулĕн ертӳçи Хрисипп (пирĕн эрăченхи 280-206 çç.) шухăшĕсене кайрантарах Варрон, Сенека, Августин т. ыт. те çирĕплетсе аталантараççĕ.

Аристотель шухăшĕсене тĕпе хурса стоиксем чылай грамматика пулăмĕсене грамматика категорийĕсен шайĕнче пăхма пуçланă. Сăмахран, стоиксем "пуплев пайĕсем" текен логика терминне грамматика категорийĕ вырăнне пăхма пуçлаççĕ. Авалхи грек чĕлхинче вĕсем 24 сасă (саспалли) пулнине, вĕсен хушшинче уçă тата хупă сасăсем пуррине кăтартнă. Стоиксем 5 пуплев пайĕ пуррине палăртнă: глагол, союз-пĕтĕçтерӳ, член (артикль тата местоимени), пайăр тата пайăр мар ятсене вĕсем пуплев пайĕсем тесе пăхнă. Стоиксем падеж ыйтăвне те татса панă, падежсене вĕсем ят сăмахсемпе кăна çыхăнтараççĕ. Ят (тĕп) падежĕ тесе стоиксем аффикс йышăнман сăмах тĕпне шутланă; камăнлăх, пару, тăву тата чĕнӳ падежĕсем пуррине палăртнă.

Аристотель пултарулăхне икĕ тапхăра пайлама пулать.

*Афины хулинчи пĕрремĕш тапхăр* (367-366 çç.). Вун çичĕ çулхи каччă унта Платон Академине вĕренме кĕрет. Малтан – вĕренекен, кайран – вĕрентекен пулса Афинăра 20 çул пурăнать. Платон унăн ăс-хакăлне пысăка хурса хакланă. 355 çулта, Афинăри влаç Македонири монаперти аллине куçсан, Аристотель пурнăçĕ лайăхланнă, ĕç-пуçĕ ирĕкленнĕ тата çирĕпленнĕ. Çавна май философ тăван хулине – Стагира тухса кайнă, унта виçĕ çул ĕçлесе пурăннă.

*Афины хулинчи иккĕмĕш тапхăр.* 335 çулта, кунта тепĕр хут таврăнсан, Аристотель хăйĕн философи шкулне уçать. Унта вăл тата 20 çул ытла çамрăксене вĕрентет.

Аристотель ĕçĕсем. Аристотель шкулĕ – Ликей – авалхи грексен тĕнчи сўниченех чĕрĕ те вăй-халлă пулнă. "Стагир çыннин" чи хаклă "ачисем" – тĕпчев ĕçĕсем вара ытларахăшĕ ĕмĕрсем витĕр тухма пултарнă. Философ эткерĕ тĕлĕнмелле пысăк. Ăна виçĕ ушкăна пайлама пулать: 1) диалогсемпе ытти хайлавсем; 2) вăл ертсе пынипе калăпланă коллективлă ĕçсем; 3) трактатсем. Анчах диалогсемпе маларах çырнă ĕçĕсем упранса юлайман. Кунта çакна палăртмалла: Афинăри пĕрремĕш тапхăр вĕçĕнчех Аристотель хăйĕн вĕрентекенĕн – Платонăн хăш-пĕр шухăшĕпе тата тĕпчевĕпе килĕшми пулнă. Çакна "Идейăсем çинчен", "Ырлăх çинчен", "Философи çинчен" тата ытти хайлавсем çирĕплетсе параççĕ.

Аристотель трактатсене сакăр пая уйăрать: логика, философи, физика, биологи, психологи, этика, политикăпа экономика, искусство.

Ăсчах философипе искусствăна мифологирен тата тĕнрен уйăрнă. Çав вăхăтрах философи физикăна тата математикăна çывăх пулнине палăртнă. Наука пĕлĕвĕ уншăн тĕнрен, ĕненўрен аякра тăрать.

Наука пĕлĕвĕ – хамăр пухнă опытра калăпланнă элементсемпе (пайрăмсемпе) сăлтавсене, пуçламăшсене тупма усă курнă логика тĕпчевĕн – тишкерĕвĕн результачĕ. "Метафизика" трактатра çапла калани тĕл

пулать: "...Тишкерӳпе, ăслайпа çыхăннă кирек мĕнле пĕлӳре сăлтавĕ те, пуçламăшĕ те пур". Çакăнпа пĕрлех Аристотель Сократăн наука пĕлĕвĕ тĕрĕс тата пĕтĕмлетӳллĕ пулмалли çинчен калакан тезисне те упраса хăварать. "Наука вăл – пĕтĕмĕшлĕхе кăтартни..." – тет вăл "Никомах этикинче". Эппин, наука пĕлĕвĕ логика тĕлĕшĕнчен çирĕпленмелле, пĕр-пĕр япалан е пулăмăн чăн-чăн сăлтавне палăртса хăвармалла. Аристотель тепĕр хут асăрхаттарать: наука тӳрремӗнех доказательствăпа (палăртупа) çыхăннă".

Авалхи философ пĕлĕвĕн виçĕ тĕсне (енне) уйăрать:

1) ăскурăмлăх (умозрительное);
2) ĕçпулăмлăх (деятельное);
3) ӳнерлĕх (творчество).

"Метафизикăра" вăл çапла çырнă: "Всякое рассуждение или "практично", или "поэтично", или "умозрительно".

Аристотель вĕрентĕвĕпе, наука ăнсăртлăхпа та (случайное), улшăнулăхпа та (изменчивое) çыхăнма пултараймасть. "Çавăн пиркиех тĕнчере нимĕнле вĕрентӳ те, тарăн тĕпчев те çук, - тет малалла философ, - мĕншĕн тесен наукăн виçĕ тĕсĕ те асăннă икĕ пулăма йышăнаймасть". Малалла Аристотель çапла çирĕплетет: "Ăс курăмлăх (умозрительное) е теори пĕлĕвĕ виçĕ ене: математикăна, физикăна тата философие пĕрлештерсе тăрать".

Аристотель хăйĕн ĕçĕсенче "теори" наукисене "практика" тата "творчество" (ӳнер) наукисенчен ытларах кăмăллани тата философие чи мала хуни уççăн сисĕнет. Вăл философи математикăпа физикăран та пахарах, тет. Философи ăнкарса пухнă пĕлӳ пулнине, ыттисем "усăллăхпа" тата "тупăшлăхпа" çеç çыхăннине палăртать.

Логикăпа грамматика хушшинчи çыхăнусене те чи малтан авалхи грексен паллă философĕ Аристотель тишкернĕ. Унăн логика тата поэтика çинчен çырнă тĕпчев ĕçĕсем çитес ĕмĕрсенче çав наукăсене вăйлăн аталантарма пулăшнă. Аристотель логикăна шухăшлавăн тĕп формисен, енĕсен калăплавĕ пек ăнланнă, тĕрлĕ формăсене пĕтĕмлетсе форма логикин никĕсне хывнă.

Аристотель логикăпа риторикăна тĕпченĕ май пуплев пайĕсен тытăмне йĕркелет. Çак вĕрентӳре вăл пуплев пайĕсене предложенин уйрăм элеменчĕсем, пайрăмĕсем пек палăртать. Предложени – япала ячĕпе глагол çыхăнăвĕ, кашни пуплев пайĕ уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Глагол, тĕслĕхрен, япала ятĕнчен вăхăт категорийĕпе тата предикативлă функцийĕпе (расналăхĕпе) уйрăлса тăрать: калăпăр, "çын утать" сăмах çаврăнăшĕ "утакан çын" тенине пĕлтерет. Япала ячĕпе глаголсăр пуçне Аристотель çыхăнăва уйăрать.

Хайĕн "Поэтика" тĕпчевĕнче авалхи философ пуплевĕн сакăр пайне палăртать: элемент (сасă), сыпăк, союз, член, япала ячĕ, глагол, падеж тата предложени, тепĕр майлă каласан, çыхăнуллă, вăрăм е кĕске пуплев. Элементсăр (сасăсăр) тата союзсăр пуçне, ытти пуплев пайĕсем пурте – "пĕлтерĕшлĕ". Япала ячĕпе глагол – уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Япала ячĕ ят падежĕнче кăна, унăн ытти формисем тĕрлĕ падежра тата хисепре пулма пултараççĕ. Глагол – хальхи вăхăтăн форми çеç. Унăн ытти формисем – глагол улшăнăвĕсем. Союз е предлог вара – пуплевĕн "пĕлтерĕшсĕр" пайĕсем.

Паллах, Аристотелĕн пуплев пайĕсемпе çыхăннă вĕрентĕвĕ хальхи тытăмпа танлашаймасть. Çавах та вăл грамматика йĕркелĕвĕн шанчăклă никĕсĕ пулса юлнă. Стоиксем, акă, номинатива падеж шайне лартса, сăмах формин тата морфологи категорийĕсен ăнланăвĕсене çирĕплетеççĕ, падеж тата глагол формисене ят параççĕ. Эппин, грамматикăна философирен тĕпренех уйăрасси, сакăр членлă пуплев пайĕсен тытăмĕ вăй илни тӳрремĕнех эллинизм тапхăрĕпе (эпохипе) çыхăннă.

Аристотель грамматика ыйтăвĕсене логика шайĕнче тишкернĕ. Унăн вĕрентĕвĕ грамматика категорийĕсене уйăрас тата классификацилес ĕçе питех те пысăк витĕм кӳнĕ.

Çын пуплевне (калаçăвне) пăхса тухнă май Аристотель "Поэтикăра" çапла çырать: "Кирек мĕнле çыхăнуллă пуплеве те темиçе пая уйăрма пулать: элемент, сыпăк, глагол т. ыт. те. Элемент тени пĕлтерĕшлĕ пулмалла, сăмах тума пултармалла. "Сасă" ăнлав вара сыпăка та, сăмаха та пĕлтерме пултарать.

Уçă тата çурма уçă (хупă) сасăсен пулăмĕ вĕсем хăш вырăнта çуралнинчен килет.

"Сыпăк" (унăн шутне ăсчах местоименисемпе артикльсене те кĕртет) – уйрăм пĕлтерĕшсĕр сасăсен пуххи. Вăл темиçе сасăран пĕр пуплев, пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмах тума пулăшмасть те, чăрмантармасть те. Ăна предложени пуçламăшĕнче те, варринче те лартма юрать. Тепĕр чух вăл пĕлтерĕшлĕ (темиçе пĕлтерĕшлĕ) пĕр сасă та пулма пултарать.

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем Аристотелĕн "элеменчĕсене" – уйрăлми сасă единицисене – (вĕсем, пĕлтерĕшсĕр пулин те, пĕлтерĕшлĕ пуплеве йĕркелеме пултарсан) – фонемăсемпе танлаштараççĕ.

Аристотель – категорисен "ашшĕ" те шутланать. Çак ятпа вăл логикăри чи паллă, пĕтĕмлетӳллĕ ăнлавсене палăртать. Категорисем пурнăçри (объективлă чăнлăхри) япаласемпе пулăмсен чи тарăн ăнлавĕсене (çыхăну, паллăсем т. ыт. те урлă) çӳллĕ шая хăпартса пĕтĕмлетеççĕ.

Ăсчах калашле, пуплевĕн тĕп пайĕсем - япала ячĕпе глагол. Япала ячĕ вăл – сыпăк, вăхăт сĕмĕпе палăртман хăйне майлă сасăсен пуххи. Унăн пĕр-пĕр пайĕ пĕлтерĕшсĕр пулма пултарать. Глагол вара вăхăта палăртакан сыпăк, уйрăм пайсем пĕлтерĕшсĕр пулакан сасăсен пуххи. Тĕслĕхрен, "çын" тата "шурă" тени вăхăта палăртмасть, "килет" тата "килчĕ" сăмахсем вара хушма пĕлтерĕшлĕ: пĕри – хальхи, тепри – иртнĕ вăхăтра. Аристотель шучĕпе, япала ячĕсем тата глаголсем падежа тата нумайлă хисепе пăхăнаççĕ: *çынна, çынсем, каякана, кайрĕç* т. ыт. те.

Çапла вара япала ячĕ пĕлтерĕшĕпе чи пуçламăш формăпа килĕшӳллĕ, апла пулсан вăл ят падежĕнче пулмалла. Ытти падежсем япала ячĕн уйрăмлăхне, раснарах тăрăмне пĕлтереççĕ. Япала ячĕсем çавăн пекех арлăха, амалăха тата несĕллĕхе пĕлтереççĕ.

"Предложени – сыпăк – сыпăклă, пĕлтерĕшлĕ сасă", – тесе палăртать Аристотель. Ку пĕтĕмлетӳ предложение ытти сасăсенчен курăмлăн уйăрма пулăшать. "Кашни предложениех, - çырать грексен философĕ, - глаголсенчен е япала ячĕсенчен тăмасть.

Глаголсăр та пулма пултарать вăл. Сăмахран, этем сăнне-паллисене хакланă чух. Апла пулин те, предложенин уйрăм сыпăкĕсем харпăр хăй пĕлтерĕшлĕ пулма тивĕç". Предложенире япала ячĕпе глагол часчасах грамматика пĕлтерĕшне çеç палăртакан союзсемпе (хушма татăксемпе) тата çыхăну сăмахĕсемпе (связкăсемпе) пĕрлешеççĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, Аристотель хăйĕн ĕçĕсенче сăмахсем семантика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе "çут çанталăк хатĕрĕсем" пулса мар, "килĕшӳ" тăрăх çеç çыхăнаççĕ тесе çирĕплетет. Чĕлхе проблемисемпе авалхи философ ятарласа ĕçлемен, ытти пулăмсене тĕпченĕ май риторикăна е логикăна тишкернĕ чухне кăна хăш-пĕр ыйтусене пăхса тухнă. Ку ахальтен мар, паллах, мĕншĕн тесен Аристотельшĕн сăмах вăл, чи малтан, сасăсен комплексĕ. Сăмахсен семантика сĕмĕ вара, кăмăл-туйăм ху сканăвне палăртса, чĕлхе сферипе (тытăмĕпе) тӳрремĕнех çыхăнса тăмасть. Философ грамматика ăнлавĕсене логика ăнланăвĕсенчен уйăрсах та каймасть. Унăн тĕпчевĕнче сăмахсен лексика йышĕ икĕ ушкăна пайланать: пĕлтерĕшлĕ (семантикăллă) тата пĕлтерĕшсĕр (семантикăсăр). Пĕрремĕш ушкăна япала ячĕпе глагол кĕрет пулсан, ытти пуплев пайĕсем йăлтах иккĕмĕш ушкăнра. Ытти ăнлавсем пирки те çавнах каламалла. Мĕншĕн тесен риторсемпе ытти ăсчахсем эллинсен культури хавшакланса-сӳнсе пынă тапхăрта стилистика ыйтăвĕсемпе тата грамматика категорийĕсене çирĕплетессипе (вăхăт ыйтнă пулин те) питех тарăннăн ĕçлемен. Чĕлхене нумай енлĕн тĕпчессине вĕсем хăйсен тĕп тĕллевĕ тесе шутламан.

"Чĕлхе пĕлĕвĕ" термин ытти ĕмĕрсенче çуралнă ăнлав. Паллах, грексен те, римлянсен те "чĕлхе" текен сăмах пулнă. Анчах пĕтĕмĕшле ăнлав хальхи тытăмран, хальхи ăнкаруран аякра тăнă. Мĕншĕн тесен, чĕлхесен уйрăмлăхне авалхи ăсчахсем сăмахсем мĕнле сасăсенчен тăнине кура хакланă. Семантика аспекчĕ вара пур çĕрте те пĕрешкел шутланнă: шухăшлав (сăмах унăн палли), Платон тата Аристотель шухăшĕпе, пур чухне те пĕр пек.

Аристотель ĕçĕсене паянхи наукăн, çĕнĕ ĕмĕрти пĕлĕвĕн шайĕпе хак пани тĕрĕсех мар. Вĕсем истори эпохисем витĕр тухса халĕ те хăйсен тарăнлăхĕпе тата пĕлтерĕшĕпе тĕлĕнтереççĕ.

Усă курмалли литература
1. Античная литература / А.Ф.Лосев, Г.А.Сонкина, А.А.Тахо-Годи и др.; Ред. А.А.Тахо-Годи. – Вып. 4. – М.: Мин-во просвещения, 1986. – 464 с.
2. Античные теории языка и стиля / Под ред. О.М.Фрейденберг. – М.; Л., 1936. – 342 с.
3. Чанышев А.Н. Аристотель. – М.: Мысль, 1987.

## 3§. Александри грамматикин системи

Александр Македонский çĕнтерĕвĕсене пула грексен культурипе науки Вăтаçĕр тинĕс, Кĕçĕн Ази тата Хура тинĕс таврашне сарăлнă. Филологи аталанăвĕ Пергам тата Александри хулисемпе çыхăннă, ку хуласенче пуян библиотекăсем пулнă. Александри библиотекинче 700-800 пин том таран грек тата Хĕвелтухăç литературипе наука ĕçĕсен куçарăвĕсем упраннă. Александри грамматикĕсем авалхи грек чĕлхипе çырнă текстсене, уйрăмах Гомер, Эсхил, Софокл произведенийĕсене, тĕпчесе тишкерес тĕллев лартнă.

Стоиксен вĕрентĕвне тĕпе хурса Пергам филологĕсем чĕлхере аномалисем пуррине палăртнă, урăхла каласан япалапа ун ячĕ хушшинчи çыхăнусăрлăха кăтартнă; çавăнпа пĕрлех шухăшлав категорийĕсем грамматика категорийĕсемпе шайлашманнине çирĕплетсех каланă. Александри филологĕсем вара шухăшлав категорийĕсемпе грамматика категорийĕсен шайлашулăхне ĕнентернĕ. Çак тавлашăвăн лайăх енĕ те пулнă: чĕлхере аномалисем те, аналогисем те пуррине кăтартма май панă.

Александри ăслăхçисем, тĕслĕхрен, Аристарх (пирĕн эрăчченхи 215-143 çç.) чĕлхе питĕ кăткăс система пулнине ĕнентернĕ. Аристарх Александри библиотекине тытса тăнă май хăйĕн вĕренекенĕсемпе Гомер произведенийĕсен тулли текстне пухса çитернĕ. Аристархăн вĕренекенĕ Дионисий Фракийский (пирĕн



Национальная библиотека Чувашской
4-39365

эрӑчченхи 170-90 ç.ç.) системӑласа çитернӗ пӗрремӗш грамматика çырнӑ, ӑна вӑл "Грамматика искусстви" тесе ят панӑ. Ун шухӑшне малалла аталантарса Аполлоний Дискол (пирӗн эрӑчченхи II ӗмӗр) грек чӗлхин синтаксисне "О синтаксисе" ятпа çырса хатӗрлет. Ку грамматикӑн системи латин тата авалхи славян чӗлхисен грамматикисем урлӑ паянхи грамматикӑсене витӗм кӳрет.

Александри ӑсчахӗсем чӗлхен сасӑ системине те тӗпченӗ. Сасӑсене вӗсем саспаллисемпе пӗрле пӑхнӑ; уçӑ тата хупӑ сасӑсем пуррине палӑртнӑ. Уçӑ сасӑсем кӗске тата вӑрӑм пулнине асӑрханӑ. Дионисий Фракийский дифтонгсем пуррине те каланӑ. Вӗсем малтанхи хут сӑмах "çыхӑнуллӑ калаçӑвӑн чи кӗске пайӗ", предложени (пуплев) "вӗçленнӗ шухӑша пӗлтерекен çыхӑнура тӑракан сӑмахсен пӗрлешӗвӗ" пулнине пӗлтернӗ.

Аристарх 8 пуплев пайӗ пуррине палӑртнӑ: ят, глагол, причасти, член (артикль), местоимени, предлог, наречи, союз. Авалхи римлянсен чӗлхинче артикль пулманнипе вӗсем ун вырӑнне междомети кӗртнӗ.

Пуплев пайӗсене уйӑрнӑ чух ӑсчахсем синтаксис критерине кӑна мар, морфологи паллисене те (сӑмах улшӑнӑвне те), пӗлтерӗш уйрӑмлӑхӗсене те шута илнӗ. Сӑмахран, Дионисий Фракийский япала ятне çапларах палӑртать: "Япала ячӗ вӗçленет, япалана тата кӳлепене (тело) палӑртать: чул – кӳлепе, юрату – япала. Вӑл 5 тӑрӑмра (акциденцире) пулать: несӗл (пол), хисеп, падеж, сӑн-сӑпат (вид) тата сӑнар (образ)". Сӑн-сӑпат (вид) тӗлӗшӗнчен япала ячӗсене пайӑр тата пайӑр мар ятсене уйӑрнӑ, пӗрремӗшле тата иккӗмӗшле пулнине кӑтартнӑ. Ят сӑмахсем падеж тата хисеп тӗлӗшӗнчен улшӑннине палӑртнӑ. Ят сӑмахсем шутне паллӑ ячӗсене те кӗртнӗ.

Глагола падеж тӗлӗшӗнчен улшӑнман, вӑхӑт, сӑпат, хисеп тӑрӑх улшӑнакан пуплев пайӗ пек палӑртнӑ. Дионисий глагол сакӑр категорире пулнине асӑрхать: наклонени, залог, вид, образ (сӑнар), хисеп, сӑпат, вӑхӑт, сӑпатлану. Наклоненисем: кӑтарту, хушу, ӗмӗт, пӑхӑнакан тата паллӑ мар тайӑмсем. Залогсем: ӗçлев,

таврӑну, вӑтам. Видсем (сӑн-сӑпатсем): вĕçленнĕ, тĕллевлĕ, тӑтӑшлӑ тата пуçламӑш. Хисепсем: пĕрреллĕ, йĕкĕрлĕ, нумайлӑ. Сӑпатсем: пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш. Вӑхӑтсем: иртнĕ, хальхи, пулас. Иртнĕ вӑхӑт тӑватӑ тĕслĕ: тӑсӑлакан, малтан иртнĕ, малтан вĕçленнĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр вӑхӑт.

Причастисем тесе ят сӑмахсен тата глаголсен пахалӑхĕсене упракан сӑмахсене каланӑ. Причастин тӑрӑмĕсем ят сӑмахсемпе глаголсенни пекех, анчах вĕсен сӑпат, наклонени категорийĕсем çук.

Пуплев пайĕсене пайланӑ чух вĕсем улшӑннипе улшӑнманнине, сӑпатланнипе вĕçленнине сӑнанӑ. Ытти пуплев пайĕсене тĕсенĕ чух синтаксис критерине (предложенири вырӑнне) е пĕлтерĕшне тĕпе хунӑ.

Член (артикль) – вĕçленекен пуплев пайĕ, вӑл вĕçленекен сӑмах умĕнче те, хыçĕнче те тӑма пултарать. Ун тӑрӑмĕсем: несĕл, хисеп, падеж.

Местоимени – ят сӑмахсем вырӑнĕнче çӳресе вĕçленет.

Предлог – тĕрлĕ пуплев пайĕнчи сӑмахсем умĕнче тӑма пултаракан пуплев пайĕ, унпа сӑмах пулӑвĕнче те, синтаксисра та усӑ кураççĕ. Çапла майпа предлог тытӑмĕнче префикс та пулнӑ. Хӑй вӑхӑтĕнче А.А.Шахматов префикс пуплев пайĕ пулнине палӑртнӑ.

Наречи – улшӑнман пуплев пайĕ, вӑл глагол çумне хушӑнать е глагола хушма пĕлтерĕш парать. Унӑн тӑрӑмĕсем виççĕ: пĕлтерĕш, сӑнар, танлаштару.

Союз шухӑша йĕркелеме пулӑшакан пуплев пайĕ, унӑн тӑрӑмĕсем виççĕ: сӑнар, йĕрке, пĕлтерĕш. Союзсем çыхӑнуллисем, пӑхӑнуллисем, сӑлтавлаканнисем т. ыт. пулнине палӑртнӑ.

Александри шкулĕн вĕрентĕвĕ римлянсене куçнӑ.

## 4§. Авалхи Римри чĕлхе пĕлĕвĕ. Антика чĕлхе тĕпчевĕн пĕлтерĕшĕ

Грексен грамматики Рима пирĕн эрӑчченхи II ĕмĕрте лекнĕ, ӑна 167 çулта Пергам шкулĕн чĕлхеçи Кратес илсе çитернĕ. Рим ӑсчахĕсем ытларах стилистика тата риторика ыйтӑвĕсемпе кӑсӑкланнӑ. Гай

Юлий Цезарь грек чӗлхинчи аблатив текен падеж ҫуккине асӑрхаса латин чӗлхине ҫак падежа кӗртнӗ. Латин чӗлхинче ку падеж анлӑ пӗлтерӗшлӗ, ҫавна май ҫав пӗлтерӗшсене палӑртма тӗрлӗрен сӑмах майлашӑвӗсем йӗркеленнӗ: ablativus material (япалалӑх аблативӗ), ablativus temporis (вӑхӑт аблативӗ), ablativus mensurae (виҫе аблативӗ), ablativus modi (ӗҫ йӗрки аблативӗ), ablativus loci (вырӑн аблативӗ) т. ыт. те.

Рим грамматисчӗсенчен чи палли – Марк Теренций Варрон (пирӗн эрӑчченхи 116-27 ҫ.ҫ.). Вӑл "Латин чӗлхи" сочиненине 25 кӗнекене вырнаҫтарнӑ, вӗсенчен улттӑшӗ кӑна пирӗн ӗмӗре ҫитнӗ. Аномалистсемпе аналогистсем хушшинчи тавлашӑва вӑл ҫапла тӳрре кӑларнӑ: сӑмах улшӑнӑвӗ вӑл – аналоги, сӑмах пулӑвӗ – аномали.

Марк Фабий Квинтилиан (пирӗн эрӑн I ӗмӗрӗ) "Сӑмах ӑсталӑхӗ" (Institutio oratoria) учебник хатӗрленӗ, унта грамматика ыйтӑвӗсене те ҫутатнӑ. Пирӗн эрӑн IV ӗмӗрӗнче Римра Элия Донатӑн "Ars grammatica" тулли варианчӗ тата "Ars minor" кӗскетнӗ вариантпа тухнӑ грамматика пурри паллӑ. Пирӗн эрӑн VI ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнче Константинопольте Рим грамматисчӗ Присциан латин грамматикине "Institutiones grammaticae" ятпа туллин те тӗплӗ ҫырса хатӗрленӗ. Вырӑсла ӑна пӗрисем "Учение о грамматическом искусстве", теприсем "Грамматическое учение" ятпа куҫараҫҫӗ.

Донатпа Присциан грамматикисем латин чӗлхине ҫырса кӑтартмалли эталонсем вырӑнне шутланнӑ, ҫак грамматика тӗслӗхӗсене тӗпе хурса пин ҫул хушши ытти грамматикӑсене йӗркеленӗ.

Европа чӗлхисен грамматика системи вара XIX ӗмӗрччченех грексен тата римлянсен грамматика вӗрентӗвӗ ҫинче никӗсленнӗ.

Классикӑлла аваллӑхра чӗлхе пӗлӗвӗн хӑш–пӗр ыйтӑвӗсене кӑна ҫутатса панӑ: уйрӑмах морфологи, фонетика ыйтӑвӗсене туллин тӗпченӗ (авалхи Инди грамматисчӗсен ӗҫӗсем). Лексикологи ыйтӑвӗсене никам та ҫӗклемен. Чӗлхе пӗлӗвӗн ыйтӑвӗсене пӗтӗмӗшле филологи тата философи ыйтӑвӗсенчен уйӑрса ҫырса кӑтартни те пысӑк ӳсӗм пулнӑ. Анчах та санскрит,

авалхи грек, латин чĕлхисем çеç тĕпчеве тивĕç пулнă, ытти чĕлхесене ку тапхăрта тĕпчекен пулман. Ку чĕлхесене пĕр-пĕринпе танлаштарса çырса кăтартни те питĕ ансат. Рим грамматисчĕсем латинпа грек чĕлхисене танлаштарса çырса кăтартма хăтланнă.

Александри шкулĕн ăсчахĕсем грамматикăна уйрăм дисциплина шайне çĕкленĕ: пухнă материалпа усă курса ят сăмахсемпе глаголсен тĕп категорисене тупса палăртнă. Грексемпе римлянсен грамматика тĕпчевĕсенче çитменлĕхсем те пур: вĕрентĕве философи шайĕнче никĕсленĕ пирки логика категорийĕсене грамматика категорийĕсемпе пăтраштарнă. Вĕсем ытти чĕлхесене варварсен чĕлхисем тесе, вĕсене вĕренес тата тĕпчес тĕллев лартман.

Усă курмалли литература

Тĕп литература

1. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М.: Высш. шк., 1974. – С.8-12.

2. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979. – С.11-19.

Хушма литература

1. Античные теории языка и стиля / Под ред. О.М.Фрейденберг. – М.;Л., 1936.

2. Аристотель. Метафизика. – М.; Л., 1934.

3. Тронский И.М. Вопросы языкового развития в античном обществе. – М., 1973.

## 5§. Наукăпа искусство чĕрĕлсе аталанма пуçланă тапхăрти чĕлхе пĕлĕвĕн аталанăвĕ (вăтам ĕмĕрсемччен тата вĕсем хыççăн)

Вăтам ĕмĕрсем 476 çултан пуçласа (варварсем Рима çаратса çунтарнă вăхăтран) 1492 çулччен (Христофор Колумб Америкăна уçнă тапхăра çитиччен) тăсăлаççĕ. Çак тапхăрта ăслăх (наука), чĕлхе пĕлĕвĕ аталанман. Вăтам ĕмĕрсенче латин чĕлхине кăна хисеп тунă. Донатпа Присциан грамматикисене çине тăрсах вĕреннĕ. Грамматика ăслăх тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырмалли тата каламалли искусство шутланма тивĕç пулать. Вăтам

ёмӗрсенче сӑмах искусствине гуманитари наукисен шутне кӗртеҫҫӗ: грамматика – ҫыру ӑсталӑхӗ, диалектика – тавлашу, риторика – калаҫу ӑсталӑхӗ пулса тӑрать.

Латин чӗлхи (латынь) Хӗвеланӑҫ Европӑра наука тата чиркӳ чӗлхи шутланнӑ. Латин чӗлхин правилисем ирӗккӗнех ытти чӗлхесене витӗм кӳнӗ, вӗсен хӑйевӗрлӗхӗсене сивленӗ. Латынь логика шухӑшлавӗн никӗсӗ шутланнӑ, грамматика категорийӗсене логика категорийӗсемпе шайлаштарма пуҫланӑ. Ҫак туртӑм кайрантарах философи грамматикине йӗркелештерме ҫул уҫса панӑ. Ку вӑл универсали грамматикин никӗсӗ: пӗлтерӗше палӑртас тӗлӗшӗнчен пур чӗлхе те пӗр, анчах вӗсем ҫав пӗлтерӗше палӑртмалли мелсен расналӑхӗпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Ку тапхӑрта реалистсемпе номиналистсем хушшинче тавлашу пынӑ. Реалистсен представителӗ Ансельм, Кентербери епископӗ (1033-1109) Франци философӗпе П.Абелярпа (1079-1142) тавлашӑва кӗнӗ. Ку тавлашу материалистсемпе идеалистсен тавлашӑвне аса илтерет.

## 6§. Араб чӗлхе пӗлӗвӗ аталанни

VII-XIII ёмӗрсенче Араб халифачӗ текен патшалӑх пысӑк территори йышӑнма пуҫлать. Халифатра тӗрлӗ халӑх пурӑннӑ, ислам (магометан тӗнӗ) патшалӑх тӗнӗ шутланнӑ, ӗҫ, ӑслӑх хучӗсене арабла ҫырнӑ. Халифатра чӗлхе пӗлӗвӗ аталанасси (авалхи Индири пекех) Коран вилӗ чӗлхипе чӗрӗ чӗлхесен хушшинчи танмарлӑхсене танлаштарассипе ҫыхӑннӑ. Классикӑлла араб чӗлхине чӗрӗ чӗлхесемпе диалектсен витӗмӗнчен хӑтарас тӗллев пулнӑ.

Малтанхи грамматика ӗҫӗсем Басра тата Куф хулисенче ҫуралнӑ: икӗ хула – икӗ шкул, вӗсем хушшинче темиҫе ӗмӗр хӗрӳ тавлашу пынӑ, грамматика наукин центрӗ Багдада (Араб Халифачӗн тӗп хулине) куҫсан тин вӗҫленнӗ. Сибавейхи грамматист (793 ҫулта вилнӗ) "Аль-Китаб" ("Кӗнеке") ятлӑ пысӑк ӗҫ ҫырса хатӗрленӗ.

Пуплев пайёсене уйăрнă чух арабсем Аристотельтен тĕслĕх илнĕ, ят сăмахсене, глаголсене тата пулăшу сăмахĕсене тĕпе хунă. Араб филологĕсен юратнă ĕçĕ лексикографи пулнă. Халил аль-Фарахиди (718-791) чĕлхеçĕ-учитель пĕрремĕш словарь "Китаб ал-Айн" ("Книга Айна") хатĕрленĕ; Фирузабади перс (1329-1414) "Камус" ("Океан") ятлă словарь пухса калăпланă.

Араб чĕлхе пĕлĕвĕн историйĕнче Махмуд Кашгарский ячĕ уйрăмах палăрса тăрать. 1073-1074 çулсенче вăл тĕрĕк чĕлхисен пуян материалне пухса темиçе томлă "Диван лугат ат-турк" ("Собрание турецких языков") ĕç хатĕрленĕ. Ку ĕçе тĕрĕк энциклопедийĕ тесе хаклама пулать, унта автор чĕлхесене танлаштарас тĕллеве тытса пырать. Махмуд тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикипе лексикологин никĕсне хываканĕ шутланать, пуçласа уçă сасăсен сингармонизмĕ çинчен калать. Шел пулин те, ку ĕçе хăй вăхăтĕнче асăрхаманнипе вăл чĕлхе пĕлĕвне пĕтĕмĕшле витĕм кӳреймен. Махмудăн ĕçне 1912-1915 çулсенче кăна Стамбулта пичетлесе кăларнă. Вăтам ĕмĕрсенче Европăра чĕлхе пĕлĕвĕ аталанман терĕмĕр, арабистика вара ку вăхăтра пĕр вырăнта тăманни паллă. Арабсенчен илнĕ чĕлхе пĕлӳлĕхĕ ăслăх тĕлĕшĕнчен ытти халăхсен чĕлхисене тĕпчеме майсем туса панă.

## 7§. Кашгар Махмучĕ – пирвайхи тюрколог-энциклопедист

Тĕрĕксен пирвайхи ученăй-энциклопедисчĕ Кашгар Махмучĕ (арабла Махмуд ал-Кашгари) çинчен питĕ сахал пĕлетпĕр эпир. Хăй çырса хăварнă "Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ" (арабла "Диван(у) лугат ат/ит – тӳрк") кĕнекесĕр пуçне унăн пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан пĕр историллĕ документ та упранса юлман.

Паянхи кунччен те Кашгар Махмучĕ ăçта, хăçан çурални, вăл хăш çулта вилни, "Тĕрĕк чĕлхисен мулне" ăçта çырни уçăмлă мар. Вăл çырнă кĕнекесене

тишкерсе тухсан кăна ун çинчен сăмах хускатма пулать.

Кĕнекен 1-мĕш страницинче авторăн тулли ятне курма пулать. Арабла çапла çырса хунă: "Махмуд ибн ал-Хусейн ибн Мухаммед". Чăвашла каласан ку: Мухаммед ывăлĕ Хусейн ачи Махмуд е Мухаммед Хусейн Махмучĕ тени пулать. Кашгар Махмучĕн ашшĕ Хусейн ибн Мухаммед Хусейнĕ ятлă пулнă.

Кашгар Махмучĕ çуралнă çула тĕпчевçĕсем татăклăн каламаççĕ, анчах 1029-1038 çулсем хушшинче çуралнă теме пулать.

Махмуд ашшĕ, Мухаммед Хусейнĕ, Барсхан хулинче çуралса ÿснĕ. Каярахпа вăл Кашгар хулине куçнă. Китай докуменчĕсем тăрăх Кашгар хули VI ĕмĕртенпех паллă, тĕрĕксем вăл хулана Ордукенд – "тĕп хула" тенĕ. Халĕ вăл Китай халăх республикин Синцзян-уйгур автономи облаçне кĕрет.

Махмуд Кашгарта çуралнă пулмалла, çавăнпа вăл каярахпа ал-Кашгари хушамата (нисбу) йышăннă. Арабсем хушамата çуралнă е каярахпа пурăннă хула ятне пăхса панă. Махмуд ал-Кашгари тени чăвашла Кашгарти Махмуд е Кашгар Махмучĕ тени пулать.

Кашгар Махмучĕн тăван-пĕтенĕсем çинчен "Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ" кĕнекен хăш-пĕр йĕркисенчен пĕлме пулать. "Пирĕн ăру-несĕл тăхăмĕсене огузсем хэмир (эмир) теççĕ..." – çырать Кашгар Махмучĕ. Апла пулсан Мухаммед Хусейнĕ е эмир, е бек пулнă (чăвашла ĕмпӳ). Вăл огузсем пурăнакан çĕрсен ĕмпĕвĕ пулнă, унăн çарĕнче огуз халăхĕ йышлă пулнă. Ку вара Кашгар Махмучĕн йăх тăхăмĕсем караханидсен ăрăвĕнчен тухнине пĕлтерет, вĕсем Барсхан ĕмпĕвĕ йăхĕнчен пулма пултарнă. Истори докуменчĕсем тăрăх эпир XI ĕмĕрте Хусейн ибн Мухаммед Барсхан ĕмпĕвĕ пулнине пĕлетпĕр, вăл никам та мар, Кашгар Махмучĕн ашшĕ – Мухаммед Хусейнĕ иккен.

Кашгар Махмучĕ караханидсен несĕлĕнчен тухнă пирки иккĕленме кирлĕ мар. Кăна "Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ" кĕнекери çак йĕркесем те çирĕплетсе параççĕ: "Пирĕн йăх саманидсенчен – тĕрĕксен çĕрĕсене вăрçăпа туртса илнĕ эмир ăрăвĕнчен пырать, ăна хэмир (эмир)

текин тесе чĕннĕ", – çырса хăварнă автор. Унтан тата тепĕр çĕрте: "Эпĕ чи сумлă, пысăк ятлă-шывлă тĕрĕксен ăру-несĕлĕнчен тухнă", – тени пур.

Кашгар Махмучĕ лексикограф, лингвист, этнограф, фольклорист, историк, географ пулнă. Вăл вăхăтра ятлă-сумлă çемьерен тухнă çынсем кăна тĕрлĕ енлĕ, тарăн та пысăк пĕлӳ илме пултарнă. Çак факт та Кашгар Махмучĕ караханидсен несĕлĕнчен тухнине çирĕплетсе парать.

Кашгар Махмучĕ Илег хан вăхăтĕнче политикăпа культура центрĕ пулса тăнă Кашгар хулинче вăтам пĕлӳ илнĕ, çавăнтах вăл аслă пĕлӳ илме те пултарнă.

X-XI ĕмĕрте пурăннă тĕрĕк халăхĕсене нумай чухне выльăх-чĕрлĕх кĕтсе çеçен хир тăрăх куçса çӳрекен халăх тесе шутлаççĕ. Капла шутлани тĕрĕс мар иккен. XI ĕмĕртех тĕрĕк халăхĕсен ăслăлăхĕ, культурипе искусстви çӳллĕ шайра тăнă. Тĕрĕксен вăйлă аталаннă пысăк хуласем – Нишапур, Мервă, Бухара, Самарканд – наукăпа культура центрĕсем пулнă. Пирĕн эра пуçламăшĕнче куçса çӳренĕ халăхсем XI ĕмĕрччен тымар ярса пурăнма тытăннă, хуласемпе кишлаксенче хăйсен наукипе культурине никĕсленĕ.

XI-XII ĕмĕрсенче ислам тĕнне тытакан пур çĕршывсенче те, вăл шутра Кашгарта та, шкул программи тăрăх вĕренекенсене араб грамматики, мăсăльман тĕнĕн догматики, юриспруденци, арифметика, Коранпа хадис кăна вĕрентнĕ. Лингвистика, истори, географи, этнографи ăслăлăхĕсене Кашгар Махмучĕ, ахăртнех, каярахпа алла илнĕ пулас. Вăл темиçе тĕрĕк чĕлхипе калаçнă, арабла та, персла та пĕлнĕ. Кашгар Махмучĕн кун-çулĕпе интересленекенсем, унăн тĕпчевĕсене сӳтсе явакансем тĕрĕк ученăйĕ Бухара, Самарканд, Багдад, Нишапур, Мервă хулисенче вĕреннине тĕшмĕртеççĕ. Хăйĕн пĕлĕвĕсене Кашгар ăсчахлăхĕ нимрен ытла Багдадра туптанă пулмалла, унсăр пуçне "Тĕрĕк чĕлхисен мулĕнче" Бухарапа Нишапур хулисене асăнса хăварнă.

"Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ" кĕнекене çырма пуçăниччен Кашгар Махмучĕ тăван вырăнсене пăрахса тĕрĕк халăхĕсемпе йăхĕсем пурăнакан нумай вырăнсене çитнĕ,

лингвистика, фольклор, этнографи, истори материалĕ пухнă.

Кунтан эпир Кашгар Махмучĕ тăван чĕлхене, тăван халăха юратнине куратпăр. Вăтам Азире вăл вăхăтра араб чĕлхи тĕрĕк элĕсенчи патшалăх чĕлхи пулса тăнă: ĕçлĕ хутсене арабла çырнă, шкулсенче арабла вĕрентнĕ. Тĕрĕксен калаçăвне те араб сăмахĕсем йышлă кĕме тытăннă. Хăйĕн ĕçĕпе Кашгар Махмучĕ тĕрĕк чĕлхисем араб чĕлхисенчен нихăш енчен те кая юлманнине кăтартса парасшăн пулнă-тăр, çапла вара тĕрĕк чĕлхисен витĕмне ÿстерме май пулнă.

Мăсăльман тĕнчинче ку вăхăтра тĕрĕксем вăй илсе пынă, вĕсен çар тата политика витĕмĕ ÿссе пынă, тĕрĕк халăхĕсен культури тĕрлĕ енлĕ аталаннă. Çакна витĕр курса тăнă Кашгар Махмучĕ тĕрĕк халăхĕсен кун-çулĕшĕн хĕпĕртенĕ, мăнаçланнă, вĕсем çинчен кĕнеке çырса ытти халăхсен умне кăларас шут тытнă. Çав ĕçре тĕрĕк халăхĕсен чĕлхисене, йăли-йĕркине, культурине, сăмахлăхне, иртнĕ саманари кун-çулне, ăслăлăхĕсене çутатса парас тĕллев лартнă.

“Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ” кĕнеке алçырăвне 1914 çулта Турцире тупнă. Ăна Али Эмири ятлă ученăй-библиофил Истамбулри кивĕ кĕнеке пасарĕнче туяннă. Кĕнеке алçырăвне Килисли Муаллим Рифат Билые ятлă çын тирпейлесе йĕркеленĕ те, Çутĕç Министерстви хушнипе пичете панă. Кĕнеке алçырăвне араб саспаллийĕсемпе наборласа 1915 (I-II томсем) – 1917 (III том) çулсенче Истамбулра 3 томпа пичетлесе кăларнă. “Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ” кĕнеке çапла майпа иккĕмĕш хут çуралса хăйĕн авторне – тĕнчери пĕрремĕш тюрколог-энциклопедиста – тивĕçлĕ мухтава кăларнă.

Тĕпчевçĕсем шутланă тăрăх, Махмуд хăй ĕçне Кашгар хулинче çырнă. Хăй çуралнă хулара илнĕ пĕлÿсене тарăнлатма вăл Вăтам Азири культурăпа наука центрĕсене – Бухара, Нишапур, Самарканд хулисене кайса вĕренет, Багдада çитет, тĕрĕк чĕлхисен пуянлăхне пухса тĕпчесе словарь кăларма шут тытать. Çав тĕллеве пурнăçлас йÿтĕмпе тĕрĕк халăхĕсен çĕршывĕсем тăрăх çÿресе çаврăнать, тăван хулана, Кашгара, пуян материал илсе таврăнать те 1072 çулта

“Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ” кĕнеке ҫырма ларать. Ĕҫе вĕҫлесен хайлавне ал-Мухтади ятлă Багдад халифне парнелет. Тĕпчевҫĕсем шутланă тăрăх, Кашгар Махмучĕ хăй ĕҫне 1074 ҫулта вĕҫленĕ, каярахпа ăна тăвата хутчен юсаса ҫырнă.

“Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ” кĕнекере тĕрĕк халăхĕсем ҫинчен калакан ҫав тери пуян материал тупма пулать. Кунта 3000 яхăн таса тĕрĕк сăмахĕсем, вĕсене пурне те арабла тĕрĕс куҫарса панă. Ытти халăхсенчен йышăннă сăмахсене словаре кĕртмен. Хăйĕн пысăк ĕҫне автор танлаштару меслечĕ ҫинче никĕслет.

Кашгар Махмучĕн “Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ” кĕнеки содержани тĕлĕшпе вăл вăхăтри словарьсенчен чи пуянни пулса тăрать. Унта:

1) тĕрĕк лексикин пуянлăхне йăхсем тăрăх уйăрса панă;

2) ăҫта, мĕнле тĕрĕк йăхĕсем пурăннине ҫырса кăтартнă;

3) тĕрĕк чĕлхисене ушкăнласа тухнă;

4) тĕрĕк чĕлхисен историлле фонетикине, грамматикине тишкернĕ;

5) тĕрĕксен историйĕпе, этнографийĕпе, поэзийĕпе, сăмахлăхĕпе паллаштаракан пуян материал илсе кăтартнă;

6) тĕрĕксен чи авалхи тĕнче карттине ӳкерсе панă.

Словарь иллюстраци материалĕпе пуян: вăл шутра 300 ытла ҫаврăм халăх сăвви-юрри, тĕрлĕ сăвăҫсен хайлавĕсен сыпăкĕсем, виҫҫĕре яхăн каларăшсемпе ваттисен сăмахĕсем, чĕрĕ калаҫу тĕслĕхĕсем, паттăрлăх эпосĕн сыпăкĕсем, тупмалли юмахсем, йăла юррисем...

Словарьте ҫапăҫăва кĕме чĕнсе ҫырнă сăвăсем те пур. Ку сăвăсенче ҫапăҫу пулса иртнĕ вырăнсене те асăннă. Тĕслĕхрен:

> Выступим-ка мы (в поход) ночью,
> переправимся через реку Ямар,
> напьемся родниковой воды,
> пусть будет разбит вдребезги слабый враг.

Илсе кăтартнă йĕркесем эпосри паттăрăн ҫапăҫăва кĕрес умĕнхи монологĕ пек янăраҫҫĕ. “Тангутсемпе ҫапăҫни” сăвăра Махмуд Кашгари бексемпе тĕрĕк

халăхĕсен паллă çыннисен паттăрла ĕçĕсем çинчен çырнă:

Он бился, насколько хватало его сил,
Он взывал к (своим) соплеменникам.
Он приблизился к войску.
Придя к нам, он платит местью.

Паттăр хăйĕн ĕçĕсемшĕн мухтанса çырнă сыпăксем те пур:

Разгневавшись, я направился (на врага),
я зарычал, словно лев,
я рубил головы героев.
Кто меня теперь удержит?

"Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ" кĕнекене лирикăлла юрăсем те кĕнĕ. Уйрăмах икĕ элеги пысăк пĕлтерĕшлĕ: пĕрремĕшне паллă мар паттăр тăшмана çĕнтерсе пуçне хуни çинчен çырнă; иккĕмĕш элегинчи – Алп Эр Тонга вилĕмĕ – философиллĕ ярăм. Алп Эр Тонга – бексен бекĕ. Бек тĕрĕк халăхĕсен хан хыççăнхи чи пысăк пуçлăх шутланнă. Махмуд Кашгари те, Юсуф Хас Хаджиб Баласагуни те, Алп Эр Тонгана Афрасияб теççĕ. Баласагуни кун пирки çапла çырать:

Среди тюркских беков имя его было известно,
Его звали Тонга-Алп, знаниями славился он,
Был умен и прозорлив.
Таджики его, Алп Эр Тонгу, назвали Афрасиябош.

Афрасияб походсене çӳресе тĕрлĕ çĕршывсене çĕнсе илнĕ. Баласагуни шучĕпе, Алп Эр Тонгу – туран халăхĕсен мифла ертӳçи.

В.В.Бартольд туранецсем пирки çапла çырать: "...ку ят Авестăра тĕл пулать, вĕсене арий халăхĕсен пĕр йăхĕ пек пăхаççĕ."

Çак икĕ халăх, ариецсемпе туранецсем, пĕр-пĕринпе вăрçса пурăннă. VI ĕмĕрте Туркестан тĕрĕксен пусмăрне лексен, вĕсем пĕрлешсе Туран ятпа çӳреме тытăнса тĕрĕк халăхĕсен йышне кĕреççĕ.

Махмуд Кашгари Алп Эр Тонга ячĕпе çыхăннă нумай топонимика халапĕсене илсе кăтартать. Вăл çапла çырать: "Каз – Афрасияб хĕрĕн ячĕ. Çак тымартан икĕ хула ячĕ пулса кайнă: Казвин тата Кум (тĕрĕк сăмахĕ – "песок"). Ку хуласенче Афрасияб хĕрĕ

сунара çӳренӗ. Каз ашшӗ – Тонга Мерва хулине никӗслекенӗ пулнӑ. Ку хулана чӑн малтан Тахмурас тунӑ, унта вӑл виçӗ крепость хӑпартнӑ. 300 çултан çак крепоçсене Афрасияб хӑпартса пӗтернӗ. "Юнгу" (Енку) – Афрасияб ывӑлӗ никӗсленӗ Барман хули çывӑхӗнчи хула ячӗ. "Каз суви" – Илья çывӑхӗнчи пысӑк çеçенхир ячӗ. Çак çеçенхир ячӗ Афрасияб хӗрӗ юханшыв çинче хӑпартнӑ крепость ятӗнчен тухать. "Барасган" - Афрасияб ывӑлӗн ячӗ. Вӑл Барасган хулине никӗсленӗ. Барасган Махмуд Кашгари ашшӗн тӑван çӗршывӗ шутланать.

Кашгар Махмучӗ словарьте Сиявуша вӗлерни çинчен анлӑ сарӑлнӑ халап илсе панӑ: "Сиявуш – Афрасияб хӗрӗн упӑшки. Сиявуша Мавераннах çыранӗ хӗрринче вӗлернӗ. Зороастриецсем кашни çул унӑн вил тӑприйӗ патӗнче чӳк тӑваççӗ».

Кашгар Махмучӗ авалхи тӗрӗксен интимлӑ лирики çинчен те нумай çырнӑ:

> Меня пленяют темные глаза,
> черная родинка, румяное лицо.
> Они источают совершенную красоту.

Авалхи тӗрӗксем панегирика жанрӗпе те усӑ курнӑ. Ку жанрпа çырнӑ тӗслӗх те илсе парать Кашгар Махмучӗ:

> Госпоже правительнице поднеси от меня стихи,
> Скажи: «Ваш слуга испрашивает новую службу».

Словаре пейзаж лирикипе çырнӑ тӗслӗхсем нумай кӗртнӗ:

> Когда восходит светлая звезда,
> я просыпаюсь (и) гляжу –
> щебеча (и) чирикая,
> сладкими голосами поют птицы.

Кашгар Махмучӗ тӗрӗк литературинче пуçласа диспут жанрӗпе çырма тытӑнать. Словарьте 23 тӑватӑ йӗркеллӗ сӑвӑсенчен тӑракан хӗллепе çулла тавлашни çинчен çырнӑ сӑвӑ пур. Кашгар Махмучӗ хыççӑн ытти тӗрӗк поэчӗсем те çак формӑпа çырма тытӑнаççӗ. Диспут-сӑвӑсем словарьте тӗрӗк халӑхӗсен тӗнчине сӑнласа параççӗ.

Тĕпрен илсен, «Тĕрĕк чĕлхисен мулĕ» кĕнеке – XI ĕмĕрте пурăннă тĕрĕк халăхĕсен пурнăçĕпе паллаштаракан чăн-чăн энциклопеди.

Усă курмалли литература:

1. Кононов А.Н. Махмуд Кашгарский и его “Дивану лугат ит-тӳрк” // СТ. – 1972. – №1.

2. Х.Кор-оглы. Узбекская литература. – М.: Высш. шк., 1976.

3. Большая советская энциклопедия. 2-е изд. – Т.26.

4. Малов С.Е. Махмуд Кашгарский // Памятники древнетюркской письменности. – М.; Л., 1951.

## 8§. Чĕлхе пĕлĕвĕ XV-XVIII ĕмĕрсенче аталанни. Универсаллă логика грамматики

XV-XVI ĕмĕрсенче тĕрлĕ чĕлхепе çырнă грамматикăсем тухаççĕ, вĕсен хушшинче эрмен, перс, венгр, яппун, корей, испан, нидерланди, француз, акăлчан, поляк, чех, мексика тата ацтек чĕлхисене асăнма пулать.

Тĕн кĕнекисене текстологи тĕлĕшĕнчен тĕпчени классикăлла филологие çĕнĕрен чĕртсе тăратма пулăшать. 1540 çулта Ж.Скалигерăн “Латин чĕлхин никĕсĕсем”, 1553 çулта Р.Стефанусăн (Р.Этьенăн) “Латин чĕлхин пуянлăхĕ” ĕçĕсем тухаççĕ. Грек чĕлхине тĕпчекенсем И.Рейхлин, Ф.Меланхтон пулнă. Уйрăмăнах А.Стефанусăн (А.Этьенăн) “Грек чĕлхин пуянлăхĕ” ĕçе палăртмалла.

Çак вăхăтрах семит (араб) чĕлхисене тĕпчес ĕç пуçăнать. 1505 çулта П. де Алкал çырнă араб грамматики кун çути курать. Эрпениус тата И.Лудольф ĕçĕсем иврит (авалхи еврей чĕлхи), арамей, араб, эфиоп чĕлхисен грамматикине тĕпчес, лексикографи ĕçне пуçарас ĕçре уйрăм вырăн йышăнаççĕ.

Вăтам ĕмĕрсенче тата Возрождени тапхăрĕнче классикăлла авалхăн филологи шухăшĕсем çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнă пулсан, XVII-XVIII ĕмĕрсенче палăрмалла улшăнусем пулса иртнĕ.

Капитализм аталанма пуçлани виçĕ юхăма çул уçса панă – Ренессанс, Реформаци тата Çутĕç (Просвещение). Ренессанс феодаллă чиркӳ культури арканнине, Реформаци тени Рим папин влаçĕ чакнине пĕлтернĕ. Çутĕç (Просвещение) тени пĕтĕм ăс-хакăл ĕçне рационаллă философипе тата ăслăхпа çыхăнтарса туса пыма хистенĕ.

Çĕнĕ тапхăрта çак ятсем халăх куçĕ умне тухаççĕ: Колумб, Галилей, Коперник, Декарт, Ньютон, Лейбниц, Ломоносов.

Çĕнĕ çĕрсем, континентсем уçни çĕнĕ чĕлхесем пуррине палăртма май панă, çавна май тĕрлĕ чĕлхе материалĕ пухăнса пынă. Ку вăхăтра Европăра нацисем çирĕпленеççĕ, нацисен литературăллă çырулăхĕ аталанать. Халăхсем хушшинчи çыхăну, суту-илӳ хутшăнăвĕсем темиçе чĕлхе пĕлеслĕхне аталантарнă. Чĕлхе пĕлĕвĕн науки умне тĕрлĕ задачăсем тухса тăнă: пухăннă чĕлхе материалне каталогламалла, кашни чĕлхен историне, вăл мĕнле, хăçан пулса кайнине ăнлантармалла, хутшăну хатĕрĕ вырăнĕнче пĕр чĕлхе пулмалла, нормăланнă грамматикăсемпе словарьсем тумалла.

Маларахри тапхăрта икĕ чĕлхеллĕ словарьсем пулнă пулсан, кайрантарахпа, XVI-XVIII ĕмĕрсенче темиçе чĕлхеллĕ словарьсем тухма пуçлаççĕ. 1787-1789 çулсенче Петербургра П.С.Паллас хатĕрленĕ “Пĕтĕм чĕлхесемпе наречисен танлаштаруллă словарĕ” тухать. Иккĕмĕш кăларăмĕ 1791 çулта пичетленет, унта Европăри, Азири, Америкăри, Африкăри 272 чĕлхепе диалектсен материалне кĕртнĕ.

1784 çулта Л.Эрвас-и-Пандуро испанец “Тĕнчере паллă чĕлхесен каталогĕ тата вĕсен хурăнташлăхĕпе уйрăмлăхĕсем” текен словарь тата тĕпчев ĕçĕ пичетлесе кăларать. Çакăн евĕрлĕ словаре 1806-1817 çулсенче нимĕç ученăйĕсем А.К.Аделунг тата И.С.Фатер хатĕрлесе пичетлеççĕ, унта 500-е яхăн чĕлхепе диалектсен материалне кĕртнĕ.

XVIII ĕмĕрти философсемпе лингвистсем чĕлхене турă пултарнă текен шухăшран пăрăнма тăрăшнă. Уйрăмах 1761 çулта Ж.Ж.Руссо çырнă “Чĕлхесем пулса

кайнине тĕпченин опычĕ" тата И.Гердерăн 1772 çулта тухнă "Чĕлхе пулса кайнине тĕпчени" ĕçсене асăнни кăсăклă.

Чĕлхене истори тĕлĕшĕнчен тĕпчени тĕп выръна тухма пуçлать. Дж.Вико 1725 çулта тухнă "Çĕнĕ наукăн нацисем пулса кайнине çирĕплетекен никĕсĕсем" кĕнекере чĕлхе аталанăвĕнчи 3 тапхăра палăртать: турăсен чĕлхи, паттăрсен (геройсемпе улăпсен) чĕлхи, çынсен чĕлхи; турăсен тапхăрĕ – ăру ĕмĕрĕ, çынсен тапхăрĕ – капитализм аталанма пуçланă тапхăр.

Тĕрлĕрен чĕлхесене тĕпчесе пухнă материала никĕсе хывса вăтам ĕмĕрсенчи латин грамматикин ансăрлăхĕ куç умне тухса тăнă, çавна май пĕтĕмĕшле (универсаллă) грамматика тăвас шухăш тĕвĕленнĕ.

1660 çулта Париж çывăхĕнчи Пор-Рояль мăнастирĕн ученăй монахĕсем Клод Лансло тата Антон Арно "Пĕтĕмĕшле тата рационаллă грамматика" ("Crammaire generale et raisonnee") текен ĕçе французла пичетлесе кăларасçĕ, вăл "Пор-Рояль грамматики тата логики" текен ятпа паллă.

Лансло тата Арно чĕлхесен пĕтĕмĕшле принципне (пĕрпеклĕхсене) тата вĕсен уйрăмлăхĕсене кăтартас тĕллев лартнă. Ку ĕçĕн никĕсĕнче Декартăн философиллĕ шухăшĕ пулнă: грамматика категорийĕсене логика категорийĕсемпе шайлаштарасси. Енчен те пĕтĕм этемлĕхĕн шухăшлавĕ пĕр евĕрлĕ (универсаллă) пулсан, грамматика та çавна май универсаллă пулма пултарать. Паллах, логика категорийĕсем грамматика категорийĕсемпе шайлашма пултарни иккĕленӳсĕр, анчах логика категорийĕ грамматикăра тӳрремĕн палăрать тени иккĕлентерет.

Пор-Рояль грамматикине хатĕрленĕ чух иврит (авалхи еврей чĕлхи), авалхи грек чĕлхи, латин тата француз чĕлхисен материалĕпе усă курнă, анчах та ку танлаштаруллă грамматика мар, вăл – логикăпа типологи грамматики. Ку грамматика икĕ пайран тăрать: фонетика тата грамматика. Малтанхи сыпăкăнултă пайĕнче сасăсемпе саспаллисене çырса кăтартнă, пусăм (ударени) тата сыпăксем пирки каланă, юлашки пайĕнче кирек мĕнле чĕлхене те вулама вĕренмелли

çĕнĕ меслет кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Иккĕмĕш сыпăкăн 23 пайĕнче морфологи ыйтăвĕсем, юлашки пайĕнче – синтаксис.

Пор-Рояль грамматики пек тытăмлă грамматикăсем татах та пулнă. Сăмахран, 1836 çулта К.Ф.Беккер Германире "Нимĕç чĕлхин анлă грамматикине" пичетлесе кăларнă, ку ĕçре вăл Гегелĕн логика категорийĕсем пирки вĕрентнине тĕпе хунă. 1858 çулта Ф.И.Буслаевăн "Вырăс чĕлхин истори грамматики" пичетленсе тухать. 1810 çулта Н.И.Язвицкий "Пĕтĕмĕшле филологи грамматикине" çырса хатĕрлет. Ку ĕçре автор Арнопа Лансло "Грамматикине" тепĕр хут тĕпчесе халăх куçĕ умне кăларас тĕллев лартнă, хушăран вырăс чĕлхин тĕслĕхĕсене те кĕртнĕ. 1812 çулта Л.Г.Якоба кăларнă "Пĕтĕмĕшле грамматикăн палăрăмĕсем" ĕç пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен лайăххисен ретĕнче тăрать.

## 9§. Халăхсем хутшăнмалли пĕрлĕхлĕ чĕлхе тăвас туртăм. Чĕлхене истори тĕлĕшĕнчен танлаштаруллă мелпе тĕпчес ыйтусем çурални

Искусствăллă чĕлхесем тăвасси малтанах француз философĕ Рене Декарт (XVII ĕмĕр) ячĕпе çыхăннă. Унăн шухăшне аталантараканĕ Готфрид Вильгельм Лейбниц (1646-1716) пулнă. 300 çул хушшинче искусствăлла чĕлхе тăвас шухăшпа 600 таран проект сĕннĕ. Чăнах та, çĕр чăмăрĕ çинче 3000 ытла чĕлхе пулни халăхсене пĕр-пĕринпе хутшăнма чăрмантарать, çавна май "пĕр-пĕрлĕхлĕ" искусствăлла чĕлхе тăвас туртăм темиçе ĕмĕр хушши пынă, анчах та çав ĕмĕт XIX ĕмĕрте çеç пурнăçланнă, воляпюк, идо, эсперанто тата ытти хăш-пĕр чĕлхесем халăхсем хушшинче хутшăнмалли чĕлхесем шутланнă. Вĕсен хушшинче эсперанто чи анлă сарăлни шутланать. Ку чĕлхене 1887 çулта Варшава врачĕ Людвиг Заменгоф шутласа кăларнă, псевдонимĕ – Эсперанто "надеющийся", чăв. "шанакан е ĕненекен".

Эсперантистсем хăйсем ĕнентернĕ тăрăх, вĕсен хисепĕ хальхи вăхăтра 8 млн ытла. Ку чĕлхепе çĕре яхăн журнал пичетленет, тĕрлĕ литература (8 пине яхăн кĕнеке), уйрăмах тĕрлĕ чĕлхерен куçарнă илемлĕ литература, халăх хушшине сарăлать, словарьсем тухаççĕ, поэзи произведенийĕсем сахал.

Сăмах тымарĕсене эсперанто чĕлхине 60% яхăн латин чĕлхинчен илнĕ, 30% – нимĕç чĕлхинчен, 10% таран славян чĕлхисенчен илнĕ. Заменгоф малтанласа 900 сăмах тĕпĕ кăна илнĕ, хальхи словарьсенче 25 пин сăмах тĕпĕ шутланать. Эсперанто грамматикинче пĕтĕмпе те 16 тĕп правило кăна.

Сăмахран, япала ячĕсен вĕçлемĕшĕ (окончание) пур чухне те –о пулать: homo “çын”, patro “атте”; паллă ячĕсен –а, наречисен –е: bone “лайăх”, malbone “япăх”.

Пур япала ячĕсен те артиклĕ -la, нумайлă хисеп аффиксĕ -j.

Глаголсем те уçăмлă паларăççĕ: тĕп форма -i паларăмлă: skribi “çыр”, хальхи вăхăтăн палли -as: mi skribas “эпĕ çыратăп”, li skribas “вăл çырать”, иртнĕ вăхăт палли -is: mi skribis “эпĕ çыртăм”, пулас вăхăт палли -os: mi skribos “эпĕ çырăп”; ĕмĕт наклоненийĕн палли -us: mi skribus “эпĕ çырăттăм”, хушу наклоненийĕн палли -u: skribu “çыр”.

XVIII ĕмĕрчченех чĕлхе пĕлĕвĕ аталанман текен шухăша хирĕçлени 1725 çулта пичетленнĕ Джамбисто Вико итальянецăн “Çĕнĕ наука” ĕçĕнче палăрнă. Ку ĕçре автор чĕлхе общество аталанăвĕпе çыхăннине ĕнентерет. Жан Жак Руссо (1712-1778) чĕлхе шухăшлавпа пĕрле аталаннине çирĕплетет: малтанхи çут çанталăкри пулăмсене евĕрленинчен (междомети теорийĕ) грамматика тĕлĕшĕнчен йĕркеленнĕ чĕлхе патне çитет. Шарль де Бросс (1709-1777) та малтанхи ансат сасăсенчен сăмахсем йĕркеленнине çирĕплетет, вăл ĕнентернĕ тăрăх сăмахсен пĕлтерĕшĕ улшăнни е аталанни (нумайланни) конкретлăхран абстрактлăх патне çитерет. Çак шухăша Джеймс Монбоддо (1714-1799) та çирĕплетет.

XVII ĕмĕрте Çурçĕр Америкăри индеецсен чĕлхи, Индире дравид чĕлхисем пуррине пĕлеççĕ, индонези, китай, маньчжур чĕлхисене тĕпчес ĕç пуçланать.

Голланди чĕлхеçи И.Ю.Скалигер хăйĕн "Европеецсен чĕлхисем пирки шухăшлани" кĕнекинче пĕтĕм Европа чĕлхисене ушкăнлас тĕллев лартать. Вăл шухăшланă тăрăх Европа чĕлхисене 11 ушкăна пайлама пулать, вĕсен хушшинче паллăраххисем çаксем: латин (роман), грек, германи тата славян чĕлхисем. Ку тапхăрта чĕлхесен пĕрлĕхне лексика тĕлĕшĕнчен кăна хакланă, грамматика материалне хускатман.

Лейбниц финн чĕлхипе венгрсен чĕлхи хурăнташлине, тĕрĕк тата монгол чĕлхисем пĕр тĕпрен тухнине ĕнентерет.

М.В.Ломоносов славян чĕлхисен хурăнташлăхне асăрхать, индоевропа чĕлхисем пĕр кăкран пулни çинчен калать.

Чĕлхесене истори тĕлĕшĕнчен танлаштарса тĕпчес ыйту Европа ăсчахĕсем санскритпа паллашнă хыççăн хускалать. Ку тĕлĕшпе Уильям Джоунз (1746-1794) ĕçĕсене паха тесе шутламалла, вăл акăлчансен востоковечĕ тата юрисчĕ, Бенгалире тӳре (судья) пулса ĕçленĕ. Вăл индоевропа чĕлхисене танлаштарса тĕпчемелли постулатсене пуçласа палăртать.

Фридрих Шлегель 1808 çулта "Индиецсен чĕлхипе ăсчахлăхĕ" ("Über die Sprache und die Weisheit der Indiner") кĕнеке кăларать. Ку ĕçре вăл санскрит сăмахсен тĕлĕшĕнчен те, грамматика енчен те латин, грек, германи тата перс чĕлхисемпе тăванлине ĕнентерет, вĕсем санскритран тухнине шантарать. Ун ĕçĕнче пĕрремĕш хут "танлаштарулла грамматика" термин тĕл пулать.

Фридрих Шлегель ĕçĕн витĕмĕпе 1811 çулта Петербургра "Санскрит чĕлхипе вырăс чĕлхинчи пĕрпеклĕхсем" ĕç пичетленет, анчах авторĕ кам пулни паллă мар.

## 10§. Славян çĕршывĕсенче чĕлхе пĕлĕвĕ аталанни

IX ĕмĕрте (863 çулта) грек миссионерĕсем Кирилл (Константин) тата Мефодий славянсен графика системине йĕркеленĕ хыççăн Библин хăш-пĕр пайĕсене куçарма тытăннă. Вăтам ĕмĕрсенче кивĕ славян чĕлхи (старославянский язык) литература чĕлхи пулса тăнă. Хĕвеланăçĕнчи славянсем кĕçех латиница çине куçнă.

Малтанхи пичетленнĕ ĕçсемпе грамматикăсем Украинăпа тата Белоруссипе çыхăннă. 1574 çулта Львов хулинче Иван Федоров "Букварь" пичетлесе кăларнă, унта азбука сыпăкĕсемпе вуламалли правилăсем, вĕçленӳпе сăпатлану тĕслĕхĕсем тата вуламалли текстсем пулнă. Кивĕ славян чĕлхин пичетленнĕ грамматики Вильно хулинче 1586 çулта "Славенска грамматика" ятпа тухнă. Историре Лаврентий Зизани 1596 çулта, Мелетий Смотрицкий 1619 çулта кăларнă "Грамматики словенския правильное синтагма" паллă. 1648 çулта çак грамматика хăш-пĕр улшăнусемпе Мускавра пичетленнĕ те унпа вĕренӳ пособийĕ вырăнĕнче М.В.Ломоносовăн "Раççей грамматики" тухиччене усă курнă.

М.В.Ломоносовăн "Раççей грамматики" çĕнĕлле йĕркеленĕ грамматика шутланнă. Вăл ултă хиставрен тăрать: 1) "Сăмах пирки пĕтĕмĕшле калани"; 2) "Вырăсла вуласси тата çырасси"; 3) "Ят сăмахсем çинчен"; 4) "Глагол пирки"; 5) "Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем пирки"; 6) "Сăмахра пĕлтерĕшлĕ пайсем сыпăнни". Грамматикăн тĕп идейи – пуплев пайĕсем (ăна автор "сăмах пайĕсем" тенĕ) çинчен вĕрентни. Пуплев пайĕсене логикăпа функци тĕлĕшĕнчен икĕ ушкăна уйăрнă: тулли пĕлтерĕшлисем: ят сăмахсем тата глагол; пулăшу пĕлтерĕшлисем: предлогсем, союзсем, междометисем. Синтаксис та икĕ пая пайланать: пуплев пайĕсен синтаксисĕ тата пуплев (предложени) синтаксисĕ.

Автор пуплев пайĕсене çакăн пек классификациленĕ:




## 11§. М.В.Ломоносов пурнăçĕпе пултарулăхĕ

Михайло Васильевич Ломоносов 1711 çулта Денисовка ялĕнче (Холмогор çывăхĕнче) хресчен çемйинче çуралнă.

1722-1723 çулсенче Михаил çырăва вĕренме пуçлать. Тарăн пĕлӳ илес тесе Ломоносов 1730 çулта раштав уйăхĕнче Мускава тухса каять. 1731 çулхине Михаил Мускаври Славян-грек-латин академийĕн вĕренекенĕ пулса тăрать. 1734 çулта вăл пĕр хушă Киево-Могилянск академийĕнче вĕренсе каялла Мускава таврăнать. Лайăх вĕреннĕ пирки 1735 çулхи раштав уйăхĕнче ăна Петербургри Академи университетне яраççĕ. 1736 çулта вăл Германири Фрейберг хулинчи Марбург университетне вĕренме каять.

1765 çулхи ака уйăхĕнче Михаил Васильевич Ломоносов çĕре кĕрет.

Ученăй-естествоиспытатель, паллă историк-антинормалист, XVIII ĕмĕрти вырăс культурин ĕçченĕсенчен пуринчен малтан чăннипех вырăс чĕлхин пĕлтерĕшне тата литературăпа халăх культурине хаклама пĕлнĕ.

Филологи сочиненийĕсенче Михаил Васильевич пирĕн ума публицист пек, вырăс чĕлхин ученăй-реформаторĕ пек, наука грамматикипе çĕнĕ стилистика теорине тăвакан пек тухса тăрать. Вăл хăйĕн сочиненийĕсенче поэтикăлла тата прозăлла пуплев тĕслĕхĕсене йĕркелекен сăвăçă тата çыравçă.

“О нынешнем состоянии словесных наук в России” çырса пĕтермен статйинче Ломоносов Франције тĕслĕх вырăнне илсе çакна кăтартать: “Çын обществине сăмах наукисене хăнăхни кирлĕ. Вăрçă хатĕрĕсем кӳршĕ çĕршывсене тытса илме кирлĕ пулсан сăмах наукисене аталантарни халăхсене пĕрлештерме тата пĕр-пĕрне ăнланма кирлĕ. ... Француз чĕлхи Европăра кăна сарăлмасть, вăл тĕнчен тĕрлĕ пайĕсенчи нумай халăхсемшĕн йăх чĕлхи пек пулса тăнă”, – тесе çырать Ломоносов.

Ломоносов сăмахсене çыхăнусăр йĕркелесе хăйсене маçтăрсем пек кăтартакансемпе тата ыттисен чи лайăх сочиненийĕсене хурласа хăйсене çӳлелле çĕклекенсемпе кĕрешнĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кунтан та ытларах хăйсен пулса çитмен хайлавĕсемпе ăслăхра ĕçлеме пуçлакан çамрăксене япăх тĕслĕх, тĕрĕс мар çул кăтартаççĕ, черчен çыхăнусене йăнăш ăнлавсемпе тымарлантараççĕ, вĕсене вара кайран пĕтерме йывăр е пачах май çук.

Ученăйăн пĕрремĕш теори ĕçĕ кун çути курни истори тĕлĕшĕнчен питĕ анлă пĕлтерĕшлĕ. «Риторикăна» вырăсла, сăнарлă чĕлхепе çырнă. Ку ĕçре çӳллĕ жанрпа тата пысăк пафоспа патшалăх, общество тата тĕнпе философи темисене хускатнă, литература хайлавĕсене çырнă чух усă курмалли пуплев правилисене çырса кăтартнă. Пуплев эстетикин ыйтăвĕсем “Риторикăра” самаях пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ломоносов чĕлхе хатĕрĕсемпе усă курнине кăна мар, грамматика, стилистика, риторика проблемисене те пăхса тухнă.

“Риторика” авторĕ шучĕпе калаçăвăн логика енчен тĕрĕс те уçăмлă, лайăх илтĕнекен пулмалла, чĕлхе хатĕрĕсен пуплев япалипе пĕр килмелле. Ученăй усă тата хупă сасăсен илтĕнĕвне антика традицийĕсем тăрăх, пĕр-пĕр символпа, идейăпа, “япалапа” пĕр килнине пăхса тĕплĕн сăнласа панă. Лайăх илтĕнни Ломоносов шучĕпе тĕп тĕллев мар, вăл шухăша тĕрĕс те уçăмлă кăтартса памалли хатĕр, çавăнпа та сăмахсем предложенире сасăсен пушă хутламĕсем пулмалла мар. Тĕслĕхрен, уçă сасăсемпе хупă сасăсен пĕрлешĕвĕ, пĕр предложенири тĕрлĕ сăмахсенче пĕр пек саспалли темиçе тĕл пулни, япăх янракан грамматика

формисене усӑ курни вырӑнлӑ мар. Пуплев эстетики ыйтни – калу уҫӑ та вырӑнлӑ пулни.

"Риторикӑран" Ломоносов вырӑс литература чӗлхине йӗркелессишӗн кӗрешме пуҫлать, унтах чиркӳ элеменчӗсен пуплеври вырӑнӗпе рольне пӑхса тухать, халӑх ӑнланман авалхи, халь усӑ курсах кайман сӑмахсене пӑрахӑҫласси пирки калать. Ҫак ӗҫре вӑл хӑй таланчӗпе чӗлхине тӗрӗс туйма пӗлни палӑрать. Вырӑс литература чӗлхине нацилӗхе тӗпе хурса йӗркелес ыйтӑва вырӑс культурин ӗҫченӗсем Ломоносовчченех ҫӗкленӗ, анчах реформатор ӗҫне вӑл кӑна тума пултарнӑ. Ун чух ҫырура чиркӳ славян чӗлхипе усӑ курнӑ, калаҫура вара – чӗрӗ вырӑс чӗлхи хуҫаланнӑ. Вӑл вара ҫак икӗ юхӑма шайлаштарса пӗр юхӑма ҫыхӑнтарать.

"Предисловие о пользе книг церковных в российском языке" ӗҫӗнче Ломоносов чиркӳ славян чӗлхи элеменчӗсемпе хальхи вырӑс литература ҫырулӑх чӗлхи тата калаҫу чӗлхин элеменчӗсене пӗрлештерес ыйтӑва питӗ лайӑх татса панӑ. Вырӑс литература чӗлхин никӗсӗ вырӑнне Ломоносов чӗрӗ вырӑс калаҫӑвне сӗнет. Анчах вӑл ӑна илемлетнӗ: чиркӳ славян кӗнеке-ҫыру чӗлхин элеменчӗсене кӗртнӗ, ансат калаҫу сӑмахӗсене кӑларма сӗннӗ.

Ҫӗнӗ литература чӗлхин ҫӗнӗ синтаксисӗ пулать. Ломоносов тунӑ синтаксис ҫырура усӑ курма юрӑхлӑ пулса тӑрать. Ҫак вӑхӑтран литература чӗлхинчен чиркӳ славян чӗлхин чылай конструкцийӗсем тухса ӳкеҫҫӗ, лексикӑпа грамматика палӑртусӑрлӑхӗ те (пестрота), вырӑнсӑрлӑх та (неупорядочность) ҫухалать. Ломоносов эпир ҫыракан, усӑ куракан литература чӗлхи тӑвать.

"Раҫҫей грамматики" кун ҫути курни – вырӑс чӗлхе пӗлӗвӗн историйӗнче тата пӗтӗмӗшле тӑван культурӑра паллӑ событисенчен пӗри. Шӑпах ҫак ӗҫре Ломоносов вырӑс литература чӗлхин нормисене палӑртать, унта чӗлхе, ӑн, шухӑшлав, чӗлхен социаллӑ пӗлтерӗшӗ, хире-хирӗҫлӗхӗн материлле ӑнланӑвӗ (витӗмӗ) курӑнать.

Ломоносов учебникӗ ытти пур грамматика кӗнекисем пек теорилле шухӑшлавсемпе тулса ларман.

Правилăсем унăн юлашки точкă мар, чĕлхе фактсен анализĕн пĕтĕмлетĕвĕ.

Тĕрлĕ грамматика формисемпе усă курнă чух Ломоносов нумай чухне ку е вăл формăна мĕнле стильпе çыхăнтармаллине, хăшĕсене пуплеве илемлетнĕ чух, хăшĕсене ахаль калаçура çеç усă курмаллине ăнлантарса парать.

Пирĕн вăхăтра та унăн идейисем хăйсем тарăн шухăшлă пулнипе, чĕлхере пулса иртекен пулăмсене лайăх ăнланнипе, патриотизмĕпе тата актуаллăхĕпе паллă. Вĕсем халĕ те çĕнĕ тĕпчевсем валли лайăх çăлкуç пулса тăраççĕ тата вĕсем вырăс филологи шухăшлавĕн тĕп çул-йĕрĕ çинче нумай вăхăт хушши пулĕç.

Чĕлхесене танлаштарса тишкересси Раççейре пуçласа В.К.Тредиаковский тата М.В.Ломоносов ĕçĕсенче палăрать.

1754-1755 çулсенче çырнă ĕçне Ломоносов темиçе тĕрлĕ ят парать: "Рассуждения о разделениях и сходствах языков", "Письмо о сходстве и переменах языков", "О речах разных языков, между собою сходных". Анчах та ку ĕç пичетленмен, унăн алçырăвĕ çухалнă. Çапах та çак ĕçĕн содержанине "Материалы к Российской грамматике" алçырăвĕнче курма пулать. Тĕслĕхĕсем 1766 çулта тухнă "Древняя Российская история" кĕнекере палăраççĕ.

В.К.Тредиаковскин "Три рассуждения о трех главнейших древностях российских" (1758) хайлавĕ хыççăн М.В.Ломоносовăн "Древняя Российская история" ĕçĕ вырăсла пичетленнисенчен иккĕмĕш кĕнеке шутланнă. Çак кĕнекере этногенез тата Тухăç Европа халăхĕсен авалхи историйĕпе çыхăннă ыйтусем тухса тăраççĕ.

Тредиаковский тата Ломоносов ĕçĕсемччен "Ядра Российской истории" тата Наука академийĕнче упранакан Татищевăн "Российская история" алçырăвĕ çеç пулнă.

Тредиаковский пекех Ломоносов та славянсен этногенезĕн ыйтăвĕсене татса парас тесе танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕн уйрăмлăхĕсемпе усă курать. Славян

чӗлхисен "пӗртымарлӑхне" ("сродственность") Михаил Васильевич славян чӗлхисене хурӑнташлӑх тӗлӗшӗнчен пӗтӗмӗшле пайланинче курать. Вӑл "пӗр тымартан тухнӑ" хурӑнташ чӗлхесене "пӗр тымартан тухман" ют чӗлхесемпе хирӗçтӑрӑва кӗртсе кӑтартать. Лейбниц Европа ушкӑнӗнчи чӗлхесене кельт тата скиф чӗлхисем çине пайланине тата славян чӗлхисене финн-угор чӗлхисемпе пӗрле пӗрлештернине Михаил Ломоносов хирӗçлет. Урӑхла каласан, калаçу кунта "славянсемпе хурӑнташлӑ мар" финн-угор чӗлхисен çемйисем пирки пырать. Вӑл шутланӑ тӑрӑх, славян тата балти чӗлхисемпе Анӑç Европа чӗлхисем хушшинче генетика çыхӑнӑвӗсем пур.

Паллӑ филолог ӗçӗсенче чӗлхе пӗлӗвӗн вӗрентӗвӗнчи историлле танлаштаруллӑ меслетӗн пӗрремӗш утӑмӗсем палӑраççӗ.


Усӑ курмалли литература

Тӗп литература

1. Карпеев Э.П. М.В.Ломоносов – великий русский ученый-энциклопедист. – Л., 1986.

2. Михайло Ломоносов: Жизнеописание // Избр. труды. Воспоминания современников. – М., 1989.

3. М.В.Ломоносов-филолог // Рус. яз. в шк. – 1981, – №5. – С. 85-89.

4. Широков О.С. М.В.Ломоносов как предшественник сравнительно-исторического языковедения // Вестн. Моск. ун-та. – Сер. 9. Филология. – 1987, – №2.

5. Большая советская энциклопедия. – 2-е изд. – Т. 27.

6. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М., 1979.

Хушма литература

1. Локк Дж. Избранные философские произведения. – М., 1960.

2. Ломоносов М.В. Российская грамматика // Полн. собр. соч. – Т.VII. – М.; Л., 1952.

## 12§. Танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕ аталанни

Истори тĕлĕшĕнчен чĕлхесене танлаштарса тĕпчени Франц Бопп, Якоб Гримм, Расмус Раск тата А.Х.Востоков ячĕсемпе çыхăннă.

Хăш-пĕр чĕлхесен пĕрпеклĕхĕсене XIX ĕмĕрччченех тупса палăртнă, анчах çав пĕрпеклĕхсем мĕнрен килнине ĕнентерме пултарайман. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче кирек мĕнле пулăм та истори тĕлĕшĕнчен аталанма пултарнине сăнанă май, чĕлхеçĕсем те çакăн пек шухăш патне çитсе тухнă: темиçе чĕлхен пĕрпеклĕхĕ вĕсем хурăнташлă пулнинчен килет. Хурăнташ чĕлхесене истори тĕлĕшĕнчен тĕпчесен, вĕсем мĕнле йĕркепе (йĕрпе) аталаннине каласа е çырса кăтартма пулать. Çак шухăша тĕпе хурса хурăнташ чĕлхесен танлаштаруллă грамматикисене йĕркелеме пуçланă: малтанах индоевропа чĕлхисен, унтан семит, финн-угор, кайрантарах тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикисем кун курнă.

Н.А.Кондрашов индоевропа чĕлхисене истори тĕлĕшĕнчен танлаштарса тĕпченине тăватă тапхăра уйăрать:

1) танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕ çуралнă тапхăртан младограмматиксен шкулĕ таран (XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕ – 1870 çул);

2) младограмматиксен вĕрентĕвĕ пуç пулса тăнă тапхăр (XIX ĕмĕрĕн 70-90 çулĕсем);

3) младограмматиксенчен Ф. де Соссюрăн "Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн курсĕ" таран (XIX ĕмĕр вĕçĕ тата XX ĕмĕрĕн икĕ вунăçуллăхĕ);

4) Соссюрăн шухăшĕсем сарăлнă тапхăртан паянхи куна çитиччен.

**Франц Бопп** (1791-1867) санскрит чĕлхипе Европа чĕлхисене танлаштарас çул çине тăнă пĕрремĕш ăсчах. 25 çулта чухне вăл "Санскрит чĕлхин сăпатланăвне грек, латин, перс тата германи чĕлхисен сăпатланăвĕпе танлаштарса системăлани çинчен" кĕнекене Майн çинчи Франкфурт хулинче пичетлесе кăларать. Çапла майпа 1816 çул танлаштаруллă истори чĕлхе пĕлĕвĕ çуралнине палăртать.

Ку ĕçре вăл грамматикăн пĕр пайне çеç – глаголăн флексийĕсене – пăхса тухать. Ф.Бопп чĕлхесен тытăмне танлаштарса вĕсен пĕрпеклĕхне палăртать, пĕр çемьерен пулнине кăтартать. Санскрит чĕлхипе шайлаштарса çырни пирки А.Мей çапларах калать: "Санскрит чĕлхипе паллашни ăна хăйĕн танлаштаруллă грамматикине йĕркелеме пулăшать. Санскрит чи авалхи морфологие тата хупă сасăсен системине сыхласа хăварнă. Ку индоевропа чĕлхисен аваллăхне тупма пулăшать. Иккĕмĕшĕнчен Инди грамматикĕсем çак чĕлхен фонетикипе грамматикине пĕтĕмĕшле тĕпченĕ".

1821 çулта Бопп Берлин университечĕн профессорĕ пулса тăнă май пуçăннă ĕçе малалла тăсать. 1833-1852 çулсенче хăйĕн тĕп ĕçне 3 томпа пичетлесе кăларать. Ун ячĕ – "Санскрит, зенд, эрмен, грек, латин, кивĕ славян, гот тата нимĕç чĕлхисен танлаштаруллă грамматики".

"Индоевропа ушкăнне кĕрекен чĕлхесем" ăнлава чĕлхе наукине Бопп кĕртнĕ. Хурăнташ чĕлхесен материалĕпе усă курса вăл пĕтĕмĕшле теори туса хунă. Глаголсен вĕçлемĕшĕсене танлаштарнă чухне вăл çакна палăртать: индоевропа ушкăнне кĕрекен чĕлхесенче пысăк пĕрпеклĕхсем палăраççĕ – грамматика системи пĕр пек пулни. Ф.Боппăн тĕллевĕ – пĕр чĕлхе факчĕсене тепĕр чĕлхе факчĕсемпе ăнлантарасси. Кун пек çĕнĕлле тĕпчени танлаштаруллă историлле меслетлĕхе никĕслеме май панă.

Инди грамматисчĕсемпе килĕшсе вăл сăмахсем малтан пĕр сыпăклă тымарсенчен пулса кайнă тенĕ. Тĕслĕхрен: пĕрисем глагол тымарĕсем: as "быть", "пул"; теприсем ылмаш тымарĕсем: ta, "тот", "çав". Пĕрремĕшĕсенчен глаголсем тата япала ячĕсем пулса кайнă. Иккĕмĕшĕсенчен – местоименисемпе татăксем. Бопп шухăшĕпе, падеж аффиксĕсем тата глаголăн сăмаха улăштаракан аффиксĕсем чи малтан ылмашсен тымарĕсем пулнă.

1833 çултан пуçласа 1849 çулччен Бопп индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине çырса хатĕрленĕ. Хăйĕн тĕллевĕ пирки вăл çакăн пек çырнă: "Çак ĕçре эпĕ тĕрлĕ чĕлхесен тытăмне çырса паратăп. Вĕсен пĕр

пек енӗсене мӗнле формӑран пулса кайнине асӑрхама тӗллев лартатӑп".

Малтанхи пӗлтерӗш тата грамматика формисем пулса кайни нумай чухне хӑй тӗллӗнех палӑрса пырать, вӗсене танлаштарса тӗпчесен пӗлӳ анлӑланать, пӗр ҫемьери чӗлхесен пӗрпеклӗхӗ палӑрма тытӑнать. Ҫак чӗлхесем темиҫе пин ҫул каяллах пӗр ҫемьерен тухнӑ пулин те пӗрпеклӗхӗ вӗсенче халӗ те палӑрать. Ҫакӑнта пытарӑннӑ ӗнтӗ танлаштаруллӑ грамматикӑн тӗп шухӑшӗ. Ф.Бопп танлаштаруллӑ чӗлхе пӗлӗвӗн тӗп тӗллевне чӗлхе аталанӑвне сӑнаса пынине кура мар, чи малтанхи пӗлтерӗшне шыраса тупнинче тата ҫав чӗлхесен грамматика элеменчӗ аталаннинче курать. Вӑл чӗлхе пӗчӗккӗн саланса, арканса пынине те кӑтартнӑ.

Ф.Боппӑн танлаштаруллӑ грамматики танлаштаруллӑ морфологи пулса тӑрать, мӗншӗн тесен малти вырӑнта сӑмах тымарӗпе флексийӗсем тӑраҫҫӗ. Морфологи тишкерӗвне тунӑ май сӑмахӑн пӗлтерӗшлӗ пайӗсем тупӑнса пыраҫҫӗ.

Расмус Раск (1787-1832) Франц Боппа пӗр вӑхӑтрах индоевропа чӗлхисене танлаштаруллӑ мелпе тӗпчесе ҫырса кӑтартма пуҫланӑ. Расмус Христиан Раск 1811 ҫулта хӑйӗн "Исланди чӗлхине вӗренмелли кӗнеке" ятлӑ пӗрремӗш ӗҫне пичетлесе кӑларать. Кунта вӑл грамматикӑсене логикӑпа шайлаштарса йӗркеленине хирӗҫлет: "Грамматикӑн тӗллевӗ сӑмах пулӑвӗпе сӑмах улшӑнӑвне ҫырса кӑтартасси, пачах та сӑмахсене мӗнле пулӑнтармаллине тата улӑштармаллине вӗрентесси мар",- тенӗ вӑл.

1816-1823 ҫулсенче Расмус Раск Азире, Индире тата Раҫҫейре ҫул ҫӳренӗ, анчах хӑй ӗҫӗсенче санскрит чӗлхин материалӗпе усӑ курман.

Хӑйӗн тӗп ӗҫне вӑл 1814 ҫулта ҫырса пӗтерет, анчах та "Исланди чӗлхи пулса кайни" кӗнекен 1-мӗш пайне 1818 ҫулта ҫеҫ пичетлет. Кӗнекен 2-мӗш пайӗ 1822 ҫулта "Фрак чӗлхисен ушкӑнӗ" ятпа тухать.

Расмус Раск германи чӗлхисен пӗрпеклӗхӗсене грек, латин, славян чӗлхисенче тупса палӑртать. Тӗпчеве вӑл ҫакӑн пек пӗтӗмлетет: скандинави тата германи

чĕлхисем пĕр-пĕринпе çывăх, вĕсем авалхи фрак чĕлхинчен пулса кайнă. Грек тата латин чĕлхисем те çав хунавранах, çавна май вĕсене исланди чĕлхин çăлкуçĕ вырăнне йышăнма пулать. Фрак чĕлхисен шутне Раск грек тата латин чĕлхисене те кĕртнĕ, авалхи фрак чĕлхи – вилĕ чĕлхе.

**Александр Христофорович Востоков** (1781-1864) славян чĕлхисен материалĕпе усă курса танлаштаруллă истори меслетне никĕсленĕ. Унăн тĕп ĕçĕсем: "Славян чĕлхи пирки шухăшлани" (1820), "Вырăс грамматики" (1831), "Чиркÿ-славян чĕлхин словарĕ" (1858-1861). А.Х.Востоковăн филологипе çырнă ĕçĕсене И.И.Срезневский "А.Х.Востоковăн филологи сăнавĕсем" (1861) ятпа кĕнекелесе кăларнă.

А.Х.Востоковăн чи сумлă ĕçĕсенчен пĕри – "Славян чĕлхи пирки шухăшлани". Кунта вăл авалхи славян чĕлхин историри вырăнне палăртать, пăлхар (болгар), вырăс, серб тата ытти славян чĕлхисен тăванла çыхăнăвне кăтартать.

Востоков авалхи вырăс чĕлхине чиркÿ-славян чĕлхинчен уйрăммăн пăхма сĕнет. Ун шучĕпе, кивĕ славян чĕлхи – кĕнеке чĕлхи пулнă, ăна латин чĕлхин статусĕпе танлаштарма пулать, кивĕ славян чĕлхи вырăс литература чĕлхине йĕркелеме пулăшнине те асăрхать вăл. Кайрантарахри çулсенче Востоков авалхи славян алçырăвĕсемпе ĕçленĕ. 1842 çулта вăл "Румянцев музейĕн вырăс тата славян алçырăвĕсене çырса кăтартни" ĕç хатĕрлесе çитернĕ, кунта кивĕ славян чĕлхин тăхăмĕсене уçăмлах кăтартнă, вĕсем – болгар, серб, вырăс, украина чĕлхисем. Çак кивĕ славян чĕлхин аталанăвне периодизацилеме май панă: авалхи, вăтам тата çĕнĕ тапхăрсем. 1843 çулта А.Х.Востоков Остромиров евангелине чĕлхе ăслăхĕ тĕлĕшĕнчен комментарисем парса кăларнă.

**Якоб Гримм** (1785-1863). А.Х.Востоков славян чĕлхисене танлаштаруллă истори меслечĕпе тĕпченĕ пулсан, Якоб Гримм – германи чĕлхисене. Унăн чи паллă ĕçĕ – "Нимĕç грамматики". Вăл тăвату томпа тухнă. Ĕçре нимĕç тата ытти германи чĕлхисен материалне танлаштаруллă мелпе çырса кăтартнă. Ку

ĕçĕн пĕрремĕш томĕ 1819 çулта тухнă. Пĕрремĕш томăн кăларăмĕнче германи чĕлхисен истори фонетики пулнă, вăл 1822 çулта тухнă. Тăватă томĕ пĕтĕмĕшле 1837 çулта "Нимĕç чĕлхин историйĕ" ятпа тухать. Якоб Гримм хăйĕн пысăк "Нимĕç словарĕнче" сăмахлăха Лютертан пуçласа Гете таранах кăтартма пултарнă. Словарĕн пĕрремĕш томĕ 1854 çулта тухнă, юлашки томĕ тепĕр 100 çултан, 1960 çулта, пичетленнĕ.

Я.Гриммăн çакăн пек илĕртӳллĕ тезис пулнă: "Пирĕн чĕлхе вăл пирĕн чăн-чăн истори". Я.Гриммăн тĕп принципĕ – чĕлхе факчĕсене тĕплĕн тĕпчесси. Вăл çапла каланă: "Грамматикăра эпĕ пĕтĕмĕшле логика ăнлавĕсене сивлетĕп. Ман шутпа, вĕсене пула çирĕплĕх тата уçăмлăх малти вырăна тухса тăрать, çавна май вĕсем чĕлхене сăнама чăрмантараççĕ, чĕлхе тĕпчевĕнче сăнав чи малти вырăнта тăрать". Çак принципа çирĕп тытса пырса вăл германи чĕлхисенчи хупă сасăсен куçăмне тĕплĕн кăтартма пултарнă: индоевропа чĕлхисенчи bh , dh, qh германи чĕлхисенче b,d,q сасăсене куçнă; индоевропа чĕлхисенчи b, d, q → герм. чĕлхисенче p, t, k; индоевропа p, t, k → герм. чĕлхисенче t, th, h сасăсене куçнă; танл. лат. *pater* – ним. *Vater*, латин. *cornu* – ним. *Horn*, лат. *duo* – ним. *zwei* (*twei* тенинчен пулнă).

Ку вăл фонетика саккунĕсен пĕрремĕш тĕслĕхĕ пулнă, кирек мĕнле чĕлхен историне те çак саккуна пĕлсен тин çырса кăтартма пулать.

Якоб Гримм "Нимĕç словарĕпе" ĕçленĕ вăхăтрах ытти ĕçе те аяккинче хăварман. 1828 çулта пичетленнĕ "Германи правин авалăхĕ" ĕçе тата "Суд приговорĕ" кĕнекене (1-мĕш пайĕ 1840 çулта "Ялти суд приговорĕсем" ятпа тухнă) çĕнĕлĕхсем кĕртме шутланă. Çак ĕçĕн алçырăвне вăл 1862 çулта Бавари академи ăслăлăхĕсен истори комиссине тăратнă. Мюнхенра вара право темипе пухнă ваттисен сăмахĕсен тата авалхи халăх юррисен "Авалхи нимĕç майстерзангĕ çинчен" (1811) сборникне пичете тăратнă хыççăн "Аслă Эдда юррисем" (1915) ĕç пичетлет. 1812-1815 çулсенче Якобпа Вильгельм Гриммсем "Ача-пăча тата çемье юмахĕсем" кăлараççĕ. 1816 çултан пуçласа Якоб Гримм

пултарулăхĕнче чĕлхе тĕп вырăн йышăнма пуçлать. Çав вăхăтрах тĕпчевçе литература вĕрентĕвĕ, мифологи, право историйĕн ыйтăвĕсем те канăç памаççĕ. 1819-1837 çулсенче тăватă томлă "Нимĕç грамматики", 1847 çулта икĕ томлă "Нимĕç чĕлхин историйĕ" ĕçсем кун çути кураççĕ. 1854 çултан пуçласа "Нимĕç словарĕ" пичетленме пуçлать. Çак кĕнекене кăларма Якобпа Вильгельм пĕрле нумай тăрăшаççĕ.

Якоб Гриммăн ăслăлăхри малтанхи тапхăрĕ 1806-1816 çулсемпе çыхăннă. Çак вăхăт ăслăхра çирĕп методологи çуккипе палăрса юлнă. Я.Гримм хăйĕн пултарулăхĕнчи малтанхи вунă çуллăхĕнче ылтăн, кĕмĕл, пăхăр ĕмĕрсенчи мифсем истори тĕкĕрĕ пулаççĕ тесе шутлать.

Чĕлхене танлаштарулла-историллĕ тĕпченин çирĕпленнĕ принципĕсемпе усă курса Якоб Гримм гот, авалхи, вăтам тата çĕнĕ нимĕç, акăлчан-саксон, авалхи скандинави (авалхи исланди чĕлхине шута илсе), швед, дани тата ытти чĕлхесен материалĕсемпе анлă ĕçлет. Çак паха ĕç фонетика, морфологи, синтаксис, сăмах пулăвĕн ыйтăвĕсене тата германи чĕлхисен словарь йышне пĕтĕçтерет. Кашни пысăк пайра Якоб Гримм паха сăнавсем тата интереслĕ çĕнĕлĕхсем тума пултарнă.

Якоб Гримм хăйĕн "Нимĕç грамматикипе" ĕçленĕ чухне тунă тивĕçĕ çинчен Генрих Гейне çапла каланă: "...Якоб Гримм сделал для языкознания больше, чем вся... французская академия со времен Ришелье. Его "Немецкая грамматика" – исполинское создание, готический собор, под сводами которого все германские (языки) племена, словно гигантские хоры, поднимают голоса, каждая на своем наречии... Человеческой жизни и человеческого терпения не могло хватить, чтобы собрать эти глыбы учености и чтобы скрепить их воедино из сотен тысяч цитат" (Гейне Г. Собр. соч. В 10 т. Т. 6. М., 1958. С. 282).

"Нимĕç грамматикин" ум сăмахĕнче Якоб Гримм хăйĕн ĕçĕн тĕп принципĕсене палăртать. Вăл çапла каланă: "Я противник общих логических понятий в грамматике. Они создают только видимость строгости

и целостности определений, но мешают точному наблюдению, которое я считаю душой языкознания. Кто не признает наблюдения..., тому никогда не проникнуть в непостижимый дух языка. Надежность и точность грамматики может быть достигнута не иначе, как путем полного перечисления всех примеров, относящихся к данному правилу фонетики или морфологии".

Якоб Гриммăн "Нимĕç грамматики" ĕçĕнче хăш пай пахарах пулнине татса калама çăмăл мар. Тĕпчевçĕсем фонетика пайĕ чи пысăк хака тивĕçлине палăртаççĕ. Тĕплĕн, туллин, системăласа çырнă германи чĕлхисен историллĕ фонетики Якоб Гриммччен пулман. Тĕслĕхрен, ĕç-хĕл вăйли тата вăйсăррисем çине пайланнине тĕпчевçĕ ярала ячĕсен улшăнăвĕпе çыхăнтарнă. Диалект ыйтăвĕсем те Гриммшăн пысăк вырăн йышăнаççĕ. "Диалекта хăйне уйрăм тишкермелле, ăна литература чĕлхин пулăшу хатĕрĕ пек кăна пăхни çителĕксĕр", – тет вăл.

"Нимĕç грамматикине" йĕркелесе тĕпчевçĕ лингвистика ыйтăвĕсене кăна татса парасшăн пулман. Çак ĕç ăна нимĕç халăх историне тата культурине тĕпчеме лайăх майсем туса панă.

"Нимĕç грамматики" хыççăнхи тепĕр паллă та анлă тĕпчев – "Нимĕç мифологийĕ". Вăл 1835 çулта тухнă. "Чи малтанхи, пуçламăшĕ вăл – миф, – тесе çырать Якоб Гримм хăйĕн "Нимĕç мифологийĕн" умсăмахĕнче, – тепĕр майлă каласан, турăсене ĕненни..." Малалла вăл çакăн пек палăртать: "Без такой мифологической основы нельзя понять предание, так же как, не зная происшедших конкретных событий, нельзя представить себе событие" (Гримм Я. Немецкая мифология. Геттинген, 1835. С. 3).

Çак пысăк ĕçе пуçăнас умĕн Якоб Гримм хăй умне икĕ тĕллев лартнă:

1) авалхи Германи халăхĕ çинчен калакан мифсене пĕрчĕн-пĕрчĕн тенĕ пек пуçтарса системăласси;

2) Германи тата Скандинави мифологийĕсен хурăнташлăхне палăртасси.

Автор Германи туррисен генеалогине тĕпчет; антика, скандинави тата хĕвелтухăç мифологийĕсен хурăнташлăхри параллелĕсене палăртать; турăсен сăн-сăпачĕ тата шухăш-кăмăлĕпе тыткаларăшĕ (характерĕ) улшăннине сăнласа парать; пĕр туррах тĕрлĕ халăхсем тĕрлĕрен палăртнине сăнать.

Пиччĕшĕпе шăллĕ пĕрле пухнă чи паллă ĕç вăл – "Нимĕç чĕлхин словарĕ". Ку ĕçе вĕсем 1838 çултах тытăннă. Вĕсем пĕтĕм сăмахсен тĕрлĕ вăхăтри (тапхăрти) пĕлтерĕшĕсене тата этимологине палăртас тĕллев тытнă. Словарь чи малтанах пĕчĕк кăларăмсемпе кун çути курнă. Кайран тин пысăк калăпăшлă томсене пĕрлешнĕ. Пĕрремĕш кăларăм 1925 çулта пичетленсе тухнă.

1809 çулта тĕпчевçĕ Гриммсем сагăсем пуçтарма тытăнаççĕ. Çавăн чухне сага историйĕн тĕпчев никĕсне этимологие хума шут тытаççĕ. Вĕсем ытларах пайăр ятсене (çын ячĕсене) тĕпчеççĕ.

Этимологире Гримм сăмахсен историне, сăмахсем хушшинчи çыхăнăва, япала тата пĕлтерĕш çыхăнăвне палăртас тĕллев лартать.

"Нимĕç грамматикинчен" тытăнса Якоб Гримм германи чĕлхисене тĕпчеме тытăнать. Ытларах вăл авалхи формăсем çине, чи авалхи чĕлхе çине таянать. "Нимĕç грамматикин" 1-мĕш кăларăмăн умсăмахĕнче Гримм тытăннă ĕçĕн тĕллевĕсене тата ыйтăвĕсене палăртать. Вăл пĕтĕм германи чĕлхисем тачă çыхăнура, хурăнташлăхра тăнине ĕнентерни тата хальхи чĕлхе формисене авалхи формăсемпе танлаштарса ăнлантарни çинче тытăнса тăрать.

Гримм лартнă тĕллевсемпе ыйтусем чĕлхе материалне мĕнлерех парассипе çыхăннă: 2-мĕш кăларăмран пуçласа, "Нимĕç грамматикинче" çакăн пек тĕп пайсем палăртнă: фонетика, морфологи, сăмах пулăвĕ тата синтаксис. Кашни пысăк пай вакрах пайсем çине пайланать. Сăмахран, "морфологи" пай сăпатлану тата вĕçленӳ пайсенчен тăрать. "Вĕçленӳ" пайра вĕçленекен пур пуплев пайне те пăхса тухнă: япала ячĕ, паллă ячĕ, хисеп ячĕ тата ылмаш. Материала вара çак йĕркепе вырнаçтарнă: гот, авалхи

нимĕç, авалхи саксони, акăлчан-саксони (авалхи акăлчан), авалхи фриз, авалхи çурçĕр, вăтам нимĕç, вăтам нидерланди, вăтам акăлчан; хальхи нимĕç, хальхи нидерланди, хальхи акăлчан, швед, дани чĕлхисем. Çакăн пек йĕркелесе Гримм чĕлхе улшăнса пынине кăтартать. Пĕтĕм германи ареалĕпе кашни чĕлхе элементне (фонетика, морфологи, сăмах пулăвĕ, синтаксис элеменчĕсене) авалхинчен пуçласа паянхи кунччен пăхса тухать.

Вăл германи чĕлхисен сăмах пулăвĕ тата сăмах формин улшăнăвне танлаштарассине, сăмах формин улшăнăвĕнчи шалашри тата тулашри флексие тишкерессине тимлет. Якоб Гримм сăмах тăвакан тата улăштаракан аффикссен пĕрпеклĕхне палăртать.

Тĕпчевçĕ индоевропа чĕлхисен çемйинче германи чĕлхисен вырăнне тупасшăн. Вăл германи чĕлхисем хăш-пĕр индоевропа çемйинчи чĕлхесемпе пĕр евĕрлĕрех тет. Çакăнтан вара пĕтĕмлетӳ тăвать: германи чĕлхисем славян тата балти чĕлхисемпе тачă çыхăнура, грек тата латин чĕлхисенчен кăшт аяккарах тăраççĕ, кельт чĕлхисемпе вара çыхăну çукпа пĕрех.

Гриммăн истори концепцийĕнче чĕлхене, мифа, сагăна, халăх поэзине, йăла-йĕркене пĕр "çыхха" пĕрлештересси пысăк вырăн йышăнать. Кĕскен каласан, тĕпчевçĕ халăх ăс-хакăлне халăх историйĕпе тачă çыхăнтарать.

Чĕлхе историйĕн авалхи этапĕсене тĕпченĕ чухне диалектсене пĕлни питĕ кирлĕ. Çавăнпа та Якоб Гримм хальхи литература чĕлхи тата диалект, литература чĕлхин аталанăвĕ ыйтусемпе нумай ĕçлет. "Нимĕç грамматикин" умсăмахĕнче вăл литература чĕлхи мĕнлерех йĕркеленнине пăхса тухать. Кашни шкул ачи литература чĕлхине алла илме пултарать, тет тĕпчевçĕ. Ун шучĕпе, литература чĕлхи, çыру тата калаçу чĕлхисем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та пулмалла мар.

Якоб Гримм халăх сăмахлăхне пухса тата пичетлесе кăларас ĕçре, мифсене, Германи правин историне тĕпченипе, религие, нимĕç чĕлхин историне, германи чĕлхисене танлаштаруллă тишкернипе, "Нимĕç словарĕ"

ӗҫӗнче калама ҫук пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Унӑн ӗҫӗсем ӑслӑлӑхшӑн калама ҫук паха, пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Паянхи кун та Якоб Гриммпа тивӗҫлипех мухтанма пултаратпӑр.

## Усӑ курмалли литература

### Тӗп литература


1. Герстнер Г. Братья Гримм. – М., 1980. – С.20-27.
2. Глазов Ю. Братья. К 200-летию со дня рождения братьев Гримм // Семья и школа. – 1986. – №2. – С.54-55.
3. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М.: Высш. шк., 1974.
4. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979. – С.39-42.
5. Скурла Г. Братья Гримм: Очерк жизни и творчества. – М., 1989. – С.10-13.
6. Смирницкая С.В. Якоб Гримм и германское языкознание // Вопр. языкознания. – 1986. - №3. – С.16.


### Хушма литература


1. Березин Ф.М. Общее языкознание. – М.: Просвещение, 1979. – С. 295-306.
2. Дельбрюк Б. Введение в изучение индоевропейских языков. – М., 1904.
3. Мейе А. Сравнительный метод в историческом языкознании. – М., 1954.
4. Мейе А. Введение в сравнительное изучение индоевропейских языков. – М.; Л., 1938.
5. Общее языкознание: Методы лингвистических исследований. – М.: Наука, 1973. – С. 229-235.
6. Смирницкий А.И. Сравнительно-исторический метод и определение языкового родства. – М., 1955.


## Ыйтусемпе хушусем

1. Чӗлхе вӗрентӗвӗн историне мӗнле тапхӑрсем ҫине пайлама май пур?
2. Аваллӑхри классикӑлла филологи тесе эпир мӗне калатпӑр?
3. Авалхи Грецири тата Римри шухӑшлавҫӑсене (философсене) ятран каласа тухӑр.
4. Хӑйӗн мӗнле ӗҫӗнче Аристотель пуплев пайӗсем пирки калать?

5. Александри грамматикине миçемĕш ĕмĕрте çырнă?

6. Кашгар Махмучĕн тĕп ĕçĕ мĕн ятлă?

7. Универсаллă логика грамматикине камсем хатĕрленĕ?

8. Халăхсем хутшăнмалли пĕрлĕхлĕ чĕлхесем пирки мĕн калама пулать?

9. М.В.Ломоносовăн чĕлхе наукинчи тĕп ĕçне хак парăр.

10. Индоевропа чĕлхисене камсем пуçласа танлаштаруллă мелпе тĕпчеме пуçланă?

11. 1835 çулта тухнă «Нимĕç грамматики» ĕçе кам çырнă?

# 2 сыпӑк. ПĔТĔМĔШЛЕ ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔ ПУҪЛАНСА КАЙНИ

## 1§. В.Гумбольдтӑн чĕлхе философийĕ

Вильгельм фон Гумбольдт (1767-1835) – ӑслӑхҫӑ, патшалӑх ĕҫлевҫи, Берлин университетне никĕслекенĕ. Гумбольдт пур енлĕ аталаннӑ ҫын пулнӑ: философипе кӑсӑкланнӑ, патшалӑх правипе тата чĕлхе пĕлĕвĕпе ĕҫсем ҫырнӑ, сӑвӑсем хайланӑ. Вӑл индоевропа, баск, малай-полинези чĕлхисем, Америкӑри индеецсен чĕлхисене пĕлнĕ. Унӑн малтанхи ĕҫĕсенчен пĕри – "Чĕлхесен аталанӑвне тĕрлĕ тапхӑрсемпе ҫыхӑнтарса танлаштаруллӑ меппе тĕпчени" доклад (1820). Ун хыҫҫӑн Гумбольдт хӑйĕн 3 томлӑ ĕҫне никĕслеме пуҫланӑ. "Ява утравĕ ҫинчи кави чĕлхи пирки" ("Über die Kawisprache auf der Insel Jawa") ĕҫĕ тĕпчевҫĕ вилнĕ хыҫҫӑн (1836-1840) пичетленнĕ.

Чĕлхе вĕрентĕвĕн концепцине В. фон Гумбольдт "Ҫынсен чĕлхисен тытӑмĕн уйрӑмлӑхĕсем тата вĕсем этемлĕхĕн шалти туйӑмĕсене витĕм кӳни" ("Über die Verschiedenheit des Menschlichen Sprachbaues und ihren Einflus auf die geistige Entwichlung des Menschengeschlechts") ĕҫре палӑртнӑ. Чĕлхе философине никĕсленĕ чух Гумбольдт Кант, Фихте, Шеллинг философсен шухӑшĕсене тĕпе хурать, анчах ун шухӑшĕсем Гегелĕннипе ытларах тӳр килеҫҫĕ. Вӑл чĕлхе пĕлĕвĕ наукин хӑйĕн философи бази пулмалла, ҫав никĕс – чĕлхе философийĕ, ӑна тĕрлĕрен чĕлхе материалне тишкерсен ҫеҫ ӑнкарма пулать тенĕ.

Гумбольдт шухӑшĕпе, аталанура кӑна чĕлхе хӑйне хӑй сыхласа хӑварма пултарать. Чĕлхепе шухӑшлав пĕрлĕхĕ, – уйрӑлми диалектика пĕрлĕхĕ, вӑл калаҫупа шухӑшлав пĕрлĕхĕ те. Ҫын чĕлхене мĕн чухлĕ ытларах пĕлет, ҫавӑн чухлĕ чĕлхе ун шухӑшлавне витерет. Ҫав хушӑрах Гумбольдт чĕлхепе "халӑх чунĕ" хушшинчи ҫыхӑнӑва та кӑтартма пултарнӑ. Чĕлхе яланах ҫынсем пĕр-пĕринпе хутшӑнса калаҫнӑ май аталанать, ҫын хӑйне хӑй тĕплĕн ӑнланасси те хӑй шухӑшне тепĕр ҫын патне ҫитерме пултарнинчен килет. Чĕлхе обществӑн

хутшăну хатĕрĕ пулнине вăл халăхăн наци чунĕпе çыхăнтарать. "Чĕлхе – халăх чунĕ, халăх чунĕ вăл – унăн чĕлхи," – тенĕ Гумбольдт.

Гумбольдт ĕçĕсенче уйрăммăн палăракан йĕр пур, вăл – чĕлхе формиe чĕлхен шалти структури пурри çинчен вĕрентни. Чĕлхен яланах хăйĕн специфики, ун хăйне евĕрлĕ никама пăхăнманлăхĕ, хăйевĕрлĕхĕ пур. Калаçу тата чĕлхе пĕр-пĕринпе çыхăннă пулин те, иккĕшĕ пĕр япала мар. Чĕлхе форми яланах пĕр, анчах вăл тĕрлĕ енлĕ палăрать. Чĕлхе форми (кӳлепи) çинчен вĕрентни Гумбольдт ĕçĕсенче тĕп вырăнта тăрать.

Чĕлхе тулаш форми вăл – чĕлхе материйĕ, унăн сасă системи. Сасăсем сăмах тымарĕсене е тĕпĕсене, чĕлхен пĕлтерĕшлĕ пайĕсене йĕркелеççĕ. Чĕлхен тулаш формисен шутне Гумбольдт сăмахăн грамматика тата этимологи формисене те кĕртнĕ.

Чĕлхен шалти форми вăл – шухăша чĕлхере палăртакан мел. Тĕслĕхрен, санскрит чĕлхинче слона çапла палăртни паллă: икĕ шăллă, икĕ хут ĕçекен, алăллă. Кашни çапла каланинче тĕрлĕ ăнлав, анчах вĕсем пурте пĕр япаланах пĕлтереççĕ.

Наци чĕлхисем пурте хăйнеевĕрлĕ пулнипе чĕлхесен универсаллăхне логика тĕлĕшĕнчен сӳтсе явнипе мар, тăван е тăван мар чĕлхесен формисене пĕр-пĕринпе танлаштарсан тин пĕлме пулать.

Вăл вăхăтри компаративистсем пекех Гумбольдт çĕр çинчи пур чĕлхесен ~~те~~ генетика çыхăнăвне тупма тăрăшнă: китай чĕлхисемпе санскрит, санскритпа семит чĕлхисем, санскритпа баск, кави тата санскрит чĕлхисен çыхăнăвне кăтартнă, çав вăхăтрах вăл малай-полинези чĕлхисене Инди чĕлхисемпе тата Америкăри индеецсен чĕлхисемпе те çыхăннă тесе шутланă.

Гумбольдт чĕлхесен типологи классификацине йĕркеленĕ. Вăл чĕлхесен тăватă типне палăртать: тымар, агглютинациллĕ, полисинтетикăллă тата флективлă чĕлхесем. Тĕпчевçĕ дедуктивлă пĕтĕмĕшле грамматика тăвас шухăшсене хирĕçленĕ, мĕншĕн тесен дедуктивлă грамматикăра кашни чĕлхен хăйевĕрлĕхне кăтартма май килмест. Вăл чĕлхери антиномисене палăртнă пĕрремĕш ăсчах пулнă. Вĕсем çаксем:

1) чĕлхе социаллă пулăм, анчах та çав вăхăтрах вăл уйрăм çын чĕлхи те;

2) палăртнă самантра чĕлхе аталанăвĕ тăнăçланнă, анчах вăл вĕçленмен;

3) чĕлхе · вăл--уйрăм, анчах тĕрлĕ фактсен пĕрлĕхĕ, çав пĕрлĕхе пула калаçу никĕсленет.

Чĕлхе система пулнине Гумбольдт хыççăнхи тĕпчевçĕсем те çирĕплетеççĕ, ун шухăшне А.Шлейхер, И.А.Бодуэн де Куртенэ, Ф. де Соссюр ырланă. Чĕлхе пулăмĕсене уйрăм çын шухăш-кăмăлĕпе çыхăнтарса тĕпчемелле текен шухăша Г.Штейнталь, А.А.Потебня йышăннă. Чĕлхе социаллă пулăм текен тезиспа социологи шкулĕн представителĕсем (Ф. де Соссюр, А.Мейе, Ж.Вандриес т.ыт.те) килĕшнĕ. Чĕлхе вăл культурăна йĕркелекен никĕс пулнине А.А.Потебня, К.Фосслер, Б.Кроче ĕненнĕ.

В. Гумбольдт литературăпа философи наукисем аталаннă вăхăтра пурăннă. Çавна май çак ăслăлăхсем ун пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕнче, пултарулăхĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Геттинген университетĕнче вĕреннĕ чухне пулас ăсчах вăл вăхăтри паллă ученăйсен лекцийĕсене итлет: Лихтенберг философăн, Шлецер историкăн, Хайне философăн шухăшĕсем çамрăк çынна тыткăнлаççĕ.

1791 çулта "Берлинский ежемесячник" журналта ун пĕрремĕш статйи пичетленет. Ун ячĕ – "Францин çĕнĕ конституцийĕ патшалăх йĕрки пирки çуратнă шухăшсем" ("Идеи о государственном устройстве, вызванные новой французской конституцией"). Ку ĕç пысăк калăпăшлă пулнă, пĕтĕмĕшле ăна автор вилнĕ хыççăн çеç пичетлесе кăлараççĕ.

1795 çулта Шиллер кăларса тăракан "Оды" журналта Гумбольдтăн "Амалăх-арлăх çинчен тата вăл органика тĕнчине витĕм кӳни" ("О различии полов и его влияние на органическую природу") статйи пичетленет. Çак ĕç ăна литературăра чапа кăларать.

1797 çулта вăл Парижра "Эстетика опычĕсем" ("Эстетические опыты") ĕç çырать. Басксен çĕрĕнче, икĕ ĕмĕр чиккинче, Вильгельм фон Гумбольдт чи малтанхи хут лингвистикăпа кăсăкланма тытăнать.

1802-1808 çулсенче Рим хулинче пурăнать. Кунта вăл папа престолĕнче Пруссии представителĕ пулать. Çак ултă çул хушшинче Гумбольдт антикăпа ытларах кăсăкланма тытăнать. "Лаципе Эллада" ("Лаций и Эллада") статья та çак çулсенче çырăнать.

1820 çултан пуçласа Гумбольдт пĕтĕмĕшле наукăпа ĕçлеме тытăнать. Берлин хулин наука академийĕ ăна вунă çул каяллах хăйĕн членĕ пулма суйланă пулнă. Отставкăна тухнă хыççăн вăл чĕлхене танлаштару меслечĕпе тĕпчесси пирки доклад çырать. Малашне вара лингвистика унăн тĕп тĕпчев обьекчĕ пулса тăрать.

Çак çулсенче Гумбольдт чĕлхе пĕлĕвĕпе чи сумлă, чи ăнăçлă ĕçĕсене çырать. Философире тепĕр интерес çуралать. Ку вăл – истори теорийĕ. Хăй статйисене тĕпчевçĕ нумай вăхăт пичетлеймест. Тĕпрен илсен ун ĕçĕсем "Наука Академийĕн ĕçĕсенче" кун кураççĕ.

Гумбольдт шучĕпе этемĕн шалти тĕнчине, характерне уçса параканни вăл – чĕлхе. Халăх чĕлхине пĕлни унăн историне, антропологине, этимологине тĕпчессине чылай çăмăллатать. Чĕлхене вĕреннĕ, алла илнĕ май унпа усă куракан халăх çинчен ытларах та ытларах пĕлетĕн, унăн культурипе, историйĕпе паллашатăн.

Гумбольдт танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвне йĕркеленĕ. Ун тĕллевне вăл çапла палăртать: "Тĕпре кунта (чи тĕппи) – чĕлхене тĕрĕс те тивĕçлĕ шайра хаклани, ун çăлкуçĕн тарăнăшне, анлă усă курнине шута илесси; ку чĕлхе тытăмне май килнĕ таран анлăрах та тарăнрах тĕпчемеллине пĕлтерет".

Хăйĕн лингвистика тĕпчевĕсенче Гумбольдт "халăх" тата "чĕлхе" ăнлавсене уçса парассипе çыхăннă социаллă, философиллĕ проблемăсене хускатать. Вăл "нацие" ("халăха") чĕлхе статусĕллĕ çынсен пĕрлĕхĕ тесе пăхать.

Этемлĕх чĕлхесене ушкăнсене пайлани халăхсем (нацисем) тĕлĕшĕнчен пайланипе пĕр килет, апла пулсан вĕсем хушшинче корреляци пур.

Гумбольдтăн чĕлхе пĕлĕвĕпе çырнă ĕçĕсен чи паха енĕ вăл – чĕлхе пĕлĕвĕн хăйĕн философийĕ пулмаллине палăртса калани. Чĕлхе пĕлĕвĕ тăван тата тăван мар,

пысăк тата пĕчĕк халăхсен чĕлхисен материалне пĕтĕмлетни çинче никĕсленет.

Гумбольдтăн пĕр цитатине илер: "Нет ничего несообразного в исследовании языка, чем поиски в нем только великого, идеального, господствующего. Разбор слова во всех грамматических тонкостях, разложение их на самые мелкие элементы необходимы для основательного исследования языка..." Апла пулсан чĕлхере чи лайăххине, чаплине, пуç пулса тăраканнине шырамалла мар, ун кашни пĕчĕк пайрăмне шута илсе тĕпчемелле. Ун пек тусан усси ытларах пулĕ.

Гумбольдт ĕçĕсен чĕлхи пирки кăштах каласа хăвармалла. Нумайăшĕ ăна уçăмсăр, йывăр çырнишĕн ӳпкеленĕ. Уçăмсăр пулни куçару ăнăçсăр пулнинчен те нумай килет.

"Ява утравĕ çинчи кави чĕлхи пирки" ĕçĕн кӳртĕмĕ пек Гумбольдт "Über die Verschidenheit des menschlichen Sprachbau und ihren Einfius auf die geistige Entwicklung des Menschengeschichts" ("Этем чĕлхисен тытăмĕсен расналăхĕ пирки тата вĕсем этемлĕхĕн ăс-хакăл аталанăвне витĕм кӳни") ĕç çырать ("Wilhelm von Humboldts Gesammelte Schriften" ("Вильгельм фон Гумбольдтăн çырнисен пуххи") академи кăларăмĕнче пичетленнĕ). Анчах та ăна эпир хăйне уйрăм ĕç тесе хаклама пултаратпăр. Кунта автор çак таранччен çырнă ĕçĕсенчи, доклачĕсемпе тезисĕсенчи витĕмлĕ шухăшĕсене тепĕр хутчен йĕрлесе пĕтĕмлетӳсем тăвать.

Гумбольдтчен чĕлхене "истори тĕкĕрĕ" тесе пĕр енлĕн хакланă. Вăл чĕлхе тĕнче историне аталантаракан "тĕп вăйсенчен" пĕри тесе ĕнентерет. Кунта эпир историпе чĕлхе пĕлĕвĕн наукисен пĕрлĕхлĕ аталанма пултарнине куратпăр.

Чĕлхепе шухăшлав хушшинчи шайлашулăха ăсласа илни Гумбольдтăн ĕçĕсенче уçăмлă курăнать. Ку лингвистикăшăн та, философи наукишĕн те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

В. фон Гумбольдтăн чĕлхе пĕлĕвĕпе çырнă чи паллă ĕçĕсем:

1. "О языке и мышлении" ("Чĕлхепе шухăшлав пирки")

2. "Чӗлхе вӗрентӗвӗн пуҫламӑшӗ ҫинчен"

3. "Ява утравӗ ҫинчи кави чӗлхи ҫинчен"

4. "Этем чӗлхисен тытӑмӗсен расналӑхӗ пирки тата вӗсем этемлӗхӗн ӑс-хакӑл аталанӑвне витӗм кӳни"

5. "Латинпа хинди чӗлхисем"

6. "Чӗлхен тӗрлӗ характерӗсем литературӑпа ӑс-хакӑл аталанӑвне витӗм кӳни пирки"

7. "Грамматика кӳлеписем пулса кайни ҫинчен, вӗсем идея аталанӑвне витӗм кӳни"

8. "Чӗлхе философийӗ"

9. "Аталанури чӗлхесене танлаштаруллӑн тӗпчени"

10. "Лацийпе Эллада"

11. "Генезиспа дефиници"


Усӑ курмалли литература

Тӗп литература

1. Рамишвили Г.В. Вильгельм фон Гумбольдт – основоположник теоретического языкознания // В.ф.Гумбольдт. Избр. тр. по языкозн. – М.: Прогресс, 1984.

2. Звегинцев В.А. О научном наследии В.ф.Гумбольдта // Избр. тр. по языкозн. – М.: Прогресс, 1984.

3. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М.: Высш. шк., 1974.

4. Гульпа А.В. Идеи к опыту, определяющему группы деятельности государства. Философская антропология В.ф.Гумбольдта // В.ф.Гумбольдт. Язык и философия культуры. – М.: Прогресс, 1985.

5. Григорьева Т.Л. Встреча с Гумбольдтом – встреча времен // Иностр. лит. – 1987. – №8.

Хушма литература

1. Гайм Ф. Вильгельм фон Гумбольдт: Описание его жизни и характеристика. – М., 1898.

2. Павлов В.М. Философская основа неогумбольдтианского направления // Вопр. общ. языкозн. – Л., 1967.

3. Павлов В.М. Проблема языка и мышления в трудах В.Гумбольдта и неогумбольдтианском языкознании // Язык и мышление. – М., 1967.

4. Рамишвили Г.В. Некоторые вопросы лингвистической теории В.Гумбольдта. – Тбилиси, 1960.

## 2§. А.Шлейхерӑн чӗлхе концепцийӗ

**Август Шлейхер** (1821-1868) Франц Боппӑн вӗренекенӗ пулнӑ май индоевропа чӗлхисен тӑванлӑхне малалла тӗпчес тӗллев лартать. Шлейхер чӗлхе наукисӗр пуҫне ботаникӑпа тата философипе кӑсӑкланнӑ. Малтанах вӑл Бонн хулинче вӗрентнӗ, унтан Прагӑна куҫнӑ, 1857 ҫултан Иен университетӗнче ӗҫлеме пуҫланӑ. 1852 ҫулта "Чиркӳ славян чӗлхин морфологийӗ" кӗнеке, унтан литва чӗлхине вӗреннӗ хыҫҫӑн "Литва грамматикине" пичетлесе кӑларать.

1861-1862 ҫулсенче А.Шлейхерӑн тӗп ӗҫӗ – "Индоевропа чӗлхисен танлаштаруллӑ грамматикин компендийӗ" – пичетленсе тухать. Пӗтӗмӗшле чӗлхе ыйтӑвӗсем унӑн ҫак ӗҫӗсенче палӑраҫҫӗ: 1)"Танлаштаруллӑ лингвистика тӗпчевӗсем" (икӗ пай, 1848-1850); 2) "Нимӗҫ чӗлхи" (1859); 3) "Дарвин теорийӗ тата чӗлхе пӗлӗвӗ" (1863); 4) "Чӗлхен этемлӗх историйӗнчи вырӑнӗ" (1865).

Шлейхер ӑнланӑвӗнче чӗлхе ҫут ҫанталӑк организмӗ пекех сӑнарланнӑ:

1) чӗлхе ҫут ҫанталӑк организмӗ пулнӑ май этем вӑйӑмне пӑхӑнмасть, ҫавӑнпа ӑна улӑштарса ҫӗнетме май ҫук;

2) чӗлхен пурнӑҫӗ чӗрӗ организмсенни пекех, чӗлхен чӑн пурнӑҫне диалектсем кӑтартаҫҫӗ.

Шлейхер чӗлхене чӗрӗ организмсен шутне кӗртнӗ. Кун пирки вӑл ҫапла каланӑ: "Чӗлхен пурнӑҫӗ чӗрӗ организмсен (ӳсентӑрансемпе чӗрчунсен) пурнӑҫӗнчен уйрӑлса тӑмасть. Чӗрчунсем пекех, чӗлхен ӳсӗм тата ватлӑх тапхӑрӗсем пур". Анчах ҫав вӑхӑтрах А.Шлейхер вӗсен хушшинчи уйрӑмлӑхсене те палӑртать: "Паллах, Дарвин вӗрентӗвӗн тӗп паллисем кӑна чӗлхене чӗрӗ чунсемпе танлаштарма май параҫҫӗ".

Ботаника ыйтӑвӗсемпе кӑсӑкланни унӑн чӗлхе пӗлӗвӗн ыйтӑвӗсене ҫырса кӑтартнине витӗм кӳнӗ. Шлейхер чылай чухне чӗлхен обществӑлла функцине шута илмен, ҫакӑ чӗлхене чӗрӗ чунсемпе танлаштарма ҫул уҫса панӑ. А.А.Потебня А.Шлейхер шухӑшне

хирĕçлесе çапла каланă: “Организм хăй тĕллĕн пурăнать, сăмах вара – этем çăварĕнчен тухать”.

Чĕлхе – обществăлла пулăм, чĕрĕ организм мар. Чĕлхе унпа калаçакан халăхпа пĕрле çуралать, халăх пĕтсен – чĕлхе те вилет.

Сăмахсен тăрăмĕпе тытăмĕ тĕлĕшĕнчен чĕлхесен морфологи типĕсене (е класĕсене) палăртма май пулнине асăрхаттарать А.Шлейхер: изоляцилекен чĕлхесен – сăмах тымарĕ, агглютинациллĕ чĕлхесен сăмах тымарĕ çумне тĕрлĕ хутшăнăва палăртакан приставкăсем, суффикссем, аффикссем пулаççĕ, флексиллĕ чĕлхесенче пĕлтерĕш сăмах тытăмĕнчи сасăсем улшăннипе тата аффикс е суффикс хушăннипе пулса пырать.

В. фон Гумбольдт уйрăммăн пăхнă полисинтезлă чĕлхесене Шлейхер агглютинациллĕ чĕлхесен варианчĕ пек пăхнă. Ăна çак таблицăра кăтартнă.

| Чĕлхе тытăмĕ | Сăмах тытăмĕн формули | Тĕслĕхсем | Чĕлхесен аталанăвĕ |
|---|---|---|---|
| Изоляцилекен | А сăмах тымарĕ кăна<br>А+А[1] сăмах тымарĕ + пулăшу сăмахĕ | китай, намаква, бирман чĕлхисем | авалхи сăнсăпат |
| Агглютинациллĕ | Аа – сăмах тымарĕ + суффикс<br>Аа – сăмах тымарĕ + инфикс<br>АА – сăмах тымарĕ + Префикс<br>Аа(аА) + А[1] – анализ тытăмĕ | тĕрĕк, монгол, венгр, туш чĕлхисем<br><br>тибет чĕлхи | куçăм тĕссем |
| Флексиллĕ | Аа – шалти таса флекси<br>$AA^a$ $A^a_a$ - шалашри тата тулашри флекси<br>ААа+А[1] - анализ тытăмĕ | авалхи семит, индоевропа чĕлхисем<br><br>çĕнĕ индоевропа чĕлхисем | аталанса çÿллĕ шая çитнĕ тĕссем<br><br>юхăннă тапхăрта манăçа тухнă тата палăрми пулнă формăсем |

Чĕлхен морфологи типĕсем, Шлейхер шухăшĕпе, ўсĕмĕн виçĕ тапхăрне палăртаççĕ: пĕр сыпăклă класс авалхи формăна, ўсĕм пуçламăшне кăтартать; агглютинацилли – вăтам тапхăра; флексиллĕ чĕлхесен аталанăвĕн юлашки сыпăкĕ малтанхи икĕ тапхăра пĕрлештерет.

Индоевропа чĕлхисен çыхăнăвĕсене тĕпчени Шлейхера вĕсен йăх-несĕл йывăççине (родословное древо) йĕркелеме май парать.

Индоевропа прачĕлхи (Ursprache) истори тапхăрĕччен икĕ пая пайланать - çурçĕр Европа (славян тата германи чĕлхисем) тата кăнтăр Европа (ари, грек, итали, кельт чĕлхисем). Истори тапхăрĕнче индоевропа чĕлхи авалхи Инди чĕлхине çывăх пулнă, аякра тăраканнисем – германи тата балтика, славян чĕлхисем. Çак йăх-несĕл йывăççи паянхи куна çитичченех сыхланса юлнă, хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман.

Компаративистикăн тĕп задачи, Шлейхер шухăшĕпе, индоевропа прачĕлхин юлашкисене усă курса праформăна тупса палăртасси. Çав форма хăй халлĕнех тĕл пулмасть, анчах ăна ăнкарса илме пулать. Сăмахран, *атте* сăмах чĕлхе палăкĕсенче çак формăсемпе тĕл пулать: санскрит *pitā*, лат. *pater*, готск. *fadar*, авалхи исланди *fadir*. Çак тĕслĕхсене шута илсен праформа çапларах пулмалла: *patē* е *patēr*. Анчах Шлейхера ку тивĕçтермест, çавăнпа вăл шухăшласа кăларнă *patars* формăна йышăнать.

Пĕтĕмĕшле тата танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвне аталантарас ĕçре Шлейхерăн тўпи пысăк. Вăл индоевропа прачĕлхине реконструкцилемелли методикăна çирĕплетнĕ; индоевропа чĕлхисен йăх-несĕл тымарне (йывăçне) туса хатĕрленĕ; чĕлхесене морфологи тĕлĕшĕнчен классификациленĕ. Шлейхер пуçласа чĕлхе аталанăвĕн саккунĕсем пуррине кăтартать. Чĕлхере пулса иртекен фонетика улшăнăвĕсем вăл çирĕп саккунсем тăрăх пулса пынине палăртнă.

## 3§. Чĕлхе пĕлĕвĕнчи психологизм. А.А.Потебня ĕçĕ-хĕлĕ

XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕ малалла аталаннине палăртмалла. Шлейхер концепцийĕпе килĕшмесĕр ăна тĕпчевçĕсем критиклеме пуçланă. Логика грамматикин принципĕсене Гумбольдт хăйĕн ĕçĕсенче сивленĕ хыççăн ăна шута хума пăрахнă. Çак вăхăтра чĕлхе пĕлĕвĕнче психологилле юхăм хуçаланма пуçлать. Ку юхăма никĕслекенĕ – нимĕç чĕлхеçи **Г.Штейнталь** (1823-1899). Унăн тĕп ĕçĕсем çаксем: "Чĕлхе пулса кайни" (1851); "Грамматика, логика тата психологи, вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăннин принципĕсем" (1855).

Штейнталь шухăшĕпе, чĕлхе пĕлĕвĕн (лингвистикăн) предмечĕ вăл – чĕлхе, пĕтĕмĕшле илсен, чĕлхе кăна, уйрăм çыннăн шалти туйăмĕсене, шухăшĕсене калаçу органĕсем сасă кăларнипе палăртма май парать. Çыннăн шалти тĕнчине, ăна мĕнле пулсан та, чĕлхе мелĕсемпе кăна палăртма пулать. Çапла вара Штейнталь концепцийĕнче ăшри калаçу тата харкамăн шухăшлани пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ, психологи тĕлĕшĕнчен чĕлхене харкамлăхпа çыхăнтарни ăна обществăлла пулăм пулнине ĕнентерме май килмен. Ку Штейнталь вĕрентĕвĕн çитменлĕхĕ. Чĕлхе пĕлĕвĕн харкам çынăн психологине унăн калаçăвĕпе çыхăнтарса кăна вĕрентмелле мар, çав хушăрах чĕлхесене вĕреннĕ май халăх психологине те шута илмелле.

Штейнталь вĕрентĕвĕн витĕмĕ Потебня, Пауль, Бодуэн де Куртенэ, Соссюр, Сепир тата Щерба ĕçĕсенче те палăрать. Потебняпа Пауль концепцийĕсенче психологи никĕсĕсем предложенин семантикине, грамматика категорийĕсене тата лексика пĕлтерĕшне (семантикине) ăнлантармалли тĕп шухăш пулнă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнчи тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи психологи шкулĕн представителĕсем чĕлхепе калаçу хушшинчи уйрăмлăхсене, чĕлхен функцине, структурăллăхне пăхса тухнă.

Ку тапхăрта пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕнче икĕ юхăм хуçаланнă: 1) чĕлхе – çут çанталăк пулăмĕ; 2) чĕлхе – психика пулăмĕ. Юлашки витĕмĕ анлăрах сарăлнă.

Чĕлхе психологизмĕн функциллĕ, структурăллă аспекчĕпе А.Марти ĕçленĕ. Унăн ĕçĕ – "Пĕтĕмĕшле грамматикăна тата чĕлхе философине никĕслес тĕлĕшпе иртгернĕ тĕпчевсем" (1908). А.Гардинер "Чĕлхепе калаçу теорийĕ" (1932) ятлă ĕç çырнă, К.Бюлерăн 1934 çулта "Чĕлхе теорийĕ" текен ĕçĕ пичетленсе тухнă.

Раççейре чĕлхе наукинче психологи юхăмне тытса пыракансенчен пĕри вăл – **Александр Афанасьевич Потебня** (1835-1891). Унăн тĕп ĕçĕсем – "Шухăшлав тата чĕлхе" (1862), "Вырăс грамматики валли хатĕрленĕ тĕрленчĕксем" (1874-1888).

Чĕлхе этемлĕх ĕç-хĕлĕ пулнă май виçĕ тĕрлĕ палăрать: пĕтĕмĕшле этемлĕх, наци (йăх) тата харкам уйрăмлăхсем. Пĕтĕмĕшле этемлĕх паллисем сасăсем тĕлĕшĕнчен символсен системи пулса шухăшлава йĕркелеççĕ. Ытти пахалăхсем пĕтĕмпех йăх (наци) паллисем. Потебня шухăшĕпе, пур чĕлхесен те тан килĕшӳллĕ пĕр грамматика тата лексика категорийĕ те çук.

Наци (халăх) чĕлхе пĕрлĕхĕ çинче никĕсленет: халăхсене вĕсен чĕлхисене пăхса уйăраççĕ, чĕлхе халăх традицине упрать. Юнашар пурăнакан икĕ йăх пĕр чĕлхепе çакăн пек чух калаçма пуçлать: вăйлăрах йăх чĕлхи хавшакраххине çĕнтерет е чĕлхесен хутшăнăвĕ амальгамăланать (ют чĕлхе элеменчĕсемпе кăткăсланать), ку чĕлхесен шутне акăлчан, француз, итали, испан, венгр чĕлхисем кĕреççĕ .

Чĕлхе, калаçу тата шухăшлав хутшăнăвĕсене тĕпе хурса сăмахăн пĕлтерĕш тытăмне тата грамматика категорийĕсемпе формисене тĕшмĕртме тăрăшмалла.

Сăмах текен ăнлав Потебня ĕçĕсенче тĕп вырăнта тăрать. Сăмахăн, тĕпчевçĕ шухăшĕпе, пĕтĕмлетӳ тата шухăшлава аталантарас функцийĕ пур. Кашни сăмах виçĕ элементран тăрать: сасăсен уçăмлăхĕ, ăнкару тата пĕлтерĕш. Сасăсăр сăмах пулмасть, çав вăхăтрах вăл ăнкарупа пĕлтерĕш пĕрлĕхĕ те. Сăмахра сасăсăр пуçне тата пĕлтерĕш палли пур, ăна эпир сăмахăн шалаш форми тейĕпĕр.

Пĕлтерĕш палли символ пулса тăрать. Потебня сăмахăн пĕтĕмлетӳ тăваслăхне кăна мар, унăн шухăша

аталантарас тӗлӗшри функцине те палӑртнӑ. Япалана ят панӑ чухне ҫӗннине киввипе танлаштарни тӗп вырӑнта тӑрать. Сӑмахран, ача сӗтелҫи лампин калпакӗ шар евӗрлине курсан ӑна вӑл *арбуз* тет. Латин чӗлхинче *carvus* тата вырӑс чӗлхинче *корова* "майракалли" тенине пӗлтернӗ, апла пулсан ку сӑмах тулашри палла пула ҫуралнӑ.

Чӗлхе пӗлӗвӗнче чӗлхери тата чӗлхе тулашӗнчи пӗлтерӗшсене палӑртмалла. *Йывӑҫ* тесен пирӗн чӗлхе наукинчен ботаникӑна кӗрсе каймалла. Ҫапла вара чӗлхе пӗлӗвӗнче пӑхса тухакан пӗлтерӗше эпир ҫывӑхри (шалашри) пӗлтерӗш тейӗпӗр, ытти предметсемпе ҫыхӑннӑ пӗлтерӗше аякри (е тулашри) пӗлтерӗш тейӗпӗр. Сӑмахӑн ҫывӑхри пӗлтерӗшӗ кӑна шухӑшлавӑн тӗпкӗчи шутланать.

Сӑмахӑн лексика пӗлтерӗшӗ япалалӑхлӑ, грамматика пӗлтерӗшӗ ячӗшӗн ҫеҫ, ӑна грамматика формисемпе категорийӗсене тишкернӗ май кӑна палӑртмалла.

Сӑмахӑн грамматика форми сӑмах пекех виҫӗ элементран тӑрать: сасӑ, ӑнкару тата пӗлтерӗш. Вӑл сӑмахсене классификацилеме май парать, калаҫӑва ҫыхӑнуллӑ тӑвать.

Калаҫу предложенисенчен тӑрса чӗлхен пайӗ шутланать. Предложенире лексикӑпа грамматика хутшӑнӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ, унтах тӗрлӗрен грамматика категорийӗсем те палӑраҫҫӗ: сӑмахсем, пуплев пайӗсем, предложени членӗсем. Тӗпчевҫӗне славян чӗлхисен синтаксисӗ пуринчен те ытларах интереслентернӗ, ҫавна май вӑл славян тата индоевропа синтаксисӗн теорине калӑплас ӗҫре те вӑй хунӑ. Унӑн вӗрентӗвӗ чылай чухне младограмматиксен вӗрентӗвӗпе пӗр килнӗ.

Потебнян пӗтӗм наука тата педагогика ӗҫӗ-хӗлӗ Харьков университетӗнче иртнӗ. Вӑл Харьковри чӗлхе пӗлӗвӗн шкулне йӗркеленӗ. Унӑн вӗренекенӗсем А.В.Ветухов, А.Г.Горнфельд, В.А.Лезин, Б.М.Ляпунов, А.В.Попов, В.И.Харциев пулнӑ. Тӗпчевҫӗн вӗрентӗвӗ потебнианство ятне илнӗ.

А.А.Потебня Украина халӑхне, Раҫҫее юратнӑ. Вӑл ялан сӑнаса тӗпчекен объектсенчен пӗри Украина тата вырӑс халӑхӗсен поэзилле пултарулӑхӗ пулнӑ. Ученӑй

халăх нушине лайăх ăнланнă, студентсен юхăмĕсене интересленсе сăнанă, патша влаçĕн пусмăрлăхне, тискерлĕхне хирĕç пулнă. “1935 çулта Харьков хулинчи тĕп архивра А.А.Потебнян ĕçĕсене тишкернĕ чух çутĕç министрĕ патне çырнă çырăва тупнă. Ку çырура Потебня студентсен репрессийĕсене пĕтерме ыйтнă. А.А.Потебня вĕренекенĕ А.В.Ветухов каласа панă тăрăх, çак çырушăн тĕпчевçĕ занятийĕсенче пĕтĕм вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех полици чинĕ ларнă, лекци тексчĕсене те полици пăхса тухнă”,– тесе çырать Ф.П. Филин.

Паллă ученăй-славист халăх сăмахлăхне, этнографине, литература историне, философи ыйтăвĕсене, литературоведенин пĕтĕмĕшле проблемисене тĕпченĕ, анчах та унăн ĕçĕсенче чĕлхе тĕп вырăн йышăннă.

Потебня ĕçĕ-хĕлĕн ӳсĕмĕ XIX ĕмĕрĕн II çурринчи вырăс науки çĕкленсе кайнипе пĕр килет.

Унăн тĕпчевĕсем чĕлхе материалĕ çине тайăннă. Славян чĕлхисемсĕр пусне Потебня балти, авалхи грек, латин, санскрит, француз, нимĕç чĕлхисене пĕлнĕ.

Ученăй ĕçĕсенче пирĕншĕн чи кирли вăл – чĕлхе пулăмĕсене истори тĕлĕшĕнчен тĕпчени. “...Поверхность языка, – çырать вăл, – всегда более-менее пестреет оставшимися наружи образцами разнохарактерных пластов... Стараясь сколько-нибудь определить пропорции, в каких на обращенной к нам поверхности языка смешаны разнохарактерные явления, вместе с тем приходим к необходимости выяснить их характер, поставивши их в ряды других, с ними однородных” (Из записок по русской грамматике. I, II. Харьков, 1888).

“Тĕрлĕ характерлă чĕлхесен” историри вырăнне палăртма А.А.Потебня хăйĕн авалхи тапхăртан пуçласа паянхи кунчченхи чĕлхе тата шухăшлав аталанăвĕн концепцине кăларса тăратнă. Çак концепцин никĕсĕнче – критиклесе çĕнĕрен йĕркеленĕ Гербардт, Гумбольдт, Штейнталь, Лацарус тата ытти хăш-пĕр философсемпе чĕлхеçĕсен шухăшĕсем, чи кирли вара – хăй чĕлхе факчĕсене тĕпченĕ сăнавсем.

Унăн концепцийĕн тĕп çăлкуçĕ – сăмахăн "шалти форми" çинчен вĕрентни. Сăмах хăй пĕлтерекен япалан пур пахалăхĕпе паллăлăхне те палăртма пултараймасть; вăл хăйĕн паллисенчен пĕрне çеç пĕлтерет.

А.А.Потебня психологи юхăмне пуçарса яракан Г.Штейнталь тĕпчевçĕн тата В.Гумбольдтăн вĕрентĕвĕсене пурнăçласа пыраканĕ пулнă. Çавăнпа та вăл уйрăмах чĕлхен психологи никĕсĕсемпе интересленнĕ, чĕлхене грамматика тата семасиологи тĕлĕшĕнчен тĕпченĕ. "Мысль и язык" ĕçĕнче тĕпчевçĕ хăйĕн наукăри ĕçĕ-хĕлĕн программине палăртать: "Чĕлхе историйĕн тĕп тĕллевĕ – уйрăм çынпа çут çанталăк хушшинчи çыхăнусене кăтартасси".

А.А.Потебня – Шлейхерăн биологизмне тата унăн индоевропа чĕлхисен аталанăвĕнчи икĕ тапхăр çинчен калакан суя теорине хирĕç калаçакан пĕрремĕш чĕлхеçĕ. Вăл шутланă тăрăх, халăх пурнăçĕнчи пур тапхăрсем те чĕлхе аталанăвне кăтартса параççĕ. А.А.Потебня çавăн пекех кăк чĕлхе формисен пĕтĕмлетнĕ фонетика тата морфологи реконструкцийĕсене хирĕç пулнă, ăна çав вăхăтри фонетика саккунĕсен актуаллă проблеми те кăсăклантарман. Потебнян наука интересĕсен тĕп сфери танлаштаруллă синтаксис пулнă. Танлаштаруллă синтаксис тĕрлĕ контекстри тата чĕлхен истори аталанăвĕнчи тĕрлĕ тапхăрти сăмахăн тата сăмах майлашăвĕсен формисен пĕлтерĕшне (семантикине) хурăнташ чĕлхесен синтаксис факчĕсемпе шайлаштарса вĕрентекен ăслăлăх шутланать.

"Из записок по русской грамматике" (1874. Т. I, II; 1899. Т.III; 1941. Т. IV.) кĕнеки – чĕлхеçĕн тĕп ĕçĕсенчен пĕри. Ку кĕнекере тĕпчевçĕн Буслаев логицизмне хирĕç шухăшĕсем уççăнах курăнаççĕ. Вăл чĕлхере аталанăвăн объективлă саккунĕсем пуррине йышăннă, чĕлхе пулăмĕсене чĕлхен хăйĕн системинчех ăнлантарма тăрăшнă. А.А.Потебня мерлечĕ системăри тата истори перспективинчи чĕлхе факчĕсен вĕрентĕвне палăртать. Александр Афанасьевич шухăшĕпе, калаçаканнипе итлекен хушшинчи пĕрлĕхе вĕсем иккĕшĕ те пĕр халăхран тухни кăтартать.

Вырӑс грамматика наукинче грамматика ыйтӑвӗсене, чӗлхе формипе пуплев пултарулӑхӗн ыйтӑвӗсене шухӑшлав тата пӗлӳ формипе никам та, Потебня пек, тачӑ ҫыхӑнтарман. Унӑн философи пӗтӗмлетӗвӗсен тата историпе чӗлхе пӗлӗвӗн шыравӗсен предмечӗ – чӗлхе единицисем (пайрӑмӗсем). Вӗсен шутне сӑмах, предложени, пуплев пайӗсем кӗреҫҫӗ. Вӗсем пулӑшнипе халӑхӑн пӗлӳ ӗҫӗ-хӗлӗ йӗркеленет. Предложение А.А.Потебня чӗлхен тӗп грамматика тата структурӑпа пӗлтерӗш единици тесе пӑхать.

Пӗтӗмӗшле теори ыйтӑвӗсене ӑнлантарнӑ чух Потебня ытларах чӗлхене ӗҫ-хӗл пек пӑхса тухакан тезиса уйӑрнӑ. Ку пуплеве характеристика панипе тата чӗлхе тӗлӗшӗнчен пӑхакан художество пултарулӑхӗн проблемипе пӗтӗҫнӗ. Грамматика формисемпе категорийӗсем чӗлхен пӗтӗм грамматика стройӗпе, унӑн пӗлтерӗш структурипе ҫыхӑннӑ.

А.А.Потебня шухӑшӗпе, хальхи чӗлхе пӗлӗвӗн никӗсӗ – чӗлхесем пӗр-пӗрин хушшинче сасӑ енчен кӑна мар, вӗсенче палӑракан шухӑшсен йӗркине тӗрлӗрен палӑртнипе ҫыхӑннӑ. “Грамматика ничуть не ближе к логике, чем какая-нибудь из прочих наук”, – ҫырать А.Потебня.

Предложение ӑнлантарнӑ чух Потебня генетика ӑна хӑш енчен пӑхнине шута илет. Вӑл каланӑ тӑрӑх, чӗлхене, предложение темиҫе палӑртӑм памалла. Потебня, хальхи чӗлхешӗн предикативлӑх – предложенин тӗп палли, тет. Сказуемӑйпа глагола танлаштарни тӗпчевҫӗне предложени членӗсемпе пуплев пайӗсен пӗрлешӗвӗ патне илсе пырать. Предложени структуринче пулса иртекен, пуплев пайӗсемпе предложени членӗсен пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнусене тӗплӗн тӗпчени ӑслӑхҫӑна вырӑс глаголӗн эволюцине, предложенин, глагол типӗн аталанӑвне, япала ячӗсемпе паллӑ ячӗсен историне сӑнлакан картинӑна ӳкерме пулӑшнӑ.

Потебнян тӗрлӗ вӑхӑтри сийсен пӗрлешӗвӗ пек пӑхса тухакан чӗлхе системи ҫинчен калакан пӗтӗмлетӗвӗ чи пахи шутланать.

Александр Афанасьевич Потебнян ячĕ Раççей тата пĕтĕм тĕнче чĕлхе пĕлĕвĕн историйĕнче хисеплĕ вырăн йышăнать. Унăн наукăри ĕçĕ-хĕлĕ тĕпчевçĕсене ытларах та ытларах кăсăклантарать, вырăссемпе украинецсем хушшинчи культура тата чĕлхе çыхăнăвĕсене, майĕпен ÿссе пыракан наукăпа культурăна аталанма пулăшать. А.А.Потебня хăй вăхăтĕнчи паллă славист, темиçе славян чĕлхине пĕлекен ученăй пулнă. Вăл тĕрлĕ славян халăхĕсен сăмахлăхне тата культурине аван пĕлнĕ. Чĕлхе пĕлĕвĕсĕр пуçне вăл литература историне, халăх сăмахлăхне, поэтикăна, этнографине, культура историне тĕпченĕ.

Тĕпчевçĕн нумай пĕтĕмлетĕвĕсемпе шухăшĕсем хальхи вăхăтра та хăйсен пахалăхне çухатмаççĕ. Чĕлхе наукинче Потебня психологи юхăмĕн паллă представителĕ шутланать. Потебняпа пĕр вăхăталлах В. Вундт та ку ыйтусене тĕпченĕ.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Вильгельм Вундт (1832-1920) хăйĕн ĕçĕсенче вăл психолингвист пулнине ĕнентернĕ. Чăнах та, унăн ĕçĕсен ячĕсем те çакна çиреплетеççĕ: "Халăхсен психологийĕ – чĕлхе" (1890); "Чĕлхе историйĕ тата чĕлхе психологийĕ" (1901); "Халăхсен психологийĕн элеменчĕсем" (1912). Чĕлхене Вундт мифсемпе пĕрлештерсе тĕпченĕ, мифсенче вăл тĕн тата ÿнер пуçламăшне курать. Çак ыйтусене пурне те вăл психологипе çыхăнтарать. Хăй каланă тăрăх, чĕлхе факчĕсене вăл психолог пек тĕпчет.

А.А. Потебнян тĕп ĕçĕсем:

1. Из записок по русской грамматике.

2. Мысль и язык (1862).

3. О полногласии (статья, 1864).

4. О звуковых особенностях русских наречий. С приложением образцов менее известных малорусских говоров (1865).

5. Заметки о малорусском наречии (1870).

6. Ударение (1873).

7. Язык и народность (1895).

8. Из записок по теории словесности. Поэзия и проза. Тропы и фигуры. Мышление поэтическое и мифическое (1905).

9. О мифическом значении некоторых обрядов и поверий (1865).

10. Объяснение малорусских и сродных народных песен (I т. 1883; II т. 1887).

11. Эстетика и поэтика. – М., 1976.

12. Слово и миф. – М., 1889.

13. Слово о полку Игореве. Текст и примечания.– Харьков, 1914.

14. Теоретическая поэтика. – М., 1890.

Усă курмалли литература

Тĕп литература

1. Белодед А.И. А.А.Потебня // Русская речь. – 1985. – №5.

2. Будагов Р.А. А.А.Потебня как языковед-мыслитель // Вопр. языкозн. – 1986. – №3.

3. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М., 1974.

4. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М., 1979.

5. Пресняков О.П. Поэтика познания и творчества: Теория словесности А.А.Потебни. – М., 1980.

6. Франчук В.Ю. А.А.Потебня. – М., 1986.

7. Франчук В.Ю. А.А.Потебня и славянская филология // Вопр. языкознания – 1992. – №4. – С.123-130.

Хушма литература

1. Десницкая А.В. О лингвистической теории Августа Шлейхера // Вопр. языкозн. – 1971. – №6.

2. Тарасов Е.Ф. Тенденция развития психолингвистики. – М., 1987.

3. Потебня А.А. Мысль и язык. – 2-е изд. – Харьков, 1892.

## 4§. Младограмматиксем тата младограмматизм

XIX ĕмĕрĕн 70–80-мĕш çулĕсенче танлаштаруллă истори тата психологиллĕ чĕлхе пĕлĕвне тиркес тĕлĕшĕпе Лейпцигра чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕ активлă ĕçлеме пуçланă. Вĕсем, çамрăк чĕлхеçĕсем, Шлейхер вĕрентĕвне çине тăрса критикленĕ, çавна май Ф.Царнке çак çамрăк чĕлхеçĕсене Junggrammatiker –

младограмматиксем тенĕ. Çак шÿтлĕ ята К.Бругман çине çинех усă курма пуçланă. Младограмматистсен Манифесчĕ выранне К.Бругманпа Г.Остхоф çырнă "Морфологи тĕпчевĕсем" (1878) кĕнекен умсăмахне йышăннă. Младограмматиксен тĕп ĕçĕсем тесе çаксене шутламалла: 1) Б.Дельбрюкăн "Индоевропа чĕлхисен вĕрентĕвĕн кÿртĕмĕ"; 2) Г.Паулĕн "Младограмматизм энциклопедийĕ", "Чĕлхе историйĕн принципĕсем"; 3) К.Бругманпа Б.Дельбрюкăн "Индогермани чĕлхисен танлаштаруллă грамматикин никĕсĕсем"; 4) А.Лескинăн "Авалхи болгар (чиркÿ славян) чĕлхин грамматики". Младограмматиксен вĕрентĕвĕ ытти çĕршывсене те сарăлнă: Францире М.Бреаль ("Семасиологи опычĕ"), Индире – Г.Асколи, Америкăра – У.Уитней, Швейцарире – Ф. де Соссюр, Раççейре – Ф.Ф.Фортунатов тата И.А.Бодуэн де Куртенэ. Германире младограмматиксен Лейпциг шкулĕсĕр пуçне Геттинген шкулĕ (А.Фик, А.Бецценбергер, Г.Коллиц, Ф.Бехтель) тата Берлин шкулĕ (И.Шмидт, В.Шульце) пулнă.

Младограмматиксем виçĕ тĕп шухăша хÿтĕленĕ: 1) чĕлхери фонетика саккунĕсем çирĕп йĕркепе пулса пыраççĕ (правилăна пăхăнман тĕслĕхсем çав саккунсем пăсăлнинчен килеççĕ); 2) пĕрешкеллĕх (аналоги) çĕнĕрен пулакан чĕлхе кÿлеписене, фонетикăпа морфологи улшăнăвĕсене витĕм кÿрет; 3) тĕпрен илсен хальхи чĕрĕ чĕлхесемпе вĕсен диалекчĕсене тĕпчемелле, мĕншĕн тесен вĕсем (авалхи чĕлхесемпе тата çынсем витĕмлетсе йĕркелештернĕ литература чĕлхипе танлаштарсан) лингвистикăн тата психологин закон йĕркипе аталанакан çул-йĕрне тупса палăртма май параççĕ.

Младограмматиксем хăйсен шухăшĕсене ку таранччен тĕпчесе тупнă никĕс çинче аталантарнă. Чĕрĕ калаçăва, сасă пулăвĕн физиологи тата акустика условийĕсене, вĕсем калаçу юхăмĕнче пĕр-пĕрне витĕм кÿнине, истори тапхăрĕнче диалектсенче сасăсем улшăннине сăнани чĕлхе наукин пайне, фонетикăна йĕркелештерме май панă. Сăнавсем сасăсен улшăнăвĕн çирĕп йĕрки пур текен тезис патне илсе çитернĕ.

Грамматикăра та çĕнĕ шухăшсем калама майсем уçăлнă: флекси (сăмахăн улшăнакан пайĕ) тата агглютинацисĕр (грамматика формисем сăмах тĕпĕ (е тымарĕ) çумне аффикссем сыпăнса пынисĕр) пуçне тата ытти морфологи пулăмĕсем те хуçаланаççĕ: морфсен хушшинчи чикĕ улшăнса хуплашу пулма пултарать т.ыт.те. Сăмах тĕпĕсем ансатланма пултараççĕ. Фонетика тата грамматика тĕлĕшĕнчен пухнă пĕлӳсем этимологи наукине тĕрĕс çул çине тухма май туса панă. Этимологи тĕлĕшĕпе тунă сăнавсем çакна кăтартнă: сăмахсенчи фонетика тата пĕлтерĕш улшăнăвĕсем пĕр-пĕрне пăхăнса тăмаççĕ. Пĕлтерĕш улшăнăвĕсене тĕпчекен çĕнĕ наука – семасиологи – вăй илсе аталанма пуçлать, анчах младограмматиксен вĕрентĕвĕнче ку палăрсах каймасть-ха.

Чĕлхе факчĕсене çĕнĕлле ăнланни малтанхи компаративистсен шухăшĕсене сивлеме майсем туса панă. Сăмахран, чĕлхесем пурте пĕр йĕркепе аталанаççĕ: малтанхи формăсăрлăхран (аморфлăхран – малтанхи вăхăтра сăмах тымарĕсем кăна пулнинчен) агглютинаци патне, ун хыççăн флекси пулнă текен шухăшран младограмматиксем риснĕ. Вĕсем Шлейхерăн натурализмне тата чĕлхе аталанăвне икĕ периода уйăрнине çине тăрсах тиркенĕ. Ку таранччен танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕн представителĕсем индоевропа никĕс чĕлхине реконструкциленĕ, ку вĕсен тĕп тĕллевĕ пулнă, тĕп шухăш прачĕлхе тавра çаврăннă. Чĕлхе аталанăвĕн каярахри тапхăрĕсене пачах тĕпчемен тесен те юрать, мĕншĕн тесен ку тапхăрсене аркану, юхăну, ватлăх тапхăрĕсем тесе шутланă.

Младограмматиксем конкретлă чĕлхесемпе вĕсен диалекчĕсене çине тăрса тĕпчеме пуçланă. Вĕсен шухăшĕпе, ку таранччен чĕлхе пĕлĕвĕ чĕлхе факчĕсене çеç тĕпчес тĕллев лартнă, çав вăхăтрах çав чĕлхепе калаçакан çынсем пирки шухăшламан та. Прачĕлхесене вĕсем фикци (уйтав) тенĕ, çавăнпа та хальхи чĕлхесен тăрăмне çеç тĕпченĕ.

Этем калаçăвĕн механизмĕ психика тата физиологи тĕлĕшĕпе палăрса тăрать. Младограмматиксем калаçăвăн физиологи уйрăмлăхĕсене кăна çырса кăтартни сахал

тесе шутлаççĕ, малти вырăна чĕлхене психологи тĕлĕшĕнчен тĕпченине лартаççĕ.

Психологизм тата индивидуализм (уйрăм çын калаçăвĕ) младограмматиксен тĕп принципĕсем шутланаççĕ. Калаçакан уйрăм çын тĕпчевре тĕп вырăнта тăни лайăх, анчах ăна кирлĕ фактор вырăнне йышăнма май çук, мĕншĕн тесен чĕлхе вăл – общество пулăмĕ, çавна май улшăнусем те обществăра тата чĕлхере пĕрле пулса иртеççĕ.

Чĕлхе пĕр вĕçĕмсĕр аталанакан пулăм пулнине ăнланни чĕлхене истори тĕлĕшĕнчен çеç тĕпчемелле текен постулата (кĕрет чăнлăха) ăнланса илме май панă. Г.Пауль тĕпчевçĕ пĕтĕм чĕлхе пĕлĕвне истори тĕлĕшĕнчен пăхма сĕннĕ.

Фонетика саккунĕсемпе чĕлхери пĕрешкеллĕхсем (аналоги) младограмматиксен тĕпчевĕсенче малти вырăнта тăнă, тавлашусем те пулкаланă, çавăнпа та фонетика саккунĕсене çĕнĕрен пăхса тухма лекнĕ. Малтанах фонетика саккунĕсене çут çанталăкра пулса иртекен улшăнусем пек пăхнă пулсан, кайрантарах ку шухăша улăштарнă. Пĕрремĕшĕнчен, фонетика саккунĕсене физиологи саккунĕсенчен уйрăммăн пăхмаллине пусăмласах каланă. Иккĕмĕшĕнчен, ку саккунсен витĕмне хронологи тата территори тĕлĕшĕнчен тĕсемеллине палăртнă. Апла пулин те младограмматиксен ĕçĕсем прогрессивлă пулнă: 1) чĕрĕ чĕлхесене тата диалектсене çине тăрсах тĕпчени; 2) хутшăнура психика элеменчĕ тĕп вырăнта тăнине палăртни; 3) чĕлхе çав чĕлхепе калаçакан халăх хушшинче кăна пурăннине палăртни, анчах младограмматиксем чĕлхе социаллă е харкам (индивидуаллă) пулăм пулнине ĕнентерсе çитереймен; 4) сасăсен улшăнăвне малти вырăна лартса тĕпчени.

Младограмматиксем диалектсене тĕпчени диалектологи аталанăвĕн никĕсне хывнă. Вĕсен шухăшĕпе, вырăнти калаçусенче чĕлхен "пурнăçĕ" ытларах сыхланса юлать.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче диалектологи кăна мар, лингвистика географийĕ те аталанма пуçлать. Лингвистика географийĕ диалектологирен уйрăлса чĕлхе

пĕлĕвĕн уйрăм пайĕ пек аталанма пуçлать, вăл ареал лингвистикине çывăх. Лингвистика географийĕ аталаннă май диалектологи атласĕсем тăвас ĕç пуçланать.

Младограмматиксен вĕрентĕвĕнчи çитменлĕхĕсем шутне вĕсем тĕпчев сферине виçесĕр ансăрлатни кĕрет. Фонетикăра тата морфологире пулăхлă тĕпчев ĕçĕсем пулнă пулин те, чĕлхе пĕлĕвĕн чылай пайĕсем (лексикологи, семасиологи, синтаксис) тĕпчев объекчĕсем шутланман. Вĕсем пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсене те хускатман: чĕлхен тупсăмлăхĕ, унăн обществăри функцийĕ, литература чĕлхи, чĕлхе пĕлĕвĕ ытти наукăсемпе çыхăнни çинчен çырман.

Пĕтĕмĕшле илсен, младограмматиксем чĕлхен уйрăммăн илнĕ формисемпе категорийĕсене кăна тĕпченĕ. Ку вăл младограмматиксен “атомизмĕ”.

### Усă курмалли литература

1. Чемоданов Н.С. Младограмматизм // Лингв. энцикл. словарь. – М.: Сов. энцикл., 1990. – С. 302.

2. Шпехт Ф. Индоевропейское языкознание от младограмматиков до первой мировой войны // Общее и индоевропейское языкознание. – М., 1956.

### Ыйтусемпе хушусем

1. Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн никĕслевçи тесе эпир кама калатпăр?

2. «Ява утравĕ çинчи кави чĕлхи çинчен» ĕçе кам тата миçемĕш çулта çырнă?

3. А.Шлейхерăн чĕлхе концепцийĕ пирки мĕн калама пултаратăр?

4. А.А.Потебнян тĕп ĕçĕсене асăнăр.

## 1§. Хусанти лингвистика шкулĕ тата унăн ертӳçи И.А.Бодуэн де Куртенэ

XIX ĕмĕр вĕçĕнче Раççейре, наука çӳлти шая аталанса çитнĕ вăхăтра, Хусан чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕ йĕркеленет. Унăн никĕслевçи Иван Александрович Бодуэн де Куртенэ (1845-1929) шутланать. 1875 çулта профессор Хусанти университетра ĕçлеме пуçăнсан, ун йĕри-тавра преподавательсемпе тем те пĕлме тăрăшакан студентсенчен тăракан кружок йĕркеленет. Çакăнтан ĕçлеме тытăнать те ĕнтĕ Хусан чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕ. Кунта Н.В.Крушевские, В.А.Богородицкие, С.К.Булича, В.В.Радлова, И.А.Александрова т.ыт.те кĕртмелле. Ку шкул фонема, морфема тата сăмах ăнлавсене чĕлхе наукинче мĕнле тĕпчемеллине ăслăх тĕлĕшĕнчен ăнлантарнă. Бодуэн вĕрентĕвĕнче пуçласа сасă тата фонема ăнлавсем уйрăм япала пулнине ĕнентерни кĕретĕн тухса тăрать. Ку тĕлĕшпе унăн ятарласа çырнă "Опыт теории фонетических альтернаций. Глава из психофонетики" (1895) ĕç те пур. Бодуэнăн тĕпчев ĕçĕсенче сăмахăн морфологи структурине çутатса парас туртăм палăрать: сăмах тĕпĕсем ансатланни, морфсен хуплашăвĕ текен пулăмсене тĕрĕсех палăртать вăл.

Потебня унчченех чĕлхе пĕлĕвĕн татса паман ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ ĕнтĕ. Унăн ĕçне малалла аталантараканĕсем Хусан тата Мускав чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕсенчи чĕлхеçĕсем пулнă. Чĕлхе пĕлĕвĕнче вĕсем çак ĕçсемпе палăрса тăраççĕ: Н.В.Крушевский "Чĕлхе наукин очеркĕ" (1883); "Чĕлхе пĕлĕвĕн очеркĕсем. Антропофоника" (1883); В.А.Богородицкий "Чĕлхе пĕлĕвĕпе вырăс грамматикин пĕтĕмĕшле курсĕ" (1904); "Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн лекцийĕсем" (1911, 1915); "Эксперимент пĕтĕмлетĕвĕсенчи вырăс чĕлхин фонетики" (1930). Çавăн пекех Хусан шкулĕн идейисене малалла тăсакансем Петербург тата Варшава чĕлхеçисем пулнă. Вĕсен хушшинче Е.Д.Поливанова тата Л.В.Щербăна асăнмалла. Хусан шкулĕн витĕмĕ де Соссюр ĕçĕсенче

те паларать. Чĕлхе ĕç-хĕлне социалла-психикăллă пулăм пек курни, чĕлхе динамизмĕпе унăн пулăмĕсене хронологилле йĕркелени, сасă тата графика аспекчĕсене уйăрни, фонемăпа морфемăна – чĕлхен атомĕсене палăртни, вĕсен тытăмĕпе функцине тишкерни, эксперимент мелне кĕртни, теорилле пĕтĕмлетĕвĕн пĕлтерĕшне ўстерни – çак çитĕнўсем пурте чĕлхе пĕлĕвĕн аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăннине палăртнă вĕсем.

1887 çулта Бодуэна Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне суйлаççĕ. Петербургра лекцисем вуланисĕр пуçне ученăй В.И.Дальăн "Толковый словарь живого великорусского языка" кĕнекине çĕнĕ материал хушас тата 3-мĕш кăларăма редакцилес çĕрте нумай вăй хунă.

1913 çулта унăн "Национальный и территориальный признак в автономии" ятлă брошюра пичетленет. Çак ĕçре автор патша Раççейĕнчи халăхсен прависене хўтĕлес ыйтăва çĕклет. Çакăншăн ăна икĕ çул крепоçре хупса усрама приговор йышăннă. А.А.Шахматов тата вырăс интеллигенцийĕ хўтĕлени çеç Бодуэна тĕрмерен хăтарнă.

Бодуэн де Куртенэ нумай чĕлхе пĕлнĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕсене полякла, вырăсла, нимĕçле, словенла, чехла, французла, итали чĕлхипе, литвалла т.ыт.те çырнă, вĕсене тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленĕ. Анчах та ученăй хăйĕн ĕçĕсен пĕтĕмĕшле кĕнекине пичетлемен. Çакна тума йывăр пулнă, мĕншĕн тесен Бодуэн хăйĕн шухăшĕсене вăхăт иртнĕçемĕн улăштарнă. А.И.Бодуэн де Куртенэ вĕренекенĕсем хушшинче Л.В.Щербăна, Е.Д.Поливанова, Л.П.Якубинские, С.И.Бернштейна, Б.А.Ларина, Б.В.Томашевские, Б.Я.Владимирова, А.П.Баранникова, В.В.Виноградова асăнма пулать.

Иван Александрович час-часах ют çĕршывсенче пулнă, çав вăхăтри пысăк чĕлхеçĕсен (Шлейхерăн, Лескинăн, Асколин) лекцийĕсене итленĕ. Л.В.Щерба каланă тăрăх, "Бодуэн нихăш шкулăн та, никам вĕренекенĕ те пулман, хăйне хăй автодидакт" тата "пур ыйтура та унăн хăйĕн позицийĕ пулнă, çакна тума тăрăшман пулсан та". Хăйĕн ĕçĕсенче вăл чылай чухне

теори тĕлĕшĕнчен тĕрлĕрен пĕтĕмлетӳсем тунă. Вĕсем кайран чĕлхе пĕлĕвĕн тата унăн тĕрлĕ уйрăм пайĕсен аталанăвĕнче тĕп вырăн йышăннă. Çавăнпа паянхи кун та Бодуэн ĕçĕсене вулаççĕ, тĕпчеççĕ. Вăл хускатнă проблемăсем халĕ те актуаллă, Бодуэн де Куртенэ чĕлхе пĕлĕвĕн терминологине çĕнĕ тата пĕр пĕлтерĕшлĕ терминсемпе пуянлатнине те асăнмалла. Вăл, тĕслĕхрен, пĕрремĕш хут çак терминсемпе усă курнă: фонема, морфема, морфонологизаци, семасиологизаци, синтагма, лексема, графема, морфема т.ыт.те.

И.А.Бодуэн де Куртенэ вĕрентĕвĕн паллă енĕсем:

1. Сасăпа саспаллине пăтраштармалла маррине асăрхаттарнă. Компаративизм аталаннă тапхăрта сасăсемпе саспаллисене хутăштарас тĕрĕс мар йăла йĕркеленнĕ иккен. Çакна çапла ăнлантарма пулать: танлаштаруллă-историллĕ чĕлхе пĕлĕвĕшĕн авалхи çыру палăкĕсенче палăрса юлнă индоевропа чĕлхисем пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Хăйĕн вĕренекенĕсенчен Бодуэн сасăпа саспаллине пĕр-пĕринчен уйăрассине çирĕп ыйтнă, çав вăхăтрах чĕрĕ чĕлхесемпе вĕсен диалекчĕсен фонетикине пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине каланă.

2. Авалхи çырулăх палăкĕсенчи фактсемпе танлаштарсан, чĕрĕ чĕлхесене тата диалектсене сăнаса тупнă фактсем чĕлхе пĕлĕвĕшĕн пĕлтерĕшлĕрех пулнине палăртать Бодуэн. Çакна нимĕç младограмматикĕсем те асăннă, анчах та вĕсем тăратнă постулата хăйсен практикăри ĕçĕсемех хирĕçленĕ. Бодуэнпа унăн вĕренекенĕсем çеç çакна чĕлхе пĕлĕвĕн тĕп принципĕсенчен пĕри туса хума пултарнă.

Бодуэн Литва, Словени, Латви çĕршывĕсенче диалектологи валли материал пухнă. Жельерон ĕçĕсем пичетленичченех Бодуэн лингвистика географийĕпе лекци вуланă. Чĕрĕ чĕлхесене тĕпченинче Хусан чĕлхеçисемпе младограмматистсен кашнин хăйĕн уйрăм тĕллевĕсем пулнă: енчен те çак тĕпчевпе Хусан чĕлхеçисем чĕлхе аталанăвĕн саккунĕсене палăртасшăн пулнă пулсан, младограмматистсем çакăнта аваллăх, истори йĕрĕсене шыранă. Диалектсене тарăннăн тишкерни чĕлхе мĕнлерех аталаннине пĕлме май панине Бодуэн темиçе хутчен те асăрхаттарнă. Вăл чĕрĕ чĕлхе

фонетикине çине тăрсах тĕпченĕ, вĕренекенĕсене те çакна тума хистенĕ.

3. Чĕлхен статикипе (синхрони) динамикине (диахрони) уйăрса пăхни. Çак уйăрăва пĕрремĕш хут чĕлхе пĕлĕвне Бодуэнпа унăн вĕренекенĕсем кĕртнĕ. Çакă кайран Ф. де Соссюрăн лингвистика концепцине кĕнĕ. Сăнавлă (статикăллă) тата историллĕ (динамикăллă) аспектсене чĕлхере çирĕп уйăрнине Соссюр кăшт урăхла ăнланнă. Вăл вĕсене хире-хирĕçле пулăмсем тесе шутланă. Тĕрĕссипе вара вĕсем – пĕр чĕлхен икĕ аспекчĕ. Статикăпа динамикăна уйăрса Хусан чĕлхеçисем çак икĕ аспектăн хăй тĕллĕнлĕхне тата спецификине палăртнă. Вĕсен шучĕпе, статика чĕлхен хальхи тăрăмри пулăмĕсене тĕпчет, динамика вара историре нумай ĕмĕр хушши пулса иртекен чĕлхери улшăнусемпе те интересленет. Бодуэн шутланă тăрăх, кашни чĕлхе системи пĕр вăхăтрах хутшăну хатĕрĕ те, чĕлхен историлле аталанăвĕнчи пĕр саманчĕ те. Çак системăра пĕр вырăнта тăракан пулăмсем те, аваллăх юлашкийĕсем те пур, çакăнтах пуласлăхри чĕлхе пĕлĕвне аталантармалли вăрлăх та пытаннă. Акă мĕн çырнă Бодуэн: “Чĕлхере пĕр вырăнта тăракан пулăм çук. Тĕслĕхрен, чĕлхеçĕсем йышăннă хурăнташ чĕлхесенчи пĕр евĕрлĕ, улшăнман тымарсем, вĕçленӳ формисем т.ыт.те – ученăйсем шутласа тупнă япала, çав вăхăтрах объективлă тишкерĕвĕн чăрмавĕ. Чĕлхере, çутçанталăкри пек, пур япала та пурăнать, куçать, улшăнать”.

4. Чĕлхере пулса иртекен физиологи процесĕсене психологи процесĕсенчен уйрăм пăхас ыйту та Бодуэна яланах кăсăклантарнă. Шлейхер натурализмне тиркенĕ май, Бодуэн чĕлхене этемрен уйрăм пăхмалла маррине асăрхаттарса çырнă. Вăл каланă тăрăх, çакăн пек йăнăш ăнланни чĕлхе пĕлĕвĕнче хурăнташ чĕлхесен “генеалогилле йывăçĕсем” тата “хум теорийĕ” текен ăнлавсем çуратнă.

Младограмматиксенчен маларах, сасă процесĕсене тата грамматика пулăмĕсене тĕпченĕ чухне, Бодуэн пĕрешкеллĕх (аналоги) принципĕпе усă курма тытăнать.

Ученăй чĕлхе пĕлĕвĕнче психологилле шухăшлава çирĕплетме тăрăшнă, чĕлхен тĕрлĕ пулăмĕсене психологи е физиологи енчен çеç ăнлантарма пулать тенĕ.

Младограмматиксем чĕлхе саккунĕсене çиелтен çеç ăнланнине Бодуэн критикленĕ, чĕлхе саккунĕсем тĕрлĕ тата час-часах хирĕ-хирĕçле пулăмсен результачĕ пулнине, вĕсене мĕншĕн саккун теме май çуккине кăтартнă. Бодуэн калаçăвăн шалти вăйне уçса пама тăрăшнă.

5. Чĕлхене ют категорисем кĕртмелле мар, мĕн пуррине лайăх тĕпчемелле. Бодуэн кашни чĕлхере хăйне уйрăм категорисем пур тесе шутланă. Ученăй çапла калать: "Танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвне никĕслекенсем ариоевропа чĕлхисен тытăмне мар, санскритпа танлаштарса çеç тĕпченĕ. Çав чĕлхесем çине вĕсем санскрит "куçлăхĕ" витĕр пăхнă, чĕлхе пулăмĕсене санскрит категорийĕсем патне çывхартнă". Бодуэн ют чĕлхе категорийĕсене хамăр чĕлхе категорийĕсемпе шайлаштарса танлаштарма кирлĕ мар тесе тĕрĕсех асăрхаттарнă.

Танлаштаруллă е историллĕ меслетсене алла илес тĕллевпе Хусан шкулĕ çакăн пек çирĕп услови кăларса тăратать: чĕлхе пулăмĕсемпе процесĕсен хронологине шута илмелле, çакă хурăнташ чĕлхесем хушшинчи историллĕ çыхăнусене тупма май парать. Бодуэн хурăнташ тата хурăнташ мар чĕлхесен типологилле характеристикисем çине пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм çине пăхнă пек пăхать.

Тĕпчевçĕ фактсен систематизаторĕ пулман. Фактсем ăна теори проблемисене (ыйтăвĕсене) татса пама кирлĕ пулнă.

6. Бодуэн чĕлхе системăлăхне палăртмалли çинчен калать. Çакă чĕлхене пĕр-пĕринпе çыхăннă элементсен системи пек ăнланнинче палăрать. Çакна пула профессор чĕлхе пайрăмĕсене тĕпчемелли çĕнĕ мелсем шырать. Хусанти чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕ фонема, морфема, сăмах ăнлавсене наука тĕлĕшĕнчен мĕнле ăнлантармаллине кăтартать. Чĕлхе пĕлĕвĕн историйĕнче Бодуэн пĕрремĕш хут сасă пулăвĕпе функцийĕ пĕр

килменнине палăртнă, çапла майпа фонологи текен чĕлхе пĕлĕвĕн пĕр пайне пуçарнă.

"Опыт теории фонетических альтернаций. Глава из психофонетики" ятлă статьяра Бодуэн сасăпа фонема пĕр маррине кăтартать. Сасă вăл, ун шучĕпе, сывлăшпа пуплев органĕсем чĕтреннипе пулакан продукт, фонема – лингвистика элеменчĕ, сасă тытăмĕн вакланман пайрăмĕ.

Сăмах тытăмне тĕпченин малтанхи палăрăмĕсем те пур Бодуэн де Куртенэ ĕçĕсенче.

**"XIX ĕмĕрти чĕлхе пĕлĕвĕ е лингвистика" кĕнеке çинчен.** Бодуэн асăрханă тăрăх, XIX ĕмĕрте чĕлхе пĕлĕвĕ тĕрлĕрен кирлĕ мар шухăшсенчен хăтăлать. Ученăй шучĕпе, филологи витĕмĕнчен хăтăлни, сасăна саспаллинчен, çырнă текста сăмах вĕççĕн калані текстран уйăрса пăхма пуçлани питĕ вырăнлă. Саспаллисен ылмашăвĕ вырăнне эпир халĕ сасă тепĕр сасса куçни, сасăсен ылмашăвĕ çинчен калаçатпăр.

Чĕлхери улшăнусем, малтанхи чĕлхеçĕсен шучĕпе, сăмах хитре янăратăр текен тĕллевпе пулса иртнĕ, иккен. Бодуэн вара çак пулăм чĕлхе перекетлĕхĕ текен пулăмшăн характерлă пулнине асăрхаттарнă. Унсăр пуçне, çакă чĕлхе ĕçĕ-хĕлĕн 3 енне çăмăллатать: сăмаха каласси (фонаци), сăмаха илтесси, ăнланасси (аудици), чĕлхе шухăшлавĕ (церебраци).

Инди грамматикĕсен суя теорийĕнчен хăтăлма май килнине те асăнать Бодуэн. Чăнах та, ун чухне пур чĕлхесене тĕпчемен, турă е патша паллиллĕ чĕлхесене çеç чĕлхе вырăнне хунă. Çакна та критиклет вăл.

Август Шлейхер шучĕпе, чĕлхе вăл – хăйне уйрăм организм. Бодуэн вара чĕлхе этемрен уйрăм пулма пултарайманнине палăртать. Чĕлхен генетикăлла классификацийĕ, историлле тăванлăх çинче никĕсленнĕскер, малтан генеалоги йывăçĕ пек (Шлейхер, Курциус т.ыт.те), кайран çаврашка хумсем пек палăрнă (Шухардт). Анчах та çак икĕ теорие те Бодуэн критиклет, мĕншĕн тесен вĕсем çакăн пек суя шухăшсем çинче никĕсленнĕ: 1) чĕлхе этемрен уйрăм

пурӑнма пултарать, 2) чӗлхе пулӑмӗсен кӑткӑслӑхне шута илмесен те юрать.

Чӗлхе пӗлӗвне эволюци принципне кӗртнине те асӑнать чӗлхеҫӗ, ҫакӑ чӗлхере пулса иртекен пулӑмсене истори тӗлӗшӗнчен пӑхма май панине калать.

Чӗлхе процесӗсен историре пулса иртекен пулӑмсен йӗркине пӗлсе тӗпчени, кайрантарах пайланнӑ чӗлхесене пӗр пӗтӗмӗшле пуҫламӑш патне илсе пыни чӗлхен авалхи тӑрӑмне реконструкцилеме, унӑн малашнехи аталанӑвӗ мӗнле пулассине калама май парать, тет Бодуэн.

Чӗлхере, пурнӑҫӑн ытти пулӑмӗсенчи пекех, пӗр май улшӑнусем пулса иртеҫҫӗ, вӑл чӗрӗ организм пекех аталанать – чӗлхеҫӗсем ҫакна ӑнланни Бодуэна савӑнтарать.

XIX ӗмӗрте чӗлхе пӗлӗвӗ ытти наукӑсемпе ҫыхӑну тытма пуҫӑнни ҫинчен те асӑнать профессор. Унсӑр пуҫне, тӗрлӗ халӑхсен чӗлхисене тишкернипе ҫырлахмасӑр уйрӑм ҫын чӗлхине тӗпчеме тытӑнни чӗлхе пӗлӗвӗшӗн пысӑк ҫитӗнӳ пулнине те палӑртать. Тӗрлӗ халӑхсен чӗлхисене тӗпчени историлле чӗлхе пӗлӗвӗшӗн кирлӗ, уйрӑм ҫын чӗлхине тӗпчени – пӗтӗмӗшле чӗлхе пӗлӗвӗн тӗп задачисенчен пӗри.

Бодуэн ҫакна та асӑнать: XIX ӗмӗрти чӗлхе пӗлӗвӗ чӗлхе материалне хӑйне тӗпчес ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Тӗслӗхрен, кельт, армян, албан, Кӗҫӗн Азин авалхи чӗлхисем индоевропа чӗлхисен ушкӑнне кӗнине палӑртнӑ. Авалхи ҫыру палӑкӗсене тӗпчесе ҫак ушкӑнти уйрӑм ҫемьесемшӗн питӗ паха материалсем тупса палӑртнӑ. Унсӑр пуҫне ҫухалнӑ, палӑксенче ҫеҫ сыхланса юлнӑ е паянхи кун та пурӑнакан чӗлхесене нумай тӗпченӗ, ҫӗнӗ чӗлхесем те нумай тупса палӑртнӑ, тӗслӗхрен, кавказ, финн-угор, полинези т.ыт.те чӗлхисене нумайӑшне тӗрӗс сӑнласа панӑ. Ҫав хушӑрах халӗ тупса палӑртнӑ ҫӗнӗ чӗлхесемпе малтанах палӑрнӑ чӗлхесем хушшинчи генетика ҫыхӑнӑвне тата хурӑнташлӑх йӗрӗсене асӑрхани те пулнӑ. Тӗслӗхрен, XIX ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринче тупса тишкернӗ аккад тата шумер чӗлхисем урал-алтай чӗлхисен авалхи мӑн

аслашшӗсем иккен, анчах та вӗсен морфологи тытӑмӗ расна.

Хальхи калаҫу чӗлхисене тишкерессипе, Бодуэн каланӑ тӑрӑх, уйрӑм ӑсчахсем, ҫул ҫӳревҫӗсем ӗҫленӗ, ҫак тӗллевпе наука экспедицийӗсем йӗркеленӗ. Ҫак тапхӑртах чӗлхе пӗлӗвӗн диалектологи текен пайӗ вӑй илет. Диалектологи тӗпчевӗсем чӗлхе пӗлӗвӗн аталанӑвӗшӗн пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Бодуэн ҫырнӑ тӑрӑх, диалектологи тӗпчевӗсем хыҫҫӑн "чӗлхе" терминӑн усӑ курасլӑхне пӗчӗклетнӗ, ӑна литература чӗлхисене палӑртнӑ чух ҫеҫ усӑ курассине асӑрхаттарнӑ.

Диалектологипе танах эпиграфика – палӑксем ҫинчи ҫырӑва тӗпчекен наука – аталанни ҫинчен те асӑннӑ Бодуэн кӗнекинче. Ҫав палӑксене тӗпчени авалхи, халӗ пурӑнман чӗлхесен калаҫу уйрӑмлӑхне тупса палӑртма кӑна мар, паянхи кун пур чӗрӗ калаҫу чӗлхисен уйрӑмлӑхӗсене те курма май парать. Ҫавӑнпа эпиграфикӑна диалектологин пулӑшу дисциплини теме май пур.

Бодуэн наукӑн пур пайӗсенче те пысӑк ҫитӗнӳсем нумай пулнине асӑнать, уйрӑмах, антропофоника вӑйлӑ аталаннине калать, мӗншӗн тесен ку енпе физиксемпе, физиологсем те ӗҫленӗ.

XIX ӗмӗрте пӗр чӗлхе тепӗр чӗлхене витӗм кӳнине тӗпчеме тытӑннӑ, хутӑш чӗлхесем мӗнле пулса кайнине тупса палӑртнӑ.

Бодуэн де Куртенэ шучӗпе XX ӗмӗрти чӗлхе пӗлӗвӗнче ҫак ыйтусене татса пама тивнӗ:

1) авалхи грексен тата римлянсен грамматика опычӗсенчен тӗппипех хӑтӑлмалла. Ҫавӑнпа паянхи кунччен усӑ курнӑ чӗлхе пӗлӗвӗн терминологине улӑштармалла;

2) Лейбниц шухӑшӗсене пурнӑҫа кӗртмелле, чӗлхене тӗпченӗ чухне яланах чӗрӗ чӗлхесене пӑхмалла, мӗншӗн тесен вӗсене сӑнама пулать. Кайран тин авалхи ҫырулӑх палӑкӗсене тишкермелле;

3) ӑҫта май пур, ҫавӑнта эксперимент меслечӗпе усӑ курмалла. Уйрӑмах ҫакӑ антропофоникӑра меллӗ, унӑн сӑнавсен калӑпӑшне ӳстермелле: пӗр енчен, чӗрчунсем кӑларакан сасӑсем, тепӗр енчен, эпир ӑнланман

хăйнеевĕрлĕ илтĕнекен чĕлхесем. Çапла майпа, антропофоника хăйĕн тĕпчев чиккине пысăклатса, чăнлăхри фактсемпе усă курса пĕтĕмĕшле наука пулса тăрать;

4) çакна пула алфавитри паллăсене транскрипци паллисемпе улăштарма тивет;

5) чĕлхе пĕлĕвĕнче ытларах математикăлла шухăшлавпа усă курмалла, çакă лингвистикăна тĕрĕс наукăсемпе танлаштарма май парать;

6) чĕлхе факчĕсене тишкересси çирĕп объективлă пулмалла. Кунта ют категорисене кĕртмелле мар, фактсене хальхи эпохăри чĕлхерен илмелле;

7) "сасăсен саккунĕ" ăнлава психологи эквиваленчĕпе улăштармалла;

8) тĕпчевçĕн чĕлхене пур енлĕн, унăн кашни элементне тишкермелле;

9) "аталану" тата "эволюци" ăнлавсем лингвистика шухăшлавĕн никĕсĕ пулмалла;

10) чĕлхе пĕлĕвĕ ытти наукăсемпе тачă çыхăну тытĕ: психологипе, антропологипе, социологипе, биологипе т.ыт.те.

11) лексикологи грамматикăн уйрăм турачĕ пек аталанĕ;

12) этимологи тата семасиологи тĕпчевĕсем психологие пысăк витĕм кӳрĕç. Психологи çĕнĕ материалсемпе усă курса çĕнĕ пĕтĕмлетӳсем тăвĕ т.ыт.те.

Бодуэн шутланă тăрăх, чĕлхе пĕлĕвĕн филологипе литература историйĕнчен уйрăлмалла, вара тин вăл малалла лайăхрах аталанĕ. Университетсенчи чĕлхе пĕлĕвĕн кафедрисен хăйсен уйрăм пулмалла, филологи кафедрипе пĕрлешиччен социологи кафедрипе пĕрлешмелле.

Анчах çакна пурнăçлас тесен пирĕн чĕлхе науки вилĕ чĕлхесенчен пуçăнать текен шухăша пăрахăçламаллине асăрхаттарать тĕпчевçĕ. Бодуэн шутланă тăрăх, ют чĕлхесене вĕрентесси куçару урлă пулса пымалла, курăмлăх мелĕпе мар. Шкулсенчи грамматика терминологине пĕр пек тумаллине, грамматикăна тăван чĕлхепе вĕрентсен аван пулмаллине

асăннă "XIX ĕмĕрти чĕлхе пĕлĕвĕ е лингвистика" кĕнекере.

**Бодуэн де Куртенэ ĕçĕсенчи "морфема" ăнлав.** Хусан тапхăрĕнче çырнă малтанхи ĕçĕсенче Бодуэн морфемăна морфологин вакланман пайрăмĕ тесе палăртать. Вăл Крушевские морфемăсене сасăсем çине пайланишĕн критиклет. Юлашкинчен ăсчах çакăн пек пĕтĕмлетÿ патне пырса тухать: сăмахсем морфологи тата семасиологи тĕлĕшĕнчен пайланман пайрăмсенчен тăраççĕ; вĕсене эпир морфемăсем тетпĕр. Бодуэн морфемăсене структура тата пĕлтерĕшĕ енчен пăхмаллине асăрхаттарнă. Грамматика системинчи морфема çинчен вăл "Заметки на полях сочинений В.В.Радлова" ятлă ĕçĕнче çырать "...вырăс чĕлхинчи -ать, -ал вĕçлемĕшсем пайланманнисем мар, вĕсем икĕ вакланман пайрăм е икĕ морфема пĕрлешнипе пулнă: -а, -ть, -а, -л".

Морфема ăнлава Бодуэн сăмахăн морфологилле уйрăм тăракан пĕлтерĕшлĕ компонентсен пĕрлешÿллĕ пуçламăшĕ пек кĕртнĕ. Çак термин, ун шучĕпе, çакăн пек ăнлавсене пĕрлештерсе тăрать: тымар, префикс, суффикс, вĕçлемĕш т.ыт.те. Морфема сăмах ытлашши тени йывăç текен пĕрлештерÿллĕ сăмах та ытлашши тенипе танах. Профессор шучĕпе, юман, хурăн, хăва т.ыт.те уйрăм ятсемпе усă курни çителĕксĕр.

Çÿлерех каланисене шута илсе çакăн пек пĕтĕмлетÿсем тума май пур: морфема вăл 1) чĕлхен чĕрĕ пайрăмĕ; 2) сăмах тăвакан элемент; 3) пĕлтерĕшлĕ пайрăм; 4) сăмахăн пĕлтерĕшлĕ тата сасă тытăмлă элеменчĕ; 5) тымарсемпе аффикссемшĕн пĕрлештерÿллĕ ăнлав; 6) морфологи тĕлĕшĕнчен урăх вакланман чĕлхен пĕчĕк пайрăмĕ.

Бодуэн "пĕр морфема" текен ăнлава кĕртнĕ, чĕлхере пĕр морфемăран çеç тăракан сăмахсем те пур тенĕ (тĕслĕхрен, пĕр морфемăллă "не" сăмах: "...того не вырубишь топором"). Бодуэн морфема фонемăсенчен тăмасть тенĕ. Кунта вăл нульлĕ морфемăсем пирки каланă.

Бодуэн морфемăсем "янранине", вĕсен сасăллă енне кăтартать. Кунта чĕлхеçĕ пусăм çинчен мĕн калани те

интереслĕ. Ун шучĕпе, ударени сăмахăн каланакан, илтĕнекен пайĕсемшĕн мар, морфемăсемшĕн характерлă.

Тымар морфема текен ăнлав çинче чарăнса тăмалла пулĕ. Ученăй шучĕпе, тымар морфемăсен, çавăн пекех сăмах тĕпĕсен форма тата çĕнĕ сăмах тăвас шайра морфемăна тивĕç енсем пур. Вĕсем сăмахра пĕр морфологи пайрăмĕ пек палăраççĕ. Тĕрлĕрен сăмах тата форма улшăнăвĕнче сăмах тĕпĕ аффикссем пек “полиморфлă”, тĕрлĕ енлĕ. Тепĕр майлă каласан, сăмахсенче тата сăмах формисенче вăл фонетика варианчĕсен пĕрлешĕвĕ е комплексĕ пек палăрать.

Бодуэнăн ăслăхри тĕп шухăшĕсене малалла аталантараканĕсем унăн вĕренекенĕсем пулнă. Николай Вячеславович Крушевский (1851-1887) кĕске ĕмĕрлĕ пулнă пулин те чĕлхе наукинче “Чĕлхе наукин очеркĕ” ĕçпе палăрса юлнă. Василий Алексеевич Богородицкий (1857-1941) тĕрлĕ енлĕ аталаннă тĕпчевçĕ пулнă. Вăл Бодуэнăн пĕтĕмĕшле чĕлхе теорине аталантарнă, индоевропа чĕлхисен грамматикине танлаштаруллă мелпе тĕпчесе çырса кăтартнă. Унăн паллă ĕçĕсем: “Вырăс грамматикин пĕтĕмĕшле курсĕ”, “Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн тата вырăс чĕлхин очеркĕсем”. В.А.Богородицкий чĕлхе наукинче тутар тата ытти тĕрĕк чĕлхисене тĕпченипе палăрса юлнă.

Бодуэнăн тĕп ĕçĕсен списокĕ:

1. Некоторые случаи действия аналогии в польском склонении (1868).

2. Некоторые общие замечания о языковедении и языке (1871).

3. Некоторые отделы “сравнительной грамматики” славянских языков (1881).

4. Задачи языкознания (1891) – статья.

5. Опыт теории фонетических альтернаций (1895).

6. Языкознание, или лингвистика XIX века (1901).

7. Лингвистические заметки и афоризмы (1903).

8. Заметки на полях сочинения В.В.Радлова (1909) – статья.

9. Национальный и территориальный признак в автономии (1913) – брошюра.

10. Введение в языковедение (1917).

Усă курмалли литература

1. Зиндер Л.Р. Бодуэн, Щерба и истоки фонологической теории Трубецкого // Вопр. языкозн. – 1994. – №4. – С.126-135.

2. Кедайтене Е.И. Бодуэн де Куртенэ. 1845-1929 // Русская речь. – 1895 – №4. – С.126-135.

3. Кондрашов Н.А. Вклад Бодуэн де Куртенэ в общее языкознание и славистику // Рус. яз. в шк. – 1995. – №3. – С.96-99.

4. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М., 1979.

5. И.А. Бодуэн де Куртенэ – М., 1960.

6. Бодуэн де Куртенэ и современная лингвистика: К 140-летию со дня рождения И.А.Бодуэна де Куртенэ. – Казань, 1989.

7. Березин Ф.М. Русское языкознание конца XIX – нач. XX вв. – М., 1976.

8. Леонтьев А.А. И.А.Бодуэн де Куртенэ и его учение о языке. – М., 1965.

9. Хрестоматия по истории русского языкознания. – М., 1977.

## 2§. Н.В.Крушевский (1851-1887)

Паллă ăсчах, чĕлхеçĕ Н.В.Крушевский – Хусанти чĕлхе пĕлĕвĕн шкулне йĕркелесе яраканĕсенчен пĕри. Вăл И.А.Бодуэн де Куртенэ вĕренекенĕ пулнă. Николай Вячеславович хăй ĕçне Германири çамрăк грамматистсен шкулĕ йывăрлăха кĕрсе ўкнĕ хыççăн пуçăнать. Вăл чĕлхе наукинчи натурализма хирĕç сăмах пуçарать, чĕлхе факчĕсене географи тата хронологи тĕлĕшĕнчен чикĕлесе уйăрас, çыру тата калаçу чĕлхине уйрăмлатса пăхас ыйтусем кăларса тăратать. Ахальтен мар Ф. де Соссюр Бодуэн де Куртенэне тата Крушевские чĕлхе пĕлĕвĕнчи çĕнĕ юхăмăн пионерĕсем тесе каланă.

Николай Вячеславович Крушевский 1851 çулхи раштав уйăхĕн 6-мĕшĕнче Луцк хулинчи поляксен çемйинче çуралнă. 3 класлă уес училищинче пĕлў илнĕ. Гимназирен вĕренсе тухнă хыççăн 1871 çулта Варшава университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет. Истори уйрăмне пĕлў туптама çырăннă пулин

те, Крушевский философи, логика тата психологи наукисене тарăн вĕренме тăрăшнă. Каярах вăл чĕлхе пĕлĕвĕпе те интересленме пуçлать. Кандидат диссертацийĕн темине ăна М.А.Колосов диалектолог тата фольклорист сĕннĕ ("Вĕрӳ-суру чĕлхи – вырăс халăх поэзийĕн тĕсĕ"). Бодуэн де Куртенэ шутланă тăрăх, "çак ĕçрех Николай Вячеславовичăн тарăн та тĕрĕс шухăшлавĕ тата философие лайăх пĕлни витĕмлĕн курăнать".

Крушевский Варшава университетĕнчен 1875 çулта вĕренсе тухать. Çав çулах çулла Хусан хулине курма килет. Унта вăл пирвайхи хут И.А.Бодуэн де Куртенэпе паллашать. Çак çулах Николай Вячеславович Оренбург кĕпĕрнинчи Троицк гимназийĕнче учитель пулса ĕçлет. Унта вăл грек тата латин чĕлхисене вĕрентет. Çакăнта ĕçленĕ хушăрах танлаштаруллă истори меслетне тĕпе хурса çырнă ĕçсене тишкерет, çавăн пекех Ригведа гимнĕсене санскрит чĕлхинчен вырăс чĕлхине куçарас тĕлĕшĕпе чылай тăрăшать. Ригведа – Инди литературин авалхи палăкĕ. Çак куçару ĕçĕ "Ригведăн сакăр гимнĕ" ятпа 1879 çулта пичетленсе тухать.

1878 çулхи кĕркунне Н.В.Крушевский Хусан хулине куçса килет. Хусан университечĕн танлаштаруллă чĕлхе вĕрентĕвĕ кафедрине пĕлĕвне туптас тĕлĕшпе çул хывать. Çак кафедрăна И.А.Бодуэн де Куртенэ ертсе пынă пулнă. Çапла майпа Крушевский чĕлхе наукин кружокĕн активлă членĕ пулса тăрать. Çавăн пекех çак ушкăна В.А.Богородицкий, С.К.Булич, В.В.Радлов чĕлхеçĕсем те çӳренĕ. Пуринчен ытла вĕсем славян чĕлхисен фонетика тата морфологи йĕркине тĕпчес ĕç çине тарăннăн пăхнă. Ăсчахсем пĕр славян чĕлхинчен тепĕр славян чĕлхине куçарас ĕçе танлаштаракан чĕлхесен саккунĕсене пĕлес тĕллевпе пурнăçлаççĕ. Николай Вячеславович авалхи славян тата пăлхар чĕлхисен произведенийĕсене вырăсла, пăлхар чĕлхинчен – авалхи славян чĕлхине куçарнă т. ыт.те.

1878-1879 çулсем Крушевскин лингвистика шухăшĕсем туптанса çитнĕ татăклă тапхăр пулнă. Пĕр енчен – танлаштаруллă истори меслетне хисеплекен

чĕлхе пĕлӳçисен ĕçĕсене таръннăн тишкерни, тепĕр енчен чĕлхеçĕсемпе активлă тата творчествăлла ĕçлени ăслăх çимĕçĕсене куç умне кăларса тăратнă.

Çавăн пекех унăн вĕрентекенĕ Бодуэн де Куртенэ шухăшĕпе, Н.В.Крушевский лингвистика кружокĕнче те хăйне лайăх енчен кăна кăтартнă. "Хăш-пĕр ударени системипе çыхăннă фонетика пулăмĕсене тишкерни" ĕçĕ 1879 çулта кун çути курать. Çав ĕçе тĕпе хурса икĕ тĕрĕслев лекцийĕ вулать. Çакăн хыççăн ăна индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматикин приват-доценчĕ ятне парса чысласçĕ. Унăн пĕрремĕш лекцине ăсчахсем уйрăмах пысăка хурса хакланă. Николай Вячеславович пултарулăхне лайăх ăнланса Б. де Куртенэ хаклав çырать.

Малтан Крушевский морфологи ыйтăвĕсемпе интересленнĕ. Тĕслĕхрен, глаголсен хальхи вăхăчĕн пулăвĕ (Ригведа материалĕсемпе усă курса классикăлла санскрит чĕлхинчи пĕр пек формăсене тата ытти хурăнташ чĕлхесенчи пулăмсемпе танлаштарса йĕркелесе çырнă ĕç). Анчах та материала пуçтарса майлаштарса çитерсен ăсчах грамматика формисен йĕркеленĕвĕ пусăм йĕркипе тачă çыхăннине асăрхать. Çавна май "Ударени системипе çыхăннă хăш-пĕр фонетика пулăмĕсене тишкерни" ĕçре çӳлерех асăннă ыйтăва çутатса парать.

Чĕлхе пулăмĕсен çыхăнăвĕ пирки, вĕсен системăлăхĕ çинчен калакан шухăшсем унчченех пулнă. Çак шухăша пĕрре кăна мар Бодуэн де Куртенэ хăй ĕçĕсенче асăннă. Крушевский пултарулăхĕнче çак шухăш тĕп вырăн йышăнса тăрать. Майăн 17-мĕшĕнче ăсчах "Хун халăхĕ çинчен. Авалхи славянсен чĕлхинчи уçă сасăсене тĕпчени" темăпа магистр диссертацине хӳтĕлет. Çак ĕçре вăл индоевропа чĕлхисен вокализмĕ авалхи славян чĕлхинче палăрнине, пĕрлĕхлĕ сасăсен черетленĕвне тата унăн паллă категорийĕсем форма тата сăмах пулăвĕпе çыхăннине пăхса тухать. Диссертаци 1881 çулта "Вестник русской филологии" журналта пичетленсе тухать. Асăннă ĕç пахалăхĕ пирки Раççейре те, ют çĕршывсенче те калаçнă. Паллă чĕлхеçĕсем ĕçĕн пĕтĕмлетӳ характерне тата авторăн чĕлхесен аталанăвĕн саккунĕсене йĕркелес туртăмне асăрханă. С.К.Булич

шухăшĕпе, диссертацире Бодуэн де Куртенэ шухăшĕсем те пур. Анчах та Крушевский хăш-пĕр сасăсен пулăмĕсене хăй тĕллĕн анлăн та тарăннăн тишкерни сисĕнет. В.В.Радлов шучĕпе, Крушевский йĕркеленĕ саккунсем урал-алтай ушкăнĕнчи чĕлхесемшĕн те витĕмлĕ.

1883 çулта май уйăхĕнче хӳтĕленĕ «Очерк науки о языке» доктор диссертацийĕнче Крушевский çак ыйтусене çутатса пама тăрăшнă: чĕлхе тытăмĕ еплерех, вăл мĕнле саккунсемпе аталанса пырать, чĕлхе аталанăвĕ мĕнрен килет. Унăн тимлĕхне фонетика ылмашăвĕ морфологи факчĕ пулса тăни, морфемăсем сасăсен вариацине пула тупăннă пулăм, сăмахсем тата вĕсен формисем хушшинчи çыхăнулăх темăсем илĕртеççĕ. Бодуэн де Куртенэ хăй хаклавĕнче çапла çырать: "Ку кĕнеке ытти ăслăхсемшĕн те усăллă пулмалла. Вырăс литературинче çакăн йышши ĕçсем халиччен пулман-ха. Пĕр сăмахпа калас пулсан, Крушевский сочиненийĕ чылай чĕлхе пулăмĕсен ăнăçлă пĕтĕмлетĕвĕ пулса тăрать". Чĕлхе аталанăвĕн условийĕсене ăнланнинче тата чĕлхери тĕп саккунсене пĕтĕмлетме пултарнинче автор чăн-чăн ăсчах пулни палăрать. 1883 çулхи май уйăхĕнче Крушевские Хусан университечĕн ăслăх канашĕнче индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматики кафедрин экстраординарлă профессорĕ пулма суйлаççĕ. 1885 çулта вара – танлаштаруллă грамматика тата санскрит кафедрин ординарлă профессорĕ пулса тăрать.

1885 çулта Н.В.Крушевский сывлăхĕ ăнсăртран хавшасах каять. Вăл октябрь уйăхĕн 31-мĕшĕнче (ноябрĕн 12-мĕшĕнче) 1887 çулта вăхăтсăр çĕре кĕрет. Вăл çав тери нумай ĕç çырман. Анчах çак кĕске тапхăр хушшинче çырнă ĕçĕсем питĕ паха темелле. Ăна XIX ĕмĕрти чĕлхе пĕлĕвĕн паллă ăсчахĕсемпе пĕр рете тăратмалла.

Крушевский хăйĕн пур ĕçне те фонетикăна, морфологие, лексикăна тарăн ăнланса никĕсленĕ. Вăл чĕрĕ чĕлхесене, диалектсене сăнанă, тишкернĕ. Чĕлхесен хурăнташлăхне, вĕсен несĕлĕсене тупас тĕллевпе çеç тăрăшакан чĕлхеçĕсене Николай Вячеславович

критикленĕ. Вăл çакăнпа кăна çырлахмалла мар, чĕлхе аталанăвĕн саккунĕсене те тишкермелле тесшĕн пулнă.

Ăсчах фонетика пулăмĕсене тĕпчес ĕçре те пысăк çитĕнӳсем тунă. Çак пулăмпа çыхăннă ĕçĕсем пĕтĕмĕшле фонетикăн ăнлавĕсене хатĕрлеме, вырăс чĕлхе пĕлĕвĕнче эксперименталлă фонетика юхăмне аталанма çул уçрĕç, çавăн пекех (Бодуэн де Куртенэ ĕçĕсемпе пĕрле) хальхи фонема вĕрентĕвне чĕртсе тăратма май пачĕç.

Тĕпчевçĕ пуплеври сасăсен физиологине тишкерес ĕçри ыйтусене Раççейри ытти ăсчахсенчен маларах татса парать. Хусанти лингвистика шкулĕн тĕп тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес тĕллевпе чĕлхе системинчи пур пулăма та 2 аспекта (хальхи тата историлле) тĕпе хурса тĕпчессине, Крушевский пуплеври, сасăсен физиологине статикăпа (тĕллевĕ – сасăсен пулăвĕн йĕркине тĕпчесси) тата динамикăпа (чăн пуплеври сасăсен улшăнăвĕн йĕркине тишкересси) çыхăнтарать. Çав тĕлĕшпе Николай Вячеславович çыхăнуллă пуплевре 2-мĕш сасăн экскурсийĕ 1-мĕш сасăн рекурсийĕ пуличченех пуçланас пулăма асăрхать. Крушевский кашни сасăн экскурси ("пуплев хатĕрĕсем ĕçе тухни") тата рекурси (пуплев хатĕрĕсем малтанхи йĕркене йышăнни) пур текен шухăша палăртса хăварнă. Каярах кун пирки В.А.Богородицкий хăй ĕçĕсенче асăнать.

Крушевский кăларса тăратнă ылмашу теорийĕ фонема вĕрентĕвне никĕслес ĕçре пысăк вырăн йышăннă. Çак теори пирки маларах Бодуэн де Куртенэ сăмах пуçарнă. Акă мĕн çырать вăл хăй вĕренекенĕ пирки: "Николай Вячеславович ман лекцисене итлесе ларса тата эпĕ ирттерекен хăнăхтарусене хутшăнса шухăшăмсене тата тарăнрах аталантарма, сасăсен черетленĕвĕпе çыхăннă ятарлă терминсем тупса палăртма пултарчĕ. Вăлах "коррелятив", "корреспондент" тата "фонема" терминсене сĕнчĕ. Халь кăна, çак шухăшсем аталанса çитсе хут çине ӳкерĕннĕ хыççăн çеç, малаллахи аталану пулма пултарĕ" (Бодуэн де Куртенэ. Славян чĕлхисен танлаштаруллă грамматикин хăш-пĕр пайĕсем. Варшава, 1881).

Паллă ăсчах морфологи тата сăмах пулăвĕ тĕлĕшпе те чылай тĕпчев ĕçĕ çырнă. Сăмахри морфемăсен

улшăнăвĕн историлле çул-йĕрне тупса палăртас тĕллевĕпе чылай вăй хунă.

Н.В.Крушевский яланах чăнлăхлă тата тарăн шухăшлама пĕлекен ăсчах-новатор пулнă. Унăн ĕçĕсем чĕлхе наукине чылай пуянлатрĕç. Халĕ те пулин вĕсен паха еткерĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

"Чĕлхе науки çинчен çырнă очерк" (Хусан, 1883) – доктор диссертацийĕ

Çак ĕçĕн ултă сыпăкĕнче сăмах тишкерĕвне, морфологи единицисене сăнанине, сăмахри морфемăсен пĕрлешĕвĕпе çыхăннă хăш-пĕр пулăмсене çырса кăтартнă.

Крушевский диссертацийĕн пиллĕкмĕш сыпăкĕнче сăмах йăвин тата речĕн пулăвне кăтартса панă. Морфологи пайрăмĕ, тĕпчевçĕ шучĕпе, сăмахра, чĕлхере пурăнать. Уйрăм тĕслĕхсем илсе автор сасă комплексĕсем морфема вырăнĕнче çӳреме пултаракан сăлтавсене тупса палăртать, ĕнентерет, чĕлхери морфологи единици (пĕчĕк пайрăмĕ) ассоциативлă характерлă пулнине те çирĕплетсе хăварать. Уйрăм сăмахрах, унăн морфологи структуринче, Крушевский морфемăсен пĕрлешĕвне, "интеграци тĕввине" асăрхать. Çавăн пекех префикспа сăмах тымарĕ пĕрлешсе кайнине тишкерет (сугроб, сустав т.ыт.те). Анчах та, вăл каланă тăрăх, пур морфемăсенчен ытларах сăмах тымарĕ тĕрлĕрен улшăнусем тӳсме пултарать. Сăмах тымарĕ ыттисенчен пахалăхĕпе пуянтарах тата чылай улшăнулăхлă (вариациллĕ) пулма пултараслăхĕпе уйрăлса тăрать. Чĕлхеçĕ çак сăмахсене пĕр тымартан пулса кайнă тесе шутлать: *город – жердь, коса – чесать, мука – мягкий, тихий – тешить* т. ыт.те. Ку материалпа автор сăмах тытăмĕнчи улшăнусене кăтартасшăн пулнă.

Сăмах тымарĕ çумне тĕрлĕрен аффикссем, префикссем хушсан сăмах тытăмĕ улшăнать. Сăмаха та урăхла сĕм кĕрет. Çавăн пекех сăмахри сасăсем те чылай урăхларах илтĕнеççĕ.

Крушевский шучĕпе, морфемăсен пĕрлешĕвĕ çак сăмахсенче курăнать: *бодрый (будить), весело (везти), ветвь (вить), пестрый (писать), оспа (сыпать)* т. ыт. те.

(Очерк...", 100 с.). Тĕпрен илсен, Николай Вячеславович авалхи славян чĕлхинчи сăмахсен тĕслĕхĕсемпе морфемăсен пĕрлешĕвне сăнласа пама тăрăшнă. Хĕвелтухăç славянсен авалхи тапхăрĕнчи сăмахсене илес пулсан, *сверстник* тата *мошка* сăмахсене палăртса хăварма юрать. Автор сăмах тымарĕ префикссене тата аффикссене тачă çыхăнтарнине грек, нимĕç, француз чĕлхисенчи тĕслĕхсемпе те çирĕплетсе хăварнă.

Крушевскин пĕр аффикс тепĕр аффикспа çыхăнса "пĕр кăткăс аффикс" пĕрлешĕвĕ тума пултарнине сăнласа паракан интереслĕ шухăшсем пур ("Очерк..., 80 с.). Ăсчах *-к(а)* авалхи аффикса йышăннă сăмахсене тупса палăртатать. Пĕр тĕпрен пулнă аффикссем шутне вăл çаксене кĕртет: *1) -к: -ак, -ук, -ок, -ик; 2) -ик: -чик, -щик, -овщик; 3) –ник: -овник, -аник, -альник, -атник.* Аффикс пулăвне чĕлхеçĕ çак схемăпа ăнлантарать: *-к(а) > -ик > -чик(-щик) > -овщик.*

Вырăс чĕлхинче, çавăн пекех ытти чĕлхесенче те, Крушевский икĕ сăмах тымарĕ пĕрлешсе пулнă сăмахсене асăрхать. Вĕсем хушшинче уйрăлми çыхăннă морфемăсен пĕрлешĕвĕллĕ сăмахсем те пур: *сегодня, здесь.* Морфемăсен уйрăлми çыхăнăвĕ вырăс чĕлхинчи хăш-пĕр сăмахсем манăçа тухнипе çыхăннă. *Горка, домик* сăмахсене хирĕçлетсе Крушевский тĕслĕхшĕн *булка* сăмаха илсе кăтартать. *Булка* сăмах (пĕчĕклетсе кăтартакан пайрăмăн сĕмĕ çухалать) пĕлтерĕшĕ пачах урăхла сĕм йышăнать.

Сăмах тĕпĕ уйрăлми çыхăннă сăмахсен шутне Крушевский çаксене кĕртет: *почка, барсук, полк.* Икĕ сăмах пĕрлешĕвĕ калаçакана çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах тума кирлине пула сăмахăн семантики те, тытăмĕ те улшăнаççĕ. Чĕлхери семантика улшăнăвĕсем çĕнĕ сăмахсем тăваслăх хевтисене ӳстереççĕ.

Крушевский шутланă тăрăх, сăмахри морфемăсен улшăнăвĕ аффикс морфемăсене сайра усă курнипе пулса пырать. Ун пек аффикссене ас туса юлма çуккипе вăл çăмăллăнах пирĕн асра сăмах тымарĕ çумне хушăнса пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмах йĕркелесе хурать (91 с.).

Вырăс чĕлхи системин гармонийĕ, тĕпчевçĕ шучĕпе, ют çĕршыв лексики витĕмне пула та пăсăлма

пултарать. Крушевский ят аффикслă сăмахсене *(дележ, грабеж, кутеж) -еж* аффикс сăмах тымарĕ çумне хушăнса пулнă тĕслĕхсемпе *(падеж, мятеж)* танлаштарса пăхать. *(Падеж, мятеж* сăмахсене Крушевский чиркÿ-славян сăмахĕсем тесе пăхать). Ют çĕршыв сăмахĕсене илес пулсан, вĕсем вырăс чĕлхинче морфологи тата семантика тĕлĕшĕнчен улшăнаççĕ. Сăмах тымарĕсен, аффикссен, префикссен улшăнăвне автор морфологи переинтеграцийĕпе çыхăнтарать. Çак пулăма пула ĕнтĕ вырăс чĕлхинче çакăн йышши сăмах тымарĕсем тупăнаççĕ: *весл- (вез-), бодр- (буд-), осп- (-сып);* аффикссем *(-чик, -овщик).* Çак пулăма Николай Вячеславович анлăн сăнлать. Сасă е сасăсем маларах пĕр морфологи единицисем çумне хушăннă пулсан, халĕ – урăххипе çыхăнаççĕ (107 с.). Çав хушăрах вăл переинтеграци пулăмĕсене фонетика пулăмĕсемпе пăтраштармалла мар, тет *(кос – чес, скуд – щад).* Çапла майпа, ун шучĕпе, чĕлхере икĕ аталану процесĕ пур: 1) пĕр чĕлхе категорийĕ шайĕнче структура улшăнăвĕсем пулни; 2) хăш-пĕр сăмахсем чĕлхере хăйсене тĕллĕн çÿреме пуçлани.

Чĕлхеçĕ шучĕпе, переинтеграци "историре пирĕн куç умĕнче" пулса иртме пултарать. Çавăн пек улшăну "весло" сăмахра пулса иртнĕ. *Везу* сăмах пĕлтерĕшĕ *весло* сăмахра сисĕнмест те. Сăмахăн морфема структури улшăннине автор пĕр-пĕр сăмах е пулăм (весло) хăйĕн пирвайхи пĕлтерĕшне çухатнинче курать: "çав сăмахпа мĕн чухлĕ ытларах усă куратăн, унăн малтанхи пулăвĕ те, морфологи тытăмĕ те çавăн чухлĕ ытларах манăça тухать (129-130 с.).

Крушевский шучĕпе, сăмахсенчи морфемăсен çыхăнулăхне çак мелсем йĕркелесе пыраççĕ: 1) çĕнĕ япаласене палăртма "авалхи сăмахсене чĕртсе тăратни"; 2) сăмахсем пĕр лексика-грамматика категорийĕнчен тепĕр грамматика категорине куçни; 3) темиçе сăмах е сăмах (форми) майлашăвĕ хăй пĕлтерĕшлĕ сăмах туни.

Çакă пĕтĕмĕшле "ĕмĕрлĕ переинтеграци" тĕп çул-йĕр пулассине кăтартса хăварать. Ку пулăм вăл е ку чĕлхен материалĕнчех пулса пырать.

1879-1881 çулсенчи ĕçĕсене Н.В.Крушевский, Бодуэн де Куртенэ пекех, морфемăсен пĕрлешĕвне тишкерес ĕçе халалланă пулсан, çак очеркра сăмахсен интеграци тата переинтеграци пулăмĕсене туллин çутатса парас тĕллев лартнă.

Н.В.Крушевскийĕн паллă ĕçĕсем:

1) "Вĕрӳ-суру чĕлхи – вырăс халăх поэзийĕн тĕсĕ" (1876);

2) "Ригведăн сакăр гимнĕ". Куçару (1879);

3) "Пусăм йĕркипе çыхăннă хăш-пĕр фонетика пулăмĕсене сăнани" (1879);

4) "Пĕрешкеллĕх тата халăх этимологийĕ çинчен" (1879);

5) "Чĕлхе тăмхисем" (1880);

6) "Хун халăхĕ çинчен. Авалхи славянсен уçă сассисен тытăмне тĕпчени" (1881);

7) "Чĕлхе науки çинчен çырнă очерк" (1883);

8) "Языковедени (чĕлхе вĕрентĕвĕ çинчен çырнă) очеркĕсем" (лекцисем; 1891,1893 çулсенче пичетленнĕ). Пичетлемен лекцисем В.А.Богородицкий архивĕнче упранаççĕ.

Усă курмалли литература

1. М.В.Черепанов. Н.В.Крушевский // Русская речь. – 1986. – №6. – С.84-89.

2. Н.А.Кондрашов. Н.В.Крушевский (К 100-летию со дня смерти) // Рус. яз. в шк. – 1987. - №6. – С.84-86.

3. О.Е.Ольшанский. Н.В.Крушевский об исторических изменениях морфологической структуры слова // Рус. яз. в шк. – 1971. – №5.

## 3§. В.А.Богородицкий (1857-1941)

В.А. Богородицкий – пултаруллă чĕлхеçĕ, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне наукăна халалланă. Унăн пĕрремĕш пичетленнĕ ĕçĕ 1881 çулта кун çути курнă. Юлашки 1940 çулта пичетленнĕ. Богородицкин "Введение в изучение современных романских и германских языков" ĕçĕ хăй вилнĕ хыççăн тухать. Пурăннă чухне вăл çак ĕçе алçыру пек хатĕрлесе хăварнă пулнă.

В.А.Богородицкин пĕтĕм пурнăçĕ Хусанти университетпа çыхăннă. Кунта вăл 1876-1880 çулсенче вĕреннĕ. Малалла Василий Алексеевич доцент, каярах профессор пулса ĕçленĕ. 1915 çулта ăна Ăслăлăх академийĕн член-корреспондентне суйлаççĕ.

Студент чухне В.А.Богородицкий И.А.Бодуэн де Куртенэ патĕнче вĕреннĕ. Çакăнтах Н.В.Вишневский, С.К.Булич, А.И.Анастасиев, А.И.Александров, В.В.Радлов, К.И.Смирнов, Н.С.Кукурашев та ăс пухнă. Вĕсем кайран Хусанти вырăс тата тĕнче чĕлхе пĕлĕвĕн шкулне йĕркелесе яраççĕ.

Богородицкий ăслăлăхăн тĕрлĕ енĕсене лайăх алла илнĕ. Вăл чĕлхе пĕлĕвĕпе те, халăх сăмахлăхĕпе те, психологипе те, историпе те, филологипе те, математикăпа тата ытти наукăсемпе те кăсăкланнă. Чĕлхе пĕлĕвĕпе тунă ĕçĕсем те унăн анлă, тĕрлĕ енлĕ: университетра лекцисем вуланă, пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕпе тата экспериментлă фонетикăпа, санскрит тата авалхи грек чĕлхисемпе, балти тата германи, тĕрĕк чĕлхисемпе тата унăн диалекчĕсемпе, индоевропа тата тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикипе, фонетикипе интересленнĕ, ĕçленĕ.

Анчах та унăн ĕçĕсем ытларах вырăс чĕлхипе çыхăннă. Богородицкий вырăс чĕлхин грамматикине, фонетикине, орфографине, диалектологине тата чĕлхе пĕлĕвĕн ытти пайĕсене синхрони тата диахрони аспекчĕсем тĕлĕшĕнчен тĕпченĕ.

В.А.Богородицкий 160 яхăн ĕç çырнă. Çав шутрах унăн кĕнекесем, монографисем те пур. Вĕсенчен чылайăшне темиçе хут та пичетленĕ. Тĕпчевçĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне сăнласа паракан ĕçсемех 30 яхăн. Ун пирки юлташĕ А.И.Анастасиев, учителĕ Бодуэн де Куртенэ нумай çырса хăварнă.

Богородицкий ĕçĕсене тĕпченĕ çынсем пурте тенĕ пекех çакăн пек паха енсене палăртаççĕ: ансатлăх, ăнланулăх, композици тĕлĕшĕнчен ĕçĕсене ансат йĕркелени – ку классикăн хăйнеевĕрлĕхĕ шутланать. Бодуэн де Куртенэ те çавнах палăртса калать: “авторăн ăнлантаруллăхĕ ыттисемшĕн тĕслĕх пулма тивĕç”. Çакна Богородицкин “Введение в изучение

современных романских и германских языков" кĕнекинче те курма пулать. Кĕнеке ансат, ăнланмалла йĕркеленĕ икĕ пайран тăрать: 1) Роман чĕлхисем (романские языки), 2) Германи чĕлхисем (германские языки). Унта çак ыйтусене çутатса панă:

1. "Роман чĕлхисене пăхса тухни" – "Германи чĕлхисене пăхса тухни".

2. "Сасăсен системи тата ăнлантаруллă (комментариллĕ) текст" – уйрăммăн акăлчан, нимĕç, голланди, дани, швед чĕлхисене çырса кăтартнă. "Сасăсен системи тата ăнлантаруллă (комментариллĕ) текст" – уйрăммăн француз, испан, итали, румын чĕлхисен материалне тишкернĕ.

3. "Роман чĕлхисен фонетикин танлаштаруллă очеркĕ". – "Германи чĕлхисен фонетикин танлаштаруллă очеркĕ".

4. "Роман чĕлхисен морфологийĕпе синтаксисĕ". – "Германи чĕлхисен морфологийĕпе синтаксисĕ".

Малалла В.А.Богородицкин пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕпе тата вырăс чĕлхипе çырнă ĕçĕсене пăхса тухатпăр. Вăл нумай чĕлхесемпе интересленнĕ. Авалхи чĕлхесене кăна мар, хальхи чĕлхесене: вырăс, украина, тутар, чăваш чĕлхине тата вĕсен диалекчĕсене те тĕпченĕ. Тĕпчевçĕ чĕлхене социаллă пулăма пăхнă пек пăхнă. Вăл чĕлхе пĕлĕвĕнче экспериментсем (опытсем) кирлине палăртать. Çакă унăн чылай ĕçĕсенче курăнать. Вăл пирĕн çĕршывра пĕрремĕш хут Хусанта экспериментлă фонетика пӳлĕмне (кабинетне) йĕркелет.

Богородицкий (тĕнчере) пĕрремĕш хут экспериментлă фонетикăпа ĕçсем çырать, тĕслĕхрен "Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕнчи ударенисĕр уçă сасăсем" (1884). Çакăн евĕрлĕ ĕçсем Ж.Руссон Францире 1886 çулта кăна тухма пуçланă.

Экспериментлă фонетикăпа çыхăннă ĕçсем тĕпчевçĕн 30 ытла. Çав шутра "Экспериментлă фонетикăн курсĕ", "Вырăс чĕлхин фонетики".

В.А.Богородицкий ĕçĕсенче сасăпа саспаллине пĕрпĕринчен уйăрмалла текен шухăш вăй илнĕ пулнă. Вăл пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсенче те чылай ĕçсем

туса irttерне, ҫӗнӗлӗхсем тупнӑ. "Очерксен..." пысӑк пайне фонетикӑпа ҫыхӑннӑ ӗҫсем йышӑнаҫҫӗ.

Вулакансемшӗн ытларах тӗпчевҫӗн вырӑс чӗлхипе ҫыхӑннӑ ӗҫӗсем пысӑк пӗлтерӗшлӗ, уйрӑмах – "Вырӑс грамматикин пӗтӗмӗшле курсӗ". Кунта фонетикӑн, морфологин, сӑмах пулӑвӗн, синтаксисӑн, диалектологин, вырӑс чӗлхи историйӗн ыйтӑвӗсене ҫутатса панӑ.

Кӗнекен кашни пайӗнчех интересли, пӗлмелли питӗ нумай. Вӗсенчен чылайӑшӗ паянхи куншӑн та пысӑк пӗлтерӗшлӗ, анчах кӑлтӑксем те пур. Тӗслӗхрен, кӗнекен ячӗ – "Вырӑс грамматикин пӗтӗмӗшле курсӗ". Кунта фонетика та, диалектологи те, чӗлхен историйӗ те пур. Фонетика, диалектологи грамматикӑна ниепле те кӗме пултараймаҫҫӗ. Тепӗр енчен кунта лексикологи пайӗ те ҫук.

Малалла кӗнекен хӑш-пӗр пайӗсене уйрӑммӑн пӑхса тухӑпӑр.

**Фонетика.** Богородицкий фонетика тӗпчевӗсенче пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫсем тунӑ. Ҫак пая вӑл ятарлӑ тӗпчевсене усӑ курса йӗркеленӗ. Анчах та тӗпчеве 78 страницӑра кӑна ҫутатса панӑ.

**Ҫырулӑх.** Тӗпчевҫӗ вырӑс чӗлхи графикин силлабика принципне йӗркеленӗ: "Хупӑ сасӑн хытӑлӑхӗ е ҫемҫелӗхӗ хупӑ сасӑран хыҫӗнчен мар, юнашар тӑракан уҫӑ сасӑран килет, хупӑ сасӑн хытӑлӑх тата ҫемҫелӗх пахалӑхӗ вара сыпӑкра кӑна палӑрать".

Япала ячӗ. Япала ячӗсене тӗпченӗ чухне Богородицкий А.Х.Востоков ӗҫӗсем ҫине таяннӑ, вӗсене малалла аталантарнӑ. Япала ячӗсен ударени уйрӑмлӑхӗсене кура вӑл вӗсене тӑватӑ тӗрлӗ тӗп ушкӑна уйӑрать: 1. Ударени яланах сӑмах тӗпӗ ҫине ӳкекен япала ячӗсем. 2. Сӑмах тӗпӗнчен сӑмахӑн вӗҫлемӗшне ӳкекен ударениллӗ япала ячӗсем. 3. Яланах сӑмах вӗҫне ӳкекен ударениллӗ япала ячӗсем. 4. Сӑмах вӗҫӗнчен сӑмах тӗпӗ ҫине куҫакан ударениллӗ япала ячӗсем.

**Глагол.** В.А.Богородицкий залогсем ҫинчен унччен вӗрентнине критиклет. Ун шучӗпе чӗлхереултӑ залог мар, икӗ залог ҫеҫ: чӑн (действительный) тата вӑтам

(средний). Ытти тăватă залогĕ вара çак икĕ тĕп залогăн варианчĕсем пулаççĕ тесе ĕнентерет.

**Синтаксис.** Синтаксис ыйтăвĕсене В.А.Богородицкий кĕскен кăна çутатса панă пулин те ку пайра шухăшламалли, пĕлмелли чылай. Уйрăмах "предложени" ăнлавăн пĕлтерĕшне вăл логика тĕлĕшĕнчен уççăн палăртнă: "Пĕр-пĕр ăнлава пĕтĕмĕшле ăнлантарма пулăшакан темиçе сăмахăн пĕрлĕхĕ (пĕр сăмах та пулма пултарать) грамматика тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăни". Çавăн пекех тĕпчевçĕн морфологипе синтаксис хушшинчи çыхăнăва кăтартса пани пĕлтерĕшлĕ: "Морфологи – уйрăм сăмахсен, вĕсен формисен инвентарĕ, синтаксис вара сăмахсене тата вĕсен формисене аталанура – предложенире – кăтартать.

Богородицкий синтаксиса икĕ пая пайласа пăхать:

1. Синтаксис тата хутсăр предложени.

2. Анлă тата хутлă предложенисем.

Пĕлтерĕшĕсем тĕлĕшĕнчен автор хутсăр предложенисене виçĕ ушкăна уйăрать: 1. Япалан ĕçне кăтартакан предложенисем: *Лаша утать.* 2. Подлежащие япалан несĕл пĕлтерĕшне кура палăртакан предложенисем: *Лаша – чĕр чун.* 3. Подлежащие япалан паллипе палăртакан предложенисем: *Шурă лаша.* Калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ предложенисем çак виçĕ ушкăнра палăртнă предложенисенче курăнаççĕ, тет автор.

Богородицкий ыйтуллă предложенисене те хăйне евĕрлĕ ăнлантарать: "Калуллă предложенисемсĕр пуçне тата ыйтуллă предложенисем те пулаççĕ. Енчен те предложенире вăл е ку член паллă мар пулсан ыйтуллă формăпа усă кураççĕ. Ыйтăва предложенин пур членĕсем патне те лартма пулать. Тĕслĕхрен, "лаша утать" калуллă предложенирен тĕрлĕ членсем патне ыйту лартса ыйтуллă предложенисем йĕркелеме пулать: 1) "мĕн утать?" (подлежащи валли ыйту); 2) "лаша мĕн тăвать?" (сказуемăй валли ыйту).

Çавăн пекех ыйтуллă предложенисем урăх тĕрлĕ те пулма пултараççĕ: 1) "Лаша утать-ши?"; 2) "Лаша-ши утать?"

Ку предложенисемпе пĕр-пĕр япала е ĕç пирки тĕрĕссине пĕлес тесе усă кураççĕ".

Малалла Богородицкий тулли мар предложенисем çинчен çырать: "Ыйтуллă предложенисем çине хуравланă чухне хурав тулли пулмасан та пултарать. Кун пек предложенисем чĕрĕ калаçура нумай. Учительсен вĕренекенсене тулли хуравсем пама хистеме кирлĕ мар. Кун пек вĕсем ачасене чĕрĕ калаçуран пăрса яраççĕ, вĕсен чĕлхе туйăмне чакараççĕ".

Вĕрентекенсен Богородицкий каланă сĕнӳпе те усă курмалла. Тулли хуравсем çинчен те манса каймалла мар. Çак ыйту çине шкулта тимлĕ пăхмалла.

В.А.Богородицкийăн тĕп ĕçĕсем:

1. Общий курс русской грамматики.
2. Введение в изучение современных романских и германских языков.
3. Курс экспериментальной фонетики.
4. Фонетика русского языка в свете экспериментальных данных.

Усă курмалли литература

1. Мироносицкая А.Н. Библиографический указатель трудов В.А.Богородицкого // Тр. ин-та языкозн. АН СССР. – Т 2. – М., 1953.

2. Моисеев А.И. В.А.Богородицкий (1857-1941) // Рус. яз. в шк. – 1986. – №6.

## 4§. Мускав лингвистика шкулĕ

Мускав чĕлхе шкулне никĕслекенĕ Филипп Федорович Фортунатов пулнă. Ку шкул XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Мускав университетĕнче йĕркеленнĕ. Ф.Ф.Фортунатов 1876 çултан пуçласа 1902 çулччен Мускав университетĕнче ĕçленĕ, кайран Петербурга куçса кайнă.

1871-1873 çулсенче Ф.Ф.Фортунатов Германире, Францире тата Англире ăслăх ĕçĕсемпе çӳренĕ. Вăл унта Ригведа тата Авеста тексчĕсене вĕреннĕ. Лейпцигра Лескин тата Курциус лекцийĕсене итленĕ, литва тата санскрит çыру палăкĕсене тĕпченĕ.

1875 çулта магистр диссертацине хӳтĕленĕ. Унăн тĕпчев ĕçĕсем çаксем: "Sāmaveda Āzanyaka - Samhitā" (1875); "Балти чĕлхисенчи пусăм тата сасă вăрăмлăхĕ" (1895); "Вăтам шкулта вырăс чĕлхин грамматикине вĕрентесси" (1904); "Кивĕ славян (чиркӳ славян) чĕлхин фонетикин лекцийĕсем" (1919); "Индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă фонетикин кĕске курсĕ" (1922); "Индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă морфологийĕ" (1899-1901 çулсенчи лекцисем); "Танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕ" (1901-1902 çулсенчи лекцисем). Пичетленессе Ф.Ф.Фортунатов сахал пичетленнĕ, хăйĕн тĕп шухăшĕсене вăл лекци курсĕсенче çырса панă. Индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине тата пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсĕсене аталантарнă. Чĕлхене вăл сăмахсемпе сăмах майлашăвĕн пуххи пек пăхать, сăмах тата сăмах майлашăвĕсене палăртăм парать. Сăмахсене икĕ тĕрлĕ тĕпчеме пулать: пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен лексикологире тата грамматикăра. Ф.Ф.Фортунатов "этимологи" термина "морфологи" терминпа улăштарать. Лексикологире идиома пулакан сăмах майлашăвĕсене те тĕпчемеллине палăртать, фонетика (сасăсем çинчен вĕрентни) чĕлхе наукин уйрăм пайĕ пулни çинчен калать. Морфологире уйрăм сăмахсен формисене, синтаксисра сăмах майлашăвĕсен формисене тĕпчемеллине асăрхаттарать. Сăмахăн грамматика формине Ф.Ф.Фортунатов морфологи тĕлĕшĕнчен пăхать: сăмахра тĕпĕ тата вĕçлемĕшĕ (окончание) пуррине палăртать, сăмахсем улшăнакан-нисем тата улшăнманнисем пулнине кăтартать.

Чĕлхене Ф.Ф.Фортунатов общество пулăмĕ пек пăхать, чĕлхен шалаш тата тулаш историне уйăрать: чĕлхе аталанăвĕн тулаш историйĕ вăл – вăл е ку чĕлхепе калаçакан çынсен хушшинчи çыхăну. Обществăра пулса иртекен улшăнусем чĕлхере палăраççĕ, общество пайланăвĕ вырăнти уйрăм калаçу (диалектсем) пулса кайма майсем тупса парать. Чĕлхен шалаш историйĕ çав чĕлхепе калаçакан кашни уйрăм çынпа çыхăннă, унăн психологилле индивидуаллă шухăшлавĕпе калаçăвĕнче палăрать. Ку енĕпе Фортунатов младограмматиксем еннелле туртăнать.

Младограмматиксем пекех вăл сасăсен улшăнăвĕн саккунĕсене тĕпченĕ, фонетика саккунлăхĕ пăсăлнине пĕрешкеллĕх (аналоги) принципĕпе никĕслет.

Чĕлхере авал пулса иртнĕ улшăнусене хальхи чĕрĕ чĕлхе факчĕсене усă курса татса парас тĕлĕшĕпе Ф.Ф.Фортунатов прачĕлхе формисене те реконструкциленĕ.

Мускав чĕлхе шкулĕ иртнĕ XX ĕмĕр пуçламăшĕнче вырăс чĕлхе наукинче паллă вырăн йышăннă. Фортунатов вĕренекенĕсем тесе эпир А.А.Шахматова, Д.Н.Ушакова, А.М.Пешковские, М.М.Покровские, М.Н.Петерсона т.ыт. шутлама пултаратпăр.

**Ф.Ф.Фортунатовăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ.** Вырăссен паллă чĕлхеçи Филипп Федорович Фортунатов 1848 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче Олонецк кĕпернинче училище директорĕн çемйинче çуралнă. Çамрăклах вырăс чĕлхин ыйтăвĕсемпе кăсăкланнă. Кун çинчен пире хăйĕн архивĕнче сыхланса юлнă вырăс грамматикипе тата сăмахлăхĕпе çырнă ĕçсем каласа параççĕ. Гимнази хыççăн 1864-1868 çулсенче вăл Мускав университетĕнче вĕренет. 1869 çулта ăна индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматики кафедрине хăвараççĕ. Фортунатов профессор пулма хатĕрленет. 1871 çулта магистр экзаменĕсене тытнă хыççăн, ăна чĕлхе ăслăлăхне тарăнрах пĕлтĕр тесе ют çĕршывсене яраççĕ. Фортунатов ют çĕршывсенче пулни сая кайман: вăл Германири, Францири, Англири чĕлхе ăслăлăхĕн паллă центрĕсенче пулнă, ют çĕршыв чĕлхеçисен ĕçĕсемпе паллашнă, диссертаци валли материал пуçтарнă. Мускава таврăнсан 1875 çулта "Индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматики çинчен темиçе страница" диссертацине хӳтĕленĕ.

Фортунатов хăйĕн магистр диссертацийĕнче Веда Самаведа пĕр пайне вырăсла куçарса ăна тарăн та анлăн тишкернĕ. Хушса панинче вăл индоевропа танлаштаруллă-историллĕ морфологин нумай кăткăс ыйтăвĕсене (Ведăри тата санскритри вырăн падежăн тытăмĕ, глаголăн хальхи вăхăтри 1-мĕш сăпат кӳлепи т.ыт.те) тĕпченĕ. Фортунатовăн диссертаци ĕçĕ Раççейре индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине тĕпченĕ пĕрремĕш ĕç пулнă.

1876 çулхи кăрлач уйăхĕнчен пуçласа Ф.Ф.Фортунатов Мускав университетĕнче чĕлхе пĕлĕвĕпе тата танлаштаруллă грамматикăпа лекцисем вулама пуçлать, унăн вĕренекенĕ М.М.Покровский каланă тăрăх, Филипп Федорович тăрăшнипе пуçласа Мускав университетĕнче çак курссене тăтăшах вĕрентме тытăннă.

Чĕрĕк ĕмĕр хушши Мускав университетĕнче паллă тĕпчевçĕ авалхи славян тата литва чĕлхисемпе, санскритпа, пĕтĕмĕшле фонетикăпа тата морфологипе лекцисем вуланă, семинарсем ертсе пынă, çамрăк ученăйсене хатĕрленĕ. Мускав университетĕнче паллă Мускав лингвистика шкулĕ йĕркеленнĕ, унтан паллă вырăс чĕлхеçисем А.А.Шахматов (1864-1920), М.М.Покровский (1868-1942), Б.М.Ляпунов (1862-1943), Д.Н.Ушаков (1873-1942), каярахпа ют çĕршыва куçса кайнă Макс Фасмер (1886-1962) т.ыт. вĕренсе тухнă. Ун патĕнче вĕренсе тухнă ют çĕршыв ученăйĕсене илес пулсан Югославири наукăсен академин пулас президентне А.Белича (1876-1960), Йозеф Миккола фина (1866-1946), Феликс Сольмин нимĕçе (1865-1911), Поль Буайе француза (1864-1949), Олаф Брок (1867-1961) тата Тор Торбьернссон норвежецсене (1864-1948) т.ыт. те асăнмалла. Илсе панă ятсен тата ют çĕршывсен шучĕ пире Фортунатов пĕтĕм Европăри çамрăк чĕлхеçĕсен чĕлхе пĕлĕвĕн шухăшлавне йĕркелеме витĕм кӳнине кăтартса парать.

Фортунатовăн вĕренекенĕ Виктор Карлович Поржезинский (1870-1929) çапла çырать: “Общими свойствами всех курсов Фортунатова, равно как и вообще всего его научного творчества, были: поразительная точность в определении самих фактов, служивших материалом для исследования, необычайная глубина анализа и острота мысли, позволившие проникать глубоко в самую суть явлений и не пропускавшие мельчайших деталей, ускользавших от внимания других исследователей” (Поржезинский В.К. Филипп Федорович Фортунатов. М., 1914. С. 17-18).

Мускав университетĕнче вуланă лекцийĕсенче Фортунатов хăйĕн паллă шухăшĕсене каласа панă, çав

вăхăтрах нумай вырăс тата индоевропа чĕлхеçисене хумхатнă ыйтусен тупсăмĕсене сĕннĕ (чĕлхен пĕлтерĕшĕ, вăл пулса кайни, чĕлхепе шухăшлав пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни, индоевропа чĕлхисен актуаллă нумай ыйтăвĕсем, сăмахăн грамматика тытăмĕ, предложени çинчен вĕрентни). Хăйĕнчен питĕ хытă ыйтнă, çав вăхăтрах сăпайлă пулнипе çак ыйтусемпе çырнă ĕçсем сайра пичетленсе тухнă (Фортунатов 36 статйине çеç пичетлесе кăларнă), пичетлессе те литографилле курссем евĕр пичетленĕ. “Филипп Федорович хăйĕн ĕçĕсене хăй вăхăтĕнчех пичетлесе кăларнă пулсан хĕвеланăçри ăслăх шухăшлавĕн çулĕ чылай уçăмлăрах пулнă пулĕччĕ”, – тесе çырать Поржезинский маларах асăннă ĕçĕнче. 1956 çулта çеç университетра вуланă лекци курсĕсем 2 томпа пичетленсе тухаççĕ, вĕсем, чăннипех те, XIX ĕмĕр вĕçĕнчи чĕлхе пĕлĕвĕн çитĕнĕвĕсене пĕтĕмлетекен, XX ĕмĕрти çĕнĕ шухăшсем патне илсе пыракан классикăлла текстсем пулнă.

Раççейри тата ют çĕршывсенчи танлаштаруллă-историллĕ чĕлхе пĕлĕвĕн аталанăвĕнче Фортунатов паллă вырăн йышăнать: индоевропа чĕлхисене танлаштаруллă-историллĕ тĕпчеме пач çĕнĕ принципсем кăларса тăратнă. Ф.Ф.Фортунатов тишкерекен чĕлхесем хушшинчи улшăнусем мĕнле сăлтава пула пĕр-пĕрне пăхăнса тăнине, танлаштаруллă-историллĕ тĕпчевпе уйрăм чĕлхесен историне вĕренесси пĕр-пĕринпе çыхăнса тăнине тĕпчет. Фортунатовăн университетра вуланă лекцийĕсенче чĕлхе пĕлĕвĕн предметне тата тĕпчемелли меслечĕсене тупса палăртнă: “Чĕлхе наукин тĕпчемелли япали – чĕлхе тата унăн иртнĕ кун-çулĕ, меслечĕ – танлаштаруллă-историллĕ меслет пулса тăраççĕ”. “Индоевропа чĕлхисене ăслăлăх шайĕнче туллин тĕпчени, – тесе çирĕплетет Фортунатов, – танлаштаруллă-историллĕ тĕпчени кăна пулма пултарать” (Сравнительное языковедение: Курс лекций, читанных в 1883/84 уч. году). Чĕлхеçĕн тĕп тĕллевĕ – “чĕлхене ăнланасси”, чĕлхе пулăвĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле сăлтава пула çыхăнса тăнине тĕпчесси. “Наука фактсене тупса палăртнипе, вĕсене пĕтĕмлетнипе çырлахмасть, – тенĕ Фортунатов, – наука вĕсен сăлтавне, пулăмсен

çыхăнăвне пĕлме пулăшать” (Лекции по сравнительному языковедению, читанные в 1875/76 уч. году). Çак принципсем Фортунатов шкулĕнче тĕп принципсем пулса тăраççĕ.

Танлаштаруллă-историллĕ меслет Фортунатова мĕнпур индоевропа тымар-чĕлхине тупса йĕркелеме пулăшать. Вăл, Шлейхер каланипе килĕшсе, индоевропа тымар-чĕлхе ансат пулманни, вăл питĕ пуян историллĕ пулни çинчен калать. Çак чĕлхе диалектсем çине пайланнă, вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем уйрăм чĕлхе ушкăнĕсем пулса кайма пултарнă. Фортунатовăн çак шухăшĕсем чĕлхене тĕпченĕ чухне усă куракан меслетсемшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине эпир хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче те курма пултаратпăр.

Çавăн пекех, пĕтĕм индоевропа чĕлхисен сасă тытăмĕ çинчен, чĕлхен фонетика законне тупса палăртни, сонантăсен теорийĕ, паллă ячĕсен тулли формисен историйĕ, балти, славян чĕлхисен уçă сасăсен вăрăмлăхĕ икĕ тĕрлĕ пулни çинчен вĕрентнисем т.ыт. ыйтусене хускатни ăслăлăхра Фортунатова пысăк ученăй пек шутлама май параççĕ. Вăл историллĕ акцентологи ăслăлăхне пуçарса яраканĕ. 1897 çулта Фортунатов Ф. де Соссюрпа пĕр вăхăтрах балти тата славян чĕлхинче пусăм куçасси сыпăкри пусăм пахалăхĕнчен килекен закон уçать, кайран ăна “Фортунатов законĕ” теме пуçлаççĕ.

Ученăйăн танлаштаруллă грамматикăпа çырнă ĕçĕсем индоевропа танлаштаруллă грамматикине аталанма витĕм кӳнĕ. Вăл чĕлхен социаллă пулăмĕ пирки каланă шухăшсем паянхи куншăн та пĕлтерĕшлĕ: “Чĕлхе обществăн пулать, чĕлхе çынсем вăл е ку обществăн членĕсем пулнă пекех халăхăн та пулса тăрать, чĕлхе обществăн членĕсем хушшинчи çыхăнăва йĕркелет, ăна тытса тăрать. Чĕлхе вăхăт иртнĕçемĕн улшăнать, унăн историйĕ йĕркеленет, çак истори обществăра вырăн тупать” (Сравнительное языковедение: Лекции, читанные в 1895/96 уч. году). Фортунатовăн чĕлхе историйĕпе общество историйĕ пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни çинчен вĕрентни вăл вăхăтшăн çĕнĕ, никам хускатман шухăш пулнă.

Хайён ёçёсенче Фортунатов çакна та палăртать: чёлхе кăна шухăшлава пăхăнса тăмасть, шухăшлав та чёлхене пăхăнса тăрать. Чăннипе, Филипп Федорович чёлхепе шухăшлав пĕр-пĕринпе çыхăнура тăракан ыйтăва пăхнă чух ытларах шухăшлава туйăмпа сăнлăх енчен тĕпчет, абстрактлă тытăмне пачах та пăхмасть.

Сăмах кўлепине вăл ытти сăмахсен кўлеписемпе пĕлтерĕшĕсене танлаштарса тупать. "Индоевропа чĕлхисенче сăмах вăл – пĕр е темиçе пĕлтерĕше кăтартакан кўлепе, тĕслĕхрен, *çурт* сăмах пурне те паллă пĕлтерĕшрен тата пурне те паллă кўлеперен тăрать. Çак кўлепе тăрăх эпир грамматикăри паллăсене, хутшăнусене кура *çурт* сăмаха тĕп падежри япала ячĕ теме пултаратпăр" (Сравнительное языковедение: Лекции, читанные в 1895/96 уч. году).

Фортунатовăн сăмахăн малтанхи пĕлтерĕшĕ объективлă чăнлăха çутатса парать текен ăнлантарăвĕ питĕ интереслĕ. Çын çут çанталăка, япаласене сăнаса сăмахăн малтанхи пĕлтерĕш тытăмне йĕркелет, кўлепи вара ăс-пуçпа ĕçленĕ тапхăрта çирĕпленет (Сравнительное языковедение).

Пĕтĕмĕшле лингвистика ыйтăвĕсене пăхса тухсан пире Фортунатовăн лингвистикăри тĕнчекурăмăн анлăшĕ тĕлĕнтерет. Вăл пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн теорилле курсне пуçарса яраканĕ. Ытларах синтаксисăн теорийĕ пирки шухăшланисем интереслĕ, синтаксис ыйтăвĕсене çутатса панă чух Фортунатов хăйне евĕрлĕ çулсемпе пынă. Пичетленнĕ ĕçĕсем хушшинче синтаксис ыйтăвĕсене хускатнă ĕçĕсем сахал пулни питĕ шел.

Ф.Ф.Фортунатов вырăссен чĕлхе пĕлĕвĕнче кўлепеллĕ грамматика юхăмне никĕсленĕ, çав вăхăтри чĕлхе пĕлĕвĕнче хуçаланакан логика-грамматика вĕрентĕвне хирĕç пулнă. Логика-грамматика юхăмне хўтĕлекенсем чĕлхепе шухăшлав грамматикăпа логика категорийĕсем тĕлĕшĕнчен пĕр япала, пулăм тесе пăхнă, предложени вăл логикăлла шухăшлава сăмахпа калани тесе ĕнентернĕ, Фортунатов вара предложени психологиллĕ шухăша палăртакан вĕçленнĕ сăмах майлашăвĕ, тет. Ку тĕлĕшĕнчен ученăй А.А.Потебняпа пĕр шухăшлă.

Грамматикăри подлежащипе сказуемăя палăртнă чух Фортунатов психологилле шухăшлав категорине те шута илет. “Грамматикăри подлежащи сăмах майлашăвĕнче грамматикăри сказуемăйпа мĕнле çыхăнса тăнинче палăрать... Вырăс чĕлхинче сказуемăй пулакан пуплев пайĕ ытларах чух глагол пулать. Фортунатов шухăшĕпе, предложенире фраза пусăмĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Калаканни пусăмпа усă курса предложенин тĕп, кирлĕ пайне палăртать: ун пек пай – психологиллĕ сказуемăй.

Хутлă предложение кĕрекен пăхăнуллă предложени пĕлтерĕш енчен икĕ тĕрлĕ пулать: тĕп предложенири пĕр члена кăна ăнлантарма пултарать е тĕп предложение пĕтĕмĕшле ăнлантарать. Фортунатов пăхăнуллă предложени тытăмĕ тĕлĕшĕнчен икĕ тĕрлĕ пулни çинчен каланине Шахматов та йышăннă, каярахпа П.С.Поспелов çак шухăша малалла хăйĕн пăхăнуллă хутлă предложенисем тытăмĕ енчен икĕ членлă тата пĕр членлă пулаççĕ текен вĕрентĕвĕнче аталантарнă.

1902 çулта А.А.Шахматов танлаштарullă-историллĕ тата славянсен чĕлхе пĕлĕвĕсене аталантарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, Ф.Ф.Фортунатова Наукăсен Академийĕн вырăс чĕлхипе сăмахлăх уйрăмĕн членне суйлаççĕ. Фортунатовăн ирĕксĕрех Мускав университетне пăрахма тивет, ăслăлăхсен Академийĕн вырăс чĕлхипе сăмахлăхĕн уйрăмĕнче ĕçлеме Петербурга куçса каять. Çак вăхăтран пуçласа унăн преподаватель ĕçĕ вĕçленет.

Филипп Федорович 1914 çулхи авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Усă курмалли литература

1. Баранова Г.С., Елькова И.Б., Ильминский Г.А. Истории науки о русском языке // Русская словесность. – 1998. – №1. – С.42-50.

2. Березин Ф.М. Ф.Ф.Фортунатов и русское языкознание конца XIX в. // Рус. яз. в шк. – 1998. – №1. – С.93-100.

3. Стеценко А.Н. Филипп Федорович Фортунатов. (1848-1914) // Русская речь. – 1972. – №2. – С.123-129.

## 5§. А.А. Шахматов (1864-1920)

А.А.Шахматов – вырăс чĕлхи специалисчĕ тата авалхи вырăс культурин историкĕ. Унăн паллă ĕçĕсем çаксем: "XIII-XIV ĕмĕрсенчи Новгород грамотисен чĕлхине тĕпчени" (1886); "XV ĕмĕрти Двина грамотисене тĕпчени" (1903); "Хальхи вырăс литература чĕлхин очеркĕ" (1913); "Вырăс чĕлхи историйĕн авалхи тапхăрти очеркĕ" (1915); "Вырăс чĕлхе историйĕн курсĕн кӳртĕмĕ" (1916); "Вырăс чĕлхин синтаксисĕ" (1925-1927).

Вырăс ăслăлăх историйĕнче Шахматов Алексей Александрович академикăн, вырăс тата славян чĕлхисен специалисчĕн, вырăс филологĕн ячĕ паллă вырăн йышăнать.

Тĕпчевçĕ "Вырăс çĕрĕ ăçтан пуçланнă" тата Карамзинăн "Вырăс патшалăхĕн историйĕ" кĕнекисене вуласан историпе кăсăкланма пуçлать, А.С.Хомяков кĕнекисене вуласа пĕрремĕш хут санскрит сăмахĕсемпе паллашать.

1876 çулта А.А.Шахматов ют çĕршыва тухса каять. Мюнхенра вăл университет библиотекинче Страбон, Помпони ĕçĕсемпе паллашать, Раççейре тахçан авал пурăннă çынсен историне тĕпчет. Пиччĕшĕ çине тăнипе гимназие вĕренме кĕрет. 1877 çулта январьте вĕсен çемйи Парижа пурăнма куçать, март уйăхĕнче Раççее таврăнать. Шахматов вара Мускаври Крейман гимназине вĕренме кĕрет. Кунта вăл 1878 çулхи çуллаччен вĕренет.

1879 çулхи кĕркунне Алексей Мускаври IV-мĕш гимназин пиллĕкмĕш класĕнче вĕренме пуçлать. Кунта вăл çав вăхăтри паллă вырăс ăсчахĕсемпе: Н.И.Стороженкăпа, В.Ф.Миллерпа, Ф.Ф.Фортунатовпа паллашать. Вырăс лингвистика шкулĕн пуçлăхĕпе, Фортунатовпа, паллашни Алексейăн малашнехи пурнăç çулне палăртать. Фортунатов кăтартса панипе Шахматов вырăс чĕлхине тĕпчеме пуçлать, Румянцев музейĕнче упраннă авалхи вырăс çырулăхĕн палăкĕсене тишкерет. Çапла хăй вĕреннĕ вăхăтрах Алексей Александрович Шахматов вырăс чĕлхин специалисчĕ

тата историкĕ пулса тăрать. 1883 çулта вăл гимназие пĕтерет те хаваспах Мускав университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет.

1890 çулта çак университетра вырăс чĕлхи историйĕн курсне вĕрентет. Çав вăхăтрах VII-мĕш гимназире латин чĕлхи урокĕсем ирттерет. Анчах та 1890 çул вĕçĕнче Шахматов Саратов губернине куçса каять. Земство начальникĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Интересленсех хресчен пурнăçĕпе çĕр ĕçне тĕпчеме пуçлать.

1892 çулта диссертаци çырать, доктор степеньне илет.

1894 çулхи çу уйăхĕнче Наукăсен академийĕнчи вырăс чĕлхипе сăмахлăх уйрăмĕнче адъюнкт вырăнне йышăнать. Ăна çак уйрăм пуçлăхĕ А.Ф.Бычков чĕнсе илет. 1894 çулхи раштавра вара Шахматов Питĕрте ĕçлеме тытăнать. Малтанхи çулсенче вăл вырăс чĕлхи словарĕпе ĕçлет.

1896 çулта тĕпчевçĕ кăнтăр славян çĕрĕсенче пулса курать, унти калаçусене тĕпчет.

1897 çулта Шахматова экстраординарлă академика суйлаççĕ, 1899 çулта вара – ординарлă академика. Çак çул ăна Археографи комиссийĕн членĕ туса хураççĕ, Наукăсен Академийĕн библиотекин I пай директорне лартаççĕ.

1900 çулта Архангельск, Холмогоры хулисене каять. XV ĕмĕрти Двина грамотисене пичетлесе кăларма хатĕрлет.

1906 çулта Шахматова вырăс чĕлхипе сăмахлăх уйрăмĕн пуçлăхне суйлаççĕ.

1908 çулта Питĕр университетĕнчи историпе филологи факультетне вырăс чĕлхипе лекцисем вулама чĕнеççĕ.

1909 çулта Шахматова çак университетăн профессорне суйлаççĕ.

1920 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче Алексей Александрович Шахматов йывăр операци хыççăн вилсе каять.

Унăн ĕçĕсенче акцентологи ыйтăвĕсем паллă вырăн йышăнаççĕ. Вăл ку енĕпе ĕçлекен пĕрремĕш çын пулнă.

Вырăс диалектологине тĕпченĕ çĕрте те унăн ĕçĕсем паллă вырăн йышăнаççĕ.

Хальхи вырăс литература чĕлхине тĕпченĕ ĕçĕ – "Вырăс чĕлхи синтаксисĕ". Вырăс чĕлхине Шахматов юратсах тĕпченĕ, XIX ĕмĕр вĕçĕпе XX пуçламăшĕнчи вырăс чĕлхеçисенчен А.А.Шахматов чи палли пулнă. Вăл вырăс чĕлхи наукине аталанма хăйĕн пултарулăхĕпе, таланчĕпе пулăшнă.

## 6§. А.А.Шахматовăн «Хальхи вырăс литература чĕлхин очеркĕ» ĕçĕ. XII сыпăк. Япала ячĕ

1. Несĕл категорийĕ

Япала ячĕсен вырăс чĕлхинче виçĕ несĕл пур: арçын несĕлĕ (мужской род), вăтам (средний) тата хĕрарăм несĕлĕ (женский род). Япала ячĕсен тĕпĕсем малтанах расналанса тăнă, урăхла каласан, падеж аффиксĕсем сăмах тĕпĕсем çумне хушăнаççĕ. -і тата -ā сасăсемпе пĕтекен сăмах тĕпĕсем индоевропа чĕлхисенче арçын тата хĕрарăм несĕлĕн сĕмне йышăнаççĕ. Тĕрĕссипе вара -ā сасăпа пĕтекен сăмахсем ĕлĕкех хĕрарăм несĕлне палăртнă; арçын несĕлне вара арçынсене пĕлтерекен сăмахсем çеç кĕнĕ. Хальхи вырăс чĕлхинче те çак пулăм палăрать.

Падеж аффиксĕсене шута илсе тата авалхи япала ячĕсен несĕлĕсене пăхса, япала ячĕсен вĕçленĕвне çакăн пек пайсем çине уйăрма пулать:

1) арçын несĕлĕнчи япала ячĕсем:

а) хытă хупă сасăпа тата çемçе хупă сасăпа пĕтекен пĕрреллĕ хисепри япала ячĕсем: *дом, нож, гость;*

б) пĕрреллĕ хисепри: *путь;*

в) хытă хупă сасăпа тата -й сасăпа пĕтекен нумайлă хисепри япала ячĕсем: *столы, воробьи;*

г) *ж, ш* тата çемçе хупă сасăпа пĕтекен нумайлă хисепри япала ячĕсем: *ножи, родители;*

д) хытă хупă тата çемçе хупă сасăпа пĕтекен нумайлă хисепри япала ячĕсем тĕп падежра *-ья* сас паллисемпе пĕтсен: *братья;*

е) пĕрреллĕ хисепри *-ин* сыпăклă пĕтекен япала ячĕсем: *боярин;*

2) хĕрарăм несĕлĕнчи япала ячĕсем:

а) *ж, ш* тата çемçе хупă сасăпа пĕтекен сăмахсем: *рожь;*

б) *а* сасăпа пĕтекен сăмахсем: *вода, юноша, буря;*

3) вăтам несĕлри япала ячĕсем:

а) *о, е* саспаллисемпе пĕтекен япала ячĕсем: *село, море;*

б) *а* сасăпа пĕтекен сăмахсем: *имя, дитя.*

Япала ячĕсен несĕлĕ синтаксисра та палăрать. Сăмах улăштаракан аффикссем те сăмах хăш несĕле кĕнине кăтартма пултараççĕ. Хытă хупă сасăпа пĕтекен сăмахсем пурте арçын несĕлне кĕреççĕ, анчах та *ж, ш* саспаллисемпе пĕтекен сăмахсем хĕрарăм несĕлне те кĕреççĕ.

*А* саспаллипе пĕтекен сăмахсем пурте хĕрарăм несĕлне кĕреççĕ, арçынсене палăртакан япала ячĕсем вара арçын несĕлне кĕреççĕ.

*О, е* саспаллисемпе пĕтекен сăмахсем вăтам несĕле кĕреççĕ, анчах та арçынсене палăртакан сăмахсем те пулаççĕ, тĕслĕхрен, *Михайло.*

Çапла майпа *ж, ш* тата *ь* пĕтекен япала ячĕсен несĕлне сăмаха улăштаракан аффиксĕсене пăхса пĕлме çук.

Тĕп падежра вăл синтаксис енчен палăрать, ытти падежсенче арçын несĕлĕнчи тата хĕрарăм несĕлĕнчи пĕрреллĕ хисепри япала ячĕсен аффиксĕсем пĕр пек мар. *А* сасăпа пĕтекен хăш-пĕр япала ячĕсем хĕрарăм е арçын несĕлĕнче пулаççĕ: "пьяница". Çак сасăпах пĕтекен чĕрĕ мар япалана пĕлтерекен сăмахсем хĕрарăм несĕлне кĕреççĕ.

2. Хисеп категорийĕ

Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ хисеп категорийĕпе те çыхăннă. Кашни сăмахăн пĕрреллĕ хисепĕ те, нумайлă хисепĕ те пулма пултарать. Анчах та хăш-пĕр япала ячĕсем хăйсен пĕлтерĕшĕпе нумайлă хисепре пулмаççĕ. Тĕслĕхрен:

1) тĕрлĕ çĕршыв тата вырăн ячĕсем: *север, Китай;*

2) абстрактлă ăнлава пĕлтерекен сăмахсем: *глубина, темнота, любовь, грусть;*

3) ĕçе, хусканăва пĕлтерекен сăмахсем: *сев, бегство;*

4) япалалăха пĕлтерекен сăмахсем: *мука, золото;*

5) хăш-пĕр япала ячĕсем: *Литва.*

Хăш-пĕр япала ячĕсем нумайлă хисепре çеç пулаççĕ: *сани, ножницы, каникулы.*


Усă курмалли литература

1. Виноградов В.В. История русских лингвистических учений. – М.: Высш. шк., 1978. – С.252-271.

2. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979. – С. 95-96.


## 7§. А.М.Пешковский

А.М.Пешковский чĕлхе наукинче Потебня, Фортунатов тата Шахматов традицийĕсене малалла тăснă. Унăн тĕп ĕçĕсем: "Вырăс синтаксисне ăслăх тĕлĕшĕнчен тĕпчени" (1914); "Шкул тата ăслăх грамматики" (1914); "Тăван чĕлхе методики, лингвистики, стилистики, поэтики" (1925); "Тăван чĕлхе методикин, лингвистикин тата стилистикин ыйтăвĕсем" (1930).

Александр Матвеевич Пешковский 1878 çулта çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче çуралнă. 1897 çулта вăл Феодоси гимназийĕнчен ылтăн медальпе вĕренсе тухнă та Мускав университечĕн физикăпа математикăн çут çанталăк çинчен вĕрентекен наука уйрăмне вĕренме кĕнĕ. 1899 çулта ăна студентсен революци пăлхавне хутшăннăшăн университетран кăларса янă. Кун хыççăн унăн пĕлĕвне Берлин университетĕнче ўстерме тивнĕ.

1901 çулта Раççее таврăнсан А.М.Пешковский тепĕр хут Мускав университетне историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет. Анчах та 1902 çулхи çуркунне студентсем йĕркеленĕ революци юхăмне хутшăннăшăн ăна каллех университетран кăларса яраççĕ. Çитменнине 6 уйăхлăха тĕрмене хупса лартаççĕ. А.М.Пешковский 1902 çулхи кĕркунне университетра çĕнĕрен вĕренме тытăнать.

1906 çулта историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вăл Мускаври тĕрлĕ гимназисенче вырăс тата латин чĕлхисене вĕрентет. А.М.Пешковскин тарăн, тĕплĕ сăнавсемлĕ “Русский синтаксис в научном освещении” наука ĕçĕ çак тапхăрăн пĕтĕмлетĕвĕ пулнă. Кĕнекере А.А.Потебняпа Ф.Ф.Фортунатов вĕрентĕвĕсене тĕпе хунă. Наукăсен Академийĕ çак кĕнекен пĕрремĕш кăларăмĕшĕн автора премиленĕ.

Вĕрентӳ процесĕнче унăн “Школьная и научная грамматика” çивĕч критикăллă ĕçĕ валли шухăшĕсем пиçсе çитнĕ. Икĕ ĕçĕ те 1914 çулта кун çути курнă. Çак вăхăтранах аворăн грамматика ăслăлăхĕпе кăсăкланни кăна мар, ăна шкулта вĕрентес меслечĕсем пирки те тарăн шухăшлани палăрма пуçланă.

1914 çулта А.М.Пешковский Д.И.Тихомиров ячĕллĕ Аслă педагогика курсĕсенче вĕрентме пуçланă. 1918 çулта ăна танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕн кафедрин профессорĕ пулма Екатеринослав (халĕ Днепропетровск) университетне чĕнсе илнĕ. Çак вăхăтран пуçласа 1921 çулччен А.М.Пешковский Днепропетровскри тата ытти аслă пĕлӳ паракан заведенисенче вĕрентнĕ.

1921 çулта А.М.Пешковский Мускава таврăнать те ăна Мускаври I патшалăх университечĕн профессорĕ ятне параççĕ. Çак вăхăтран унăн ăслăлăхпа-педагогика ĕçĕ-хĕлĕнчи тухăçлă тапхăр пуçланать.

1922 çулта А.М.Пешковскин “Пирĕн чĕлхе” (“Наш язык”) виçĕ пайран тăракан пысăк ĕçĕ пичетленме пуçланă. 1927 çулта Ăсчахсен кулленхи пурнăçне лайăхлатас енĕпе ĕçлекен тĕп комиссийĕ çак кĕнекене премиленĕ. Ĕçе шкул валли хатĕрленĕ, вăл икĕ вариантпа тухнă: вĕренекенсемпе вĕрентекенсем валли. Вăл ытла пысăк калăпăшлă пулнă, çавăнпа унпа шкулта анлă усă курман. Чĕлхеçĕ каярах хăех “Пирĕн чĕлхе” (“Наш язык”) кĕнекен çитменлĕхĕсене палăртнă. Çапах та пособире автор грамматикăна мĕнле ăнланнине курăмлă кăтартса панă. Унта шкулта грамматикăна вĕрентмелли питĕ интереслĕ мелсемпе меслетсене палăртнă. Çавăнпа вăл темиçе кăларăмпа тухса саланнă.

"Наш язык" кĕнекене хатĕрленĕ май тата ун хыççăнхи тапхăрта та А.М.Пешковский вырăс чĕлхи, вырăс грамматики, стилистика тата поэтика методикин ыйтăвĕсемпе чылай статья çырса кăларнă. Каярах çав статьясен пысăк пайĕ икĕ сборника кĕнĕ:

1) Методика родного языка, лингвистика, стилистика, поэтика: Сборник статей (Гиз., М.; Л., 1925).

2) Вопросы методики родного языка, лингвистики и стилистики (Гиз., М.; Л., 1930).

Çак тарăн та хĕрÿллĕ статьясенче А.М.Пешковский совет шкулĕсенче вырăс чĕлхине вĕрентес методикăн çул-йĕрĕсене тата содержанине улăштарас, çĕнетес тĕллевлĕ кĕрешÿçĕ пек тухса тăнă.

Пурнăçĕн юлашки çулĕсенче А.М.Пешковский кĕнекесем редакцилесе кăларакан институтăн тата Ленин ячĕллĕ патшалăх педагогика институчĕн профессорĕ пулнă. Çав вăхăтрах вăл А.С.Пушкин чĕлхин словарьне тата орфографи словарьне хатĕрлеме материалсем пухнă.

А.М.Пешковский вырăс чĕлхи наукине пысăк çитĕнÿсем кÿнĕ. Вăл хăйĕн наукăри çамрăк çулĕсенчех вырăс чĕлхин ĕçлесе çитереймен чи йывăр пайне – синтаксиса тĕпчеме тытăннă. Хăй вăхăчĕшĕн А.М.Пешковскин синтаксис ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçĕ 7-мĕш кăларăмпа тухни тĕлĕнмелле пысăк событи пулнă. Вырăс чĕлхе наукинче пĕрремĕш хут хальхи вырăс литература чĕлхин синтаксисне автор ун чухнехи "Мускав шкулĕн", Ф.Ф.Фортунатов академикăн шухăшĕсене тĕпе хурса тĕпченĕ.

Меслетлĕх шухăшĕсемпе ыйтăвĕсем "Наш язык" тата "Методическое приложение к книге "Наш язык" ĕçĕсенче чылай.

"Наш язык" кĕнекене кăларнă май А.М.Пешковский хăй умне çак тĕллевсене лартнă:

1) вĕренекенсен ăс-тăнне тăван чĕлхе ăслăхĕн пайрăмĕсене пĕрчĕкĕн хывмалла;

2) çакна вĕрентекенсен вăйĕпе тумалла... Вĕренекенсене систермесĕр çак материалăн грамматика ăнкарулăх процесне йĕркелесе тăмалла;

3) çак процесра вĕренекенсен шухăшлав пултарулăхне вăй çитнĕ таран çивĕчлетмелле;

4) вăй çитнĕ таран хăлха илтнине куç курнипе пĕр тан аталантарса сенсорлă пултарулăхĕсене çивĕчлетмелле;

5) пĕтĕм ĕçсен тăсăмĕнче май килнĕ таран тĕрĕс çырма хăнăхмалли тата пуплеве аталантармалли ĕçсем хушмалла.

А.М.Пешковский 20-мĕш çулсенче, "Наш язык" учебник кун çути курсан, анлă сарăлнă тенденцирен пăрăннă; орфографие грамматикăран уйăрса вĕрентнипе килĕшмен. "Наш язык" умсăмахĕнче вăл çапла çырать: "Куçпа курнипе кăна пирĕн орфографие алла илме пулманнине эпĕ пĕлсе тăратăп. Тĕрĕс çырма вĕрентесси грамматика наукин практика хăнăхăвĕ пек пулса пымалла; геометри вĕрентнĕ чух черчение вĕрентнĕ пек".

Хăш-пĕр психологсемпе методистсем пуплевлĕ, хусканулă-итлевлĕ çул-йĕр анчах сĕннĕ чух, çак шухăш паянхи кун та çивĕчлĕхне сыхласа хăварать.

Кĕнекен 1-мĕш кăларăмĕн умсăмахĕнче А.М.Пешковский хăйĕн ĕçĕн уйрăмлăхĕсене çапла хакланă:

1. Çырса кăтартнă чух чĕлхен тулаш, сасă енне тĕпе хунă. Çакна вулакана çăмăллăхсем кӳме çеç мар, ăслăх тата меслет тĕллевĕсене пурнăçлама та тунă.

2. Грамматика пайне уйрăмлатса психологипе тата логикăпа пĕр килекен енĕсене уçăмлăрах кăтартма.

3. Уйрăмах синтаксисăн хăш-пĕр тулаш уйрăмлăхĕсене: интонаципе пуплев юххине шута илнĕ.

А.М.Пешковский кĕнеки 1-мĕш тата 2-мĕш кăларăмĕсенчех вулакана синтаксис сăнавĕсене çĕнĕлле ăнлантарнипе интереслентерсе янă. Автор сăмахĕсем тăрăх, кĕнекен 3-мĕш кăларăмĕнче "текстăн пиллĕкмĕш, улттăмĕш пайне çĕнĕрен çырнă".

Çак кăларăмра А.М.Пешковский Ф.Ф.Фортунатов шухăшĕ пур чухне те тĕрĕс пулнине хирĕçлет. Хăйĕн ĕçĕнче нумай япалана вăл А.А.Потебня тата А.А.Шахматов шухăшĕсен витĕмне пула тунă. Тĕрлĕ сăлтавсене пула А.М.Пешковский тĕпчевре кирлĕ

килĕшӳлĕхпе йĕркене сыхласа хăварайман. Çакна вăл хăй те туйнă. Хăйĕн системине лайăхлатма вăл нумай ĕçлет, анчах çакна тума ăна унăн сарăмсăр вилĕмĕ чарать.

Ăслăх тишкерĕвĕнче кĕнеке чĕлхине мар, чĕрĕ калаçу чĕлхин интонациллĕ енне шута илни пĕр иккĕленӳсĕр А.М.Пешковский тивĕçĕ. Логикăпа грамматикăна пăтраштарнипе кĕскетнĕ пăхăнуллă предложенисем çинчен йăлана кĕнĕ вĕрентĕве тĕпчевçĕ предложенири уйрăм тăран кĕçĕн членсем çинчен, уйрăм тăран сăмах çаврăнăшĕсен вĕрентĕвĕпе улăштарнă. Шухăша тата предложенисене пĕрпеклетнине хирĕçлесе А.М.Пешковский уççăнах грамматика ĕçĕсенче анлă сарăлнă "опущени" меслетне палăртнă.

Л.В.Щерба академик А.М.Пешковскин "Русский синтаксис в научном освещении" кĕнеки пирки каланă тăрăх, вăл "Вырăс чĕлхинче ирттернĕ чи тĕплĕ сăнавсен мул пуххийĕ".

Тĕплĕ те сисĕмлĕ А.М.Пешковский чĕлхеçĕ пĕрмай çĕнĕ çул-йĕр шыракан пултаруллă методист пулнă. Вырăс чĕлхи методикине вăл чĕрĕ кăсăклăхпа тата хисеплесе йышăннă. Хăш-пĕр скептиксен шухăшне хирĕçлесе методикăра вăл чăн-чăн наука курнă. "Зачем нужен учет орфографических ошибок" статьяра А.М.Пешковский çапла çырать: "Хальхи вăхăтра методика науки пур енчен те лайăх аталанманни çав ĕçпе пĕччен аппаланнинчен килет. Ку, пĕр енчен, наукăра паян кунччен мĕн тунине чакарса хурать, тепĕр енчен вĕсем хăйсем тĕллĕн, пĕр çын вăйĕпе е пĕчĕк ушкăнпа, пĕр-пĕр кружокра кĕске вăхăтрах наука туса хурасшăн. Шел пулин те, ун пек "романтикăлла" плансене уйрăм çынсем кăна мар, пĕтĕм учрежденипе йĕркелекенсем те пур. Ăслăх тĕпчев институчĕ хăйĕн производствăн çулталăк планне "тĕрĕс çырассин наука методикине тăвасси" тесе çырса хуни пире паллă. Ку, паллах, хăй тĕллĕн ĕçлени пулмасть, мĕншĕн тесен пирĕн умра ятарлă тĕпчев институчĕ, уйрăм çын мар, анчах та ку пирĕншĕн – «романтизм». Ку сăмахсем пирĕн вăхăтра та хăйсен вăйне çухатман.

1928 çулта А.М.Пешковский М.А.Андреевская тата А.П.Губская Мускав учительницисемпе пĕрле "Первые уроки русского языка" кĕнеке кăларма пуçлать. Çак кĕнекен хушса панинче методика кăтартăвĕсем те тухнă.

Пуринчен малтан А.М.Пешковский грамматика методикин ыйтăвĕсемпе интересленнĕ. Грамматика – ытларах теорилле наука, вăл вĕренекенсене ниме те: "ни калаçма, ни вулама вĕрентмест", текен шухăш анлă сарăлнă çулсенче Пешковский шкул грамматикине хăюллăн хӳтĕлет. Вăл унăн практикăри пысăк пĕлтерĕшне витĕмлĕ ĕнентернĕ.

"Грамматика в новой школе" статьяра А.М.Пешковский грамматикăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ парас пахалăхне палăртнă, анчах çакна вăл пĕтĕмĕшле чухлавра, чĕлхери пулăмсене пĕтĕмĕшле ăнланнинче курнă. Вăл грамматикăн тытăмне пĕлмесĕрех пĕтĕмĕшле чухлав пулма пултарать тесе шутланă, мĕншĕн тесен пĕтĕмĕшле пĕлӳ патне, тĕслĕхрен, падежсемпе вĕçленĕве пĕлмесĕрех çитме пултарассине ĕненнĕ. Çав статьярах Пешковский грамматикăн ăспару пĕлтерĕшне кăтартнă, вăл шухăшлав хăнăхăвĕсене аталантарнине палăртнă. Анчах çакăнтах вăл ăспаруллă ӳкĕтлев грамматикăн тĕп содержанийĕ кăна мар, ăна вĕренмелли процесс пулса тăнине палăртнă. Çав вăхăтрах мĕнле те пулсан ĕçе процесшăн кăна аталантарма юрать-ши тесе иккĕленнĕ.

А.М.Пешковский çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне килсе тухнă: шкул грамматики пĕтĕмĕшле пĕлӳшĕн тата ăспарушăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулсан та унăн тĕп пахалăхĕ практикăра: вулав хăнăхăвĕ те, çыру хăнăхăвĕсем те, пуплев культурине алла илесси те грамматикăсăр пулаймаççĕ.

Грамматикăна шкулта вĕрентме тĕп çул-йĕрсем шыранă май А.М.Пешковский хăйĕн шухăшĕсене тĕплĕн аталантарнă. Çав статьярах вăл пĕтĕм морфологипе пĕтĕм синтаксис "япала" ăнлав çинче çăмăллăнах никĕсленме пултарни çинчен çырнă: паллă ячĕсене япаласем мĕнлине ăнлантаракан сăмахсем пек пăхма; глаголсене япаласем мĕн тăваççĕ е япалипе мĕн тунине

ӑнлантаракан сӑмахсем; подлежащи – тӗп япалана ӑнлантаракан сӑмах.

Тӗрӗс ҫырас методика А.М.Пешковский пуҫӗнчен пӗртте тухман. “Правописание и грамматика в их взаимоотношениях в школе” статьяра вӑл ҫапла ҫырнӑ: “Тӗрӗс ҫырма вӗрентес ыйтӑва татӑклӑ хуравлас тесен грамматикӑн вырӑнӗ тӗрӗс ҫырассишӗн анчах мар, грамматикишӗн хӑйшӗн те пулнине палӑртмалла”. Енчен те грамматика тӗрӗс ҫырма вӗрентме анчах кирлӗ пулсан, ӑна маларах вӗрентме пуҫламалла. Кирлӗ мар пулсан, ӑна пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан курс вӗҫӗнче вӗрентме те юрать.

Хӑйӗн статйинче А.М.Пешковский малтанхи хут пунктуацие вӗрентнӗ чухне илемлӗ вулав пӗлтерӗшлӗ пулнине асӑрханӑ. Ҫапах та унӑн пӗлтерӗшне вӑл кӑштах ӳстерсе каланӑ.

Пирӗн вӑхӑтшӑн А.М.Пешковский шкулта морфологи материалне мӗнле вӗрентмеллине калани кӑсӑклӑ. Хӑнӑхтарусемпе тӗслӗхсем валли, чӗлхе материалне суйламалли принципсен ыйтӑвне А.М.Пешковский хӑйне майлӑ татса панӑ. Вӑл шкулта глаголсен вид категорийӗ пирки питех те вырӑнлӑ каланӑ: «Пирӗн чӗлхен тӗп пуянлӑхӗн тӗсӗсем-ҫке вӗсем. Вӗсемпе пӗлсе усӑ курсан, пӗрремӗшӗнчен, вӗренекен текста тӗшмӗртме хӑнӑхать, иккӗмӗшӗнчен, ытти грамматика уйрӑмлӑхӗсем те ансат пек туйӑнаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вид категорийӗ вырӑс чӗлхинче – чи йывӑрри».

Ҫавӑнпа шкул программинче вид ҫинчен вӗрентни кӑна мар, вӗсен пӗлтерӗшне вӗренни кирлине те палӑртнӑ. Кашни учитель валли паха, кирлӗ япаласем нумай тупма пулать ун “Пирӗн чӗлхе” ӗҫӗнче.

А.М.Пешковскин меслетлӗхри пӗтӗм ӗҫӗ-хӗлӗ шкул грамматикине детальсенчен хӑтарса, чӑн ӑслӑлӑха ҫирӗплетсе, анчах ҫав вӑхӑтрах ачасене ӑнланмалла туса ҫыру хӑнӑхӑвӗсемпе пуплевне аталантарасси ан чактӑр тесе ӑнтӑлнипе ҫыхӑннӑ.

Усӑ курмалли литература

1. Белов А.И. А.М.Пешковский как лингвист и методист. – М., 1958.

2. Хрестоматия по истории русского языкознания / Сост. Ф.М. Березин – М.: Высш. шк., 1973.
3. Виноградов В.В. История русских лингвистических учений. – М., 1978.
4. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979.
5. Пешковский А.М. Избранные труды. – М.: Учпедгиз, 1959.
6. Пешковский А.М. Русский синтаксис в научном освещении. – 6-е изд. – М., 1938.
7. Пешковский А.М. Русский синтаксис в научном освещении. – 7-е изд. – М., 1956.

## 8§. Фердинанд де Соссюрăн чĕлхе (лингвистика) концепцийĕ

Ф. де Соссюр тĕпчевçĕ Женевăра (Швейцарире) 1857 çулта çуралнă. 1879 çулта унăн «Индоевропа чĕлхисенчи уçă сасăсен авалхи тăрăмĕ пирки» ятлă пĕрремĕш тĕпчев ĕçĕ пичетленет. Çакăн хыççăн вăл темиçе çул хушши Парижра лекцисем вуланă, вĕсене А.Мейе, М.Граммон итленĕ. 1891 çулта Соссюр Женевăна таврăнать те университетра профессор званине илет, 1906 çулта пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн кафедрин пуçлăхĕ пулса тăрать. Хальхинче ун лекцийĕсене Ш.Балли тата А.Сеше итленĕ те тимлĕ çырса пынă. 1916 çулта авторĕ вилнĕ хыççăн хăйсем çырса пынă лекцисен текстне тата А.Ридлингерпа Ж.Дегалье конспекчĕсене усă курса "Cours de linquistique generale" ятпа пичетленĕ. 1933 çулта ăна вырăсла куçарса "Курс общей лингвистики" ятпа кăларнă.

Женева университетĕнче Соссюрччен 30 çул хушши пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсĕ дисциплинăна Жозеф Вертгеймер вуланă. Вăл нимĕнпе те палăрса тăман. 30 çул хушшинче пĕртен пĕр "La linquistique" ятлă брошюра пичетлесе кăларнă. 1906 çул вĕçĕнче Ж.Вертгеймер вилсе кайнă, çавна май Соссюр пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕпе лекцисем вулама пуçлать. Л.Готье 1949 çулта тупса палăртнă фактсем тăрăх 3 тапхăрта вуланă лекцисене 29 çын çырăнни паллă:

1907 çулта – 6 çын, 1908 çулта – 11 çын, 1910 çулта – 12 çын. 29 çынтан вунпĕрĕшĕ лекцисене конспектланине тупса палăртнă. Конспект çыракансем хушшинче А.Ридлингер, Л.Готье, Ф.Бушарги, П.Регар, Э.Константен пулни паллă.

1928 çулта Соссюрăн "Курсне" яппунла Хидэо Кобаяси куçарнă, 1931 çулта Герман Ломмель ăна нимĕçле куçарать.

1933 çулта А.М.Сухотин вырăсла куçарать: кӳртĕм статйине Д.Н.Введенский, комментарисене Р.О.Шор çырнă. 1977 çулта А.А.Холодович редакциленипе Ф. де Соссюрăн ĕçĕсене "Чĕлхе пĕлĕвĕпе çырнă ĕçсем" ("Труды по языкознанию") ятпа тепĕр хут пичетлесе кăлараççĕ.

1945 çулта Аргентинăра Амадо Алонзо "Курса" испанла, 1959 çулта СШАра Вейт Бески ăна акăлчанла куçарса кăларать. 1961 çулта полякла, 1967 çулта итальянла, çав çулах венгрла пичетленсе тухать. Паян куна çитсе те Ф. де Соссюр вĕрентĕвĕ хăйĕн хакне çухатман.

Ф. де Соссюрăн чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне хывнă ăнлавĕсем çаксем:

1. Соссюр чĕлхере çак ăнлавсем кирлине ĕнентерет: чĕлхе (langue), калаçу, пуплев (parole), калаçу витĕмлĕхĕ (langage). Калаçу витĕмлĕхĕ – халăхăн сăнарлă калама май паракан мелĕсем, ăна физикăпа, физиологипе, психологипе çыхăнтармалла. Соссюр чĕлхере икĕ хире-хирĕçле пулăм пуррине палăртать: чĕлхе тата калаçу (пуплев). Чĕлхе вăл – словарь тата грамматика системи, вĕсемсĕр пуплев йĕркеленмест. Халăх ăнланăвĕнче чĕлхе лексикăпа грамматика системи пек сăнарланать. Чĕлхе çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнмалли мел пулнă май чĕлхе уйрăм çынна пăхăнмасть. Пачах урăхла, чĕлхе вăрттăнлăхĕсене пĕлес тесен чылай вĕренмелле. Çавна май чĕлхе вĕренесси психологипе çыхăннă. Пуплевре çын чĕлхе мелĕсемпе усă курса хăй шухăшне палăртать. Чĕлхе тата калаçу (пуплев) пĕр-пĕринпе çыхăннă, истори тĕлĕшĕнчен калаçу чĕлхерен маларахри пусăмра тăрать. Чĕлхе – социаллă пулăм, калаçу (пуплев) – харкам тăрăм, вăл кашнинчех пĕр

хут пулса иртет те çухалать; чĕлхе вара вăраха пыракан пулăм.

Паллах, чĕлхе тата пуплев пĕр япала мар, вĕсем хушшинче уйрăмлăх пур, анчах вĕсем пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăннă. Ф. де Соссюр чĕлхене абстракци, ăскăмăл вылянăвĕ тесе пăхни те тĕрĕс мар.

2. Ф. де Соссюр чĕлхе пĕлĕвне наука (ăслăх) шайне çĕкленĕ. Унччен ăсчахсем чĕлхене логика, психологи, физиологи е социологи шайĕнче пăхнă. Вĕсене хирĕçлесе Соссюр çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăвать: лингвистикăн пĕртен-пĕр тата чăн объекчĕ – чĕлхе, ăна хăйĕн шайĕнче кăна пăхмалла тата хăй виçипе кăна виçмелле. Çак пĕтĕмлетĕвĕн пĕрремĕш пайĕ виçеллĕ, вырăнлă, иккĕмĕш пайĕ чылайăшне шухăшлаттарать тата хирĕçлеттерет. Чĕлхе – хутшăну хатĕрĕ, ăна пула эпир хамăр шухăша палăртатпăр, этемлĕхе тытса пыратпăр. Чĕлхене хăй виçипе кăна виçни, вăл хутшăну хатĕрĕ пулнине хирĕçлени тĕрĕс мар шухăш.

3. Ф. де Соссюр татăклăнах шалаш, тулаш, синхрони тата диахрони лингвистики пуррине палăртать. Çапла майпа лингвистика системине антиноми меслечĕпе анализ тăвать.

Калаçу (пуплев) лингвистикине Соссюр тĕп (кирлĕ) ăслăх вырăнне йышăнмасть, мĕншĕн тесен вăл харкам çыннăн калаçăвне психофизика енчен тĕпчет. Тулашри е историлле чĕлхе пулăмĕсене вăл кирлисен шутне кĕртет.

Тулашри лингвистика чĕлхене этноспа, политика тата культура историйĕпе, чĕлхесене географи тĕлĕшĕнчен сапаланипе тата диалектсене уйăрнипе çыхăнтарса тĕпчет.

Диахрони лингвистики вăхăта кура пĕр-пĕринпе ылмашса пыракан элементсене шута илет. Соссюр шухăшĕпе диахрони лингвистикин тĕпчев объекчĕсем çаксем: фонетика хăй пĕтĕм калăпăшĕпе, фонетика улшăнăвĕсем, морфонологи паллисем (фонетикăри улшăнусене пула грамматика формисем улшăнни).

Чĕлхере пулса иртекен эволюцилле пулăмсене диахрони лингвистики икĕ майпа тĕпчет: перспективлă майпа, ун пек чухне чĕлхере пулса иртекен улшăнусене

авалләхран хальхи тапхӑра ҫити пӑхса тухаҫҫӗ, ретроспективлӑ мелпе, ку вӑл хальхи чӗлхере пур фактсем ҫине таянса чӗлхери формӑсене реконструкцилени. Ф. де Соссюр чӗлхере икӗ аспект пуррине палӑртать: синхрони тата диахрони. Синхрони вӑл чӗлхен хальхи е пӗр-пӗр тапхӑрти тӑрӑмӗ, статики. Диахрони тени вара чӗлхе факчӗсем вӑхӑт е истори тӗлӗшӗнчен улшӑнса пыни, динамики. Синхрони вӑл чӗлхе аталанӑвӗнчи пӗр-пӗр тапхӑр, ҫынсем пӗр-пӗринпе хутшӑннӑ май пӗр-пӗрне ӑнланаҫҫӗ, ҫавна май Соссюр ӑна чӗлхе аталанӑвӗ тамалнӑ тапхӑр тесе пӑхать. Чӗлхене ҫав тӑрӑмра тӗпченине те синхронири тӗпчев тесе пӑхаҫҫӗ. Синхрони лингвистики тени статика лингвистики е ӳкерчӗклекен лингвистика тенипе пӗр пӗлтерӗшлӗ пулса тухать.

Ф. де Соссюр вӗрентӗвӗнче синхрони тата диахрони кӑна мар, антиномипе дихотоми те пур. Ку терминсен пӗлтерӗшӗсенче пытарӑнчӑк ӑнлавсем упранаҫҫӗ: статика (аталанусӑр тапхӑр) тата динамика (аталану тапхӑрӗ), чӗлхе тата пуплев, система тата антисистема, грамматика тата фонетика т.ыт.те.

Тӗпчевҫӗ шухӑшӗсене хирӗҫлесе Р.О.Якобсон «Прага лингвистика кружокӗн тезисӗсенче» ҫапларах ҫырать: «..синхроние статикӑпа танлаштарни тӗрӗс мар, чӗлхе пӗр вӗҫӗмсӗрех аталанура, синхронире ун аталанӑвӗ куҫа курӑнмасть кӑна. Ф. де Соссюр шухӑшӗпе синхроние диахронипе пачах та пӑтраштарма кирлӗ мар, вӗсем пачах та уйрӑм япаласем, тата ҫитменнин, синхрони аспекчӗ диахрони аспектӗнчен кирлӗрех шутланать, мӗншӗн тесен калаҫу хальхи чӗлхе факчӗсемпе ҫыхӑннӑ, праформӑсемпе мар».

Синхронипе диахроние татӑклӑнах уйӑрнине хирӗҫлекенсем чылай, вӗсен шутӗнче Прага лингвистика шкулӗн представителӗсем В.Матезиус, Р.О.Якобсон тата ытти паллӑ тӗпчевҫӗсем: А.Сеше, Э.Бейсенс, Э.Косериу, Н.С.Трубецкой, И.А.Бодуэн де Куртенэ.

4. Ф. де Соссюр чӗлхен системӑлӑхне палӑртнӑ. Чӗлхе паллисен (знаксен) системи пулнине ӗнентерекен теорие аталантарнӑ, ҫав система икӗ енлӗ уйрӑмлӑхра

палăрнине синтагматика тата парадигматика терминсемпе кăтартать.

Ф. де Соссюр чĕлхене ирĕклĕ паллăсен системипе, çырупа, азбукăпа, йăла-йĕрке символĕсемпе, çар сигналĕсемпе танлаштарать. Ун шухăшĕпе, общество пурнăçĕнчи паллăсене тĕпчекен уйрăм ăслăх – семасиологи е семиотика пулмалла. Лингвистика хăйне евĕрлĕ паллăсен науки, семиотикăн пĕр пайĕ шутланмалла, чĕлхе – семиотикăн чи кăткăс тата анлă сарăлнă системи.

Ф. де Соссюр вĕрентĕвĕн паллă положенийĕсене малалла аталантаракансем – структуралистсем: Прага лингвистика шкулĕ, глоссематиксен ушкăнĕ (Дани структурализмĕ).

Хăйĕн чи курăмлă ĕçĕсенче вăл ăслăхра пĕрремĕш хут чĕлхе пулăмĕсен хушшинчи çыхăнусене палăртнă, вĕсене ушкăнлама тата ушкăнсенчи уйрăмлăхсене тупма, вĕсенчи элементсене пĕр система евĕр кăтартма, чĕлхе – пĕр пĕтĕмĕшле организм пулнине уçса пама тăрăшаканĕ пулнă. Унăн “Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн лингвистика курсĕ” ĕçĕнчи (1916) шухăшсем чĕлхе пĕлĕвĕнчи структурализм аталанăвне питĕ вăйлă витĕм кӳнĕ. Э.Бенвенист шучĕпе, паянхи чĕлхе теорийĕсенчен кашнинче тенĕ пекех Соссюр ятне асăнни тĕл пулать, паянхи чĕлхеçĕсем хушшинче те Соссюра ырăпа асăнман çынна тупма çук. Чĕлхе пĕлĕвĕ халĕ хăйне уйрăм ăслăх, унăн хăйĕн уйрăм объекчĕ пур – чĕлхе. Иккĕмĕш пайĕ пирки вара тĕрлĕрен калакансем пур, кунта чĕлхе социаллă пулăм иккенне курманнине асăрхама пулать, çапла майпа чĕлхе пĕлĕвне абстрактлă объекта тĕпченĕ пек тĕпчеме хистени палăрать.

Соссюр каласа хăварнă шухăшсенчен чи курăмли – чĕлхе система пулнине палăртни. Ун шучĕпе чĕлхе – хăйĕн шалти йĕркине пăхăнса тăракан тема тата унăн элеменчĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнура тăни, вĕсен уйрăмлăхĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнма пултарнинчен килеççĕ.

Чĕлхере икĕ тĕрлĕ хутшăну пур. Соссюр шутланă тăрăх, калаçакан çынсен ушкăнĕшĕн синхрони аспекчĕн пĕлтерĕшĕ диахрони аспекчĕ пĕлтерĕшĕнчен пысăкрах,

мĕншĕн тесен çынсем чĕлхен хальхи шайне вĕренсе çав шайпа калаçаççĕ.

Соссюр теорийĕн тĕп шухăшĕ вăл – чĕлхепе пуплеве пĕр-пĕринчен уйăрни. Соссюр каланă тăрăх, чĕлхепе пуплев пĕр-пĕринпе çирĕп çыхăнура тăраççĕ тата пĕрне-пĕри витĕм кӳреççĕ. Чĕлхе пуплеве ăнланмалла тума кирлĕ, пуплев вара чĕлхене çирĕпленме пулăшать. Чĕлхен функцийĕ тата аталанăвĕ пуплевре палăрать, урăхла каласан, чĕрĕ пуплев вăл – чĕлхе пурăннин тата аталаннин форми. Анчах та вĕсен хушшинче çыхăну пуррине йышăнса Соссюр çапла калать: “Чĕлхе тата пуплев – тĕрлĕ япаласем”. Вăл чĕлхепе пуплеве хире-хирĕçле пулăмсем пек пăхать, икĕ ăслăх – чĕлхе тата пуплев лингвистики пулмалла тесе çирĕплетет. Соссюр çак уйрăмлăхсене чи малтан усăмлă ăнлантарса парать, анчах та вĕсене тĕрлĕ наукăсен тĕпчев объекчĕсем тесе çирĕплетет.

Пуплеврен уйăрни чĕлхене хăйне уйрăммăн тĕпчеме май парать – çакăн пек Соссюрăн тишкерӳ курăмăшĕнчи тезисĕ.

Соссюр теорийĕн философи никĕсĕнче çирĕп йĕрке çукрах (унта эклектизм палăрать); çавăнпа та унта пур чухне те усăмлăх палăрмасть. Çапах та унăн шухăшĕсене XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче социологи, психологи тата политикăлла экономи аталанăвĕн çул-йĕрĕсем витĕм кӳнине асăрхама пулать.

Соссюр чăнах та хăй вăхăчĕшĕн паллă çын пулнă. Философи юхăмĕсенчен уншăн позитивизм çывăхрах пулнă. Вăл çав çулсенче сарăлнă шухăшсенчен чылайăшне йышăннă, вĕсене хăйне евĕрлĕ “шăратса” кăларнă, çакă ăна Кантпа тата Коперникпа танлаштарма май панă. Соссюр пурăннă чухнех паллă индоевропеист пулнă. “Курс общей лингвистики” ĕçĕ пичетленсе тухсан вара ăна малтан французсен чĕлхе пĕлĕвĕнчи “социологи шкулĕн” ертӳçи теççĕ, кайран ăна структурализма (вăл ăслăх юхăмĕ пек çирĕпленичченех) никĕслекенĕ пек хаклаççĕ.

Соссюр Францири ăслăх традицийĕсем çине таянса ĕçленĕ, Францире вара чĕлхе пĕлĕвĕ яланах философипе тачă çыхăнура аталаннă, проблемăсене тишкерме, уйрăм

ыйтусене тараннан тишкерме ыйтнипе паларнă. Вăл ăслăхри анлă пĕтĕмлетӳсем енне туртăннă, мĕншĕн тесен çак тĕпчевсем пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн тĕп ыйтăвĕсене çавăрса илнĕ: мĕн вăл чĕлхе, чĕлхери индивидуаллăх тата социаллăх шайлашăвĕн проблеми, чĕлхе тата общество, чĕлхе тата шухăш, чĕлхери материпе формăн проблемисем, чĕлхе пулса кайни тата аталанни, чĕлхери улшăнусен сăлтавĕсем, чĕлхе ăслăхĕн задачисем тата унăн ытти гуманитари ăслăхĕсен хушшинчи вырăнĕ.

1906-1909 çулсенче Соссюр индоевропа поэтикине нумай тĕпченĕ. Унăн пĕрремĕш тĕпчев ĕçĕ Авалхи Рим поэзийĕн тĕслĕхĕ – Сатурн сăввисем çинчен – пулнă. Соссюр çак сăвă тытăмне тишкернĕ май вунă çул маларах тĕпчекенсем шута илмен уйрăмлăхсене тупма пултарнă. Вĕсене вăл авалхи Ирланди поэзийĕнче сасă повторĕсемпе танлаштарнă. Сатурнăн "Taurasia Cisauna Samnio cepit" сăввине Соссюр анаграмма пек пăхнă, çак сăвва кĕрекен тĕрлĕ сăмахсене уйрăм сыпăк е фонема пек кăтартнă. Соссюр Рим литературине малалла тĕпченĕ май çакнашкал мел каярахри авторсен – поэтсен (Вернемийе Лукреций) çеç мар, прозаиксен те латынла çырнă ăслăх литературинче пуррине палăртнă.

Хайлавсенчи паттăрсен е турăсен ячĕсене çакнашкал мелпех (сăмаха шарадăра тупса палăртнă пекех) çырнă текен гипотеза палăртать Соссюр. Анаграмма принципне вăл авалхи индоевропа чĕлхисемпе çырнă малтанхи поэзи тексчĕсемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлама пуçлать.

Германире каярах аталаннă аллитераци сăвви йышши формăсене те вăл çак пулăмранах аталанса кайнă тесе шутланă.

Латинла тата авалхи инди чĕлхисемпе çырнă кĕске текстсенчен нумайăшне тата латыньпа грек чĕлхиллĕ хайлавсен пысăках мар пайĕсене унăн теорине тĕпе хурса чиперех ăнлантарма май пулнă. Çак теорие унăн вĕрентекенĕ Мейе те йышăннă. Унпа Соссюр çыру çӳретнĕ, çав çырусенчен Соссюр çак теорие ĕненсех çитерейменни паллă.

Пуринчеӊ ытла ӑна латынь хайлавӗсенче вӑл шыраса тупнӑ принципа хӑй вӑхӑтӗнче (латынь литературине тӗпченин историйӗ пысӑк пулин те) авалхи авторсенчен никама та асӑнманни иккӗлентернӗ.

Нумай вӑхӑт та иртмест, Соссюр анаграммӑсене тишкерме пӑрахать. Унӑн ҫав вӑхӑтра ҫырнӑ хучӗсене пӑхсан, вӑл пӗтӗмӗшле лингвистикӑпа кӑсӑкланма пуҫлани курӑнать, тӗслӗхрен, вӑл паллӑ ("знак") икӗ енлӗ пулни уйрӑмах поэзи тексчӗсенче лайӑх палӑрни пирки асӑӊни пур. Пӗтӗмӗшле лингвистика курсне ҫырнӑ вӑхӑтра Соссюр анаграммӑсем патне урӑх таврӑнмасть. Анаграммӑсем туса ҫырнӑ тата поэтика тексчӗсене тарӑн тишкернӗ ӗҫсене кӗртнӗ 99 тетрадь 1964 ҫулччен пичетленмен. 1964 ҫултан пуҫласа 1971 ҫулччен вӗсен пӗр пайне пичетлесе кӑларӑҫҫӗ. Анчах та Соссюрӑн ҫак ӗҫӗн чылай пайне паянхи кунччен те тӗпчесе пӗтермен, вӗсем вара Соссюрӑн пичетлесе кӑларман тӗп ӗҫӗсем.

Компаративистикӑра поэтикӑн юлашки ҫулсенчи ҫитӗнӗвӗсем палӑрсан тин, тӗнчери ӑсчахсем Соссюрӑн ҫав пичетленнӗ тетрачӗсенчи шухӑшсене тивӗҫлӗ хак пама пултарнӑ. Вӑл хӑй вӑхӑтӗнчех паянхи пӗтӗмӗшле тата танлаштаруллӑ поэтикӑра шыраса тупнӑ шухӑшсене калanӑ пулнӑ. Халӗ ку проблемӑра икӗ аспект уйӑраҫҫӗ. Пӗрремӗшӗнчен, эпир маларах асӑннӑ принцип индоевропа халӑхӗсен авалхи поэзийӗнче, авалхи Инди тексчӗсенче те, Ирланди тексчӗсенче те палӑрни. Ҫакӑ индоевропа культуринче авалхи паллӑ пулнине пӗлтерет.

**Ф. де Соссюрӑн "Пӗтӗмӗшле лингвистика курсӗ" ҫинчен.** Авторӗ Ф. де Соссюр шутланакан "Пӗтӗмӗшле лингвистика курсӗ" ятлӑ ӗҫе Ф. де Соссюр ҫырман. Ку кӗнеке – лекци конспекчӗсене пуҫтарса, кирлӗ ҫӗрте ҫӗнӗрен (паллах, Соссюр шухӑшӗсене шута илсе) ҫырса хатӗрленӗ тӗпчев. Ӑна йӗркене кӗртекенсем хӑйсем Соссюр лекцийӗсене 1906-1911 ҫулсенче итленӗ те ҫырса пынӑ. Кӗнекене Ш.Баллипе А.Сеше ҫакӑн пек пайсенчен йӗркеленӗ:

1. Кӳртӗм (унта лингвистика историйӗ, ун материалӗпе задачисем, объекчӗ, чӗлхе лингвистикипе

пуплев лингвистики пирки, чĕлхе элеменчĕсем, çырулăх çинчен).

2. Пĕрремĕш пай – «Пĕтĕмĕшле принципсем», кунта çакăн пек проблемăсене хускатнă: чĕлхе – паллăсен (знаксен) системи; паллăсем улшăнма пултарни; чĕлхене улшăнакан объект пек те, улшăнман объект пек тĕпченин уйрăмлăхĕсем.

3. Иккĕмĕш пай – “Синхрони лингвистики” (мĕн вăл чĕлхе, унăн çын пурнăçĕнчи вырăнĕ, чĕлхе - çыхăнусен системи, синтагматика тата ассоциаци çыхăнăвĕсем, чĕлхе механизмĕ, грамматикăпа унăн пайĕсем).

4. Виççĕмĕш пай – “Диахрони лингвистики” (кунта фонетикăри улшăнусем, сасă тытăмĕ аталанни грамматика шайне витĕм кӳни, аналогисемпе эволюци, халăх этимологийĕ, агглютинаци).

5. Тăваттăмĕш пай – “Географи лингвистики” (чĕлхесем тĕрлĕрен пулни, чĕлхесенчи уйрăмлăхсем географипе те çыхăнни, çакăн сăлтавĕсем диалектсемпе “чĕлхе хумĕсем” сарăлнипе пулса пыни).

6. Пĕтĕмлетӳ пайĕнче ретроспекци лингвистикипе çыхăннă шухăшсене пуçтарнă. Унта реконструкци тата кăк чĕлхе çинчен, чĕлхесен çемйисемпе чĕлхесен типологийĕ пирки каланă.

Ф. де Соссюр шухăшĕсене пухса кăларсанах ку кĕнеке пирки тиркесе çырнисем самаях пулнă. 1920-мĕш çулсен вĕçĕнчен вара тĕнчери чĕлхеçĕсем çак ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнланма пуçланă. Кайран, 60-70-мĕш çулсенче, малтан хатĕрлесе кăларнă (ку кĕнеке темиçе хут та пичетленсе тухма ĕлкĕрнĕ пулнă) пайсемпе танлаштарса Соссюра итленĕ ытти студентсен конспекчĕсемпе усă курса тунă тĕрлĕрен шухăшсем те кун çути курнă.

Çапла майпа Фердинад де Соссюр хăйĕн чи пĕлтерĕшлĕ ĕçне хăй çырман, пичетлесе кăларман. Анчах та унăн шухăшĕсем тĕнче умне тухса XX ĕмĕрте чĕлхе пĕлĕвне никĕсленĕ, лингвистикăн малаллахи аталанăвĕн çул-йĕрне палăртма пултарнă. “Пĕтĕмĕшле лингвистика курсĕ” те хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Ăна тĕнчери тĕрлĕ чĕлхесене куçарса çĕнĕрен

те ҫěнěрен пичетлесех тăраççě. Çапла майпа хаклаççě Соссюрăн ěçне-хěлне ун халалне пурнăçлакансем, унăн вěренекенěсем, пěтěм тěнчери чěлхе тěпчевçисем.

## Усă курмалли литература

### Тěп литература


1. Березин Ф.М., Головин Б.Н. Общее языкознание. – М., 1979. – С.309-311.

2. Философские основы зарубежных направлений в языкознании. – М., 1977. – С.64-125.


### Хушма литература


1. Соссюр Ф. де. Труды по языкознанию. – М.: Прогресс, 1977.

2. Будагов Р.А. Ф. де Соссюр и языкознание нашего времени // Язык, история и современность. – М., 1971.

3. Кацнельсон С.Д. Лингвистическая концепция Ф. де Соссюра // Вопр. общ. языкозн. – Л., 1967.

4. Косериу Э. Синхрония, диахрония и история // Новое в лингвистике. – Вып. III. – М., 1963.

5. О соотношении синхронного анализа и исторического изучения языков. – М., 1960.

6. Слюсарева Н.А. Теория Ф. де Соссюра в свете современной лингвистики. – М., 1975.

7. Шухардт Г. О книге Ф.де Соссюра "Курс общей лингвистики" // Избр. статьи по общ. языкозн. – М., 1950.


## Ыйтусемпе хушусем

1. Мěн вăл младограмматизм?
2. Хусанти лингвистика шкулне йěркелекенсем камсем? Вěсен тěп ěçěсене асăнăр.
3. Чěлхен тăрăмěпе (статикипе) куçăмě, аталанăвě (динамики) пирки пуçласа кам çырнă?
4. *Морфема* тата *фонема* терминсене чěлхе наукине кам пуçласа кěртнě?
5. «Чěлхе науки çинчен çырнă очерк» доктор диссертацийěн авторě кам?
6. Фонетикăна эксперимент мелěпе тěпчессине кам никěсленě?
7. Мускав лингвистика шкулне йěркелекенсене асăнăр.
8. Ф.Ф.Фортунатов тěп ěçěсене каласа тухăр.

9. 1925-1927ç.ç. пичетленнĕ «Вырăс чĕлхин синтаксисĕ» ĕçе кам çырнă?

10. «Вырăс синтаксисне ăслăх тĕлĕшĕнчен çухатни» ĕçе кам çырнă?

11. Ф. де Соссюрăн чĕлхе наукинчи постулачĕсене (тĕп положенийĕсене, аксиомисене) каласа тухăр.

12. Ф. де Соссюрăн тĕп ĕçĕ мĕнле ятпа, миçемĕш çулта пичетленсе тухнă?

# 4 сыпăк. ПРАГĂРИ ЛИНГВИСТИКА (ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔН) ШКУЛĔ

## 1§. Структура лингвистики (структурализм)

Чĕлхе пĕлĕвĕнчи тепĕр юхăм вăл – структура лингвистики. Ку юхăма чĕлхе пĕлĕвĕн çакăн пек шкулĕсем кĕреççĕ: Прага шкулĕ (функционаллă лингвистика); Копенгаген шкулĕ (глоссемантика) тата Йель е Америка шкулĕ (дескриптивлă лингвистика). Унăн ячĕ те чĕлхе структурине тимлĕ тĕпчеме чĕнни-пе çыхăннă, унăн тĕпчев объекчĕсем çаксем: чĕлхе системи, чĕлхери хирĕçтăрусем (оппозицисем), чĕлхери шайсем (уровеньсем). Чĕлхе материалне мĕнле тишкернине кура морфологире тата фонологире дистрибутивлă анализ тени паллă. Структура лингвистикин теори никĕсĕсем çинче генеративлă лингвистика тени аталанса кайнă.

Структура лингвистики XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче тĕвĕленнĕ, унчченх чĕлхе пĕлĕвĕнче младограмматиксен вĕрентĕвĕ хуçаланнă пулнă.

Прагăри лингвистика шкулĕ структура лингвистикин тĕп юхăмĕсенчен пĕри. 1926 çулта Прагăра лингвистика кружокĕ йĕркеленнĕ, творчество тĕлĕшĕнчен унăн чи вăйлă аталаннă тапхăрĕ XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсем шутланаççĕ, кружок 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнче арканнă. В.Матезиус (кружока йĕркелекенĕ тата ертсе пыраканĕ), Б.Трнка, Б.Гавранек, Й.Вахек, Я.Мукаржовский, В.Скаличка, Й.М.Коржинек, П.Трост т.ыт. чех тĕпчевçисемсĕр пуçне ку кружока Мускав университетĕнчен вĕренсе тухнă Н.С.Трубецкой, Р.О.Якобсон, С.О.Карцевский кĕнĕ. Творчество тĕлĕшĕпе Прага шкулĕпе П.Г.Богатырев, Г.О.Винокур, Е.Д.Поливанов, Б.В.Томашевский, Ю.Н.Тынянов тачă çыхăну тытнă. Ку шкулăн хăйĕн ятарлă ăслăх "Ĕçĕсем" (Travaux du Cercle linquistigue de Prague" (1929-1930 ç.ç.) тата "Slovo a slovesnost" журнал пулнă.

Прагăри лингвистика шкулĕ идея тĕлĕшĕнчен Ф. де Соссюр теорийĕ çинче никĕсленнĕ. Ку шкул

вĕрентĕвне Ф.Ф.Фортунатов (Мускав шкулĕ), Л.В.Щерба (Петербург е Ленинград шкулĕ), И.А.Бодуэн де Куртенэ (Хусан шкулĕ) витĕм кӳнĕ.

1939 çулта Х. Пос статйинче малтанхи хут "структурализм" термин тĕл пулать. Хăш чухне структурализм тени чĕлхе структурине тĕпченипе çыхăннине палăртаççĕ. Ку тĕрĕсех ĕнтĕ, анчах та çав вăхăтрах чĕлхе структурине çӳллĕ шая çĕкленипе пĕрлех экстралингвистика факторĕсем çинчен те манмалла мар, чĕлхе элеменчĕсен пĕлтерĕшĕсем калаçура та палăрма пултараççĕ.

Структуралистсем çак постулатсене "пуç таяççĕ":

1) чĕлхе вăл – семиотика (паллăсен) системи;

2) чĕлхен тĕп единицисем çаксем: фонемăсем, морфемăсем. Парадигматика тата синтагматика хутшăнăвĕсем чĕлхери структурăллă единицăсен тĕп формисем шутланаççĕ;

3) синхронири чĕлхе пулăмĕсене çырса кăтартасси тĕп вырăнта.

Структурализмăн хăйĕн историйĕ пур: малтанхи структурализм 30-40-мĕш çулсенче, кайранхи структурализм 60-70-мĕш çулсенче аталаннă. Совет чĕлхеçисем хăйсен структурализм шкулне йĕркелеймен, пирĕн çĕршывра структурализм кайранхи тапхăрта (60-70 çулсенче) аталанма пуçлать те математика лингвистики вăйăмне лексе путланать.

20-30-мĕш çулсенче Прага лингвистика кружокĕн тĕпчевçисем тĕпрен илсен фонологи ыйтăвĕсене тĕпченĕ. Кашни сасăн чĕлхере хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Тĕслĕхрен, чăваш чĕлхинче те, вырăс чĕлхинче те *п, т, к* сасăсен пулăвĕ пĕр пекех: *п* – тутапа калакан (губной), *т* – малчĕлхе (переднеязычный), *к* – хыçчĕлхе (заднеязычный). Артикуляци тĕлĕшĕнчен вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ, сăмах вĕçĕнче тăрса вĕсем уçăмлăн янăраса пĕлтерĕш паллисене кăтартаççĕ: *лап (лап! ӳкрĕ), лат (лат! турĕ), лак (лак! кайса ларчĕ).* Ку сасăсем сăмахсене пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен уйăрма пулăшаççĕ. Акă çак сăмахсем пĕр-пĕринчен уçă сасăсем тĕрлĕ пулнипе пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен уйрăлса тăраççĕ: *кат, кут, кӳт, кĕт, кăт; пар, пер, пĕр, пӳр, пир, пур.*

*Пӳрт-кӳрт-тӳрт* сӑмахсенче малта тӑракан хупӑ сасӑсем пӗр-пӗринчен артикуляци тӗлӗшӗнчен уйрӑлса тӑрса пӗлтерӗш расналӑхне палӑртаҫҫӗ.

Омоним сӑмахсем те чӗлхере сахал мар: *хутӑр–хутӑр, пура–пура, тир–тир, тӑрӑ–тӑрӑ* т.ыт. те.

Этем чӗлхи – сасӑллӑ чӗлхе. Ҫут ҫанталӑкри кирек епле сасӑ пекех, пуплеври сасӑ та питӗ кӑткӑс. Ҫав кӑткӑслӑха шута илсе фонетика сасӑсене виҫӗ енчен тӗпчет, фонетикӑшӑн сасӑ мӗнле пулни, мӗнле илтӗнни тата мӗнле тӗллевпе калани (мӗн тума кирли) тӗп вырӑнта тӑрать. Ҫавна кура тишкерӳллӗ фонетика ӑслӑхӗ сасӑсене виҫӗ енчен хаклать:

1) акустика тӗлӗшӗнчен (сасӑсен илтӗнӳ палӑрӑмӗсене кура);

2) артикуляци тӗлӗшӗнчен (сасӑсене мӗнле каланине кура);

3) лингвистика тӗлӗшӗнчен (сасӑсен кирлӗлӗхне, функцине кура).

Сасӑсене эпир сӑмахсене тата сӑмах формисене йӗркелеме усӑ куратпӑр. Вырӑс тата чӑваш чӗлхисенче *р* тата *л* сасӑсем пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑрса сӑмах пӗлтерӗшне улӑштарма пулӑшаҫҫӗ: *рак–лак*, корей чӗлхинче вӗсем пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑмаҫҫӗ, вӗсене пула сӑмах пӗлтерӗшне те, сӑмах формине те уйӑрма ҫук.

Пуплеври сасӑсене тӗпчекен чӗлхе пӗлӗвӗн пайне фонетика теҫҫӗ. Фонетика харкам тата пӗтӗмӗшле пулма пултарать. Сасӑсен сегмент тата суперсегмент пайрӑмӗсем пулаҫҫӗ. Фонологи текен пай, фонетикӑпа танлаштарсан, ҫӳллӗрех тӑракан чӗлхе ӑслӑхӗ, вӑл чӗлхери сасӑсене вӗсен функцийӗсене кура тӗпчет, чӗлхери сасӑсен виҫӗ функци пур: уйӑрав, чикӗлев, палӑртав функцийӗсем. Фонологири тӗп ӑнлав – фонема. Фонема – пӗлтерӗшпе ҫыхӑнас хевтеллӗ чи пӗчӗк пайрӑм, фонема – пуплев юхӑмӗн вакланман пайрӑмӗ; фонема – хирӗҫтӑрусен тытӑмӗнчи пӑхӑнман пайрӑм.

П.Я.Яковлев кун пирки ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тӑвать: “Фонема – чӗлхен сасӑ тытӑмӗнчи чи пӗчӗк, вакланман, пӑхӑнман пайрӑм, унӑн пӗлтерӗшпе ҫыхӑнас

хевти пур, чĕлхен пĕлтерĕшлĕ пайрăмĕсене калăплать тата вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пулăшать".

Фонологи системине пĕлмесĕр фонемăна ăнкарса илме йывăр. Кашни чĕлхен хăйĕн фонологи системи.

Чи малтанах фонетикăна фонологирен мĕнле уйăрса илмеллине Н.С.Трубецкой 1939 çулта "Grundzuqe der phonoloqie" (Praqa) ĕçре каланă. Ăна 1960 çулта вырăсла пичетлесе кăларнă.

Прагăри чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕн представителĕсем структурализм идейисене фонетика тĕпчевĕсемпе çирĕплетнĕ. Структуралистсем чĕлхе единицисем хушшинчи çыхăнăва тĕпе хураççĕ. Чĕлхе структури вăл – чĕлхен шалаш никĕсĕ, вăл тӳрех куçа курăнмасть, ăна тупса палăртма ăслăх меслечĕ, структура тишкерĕвĕ пулăшать.

Прагăри чĕлхе пĕлĕвĕн кружокĕ чĕлхене унăн структурипе функцине тĕпчес ĕçе грамматика (морфологи тата синтаксис) ыйтăвĕсене явăçтарнă. Анчах та вĕсен структура грамматики, фонологипе танлаштарсан, пур енчен те пиçсех çитеймен.

Фонологипе грамматика ыйтăвĕсемсĕр пуçне Прагăри чĕлхе пĕлĕвĕн кружокĕ литература чĕлхине тĕпчес ыйтусене, калаçу (е пуплев) культурин ыйтăвĕсене те çĕклет. Ку тĕлĕшпе В.Матезиус тата Б.Гавранек ĕçленĕ.


Усă курмалли литература

1. Булыгина Т.В. Пражская лингвистическая школа // Основные направления структурализма. – М., 1964.

2. Гухман М.М. Исторические и методологические основы структурализма // Основные направления структурализма. – М., 1964.

3. Кондрашов Н.А. Пражская лингвистическая школа // Рус. яз. в шк. – 1968. – №2.

4. Трубецкой Н.С. Основы фонологии. – М., 1960.

5. Пражский лингвистический кружок: Сб. ст. – М., 1967.

## 2§. Глоссематика (Дани структурализмĕ)

Глоссематика сăмах грек чĕлхинчен кĕнĕ: грекла qlossema камăнлăх падежĕнче qlossematos "сăмах" тенине пĕлтерет, танл. qlossa "чĕлхе".

Копенгаген лингвистика кружокĕ Прагăри чĕлхе кружокĕ хыççăн 1931 çулта йĕркеленнĕ. Ăна йĕркелекенсем Виго Брендаль (1887-1942) Х.Ульдалль (1907-1957) тата глоссематизмăн теоретикĕ Луи Ельмслев (1899-1965). Луи Ельмслевăн тĕп ĕçĕсем çаксем: "Пĕтĕмĕшле грамматикăн принципĕсем" (1928); "Падеж категорийĕ" (1 т. 1935; 2 т. 1937) тата глоссематика ыйтăвĕсене çутатса паракан çак статьясем: "Управлени ăнлав", "Лингвистикăри структура анализĕн меслечĕ", "Чĕлхе тата пуплев". "Чĕлхе пĕлĕвĕ" текен кĕнеке 1963 çулта тухнă.

Глоссематика никĕсне çутатакан "Чĕлхе теорийĕн кўртĕмĕ" 1943 çулта пичетленнĕ. Х.Ульдаллĕн "Глоссематика никĕсĕсем" текен ĕç Л.Ельмслев шухăшĕсене малалла аталантарать.

Глоссематика теорийĕ Ф. де Соссюрăн чĕлхе пĕлĕвĕн концепцийĕ çинче никĕсленет. Соссюрăн чĕлхе тата пуплев хирĕçтăрăвне Луи Ельмслев норма тата узус текен схемăпа ылмаштарать.

Норма тенине лингвистика словарĕсенче çапла ăнлантарнă: "Принятое речевое употребление языковых средств, совокупность правил (регламентаций), упорядочивающих употребление языковых средств в речи индивида" (Ахманова О.С. Словарь лингвистических терминов. М.: Сов. энцикл. 1969. С.270).

"Узус – принятое употребление языковой единицы: слова, фразеологизма и т.п." (Современный словарь иностранных слов. М.: Рус. яз. 1992. С.629).

Схема, норма, узус терминсем хушшинче норма тени вăл фикци (ултав, суя япала). Пуплев акчĕпе пĕрлешнĕ узус тата схема чăн пурнăçри фактсене çутатса параççĕ. Панхрони тĕлĕшĕнчен лингвистика чĕлхе системине кăна мар, çав вăхăтрах чĕлхе тулашĕнчи системăсене те пăхса тухать, вĕсен шутне

урамри сигнализаци, телефон номерӗсем, сехет чан ҫапни, Морзе азбуки т.ыт.те кӗрет.

"Чӗлхе-схема пӗтӗмӗшле илсен, – ҫирӗплетет Ельмслев, – вӑйӑ кӑна, урӑх нимӗн те мар". Чӗлхе наукин предмечӗ ҫапла майпа метаязык тени пулса тӑрать, лингвистика ҫавна май метасемиотикӑна куҫса каять.

Глоссематика тӗлӗшӗнчен чӗлхене ҫырса кӑтартнӑ чухне Ельмслев виҫӗ шай кӑларса тӑрататъ: хирӗҫлеменни, вӗҫне ҫитерни тата ансат ҫырса кӑтартни. Ҫак виҫӗ шай ыйтнине тивӗҫтерни пысӑк пахалӑхпа ҫырса кӑтартнипе тан.

Ельмслев шухӑшланӑ тӑрӑх, чӗлхе – этем пуплевӗ – тӗлӗнсе каймалла иксӗлми пурлӑх. Чӗлхене ҫынран уйӑрма ҫук, вӑл унран пӗр пусӑм та юлмасть. Чӗлхе шухӑшлава та, туйӑма та, кӑмӑл ҫирӗплӗхне те, ӗмӗте те, ӗҫ-хӗле те калӑплать, чӗлхене пула ҫын тепӗр ҫынна витӗм кӳрет, - ҫакӑ вӑл этемлӗх обществин пирвайхи тата чи кирлӗ никӗсӗ.

Текста анализласси глоссематиксен тӗп задачи пулнӑ. Текста анализлани системӑна тупса палӑртма пулӑшать тесе шутланӑ вӗсем. Анализ умӗн катализ пырать, ӑна пула фразӑсем (сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем) хӑйсен калӑпӑшне ҫаврӑнса лараҫҫӗ. Малашне сӑмах ҫаврӑнӑшӗ те, унӑн пӗлтерӗшӗ те чи пӗчӗк пӗлтерӗшлӗ пайсем – морфема шайне ҫитиех пайланать. Ельмслев хӑйӗн ӗҫӗсенче морфема (сӑмахри пӗлтерӗшлӗ чи пӗчӗк пай) шайӗнче чарӑнмасть. Пӗлтерӗшлӗ пай шайӗнче унӑн "пӗлтерӗше анлӑлатакан, нумайлатакан" шай мала тухса пырать. Тӗслӗхрен, *хӗрача, арҫын ача* тенӗ чухне "хӗрарӑм тата арҫын несӗллӗхӗ" (1 фигура) тухса тӑрать; *хӗрача – хӗрарӑм* тенӗ чухне "ҫамрӑк - ҫуланнӑ" текен пӗлтерӗш компоненчӗ мала тухса пырать (2 фигура); *хӗрача – тынашки* хирӗҫлевре "ҫын – чӗрчун" хирӗҫлетӳ куҫ умӗнче (3 фигура).

Глоссематика, паллах, структурализм шайӗнче пӑхмалли юхӑм, анчах та структурализмӑн пур юхӑмӗсемпе те килӗшсе тӑмасть вӑл. Сӑмахран, Андре Мартине французсен структуралисчӗ хӑйӗн "Фонетика улшӑнӑвӗсенчи экономи принципӗ ("Диахрони

фонологийён проблемисем" М., 1960) тата "Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсĕсем" (Новое в лингвистике. Вып.3. М., 1963) ĕçĕсенче глоссематиксен шухăшĕсене хирĕçлет. Ежи Курилович поляк Прага чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕпе глоссематика юхăмĕсене иккĕшне те йышăннă.

Усă курмалли литература

1. Ельмслев Л. Пролегомены к теории языка // Новое в лингвистике. – Вып.1. – М., 1960.

2. Ельмслев Л. Можно ли считать, что значение слов образуют структуру // Новое в лингвистике. – Вып.2. – М., 1962.

3. Мартине А. О книге "Основы лингвистической теории" Л.Ельмслева // Новое в лингвистике. – Вып.1. – М., 1960.

4. Спанг-Хансен Х. Глоссематика // Новое в лингвистике. – Вып.4. – М., 1965.

5. Ульдалль Х.И. Основы глоссематики // Новое в лингвистике. – Вып.1. – М., 1960.

## 3§. США-ри дескриптивлă чĕлхе пĕлĕвĕ

Дескриптивлă тенине çапла ăнланмалла. Акăлчанла *descriptive* тени "çырса кăтартакан", "ӳкерчĕклекен" тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕ. Апла пулсан ку термин "чĕлхери пулăмсене синхронире ӳкерчĕклекен меслетпе çырса кăтартни" пĕлтерĕшлĕ. Ку чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕ США-ра вăй илнĕ. Ӳкерчĕклекен (дескриптивлă) чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕ 1933-1957 çулсенче аталаннă. Дескриптивистсем Ф. де Соссюрăн лингвистика концепцине йышăнман, вĕсен тĕпчев никĕсĕ бихевиоризм меслечĕпе çыхăннă. Тĕпчев ĕçĕсене вĕсем Çурçĕр Америкăри индеецсен чĕлхин материалне тĕпе хурса пурнăçланă. Тĕпчевçĕсен ячĕсем те тĕнчипех паллă: Ф.Боас, Э.Сепир, Л.Блумфилд, З.Харрис т.ыт.те.

Дескриптивистсен юхăмне пуçарса яракансенчен пĕри вăл Франц Боас (1858-1942) чĕлхеçĕ тата антрополог. "Америкăри индеецсен чĕлхине вĕренмелли кăтартусем" ĕçĕн умсăмахĕнче индоевропа чĕлхисене тĕпчемелли меслетсем Америкăри индеецсен чĕлхине çырса кăтартма

виçеллĕ мар. Индеецсен чĕлхисенче кашнинче хăйне евĕрлĕ чĕлхе категорийĕсем. Çавна май вĕсене тĕпченĕ чух уйрăм меслетсемпе усă курмалла, тет вăл. Тĕслĕх вырăнне Боас чинчук чĕлхисенчен çак тĕслĕхе илсе кăтартать: ania lot "эпĕ çавна ăна патăм"; çак сăмахра пĕлтерĕшлĕ пайсем пур: a (вăхăт), n "эпĕ", i "çавна", a "ăна", l -?, o (уйрăлса кайни), t "пар". Çак элементсене уйрăм сăмахсем теме май çук, пĕр пĕтĕмĕшле кăна вăл чĕлхе единици пек курăнать. Чăнах та, инкорпорациллĕ чĕлхесенче сăмахсемпе предложенисене пĕр-пĕринчен уйăрса илме йывăр.

Ф.Боас шухăшĕсене малалла Эдуард Сепир (1884-1939) тата Леонид Блумфилд (1887-1949) кашни хăй майлă тăснă.

Э.Сепир этнолингвистикăн тата чĕлхесене типологи меслечĕпе тĕпчес ĕçĕн пуçламăшĕнче тăнă, ун шухăшĕсене малалла Б.Уорф тата Дж.Гринберг тăснă. Э.Сепирăн тĕп ĕçĕ "Чĕлхе" 1921 çулта тухнă (вырăсла ăна 1934 çулта пичетленĕ). Боас пекех Сепир Америкăра, Канадăра тата Мексикăра пурăнакан тĕп халăхсен чĕлхисене тĕпченĕ. Америкăри индеецсен чĕлхине тĕпченĕ май Сепир уйрăм чĕлхе ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕпе çыхăнтарнă, вăл чĕлхепе культура, чĕлхепе шухăшлав уйрăлми ăнлавсем пулнине ĕнентернĕ.

Л.Блумфилд дескриптивлă чĕлхе пĕлĕвĕн системине йĕркелекенĕ шутланать. "Чĕлхе вĕрентĕвĕн кӳртĕмĕнче" вăл В.Вундтăн "халăхсен психологийĕ" текен принципне тытса пырать. Анчах та 1926 çултан пуçласа вăл çынăн тыткаларăшĕсене тĕпчекен философилле бихевиоризм принципĕсене хисеплеме пуçлать, çак çĕнĕ системăна Блумфилд **механицизм е физикализм** ят панă, вăл унăн "Чĕлхе" текен кĕнекинче (1933) уçăмлă палăрать. Чĕлхе наукинче палăрнă психологизма хирĕçлесе вăл чĕлхене ăнлавран пачах уйăрать те сигналсен системи пек пăхать. Блумфилд шухăшĕпе чĕлхе вăл пĕрле калаçакан икĕ çыннăн нерв системисем хушшинчи кĕпер. Блумфилд чĕлхере фонемăсем, морфемăсем, сăмахсем, сăмах майлашăвĕсем пуррине палăртнипе пĕрлех тĕрлĕрен конструкцисем тата вĕсен

пайĕсем пуррине кăтартать. Компонентсем йĕркеленнĕ пайрăмсем (ЙП) (вырăсла: непосредственно составляющие, кĕскен: (НС) çине пайланаççĕ, пайĕсенче морфемăсем пулаççĕ. Йĕркеленнĕ пайрăмсене Блумфилд çак тĕслĕхпе çирĕплетет: *Poor John ran away* (Мĕскĕн Джон чупса тарса çухалчĕ е тарчĕ). Çак предложенире тӳремĕн йĕркеленнĕ 2 пай пур: 1) poor John; 2) ran away. Вĕсенчен кашниех каллех икке пайланать: poor тата John; ran тата away. Американ дескриптивистсен ĕçĕсенче çак синтаксис анализĕн меслечĕ тӳремĕн йĕркеленнĕ пайрăмсен анализĕ шутланать. Çакăн пек тĕслĕхсене анализланă май экзоцентр тата эндоцентр конструкцийĕсем пуррине палăртаççĕ. Сăмахран, маларах илсе кăтартнă тĕслĕхре John тенине John сăмаха хăварнипех ăнланма пулать, çапла майпа poor John – эндоцентр конструкцийĕ; John ran – экзоцентр конструкцийĕ. Çакăн пек анализлани Блумфилда дистрибутивлă чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне хывма пулăшнă. Ку юхăмăн представителĕсем Америка тĕпчевçисем: Б.Блок, Е.Найда, Дж.Трейджер, З.Харрис, Ч.Хоккет. Вĕсем индеецсен чĕлхисене тĕпченĕ май текст тĕпчевçĕшĕн пĕртен-пĕр тĕпчев çăлкуçĕ шутланать текен шухăш патне пырса тухнă. Текста анализласси унти пĕлтерĕшлĕ пайсене пайрăмласа уйăрассинчен пуçăнать. Пĕлтерĕшлĕ пайсене фонологи, морфологи тата синтаксис шайĕсенче тупса палăртма пулать. Дистрибутивлă мелпе тĕпчени хăш-пĕр тĕпчевçĕсене чĕлхе единицисен пĕлтерĕшĕсене палăртассинчен пистернĕ. Пĕлтерĕше палăртас енпе Блумфилдăн вĕренекенĕсем икĕ пая пайланса кайнă: пĕрисем менталистсем, теприсем – механицистсем. Менталистсем (Блумфилд хăй, К.Пайк, Ч.Фриз) чĕлхе единицисен пĕлтерĕшĕсене тĕпчессине хирĕçлемеççĕ, механицистсен шухăшĕпе (З.Харрис, Б.Блок, Дж.Трейджер) пĕлтерĕше пăхмасăрах чĕлхе единицисене туллин çырса кăтартма пулать имĕш. Текстра сегмент пайсене уйăрни фонемăсем тата морфемăсем пуррине палăртма çул уçса парать. Фонологи шайĕнче сасăсем тата фонсем, морфологи шайĕнче морфсем пуррине палăртнă. Чĕлхе единицисен варианчĕсене алломорфсем тата аллофонсем

теме йышăннă. Америка чĕлхеçисем дистрибуцин (валеçĕвĕн) виçĕ тĕрлĕ пайланăвне кăтартаççĕ: 1) енчен те чĕлхе единицисем пĕр-пĕринпе урăх ниçта та пĕр пек хупăрлава лекмеççĕ, ку вăл – хушма дистрибуци. Ку аллофонсен пĕрремĕш палли; 2) чĕлхе единицисем пĕр евĕрлĕ хупăрлава лексе пĕлтерĕш уйрăмлăхне кăтартма пулăшаççĕ, ку вăл – хире-хирĕçлĕх дистрибуцийĕ (валеçĕвĕ), ку фонемăсемпе морфемăсене пырса тивет; 3) чĕлхе единицисем пĕр пек хупăрлава лексе пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ.

Дескриптивистсем морфемăна грамматикăн тĕп единици вырăнне йышăннă: морфема ытти чĕлхе единицисене пулăнма пулăшать, вĕсен шутне сăмах, сăмах майлашăвĕ, пуплев (предложени), текст кĕрет.

Америка дескриптивисчĕсем чĕлхе единицисене анализлас меслете çĕнетнĕ: вĕсем морфемăсен тĕсĕсене палăртнă, суперсегмент, просоди элеменчĕсен (пусăм, интонаци, тон, пауза) пĕлтерĕшĕсене уямаллине асăрхаттарнă, фонологи тата морфологи тишкерĕвĕсен принципĕсене тупса палăртнă. Уйрăммăнах тӳрремĕн йĕркеленнĕ пайрăм (ЙП) анализне сĕнни пысăк пĕлтерĕшлĕ: чĕлхе системин единицисем пĕр-пĕринпе çирĕп çыхăнура тăраççĕ. Сăмахран, пĕр предложениех вырăсла тата чăвашла илсе пăхар.

1. Наш костер разгорелся очень быстро.

2. Пирĕн кăвайт питĕ хăвăрт чĕрĕлсе кайрĕ.

Тӳрремĕн йĕркеленнĕ пайрăм меслечĕпе предложенисене çакăн пек схемăласа кăтартма пулать.




Дескриптивистсен шухăшне чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче И.А.Андреев аталантарать. Хăйĕн “Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем” (2 пайĕ. Ш., 1975. 158 с.) кĕнекере вăл çакăн пек тĕслĕхсем илсе парать:







Çак шухăша малалла аталантарса И.А.Андреев профессор чăваш синтаксисĕнче çĕнĕ шухăш калать, çĕнĕлле схемăсем сĕнет:

1. Çывăхра пысăк снаряд ÿксе çурăлсан (1), этем анчах мар, таврари йывăççем те вăштăр! сулăнса илеççĕ (2), кайăк-кĕшĕксем юрлама пăрахаççĕ (3) (С.Элкер).




2. Тупрам-пурлăхăм пулас пулсан (1), эпĕ ăна йăлтах сана парăттăм та (2) хам сан патăнта тарçăра ĕçлесе пурăнăттăм (3) (Х.Уяр).




XX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче йĕркеленнĕ пайрăм тишкерĕвне трансформаци меслечĕ ылмаштарать. Ку шухăша малтан З.Харрис каланă, пурнăça кĕртекенĕ Наум Хомский шутланать. Трансформаци меслечĕ йĕркеленнĕ пайрăм тишкерĕвне критикленĕ май çуралнă, мĕншĕн тесен иккĕмĕшĕ предложенисен тата сăмах майлашăвĕсен семантикăпа синтаксис омонимлăхне палăртас ĕçре пăтăрмахсем кăларса тăратать. Сăмахран, *приглашение писателя* сăмах майлашăвне икĕ тĕрлĕ ăнланма пулать: 1) писатель (хăй) чĕнет; 2) писателе (хăйне) чĕнеççĕ.

Америка чĕлхеçисем индеецсен чĕлхисене тĕпчесе тунă пĕтĕмлетÿсене тĕнчери чĕлхе пĕлÿçисем чылайăшĕ

йышăннă, хăйсен ĕçĕсенче дистрибуци тата йĕркеленнĕ пайрăм тишкерĕвне, синтаксис трансформацине усă курнă.

Усă курмалли литература

1. Блумфилд Л. Язык. – М., 1959.

2. Глисон Г. Введение в дескриптивную лингвистику. – М., 1963.

3. Апресян Ю.Д. Идеи и методы современной структурной лингвистики. – М., 1966.

Ыйтусемпе хушусем

1. Структура лингвистики (структурализм) аталанăвĕ мĕнле чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕпе çыхăннă?

2. Глоссемантизмăн (Дани структурализмĕн) теоретикĕ пирки мĕн пĕлетĕр? Ку чĕлхе юхăмĕн тĕп представителĕсене асăнăр.

3. СШАри дескриптивлă чĕлхе пĕлĕвĕ XX ĕмĕрĕн миçемĕш çулĕсенче аталаннă? Çурçĕр Америкăри индеецсен чĕлхисене камсем тĕпченĕ?

## 5 сыпăк. ЧĔЛХЕН ЭСТЕТИКА КОНЦЕПЦИЙĔ (К.ФОССЛЕР)

Лингвистика эстетизмĕ XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX ĕмĕр пуçламăшĕнче палăрнă, унăн тĕллевĕ – чĕлхе пулăмĕсене эстетика (туйăмпа ăнланасси) тĕлĕшĕнчен ĕнентересси. Чĕлхене эстетика тĕлĕшĕнчен ăнлантарасси малтан Бенедетто Кроче (1866-1952) Итали философ-интуистивисчĕн ĕçĕсенче палăрнă. Б.Кроче ĕçĕсенчи шухăшсене малалла аталантараканĕ нимĕç филологĕ Карл Фосслер (1872-1949) шутланать. К.Фосслерăн концепцийĕ унăн çакăн пек ĕçĕсенче палăрнă: "Чĕлхе пĕлĕвĕн ăслăхĕнчи позитивизм тата идеализм" (1904); "Чĕлхе пултарулăх та, аталану та" (1906). Ку ĕçсенче К.Фосслер чĕлхен обществăлла функцине хирĕçлет, чĕлхене харкам пултарулăх акчĕ пек кăна пăхать. Енчен те чĕлхе харкам пултарулăх акчĕ кăна пулсан, мĕнле майпа-ха вăл çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр пулса тăрать? К.Фосслер ку ыйтăва çапла хуравлать: "Çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнни пачах та чĕлхен тытăмĕнчен, материалĕнчен килмест". Чĕлхен пĕтĕмлĕхĕ, диалектсем т.ыт.те пачах та пурнăçра çук иккен.

Çапла майпа чĕлхене уйрăм харкам çынсем пултараççĕ, тет К.Фосслер. Коллектив уйрăм тăракан пултарулăхлă çынсенчен тăрать. Чĕлхере, фольклорти пекех, çĕнĕлĕхсене уйрăм çынсем пултараççĕ, анчах чĕлхере халăх йышăннă пахалăхсем кăна юлаççĕ.

Чĕлхе пулăмĕнче К.Фосслер икĕ хире-хирĕçле вăй курать: 1) пултарулăхлă харкам çын; 2) çĕнĕлĕхсене йышăнакан е сивлекен пассивлă халăх, йышăнни чĕлхере юлать, халăх хушшинче сарăлать.

К.Фосслер чĕлхен экспрессивлă эстетика функцине кăна палăртать. Чĕлхе пĕлĕвне вăл хирĕçлет, унăн шухăшĕпе уйрăм çыравçăн стилĕ малти вырăнта тăрать, çавна май илемлĕ литература чĕлхе аталанăвне вăй кӳни çинчен çырать, литература чĕлхи аталанăвĕн пуçне çыравçа лартать. Ун шухăшĕпе чĕлхе пĕлĕвĕ вăл – стилистика. Стилистика эстетикăпа уйрăлми çыхăннă.

“Мĕн вăл стиль? – текен ыйтăва Фосслер çапла хуравлать. – “Стиль вăл – харкам çын усă курнă чĕлхе материалĕ”. Фосслер малти вырăна стилистикăна кăларать, синтаксис иккĕмĕш вырăна юлать. Чĕлхере кашни çавăрса каланă сăмах, сăмах майлашăвĕ е пуплев синтаксис енчен пурте йышăннă чĕлхе хатĕрĕ пулса тăриччен малтан харкам çын пултарнă стилистика мехелĕ. Пĕтĕм халăх усă куракан япала пулса тăрсан та чĕлхе хатĕрĕ яланах харкам ăстайлă. Кирлĕ вăхăтра чи анлă сарăлнă сăмаха, сăмах майлашăвне, пуплеве харкам çын хăйне евĕрлĕ вирлĕн те çивĕччĕн каласа çавăрса хума пултарать.

Чĕлхе хутшăну хатĕрĕ пулнине хирĕçлесе Фосслер грамматика правилисене те йышăнмасть. “Чĕлхене грамматика правилисене пăхăнтарса тĕпчени ăслăх тулашĕнче тăрать. Апла пулсан, синтаксис вăл – ăслăх мар, çавнах морфологипе фонетика пирки те калама пулать”, тет вăл.

К.Фосслер чĕлхе нормине “пушă вырăн” тесе пăхать, грамматика ыйтăвĕсене пăхса тухнине ăслăх тулашĕнчи ĕç тесе хаклать. Анчах та хăйĕн тĕп тĕпчев ĕçĕсен вĕçĕсенче вăл хăйне хăй хирĕçлени сисĕнет: унта “харкам пултарулăхĕ” сăмах майлашăвĕпе юнашар “ушкăнлă (коллективлă) пултарулăх”, “ушкăнлă ĕçлеслĕх” терминсем тĕл пулаççĕ. “Чĕлхе пултарулăх та, аталану та” ĕçĕнче ирĕксĕрленсех хăйĕн малтанхи шухăшĕсенчен писет: “Чĕлхене пула уйрăм çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнăва кĕреççĕ, апла пулсан вăл харкамлăхне çухатать”. Çакă вăл чĕлхе харкам пултарулăхĕ кăна пулманнине пĕлтерет. Мĕнле пулсан та чĕлхен эстетика концепцине аталантаракансем чĕлхе наукишĕн ырă ĕç тунă: чĕлхе наукине стилистика ыйтăвĕсемпе çыхăнтарнă, уйрăм çыравçăн чĕлхине пĕтĕм халăх чĕлхипе танлаштарса тĕпчеме майсем уçса панă.


Усă курмалли литература

1. Ахунзянов Э.М. Общее языкознание. – Казань: Изд-во Казан. ун-та, 1981. – С.40-44.

2. Мурат В.П. Эстетический идеализм // Лингвистический энциклопедический словарь. – М.: Сов. энцикл. – 1990. – С.594-595.

3. Звегинцев В.А. Эстетический идеализм в языкознании. – М., 1956.

Ыйтусемпе хушусем

1. Чӗлхен эстетика концепцийӗ пирки мӗн пӗлетӗр? К.Фосслерӑн тӗп ӗҫӗсене асӑнӑр.

2. Стиль пирки К.Фосслер мӗн каланӑ?

3. К.Фосслер чӗлхе норми пирки каланӑ шухӑшӗпе килӗшме пулать-и?

# 6 сыпăк. ЭТНОЛИНГВИСТИКА. СОЦИОЛИНГВИСТИКА

Этнолингвистика (грек. Ethnos – халăх) XIX ĕмĕр вĕçĕнче уйрăм юхăм пек СШАра çуралса вăй илнĕ.

Этнолингвистика – чĕлхе факчĕсене халăхăн материаллă тата ăс-хакăл культурипе çыхăнтарса тĕпчекен чĕлхе наукин пĕр пайĕ. Ку юхăм СШАра çуралса вăй илесси Америкăри индеецсен чĕлхипе культурине тĕпчессинчен пуçланнă. Чĕлхе те, культура та, Америкăри тĕпчевçĕсем шухăшланă тăрăх, антропологин пайĕсем шутланаççĕ.

Этнографи лингвистикине никĕслес шухăшсем XVIII ĕмĕртех тĕвĕленнĕ, ку шухăша И.Г.Гердер, В.Гумбольдт çĕкленĕ.

Раççейре этнолингвистика ыйтăвĕсемпе Ф.И.Буслаев, А.Н.Афанасьев, А.А.Потебня кăсăкланнă.

Чи малтанах Америкăри тĕпчевçĕсем ытларах этнографи материалне пухса тĕпчес тĕллев лартнă. Чĕлхепе этнографи материалне çыхăнтарса çырса кăтартасси XX ĕмĕрĕн 1-мĕш чĕрĕкĕнче Ф.Боас ĕçĕсенче сисĕнет. "Этнолингвистика" термин вырăнне малтанхи вăхăтра "антрополингвистика", "этносемантика" терминсем çӳреççĕ. Тĕпчевçĕсем Америкăри индеецсен йăх çыхăнăвĕсене палăртас тĕллев лартнă. Индеецсен чĕлхисене классификацилес ĕçре ăслăх меслечĕсемпе усă курма пуçлаççĕ: танлаштаруллă истори меслечĕ (Э.Сепир, С.Лэм); глоттохронологи (М.Сводеш); типологи тата ареал меслечĕ (К.Хейл, Ч.Ф.Вегмен, Дж.Л.Трейджер). Семантика ыйтăвĕсем те кăсăклантарнă ăсчахсене. Ф.Боас грамматика категорийĕсен пĕлтерĕшĕсене тĕпченĕ (1915); Сепир нутка чĕлхинчи пăсăлнă нормăсене çырса кăтартать (1915), сасă символизмĕпе интересленет (1929).

## 1§. Эдуард Сепир

Эдуард Сепир – Америка чĕлхеçи тата этнологĕ, Америкăри искусство наукисен академийĕн членĕ. 1904 çулта Колумби университетĕнчен вĕренсе тухнă.

Чикаго (1927-1931) тата Йель (1931 çултан пуçласа) университечĕсен профессорĕ. США-ри Лингвистика (1933) тата Антропологи (1938) обществисен президенчĕ. Хăйĕн тĕп ĕçĕсенче пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ тата Америка индеецĕсен чĕлхисен ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ. Хăйĕн "Чĕлхе" ятлă кĕнекинче вăл лингвистика концепцине çырса кăтартнă. Ку концепци хальхи Америка структурализмне аталанма пысăк витĕм кӳнĕ. Çавăн пекех Сепир хăйне çеç тивĕçлĕ чĕлхесен типологи классификацине тунă. Чĕлхен социаллă содержанине ăнланни тата антропологипе лингвистикăра раса теорине хирĕçлени Сепиршăн характерлă. Унăн этемĕн тавралăха мĕнле ăнланнине кăтартакан системи йĕркеленме чĕлхе витĕм кӳни çинчен калакан гипотези этнолингвистикăн никĕсĕнче выртать.

Америка чĕлхе пĕлĕвне пуçарса яраканĕсем вĕсем – Эдуард Сепир тата Л.Блумфилд. Ытти чĕлхеçĕсем (кирек кама илсен те) вĕсен традицийĕсене малалла тăсаççĕ.

Сепир витĕмĕ чĕлхе ăслăх ыйтăвĕсене хускатнă ĕçсенче, тĕпчевсенче çеç мар, унсăр пуçне тата каярах кун çути курнă социолингвистика тата психолингвистика ыйтăвĕсемпе çырнă тĕпчевçĕсен ĕçĕсенче те палăрать. Структурăллă чĕлхе пĕлĕвĕн аталанăвне те Сепир, паллах, витĕм кӳнĕ.

Сепир чĕлхере физика моделĕсем тата идеаллă системăсем пуррине палăртать, çав хушăрах юлашки, унăн шучĕпе, пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чĕлхе моделĕн улшăнас хăвăртлăхĕ чылай пĕчĕкрех. Сасăсем унран хăвăртрах улшăнаççĕ. "Çапла вара, кашни чĕлхен... хăйĕн идеаллă сасă системи тата унăн тымарĕнче выртакан фонетика моделĕ пур (ăна символлă атомсен системи тесе калама юрать)". Сепир шутланă тăрăх, кашни чĕлхе уйрăм модельпе (кĕлеткепе) йĕркеленнĕ. Çавăнпа та кашни чĕлхе пирĕн таврари чăнлăха хăй пек уйăрать тата çав меле çак чĕлхепе калаçакан пĕтĕм халăха ирĕксĕрлесе йышăнтарать. Тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан çынсем тĕнчене те тĕрлĕрен кураççĕ. Çак шухăшсем этнолингвистика наукине аталантаракан "чĕлхе пĕлĕвĕн гипотезин" никĕсĕ пулса тăнă.

Сепир калăвăн никĕсне ăнлав тĕлĕшĕнчен уçса пама ăнтăлнă, пур чĕлхесемшĕн те универсаллă характерлă чĕлхе пĕлĕвĕн ăнлавĕсене тупса палăртасшăн пулнă. Ку тĕлĕшпе унăн чĕлхере тĕл пулакан ăнлавсен классификацийĕ интереслĕ. Вĕсене вăл 4 типа (пĕр тĕрлĕ япаласен, пулăмсен ушкăнне) пайлать:

1) тĕп (конкретлă) ăнлавсем. Вĕсем хăй тĕллĕн çӳрекен сăмахсенче палăраççĕ, нимĕнле улăштаракан аффикссене те йышăнмаççĕ *(сĕтел-, пĕчĕк-, çӳре-);*

2) деривациллĕ ăнлавсем: суффикссемпе флексисем *(писа-тел-и - çыр-ав-çă-сем);*

3) конкретлă, реляциллĕ ăнлавсем – уйрăм сăмахра анлăрах шухăшсене кăтартаççĕ (паллă ячĕсен тата глаголсен вырăс чĕлхинчи несĕлĕпе хисепĕ);

4) таса реляциллĕ ăнлавсем – синтаксис çыхăнăвне тăваççĕ (япала ячĕсен падеж категорийĕ). Пирвайхи тата юлашки ăнлавсем кашни чĕлхерех пур, мĕншĕн тесен лексикăсăр тата синтаксиссăр чĕлхе пулма пултараймасть.

Эдуард Сепир чĕлхе пĕлĕвĕн чылай ыйтăвĕсене тĕпчесе чĕлхепе культура çыхăнăвĕн тупсăмне уçса парас тесе тăрăшнă. Вăл çапла çырнă: “Чĕлхе социаллă чăнлăха йышăнтаракан хуçа пек çӳрет. Социаллă наукăсемпе ĕçлекен тĕпчевçĕсене чĕлхе ытларах чухне сахал интереслентерет пулин те вăл пире социаллă ыйтусемпе процессем çинчен шухăшлаттарать, кунта унăн витĕмĕ пысăк. Çынсем ытларах чухне шутланă пек хăйсен ирĕкĕнчен килмен тата общество ĕçлекен тĕнчере çеç пурăнаççĕ, вĕсене нумайрах витĕм кӳрекенни вăл – çак палăртнă обществăшăн пĕр-пĕринпе хутшăнмалли мел пулса тăракан конкретлă чĕлхе. Шухăшласа кăларман тĕнче ытларах чухне хăй тĕллĕнех паллă ушкăнăн чĕлхе никĕсĕ çинче йĕркеленнинине фактсем çирĕплетсе параççĕ”. Сепир чĕлхен рольне (вырăнне) пысăклатса кăтартать те объективлă чăнлăхпа этемĕн шухăшлав активлăхĕн рольне В.Гумбольдт пекех пĕчĕклетет. Çав вăхăтрах тата Сепир çакна та çирĕплетет: “Анчах та çавăн пек каланинчен чĕлхе формипе культура форми хушшинче ансат пĕрпеклĕх пур темелле мар... Культурăллă тип

тата чĕлхе структури хушшинче нимĕнле пĕрлехи корреляци те çук. Цивилизацин хуть те хăш шайĕнче те чĕлхен изоляциллĕ, агглютинативлă е инфлективлă стройĕ пулма пултарать".

Сепир – Уорф гипотезине тĕпе хурас пулсан чăн тĕнчен ўкерчĕкĕ чĕлхесенче пĕр пек ўкерчĕкленмест.

Сепир ("Чĕлхе" ĕçĕнче) нумай картлашкаллă классификаци тунă. Унăн никĕсĕнче чĕлхери тĕрлĕ типлă ăнлавсем выртаççĕ:

1) кăк (тĕп);
2) деривациллĕ;
3) хутăш реляциллĕ;
4) таса реляциллĕ чĕлхисем.

Тепĕр пĕлтерĕшлĕ критери вăл – синтез степенĕ, элементсем сăмахсенче пĕрлешни тата çав синтезăн техники, урăхла каласан, сăмахри элементсем çыхăнчăк е ирĕклĕ майпа пĕрлешни. Пĕрремĕш критерипе килĕшўллĕн аналитикăлла, синтетикăлла, полисинтетикăлла çыхăнусем, иккĕмĕш критерипе килĕшўллĕн изоляциллĕ, агглютинациллĕ, фузиллĕ тата символлă çыхăнусем пулаççĕ, çакă флекси пуррипе çыхăннă.

"Мĕн вăл чĕлхе?" текен ыйтăва Сепир çакăн пек хуравланă: "Этемĕн хăйне майлă инстинктлă мар (сисĕмсĕр) ирĕклĕ символсем туса шухăшсене, туйăмсене, ĕмĕтсене пĕлтермелли меслет (е ăслай)".

Э.Сепир чĕлхе çинчен вĕрентекен наукăна малалла аталантармашкăн чылай тăрăшнă. Унăн ăслăхри пултарулăхĕ этнолингвистикăн вăл вăхăтри тĕпчевĕсенчен чылай анлăрах. Э.Сепир пуçласа Америкăри индеецсен чĕлхисене çырса кăтартнă, чĕлхесен структурине вĕренмешкĕн нумай вăхăт уйăрнă, чĕлхесен çĕнĕ типологи классификацине сĕннĕ, ытти наукăсен юлашки çитĕнĕвĕсене тĕпе хурса чĕлхе пĕлĕвĕн содержанине тĕрĕс палăртма ăнтăлнă, чĕлхе пулăмĕсемпе социаллă факторсем пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнура пулнине нумай тĕпченĕ. Çак ыйтусемсĕр пуçне Э.Сепир тата чĕлхепе культура епле çыхăнура тăнипе интересленнĕ. Чĕлхене "социаллă чăнлăха ăнланмалли хатĕр" тесе тата "çынсене ... нумайрах витĕм

кӳрекенни вăл – çак палăртнă обществăшăн пĕр-пĕринпе хутшăнмалли мел пулса тăракан чĕлхе" текен шухăша калать Э.Сепир. Çавăнпа пĕрлех хăй çак пĕтĕмĕшле шухăша чĕлхепе культура ыйтăвĕсене пăхса тухнă чухне хирĕçле шухăшсене те палăртать.

"Чĕлхе ушкăнĕ пĕрре те çирĕп йĕркепе пĕр-пĕр йăх ушкăнĕпе е культура зонипе çыхăнман",– тесе çырать Э.Сепир хăйĕн "Чĕлхе" ятлă тĕп кĕнекинче. Çак кĕнекерех кайран çапла çырать: "Енчен те географиллĕ, политикăллă тата экономикăллă культура детерминанчĕсем хăйсем сарăлнă зонăра пĕр пек пулма пăрахсан чĕлхе пĕрлĕхĕ культура пĕрлĕхне вĕçне çитиччен витĕм кӳме пултараймасть". Апла пулин те Э.Сепир (çакна хирĕçлемелле мар) чĕлхепе культура çыхăнăвĕсен ыйтăвне татса пама çул тупса панă.

Э.Сепир, Л.Блумфилд пекех, Америкăри чи паллă чĕлхе тĕпчевçи темелле. Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕпе пĕр вăхăтрах çырнă икĕ ĕç - Э.Сепирăн "Чĕлхе" (1921) тата Л.Блумфилдăн "Чĕлхе" (1933) Америка чĕлхе пĕлĕвĕн икĕ çулне кăтартса тăраççĕ, анчах та питĕ тĕплĕ анализ тусан кунта пĕр ăнлавах çутатса пани курăнать, Блумфилдăн чĕлхе пĕлĕвĕн механизмĕ Сепирăн чĕлхе пĕлĕвĕн концептуализмĕ пекех субъективлă идеализмăн тĕрлĕ формисем çеç иккен. Ахальтен мар ĕнтĕ Л.Блумфилд Э.Сепира хăйĕн учителĕ тесе каланă. Анчах та "менталистсен" тата "механицистсен" паллă тавлашăвĕнче Э.Сепирпа Л.Блумфилд икĕ хирĕçекен шкул пуçлăхĕсем пулнă. Ку кĕрешӳ пĕр пек реакциллĕ идеалистла лагерь хушшинчех пулса пынă.

Сепирăн "Чĕлхе" ятлă ĕçĕ чи палли. Анчах та вăл ытти Америка чĕлхеçисемшĕн малалла чĕлхе пĕлĕвне аталантарас ĕçре кăтартуллă мар. 20-мĕш çулсен вĕçĕнче вăл ытларах та ытларах расистсен этнопсихологийĕн представителĕсемпе çывăхланать. Б.Уорф тата ун вĕренекенĕсем вара уçă расист пропагандине тумашкăн Америкăри хăш-пĕр чĕлхесен структура уйрăмлăхĕсене усă кураççĕ.

Б.Блок тата Г.Треджер – "Очерк лингвистического анализа" популярлă брошюрăн авторĕсем – Сепира "чи

пысăк чĕлхеçĕсенчен пĕри" теççĕ пулин те хăйсен чĕлхе пĕлĕвĕн тишкерĕвне тумашкăн Блумфилдăн принципĕсенех никĕсе хураççĕ. Паллах, Америка фонологи тĕпчевĕсенче чылай çĕрте Сепирăн витĕмĕ палăрать, анчах та хальхи Америка дескрептивлă чĕлхе пĕлĕвĕ пурпĕр тĕпрен илсен Блумфилд вĕрентĕвĕпе çыхăнса аталаннă. Сепирăн шухăшĕ "этнографиллĕ чĕлхе пĕлĕвĕ" текен направленире вырăн тупнă. Унта унăн "Чĕлхе" моногрфийĕнче тата уйрăмах юлашки ĕçĕсенче каланă чи реакциллĕ тĕп шухăшсемпе усă курнă. Сепирăн çак шухăшĕсем бейсик-инглиш туса йĕркеленĕ Огден тата Ричардс тĕпчевĕсенче, Б.Малиновский расист-этнографăн "лингвистикăлла çитĕнĕвĕсенче" вырăн тупнă. Сепирăн реакцилле шухăшне империалистла Америкăра ăнсăртран мар хӳтĕленĕ.

Э.Сепирăн юлашки тĕпчевĕсем унăн вĕренекенĕсене витĕм кӳнĕ.

Коллектив пурнăçĕн мĕнпурăшне, пурлăхпа ăс-хакăл пуянлăхне тăвакансене пурне те, çын пурнăçĕн пур формисене те – базисран пуçласа настройка таранах – Сепир культура тесе ăнланать. Çавăнпах çак мĕнпур обществăлла пурнăçăн пĕрлĕхĕпе чĕлхе хушшинче сăлтавлă пăхăну çуккине палăртса хăварать. Сепирăн çак шухăшĕ Ф. де Соссюр шухăшлавĕнчен çеç мар, Блумфилд "механицизмĕн" никĕсĕнчен е структурăллă чĕлхе пĕлĕвĕнчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Çакă идеалистла чĕлхе пĕлĕвĕнче питĕ сумлă. Ку лингвистика чĕлхе социаллă пулăм пулнине хирĕçлет.

Сепир чĕлхен тулли автономине ĕнентерес тесе илсе панă тата ăна имманентла вĕрентсе ăнланма кирли çинчен каланă аргументсене критикăлла тишкерни питĕ интереслĕ. Блумфилд пекех Сепир та чĕлхе тишкерĕвне сăмахсен йышне тĕпчемеллине кĕртмест. Лексика аталанăвĕ, Сепир çирĕплетнĕ тăрăх, чĕлхеçĕсене интереслентермелле мар. Тепĕр енчен çав хушăрах сăмахсен йышне тĕпчени, енчен те вăл форма тунă чухнехи улшăнусемпе çыхăнмасть пулсан, культура историйĕпе çыхăнса тăнине чĕлхеçĕ шута илмест. "Чĕлхе" ятлă тĕпчевĕнче Сепир шăпах çавăн пек ĕçлет.

Ун лингвистика системи чăн малтан чĕлхе структурин фонетика тата грамматика типĕсемпе сăлтавланать.

Чĕлхесен аталану процесĕсене Сепир ăнланма пултарайман.

Чĕлхе аталанăвĕн шалти законĕсем те пур текен факт пĕрре те чĕлхе историне халăх историйĕпе тачă çыхăнура тĕпчеме кирлине хирĕçлемест. Чĕлхе процесĕсен закономерноçне ăнланас кăткăслăх, сăмахран, чĕлхен тĕрлĕ енĕсем, ун тĕрлĕ аспекчĕсем обществăра пулса иртекен улшăнусене пĕр пек йышăнманнинче курăнать.

Сепир шухăшлавпа чĕлхе çыхăнăвĕ çинчен каланă шухăш 1921 çулта пичетленнĕ ĕçĕнче уççăн палăрмасть.

Сепир çапла çырать: “Чĕлхе тата пирĕн шухăшсен шаблонĕ пĕр-пĕринпе уйрăлмалла мар тачă çыхăннă”. Енчен те çак шухăшсен шаблонĕ вăл – концептуаллă единицăсемпе сӳтсе явмалли формăсем тесе шутласан, паллах, эпир тавралăхри чăнлăха ăнланасси чĕлхе формисен характерĕнчен килнине, çапла вара, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсен шухăшлавĕ те расна пулнине туйса илетпĕр. Сепир хăйĕн каярах çырнă ĕçĕсенче шăпах çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă. Ку пĕтĕмлетӳ хальхи расизмшăн кăтартуллă, ăна империализм идеологине хӳтĕлес тĕлĕшпе те усă курнă.

Сепир шутланă тăрăх, кашни чĕлхен хăйĕн моделĕ пур: шалти фонетика тата грамматика системи.

“Чĕлхе” ятлă ĕçĕ кун çути курнă хыççăн Сепир тата статьясем пичетленĕ, унта вăл “модельсен теорине” чĕлхе облаçĕнчен “чĕлхерен килмен çын тыткаларăшĕн” сферине куçарнă. Çавăнпа пĕрлех 20-мĕш çулсем вĕçнелле Сепирăн пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕнчи шухăшсем те хытă ылмашăнаççĕ. Тĕслĕхрен, “Положение лингвистики как науки” ятлă ĕçĕнче Сепир малтан каламаннине, çĕннине калать. Ахальтен мар Сепир кунта чĕлхен çитменлĕхĕсене пĕтерме тăрăшнă хăш-пĕр шухăшлавçăсен ĕçĕсене асăнать, анчах ячĕсене палăртмасть. Çавăн пекех чĕлхеçĕсене “чĕлхе критикине” хăйсен ăслăх тĕпчевĕсенче шута илме чĕнсе калать. Çав вăхăтра Витгенштейн, Рассел тата ыттисен ĕçĕсенче палăрнă “чĕлхе критики” Сепира тӳрех витĕм кӳнĕ. Ун

идеализмĕ çĕнĕ тĕспе пуянланнă. Шухăшĕсенче Огден тата Ричардсăн реакциллĕ философийĕ патне çывхарни уççăнах палăрать. Çав вăхăтрах Сепир ĕçĕсенче расист положенийĕсем паллă вырăн йышăнаççĕ, çакă каярах туллин ун вĕренекенĕсен тата ĕçне тăсаканĕсен ĕçĕсенче курăнать. Сепирпа Блумфилд пĕрле ĕçлени те йĕр хăварнă: биологизм формине час-часах йышăнма пултаракан бихевиоризм Сепирăн çак системинче çеç мар, ытти ĕçĕсенче те палăрать.

"Положение лингвистики как науки" статьяра чĕлхе факчĕсене знаклă уйрăм формăсем пек пăхнă; "знакпа" чĕлхе символĕсем хушшинчи тулли аналогие илсе кăтартнă. Çавăнпа та чĕлхене психологи аспектĕнче тишкернĕ чух ăна общество тунă символсен чи кăткăс речĕ пек пăхмалла. Урăхла каласан, пур идеалистла чĕлхе пĕлĕвĕнче те чĕлхепе сигналсем тан пулаççĕ.

Сепир çак статьяра тĕп ыйтусенчен пĕрне – чĕлхе пĕлĕвĕпе ытти социаллă наукăсен, чĕлхепе ытти обществăлла пулăмсен çыхăнăвне – уçса парать. "Чĕлхен пысăк пахалăхĕ кирек епле культурăна та наука енчен тишкернĕ чух палăрать, мĕншĕн тесен тĕрлĕ цивилизацин культури çав модельсене ăнланмалла тата юрăхлă тăвать", – тесе çырать вăл.

Сепир "чĕлхе эпир социаллă ыйтусем çинчен шухăшланине, условисемпе çыхăнтарнине" тӳрех кăтартать. Унăн шучĕпе, хуть те мĕнле обществăри модельсен пурнăçĕ те çав палăртнă обществăн шухăшĕсене пĕлтермелли конкретлă чĕлхепе тачă çыхăнать.

Сепир тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан обществăсен социаллă чăнлăхĕ яланах расна пулнине çирĕплетет; чĕлхепе социаллă чăнлăх хушшинче хăй ирĕкĕпе пулакан мар, ятарлă çыхăну пур, тет. Çапла вара, тĕрлĕ чĕлхесем расна "чăнлăх тĕнчи" тăваççĕ тесе пĕтĕмлетсе хăварма юрать. Çак пĕтĕмлетĕве каярах пĕр енчен – Сепир вĕренекенĕсем, тепĕр енчен "пĕтĕмĕшле семантикăпа" ĕçлекен Ф.Хайаков расист пек представительсем тĕрĕс çирĕплетеççĕ.

Сепир шутланă тăрăх, кашни чĕлхен хăйĕн структура моделĕсем пур. Апла пулсан, ун шухăшĕпе, тĕрлĕ халăхсен шухăшлавĕ чĕлхе пекех расна.

Усӑ курмалли литература

1. Гухман М.М. Э.Сепир и «этнографическая лингвистика» // Вопр. языкознания – М., 1954. – №1. – С.110-128.

2. Большая советская энциклопедия: В 30т. / Гл. ред. А.М.Прохоров. – 3-е изд. – Т.23. – М., 1976. – С.272.

3. Звегинцев В.А. История языкознания XIX и XX веков в очерках и извлечениях. – Ч. II. – М., 1960.

4. Звегинцев В.А. Очерки по общему языкознанию. – М., 1962.

5. Кодухов В.И. Общее языкознание: Учебник для студентов филол. специальностей ун-тов и пед. ин-тов. – М., 1974.

6. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений: Учебник для студентов пед. ин-тов по спец. №2001 "Рус. яз. и лит-ра". – М., 1979.

## 2§. Наум Хомский

Н.Хомский грамматикӑн трансформаци методикине шутласа кӑлараканӗ. Унӑн вӗрентекенӗ – З.С.Харрис. Чи паллӑ ӗҫӗсем ҫаксем: "Три модели описания языка", "Логические основы лингвистической теории". Унӑн ӗҫӗсем дескриптивистсен формӑпа линиллӗ синтаксисне сирсе яма пулӑшнӑ. Вӑл синтаксис парадигмин тата синтаксис теорийӗн логика никӗсӗн шухӑшӗсем патне таврӑннӑ, синтаксисра тӗп тӗллев – текст тишкерӗвӗ мар, калаҫаканӑн пуплев юххинче текст йӗркеленнине ӗнентересси. Чӗлхене чӗлхе единицисен пуххи пек тата вӗсен класӗсем пек мар, тӗрӗс фразӑсем йӗркелекен хӑйне евӗр тытӑм пек пӑхать. Хомский трансформацисен 24 тӗсне тупса палӑртать, "трансформаци алгебрине" туса хатӗрлет, урӑхла каласан, трансформацисен йӗркине палӑртать. Трансформаци операцийӗсен чи кирлине уйӑрать:

а) пӗр элемента тепринпе улӑштарни (субституци, тӗслӗхрен: *Эп вӑл илнине пӗлетӗп – Эп ҫакна пӗлетӗп*);

ӑ) элементсене ылмаштарни (пермутаци, тӗслӗхрен: *Иван килсе ҫитрӗ – Иван килчӗ-и?*);

б) элемент хушни (адъюнкци, тĕслĕхрен: *Иван килчĕ – Иван килмерĕ – Иван килнĕ-и?*);

в) элемента уйăрни (эллипсис, тĕслĕхрен: *Вĕсем çумăр çăвать теççĕ - Çумăр çăвать теççĕ*).

Хомскийĕн грамматика теорийĕ синтаксис деривацийĕн логика никĕсне, хире-хирĕç çыхăнăвне тата синтаксис структурин динамикине сăнама хистенĕ.

Хомский çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăвать: грамматика автономлă, пĕлтерĕш енчен ирĕклĕ.

Улăштару методики Харриспа Хомский ĕçĕсенче пур енлĕн палăрма пуçланă.

Трансформаци грамматики яланхи çирĕпленнĕ грамматикăна çывăх пулнине Хомский пĕрре çеç асăрхаттарман.

Çакна палăртмалла: хальхи трансформаци методики йĕркелĕхе çирĕп пăхăнать, вăл текста тата чĕлхене çураçтаракан шухăшсемпе çыхăннă.

Пĕтĕм çураçтаракан модель структура аксиоматикине тата правилисене кĕрет. Тĕслĕхрен, Хомский моделĕ тата генераци грамматики.

Çураçтаракан грамматикăн пĕрремĕш вариантне тата синтаксис структурин асемантикăллă теорине "Синтаксис структурисем" кĕнекере "Лингвистика теорийĕн логикăллă никĕсĕ" ятлă докладпа пуçланă, ăна лингвистсен 9-мĕш конгресĕнче вуланă.

Каярах çак шухăшсене "Синтаксис теорийĕнчи категори тата хутшăну" докладра палăртнă, çакă вăл "Синтаксис теорийĕн аспекчĕсем" кĕнекен пĕр пайĕ.

Хомский хăйĕн "Syntactic Structures" ĕçĕнче Харрис евĕр дескриптивлă лингвистикăран пĕлтерĕш ăнланăва кăларса пăрахма тăрăшнă.

"Current issues" ĕçĕсенче Хомский шучĕпе çураçтаракан грамматика виçĕ компонентран тăрать – синтаксис тата ăна пăхăнаканнисем – фонологи тата семантика.

XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Ф.Боасăн вĕренекенĕсем çĕнĕ тĕпчевсем тăваççĕ: Хойер тонкава тата апачсен чĕлхисене, Б.Л.Уорф хопи чĕлхине тĕпчесе çырса кăтартать, Трейджер таос чĕлхипе кăсăкланать. Çак вăхăтра вăй илсе пыракан дескриптивлă

лингвистика семантикăна сивлет те лингвистика дисциплинисен ретĕнчен кăларать. Чĕлхе единицисен пĕлтерĕшне тĕпчесси, çавăнпа пĕрлех этнолингвистика ыйтăвĕсемпе кăсăкланасси, XX ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Сепир – Уорф гипотезине сӳтсе явнă май пулса пырать. Тĕпчев практикине компонентсен тишкерĕвĕн меслетне (вырăсла: метод компонентного анализа) кĕртеççĕ, ăна тĕпе хурса тăванлăха палăртакан, тĕсе кăтартакан сăмахсене, чĕрчунсен ячĕсене т.ыт. сăмахсене тĕпчеççĕ.

Усă курмалли литература

1. Уленбек Э.М. Еще раз о трансформационной грамматике // Вопр. языкознания. – 1968. – № 3, 4.

2. Хельбинг Г. Учение Харриса и Хомского о трансформациях в языке // Иностр. яз. в шк. – 1966. – №5-6; – 1969. – №5.

3. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М.: Высш. шк., 1974. – С.91-92.

Ыйтусемпе ĕçсем

1. Этнолингвистика хăш ĕмĕрте тата хăш çĕршывра çуралса вăй илнĕ?

2. Э.Сепирпа Л.Блумфилдăн тĕп ĕçĕсем мĕн ятлă?

3. Грамматикăн трансформаци меслетлĕхне никĕслекенĕ кам?

4. Сепир – Уорф гипотези пирки мĕн калама пулать?

5. «Синтаксис структурисем» ĕçе кам çырнă?

# 7 сыпăк. ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔ СОВЕТ САМАНИН 20–50-МĔШ ÇУЛĔСЕНЧЕ АТАЛАННИ

Совет саманин малтанхи çулĕсенче чĕлхеçĕсем темиçе ушкăна пайланса каяççĕ. Революцичченхи пекех Хусан, Мускав, Петербург чĕлхе шкулĕсем тĕп вырăн йышăнса тăнă. Вĕсем тĕпрен илсен танлаштаруллă истори меслетне тĕпе хурса ĕçленĕ. Çав вăхăтрах чĕлхесем пирки çĕнĕлле шухăшлани Н.Я.Марр тата унăн вĕренекенĕсен ĕçĕсенче палăрать. Çак икĕ юхăм хушшинче тата тепĕр юхăм пурри палăрнă: унăн ячĕ – “Чĕлхе фрончĕ” (Языковедный фронт – Языкофронт).

## 1§. Н.Я.Марр пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ тата вĕрентĕвĕ

Николай Яковлевич Марр 1864 çулта Шотланди арçыннипе грузи хĕрарăмĕ хушшинче чăмăртаннă çемьере Кутаиси хулинче çуралнă. Питĕрти университетран вĕренсе тухса филолог, академик ятне илме тивĕç пулнă, каярах çав университетăн профессорĕ пулнă. Археолог пулнă май темиçе хут та Вырăс Эрмен çĕрĕ çинче археологи шыравĕсене хутшăннă.

1884 çулта Питĕр университечĕн Хĕвелтухăç чĕлхисен факультетне вĕренме кĕрет, тĕрлĕрен чĕлхесене вĕренет. 1901 çулта çав университетăн профессорĕ пулса тăрать. 1912 çулта ун филологири ĕçĕсене тата Кавказра irттернĕ археологи шыравĕсен пĕтĕмлетĕвĕсене кура ăна Наукăсен Академийĕн чăн членне суйлаççĕ.

Октябрьти революци хыççăнхи пĕрремĕш вунăçуллăхра совет чĕлхеçисем темиçе ушкăна пайланса кайнă. Вĕсен хушшинче икĕ туртăм палăрса тăнă. Пĕр енчен Хусанпа Мускав чĕлхе пĕлĕвĕн шкулĕсен традицийĕсене тăсакан чĕлхеçĕсене палăртмалла. Вĕсем танлаштаруллă историллĕ чĕлхе пĕлĕвĕн принципĕсене хӳтĕленĕ, çав вăхăтрах марксизм методологине алла илессишĕн тăрăшнă, чылай пĕлтерĕшлĕ интереслĕ шухăшсене палăртнă. Ун пек ученăйсем шутне Л.В.Щербăна, В.А.Богородицкие, Д.Н.Ушакова,

А.М.Пешковские, Г.А.Ильинские, А.М.Селищева, Г.О.Винокура тата ыттисене те кӗртме пултаратпӑр. Тепӗр енчен "чӗлхене ҫӗнӗлле вӗрентни" йӗркеленет, урӑхла каласан яфетидологи. Ӑна Н.Я.Марр хӑйӗн вӗренекенӗсемпе аталантарать. Ку пулӑм ҫирӗпленнӗ чӗлхе пӗлӗвӗн наука традицийӗсенчен уйӑрлса кайма хистет, вӗсен шутне революцичченхи вырӑс тата чикӗ леш енчи чӗлхе пӗлӗвӗсене "буржуалла" тесе хаклама хистет, "оригиналлӑ лингвистика теорине" йӗркелеме ҫул уҫса парать. Ун вӗренекенӗ И.И.Мещанинов Н.Я.Марр тезисӗсене йышӑнсах кайман, хирӗҫленӗ те, совет тата чикӗ леш енчи чӗлхеҫӗсен шухӑшӗсене пӗр-пӗринпе шайлаштарасси пирки шухӑшланӑ.

Ҫак икӗ туртӑмпа пӗрлех чӗлхеҫӗсем хушшинче пӗчӗк ушкӑнсем пуҫтарӑнса пынӑ. Ҫав шавлӑ та хирӗҫӳллӗ ушкӑнсенчен "Языкофронт" юхӑма палӑртса хӑвармалла. Ку ушкӑн яфетидологсемпе традицисене тӗпе хуракан чӗлхеҫӗсем хушшинче тӑнӑ.

Октябрьти революци хыҫҫӑн пирӗн ҫӗршывра пӗрремӗш хут тӑванлӑхпа пӗртанлӑх ҫинчен пӗтӗм халӑх калаҫма пуҫлать. Ҫак вӑхӑтра Н.Я.Марр чӗлхе пӗлӗвӗн теори ыйтӑвӗсене ҫӗнӗлле пӑхса тухас ӗҫе йӗркелет.

Н.Я.Марр Кавказ субстрачӗ эрмен чӗлхине витӗм кӳнине асӑрханӑ. Ҫав субстрат ун ӗҫӗсенче яфетит ят илнӗ. Чӗлхесен пӗрлешӗвӗ уншӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Ҫакӑ ӑна яфетит элеменчӗсене, ҫирӗпленнӗ лингвистика меслечӗсене пӑрахӑҫласа, пӗтӗм тӗнчери чӗлхесенче шырама хӗтӗртет. Марр "буржуалла" танлаштаруллӑ-историлле чӗлхе пӗлӗвне критиклеме пуҫлать, пӗтӗм тӗнчери чӗлхесен пулса кайнипе аталанӑвне ӑнлантарма пӗтӗмӗшле чӗлхе концепцине йӗркелеме пикенет. Яфетит чӗлхисем, ун шучӗпе, тӗнчери пур чӗлхесен аталанӑвӗн пӗр тапхӑрне палӑртаҫҫӗ, чӗлхесен историри аталанӑвӗ вара чӗлхесем пӗрлешнипе пулса пырать. Н.Я.Марр шутланӑ тӑрӑх, чӗлхесен хурӑнташлӑхӗ вӗсем пӗр-пӗринпе пӗрлешнипе пулса пырать.

Маррӑн марксист пулас ӗмӗт пулнӑ, анчах та вӑл пурнӑҫланайман. Унӑн ҫакӑн пек тезис ҫуралать: "... язык во всем своем составе есть... Отображение не

только его (коллективного) мышления, но и его общественного строя и хозяйства".

Маркспа Энгельсӑн: "Язык есть практическое, действительное сознание",– тенине Марр тӳррӗн ӑнланнӑ, вара уншӑн чӗлхе халӑхӑн тӗп хутшӑну хатӗрӗ пулма пӑрахать. Йӑнӑш пӗтӗмлетӳсем патне тухнӑ Н.Я.Марр: пӗрремӗшӗнчен, чӗлхене вӑл классен пулӑмӗ пек пӑхать, иккӗмӗшӗнчен, чӗлхе тапхӑрсемпе аталаннине палӑртать.

Н.Я.Марр çапла çырнӑ: "Так называемые семьи языков представляют различные системы, отвечающие различным типам хозяйства и общественности, и в процессе смены одной культуры другой одна система языков преображалась в другую". Виççӗмӗшӗнчен, Н.Я.Марр глотогони (языкотворчество) процесне вӗрентме чӗнет. Ку вӗрентӳ малтанхи никӗссем çине таянать: общество аталанӑвӗнче палӑракан системӑлӑх чӗлхесен аталанӑвне те витӗм кӳрет, общинӑпа, рабовладелецсен, феодалсен, капиталистсен йӗркисемпе çыхӑнать. Н.Я.Марр теорийӗнче асӑннӑ пунктсем конкретлӑ чӗлхесен факчӗсемпе тӳр килмеççӗ. Ахальтен мар, совет чӗлхеçисенчен нумайӑшӗ, Н.Я.Марр хыççӑн кайнӑ пулин те, хӑйсен тӗпчевӗсенче чӗлхе чӑнлӑхне шута илнӗ.

Н.Я.Марр шучӗпе, саслӑ чӗлхе пулса кайиччен хусканусен (жестсен) е алӑсен чӗлхи пулнӑ, саслӑ чӗлхе вара класлӑ обществӑра йӗркеленнӗ, ытларах тӗшмӗшсем пулӑшнипе малтанлӑха магилле пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Тӗнчери пур чӗлхе те малтанласа çак 4 *(сал, бер, йон, рош)* элементран пулса кайнӑ, вӗсене кашни хальхи чӗлхерех тупма пулать, тет вӑл.

Анчах та Н.Я.Марр шухӑшӗпе килӗшмесӗр В.И.Абаев акӑ мӗн калать: "Устрашающим у Марра является не сама идея четырех элементов, а то, как он ими оперировал. Верить, что первичные звуковые комплексы дошли до нас через десятки тысячелетия и могут быть нами распознаны в каждом слове и служить основой всякого этимологического анализа, - это такое забвение факторов времени, такая утрата исторической перспективы, которым трудно подыскать

оправдание”. Н.Я.Марр фонетика законĕсене ытлашши пăхăнманни те, чĕлхесем хушшинчи морфологи уйрăмлăхĕсене те уçăмлăн курманнине асăрхама пулать. Н.Я.Маррăн пĕртен пĕр шанăçĕ – сăмахсен семантики пулнă, çавăнта çеç вăл тапхăрсенчи улшăнусем сăмахра упраннине çирĕплетме пултарнă. Анăçри чĕлхе пĕлĕвне пуç тайман пулин те, Н.Я.Марр чылай элементсене хăй теорине çирĕплетме çавăнтан илнĕ.

В.В.Виноградов, Л.А.Булаховский, А.С. Чикобава, П.С.Кузнецов, Б.А.Серебрянников тата ытти совет чĕлхеçисем Н.Я.Марр сĕннĕ "çĕнĕ вĕрентĕве" критикленĕ.

Шел пулин те, чĕлхе çинчен калакан “çĕнĕ вĕрентӳ” тĕрексĕр те наука тĕлĕшĕнчен пулса çитменнине пурнăç кăтартнă. Кун пирки В.И.Абаев çапла каланă: “К сожалению, реализация правильных в основном идей оказалась крайне неудовлетворительной. Сказался недостаток философской подготовки, а так же отсутствие настоящей лингвистической школы. В результате упрощение, вульгарно-социологическое истолкновение сложных языковых процессов и явлений развития”.

Н.Я.Маррăн совет чĕлхе пĕлĕвĕнчи пĕлтерĕшне хальлĕхе пур енчен палăртман-ха. Анчах та çакна асăрхатпăр – Н.Я.Марр тата унăн вĕренекенĕсем хăйсен умне чĕлхе çинчен вĕрентекен марксистла наука йĕркелес тĕллев лартнă, анчах та пурнăçа кĕртеймен. “Çĕнĕ вĕрентӳ” ăнăçсăр пулнипех 20-30 çулсенче чĕлхеçĕсен ĕçĕсенче йăнăшсемпе ăнланманлăхсем çеç пулнă тесе шутлама кирлĕ мар. Ф.П.Филин шухăшĕпе: “Ку ĕçсенче уçăмсăр япаласем питĕ нумай, вĕсене çутатмасăр пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн теорине йĕркелеме çук. Чĕлхене общество çуратнă тени халĕ те иккĕлентермест. Çавна кура чĕлхе аталанăвĕн пĕтĕм картинине мĕн авалтан пуçласа паянччен сăнлас ыйту çуралнă. Аталаннă май общество темиçе тапхăр витĕр тухнă, çав хушăра, паллах, чĕлхе те аталанмасăр юлман. Кашни чĕлхе аталаннă май, тем пулсан та, обществăра пулса иртекен улшăнусемпе тӳр килмеллех”.

Н.Я.Маррăн тĕп ĕçĕсем:

Этапы развития яфетической теории. – Л., 1933.

Основные вопросы языкознания. – М., 1936.
Язык и общество. – Л., 1937.
Основные вопросы истории языка. – Л., 1937.
Этно- и глоттогония восточной Европы. – М.; Л., 1935.
Язык и современность. – Л., 1932.

Усӑ курмалли литература

1. Абаев В.И. Н.Я.Марр // Вопр. языкознания. – 1960. – №5.
2. Кодухов В.И. История лингвистических учений. – М., 1979.
3. Филин Ф.Н. Советское языкознание: Теория и практика // Вопр. языкознания. – 1977. – №5.

## 2§. И.И.Мещанинов (1883 – 1967)

И.И.Мещанинов – совет чӗлхеҫи, археолог, СССР Наукӑсен Академийӗн академикӗ (1932), Социализмла Ӗҫ Геройӗ (1945).

1904 ҫулта Петербургри университетран, 1910 ҫулта Археологи институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. 1933-1937 ҫулсенче СССР АН антропологи, археологи тата этнографи Институчӗн директорӗ, 1935-1950 ҫулсенче Чӗлхепе Шухӑшлав институчӗн директорӗ, 1934-1950 ҫулсенче СССР Наукӑсен Академийӗн литературӑпа чӗлхе уйрӑмӗн секретарь-академикӗ пулса вӑй хурать. 1920–1930 ҫулсен пуҫламӑшӗнче Хура тинӗс хӗрринче тата Кавказ леш енче пулнӑ археологи шыравне ертсе пынӑ.

И.И.Мещанинов вилӗ чӗлхесемпе, тӗпрен илсен, урарт (халд) чӗлхипе нумай ӗҫленӗ специалист.

Пӗтӗмӗшле чӗлхе пӗлӗвӗнче И.И.Мещанинов чӗлхесен аталанӑвӗн тӗп тапхӑрӗсене тӗпченӗ, ӑнлав категорийӗн теорине, чӗлхесен синтаксис типологийӗн теорине тата предложени теорине йӗркеленӗ. Мещанинов Ҫурҫӗр тата Кавказ халӑхӗсен ҫырулӑхсӑр чӗлхисене тӗпчессине пуҫарса ярас ӗҫре тата чӗлхе пӗлӗвӗнче ӗҫлекен кадрсене хатӗрлес енӗпе нумай

тăрăшнă. Ăна икĕ хут Ленин орденĕпе тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса чысланă.

Октябрьти революци хыççăнхи малтанхи çулсенче чĕлхе пĕлĕвĕнче тĕпчев ĕçĕсене тĕрлĕ принципсене кура йĕркелекен темиçе юхăм пулнă. Анчах та ĕçсене пурнăçлама тĕрлĕ мелсемпе усă курнине пăхмасăрах вĕсем кашниех хăйсен умне марксизмла чĕлхе пĕлĕвĕ йĕркелес тĕллев лартнă. Тĕрлĕ дискуссисенче çак тĕллеве пурнăçлас тесен мĕнле меслетсемпе, мелсемпе усă курасси пирки нумай тавлашнă.

Çак дискуссисене хутшăнса хăйсен шухăшĕсене пуш сăмахпа мар, тĕпчев ĕçĕсемпе çирĕплетсе паракан тĕпчевçĕсен ячĕсене асăнмалла: Д.Н.Ушаков, В.А.Богородицкий, Г.А.Ильинский, М.М.Покровский, М.Н.Петерсон, М.В.Сергиевский, А.М.Пешковский т.ыт.те. Методикăра вĕсем ытларах традицире çирĕпленнĕ танлаштаруллă истори меслетне кăмăлланă.

Асăннă дискуссие хутшăнакан тепĕр ушкăн, пачах тепĕр майлă, çак традицисене хирĕçленĕ, çавна май çĕнĕ лингвистика концепцийĕ йĕркелеме пăхнă. Ку ушкăнран чи малтанах чĕлхен “çĕнĕлле вĕрентĕвне” (урăхла каласан – яфетидологи) йĕркеленĕ Н.Я.Марр ятне тата унăн вĕренекенĕсене асăнмалла.

Иван Иванович Мещанинов шăпах Марр вĕренекенĕ пулнă. Вăл чĕлхен “çĕнĕлле вĕрентĕвĕн” теори принципĕсене малалла аталантарнă, анчах унăн хăш-пĕр принципĕсемпе тата чикĕрен тухса йĕркеленĕ шухăшĕсемпе килĕшмен. Мещанинов хăйĕн вĕрентекенĕнчен пăрăнса ытти хăш-пĕр совет тата ют чĕлхе пĕлĕвĕнчи юхăмсемпе килĕшӳ тупма тăрăшнă.

Н.Я.Маррăн чĕлхен “çĕнĕлле вĕрентĕвĕ” çакăн пек шухăша тĕпе хурать: чĕлхе вăл – надстройка категорийĕ, çавна май пĕтĕм халăх чĕлхи – фикци, вăл темиçе чĕлхе пĕрлешĕвĕ пек кăна пулма пултарать. Тĕнчери пур чĕлхесем те глоттогони процесĕнче пĕр ярăм йĕркелеççĕ Тата пурте вĕсем хальхи чĕлхесенче те тупма пур 4 пуçламăш элементран пулса кайнă. Хăйĕн аталанăвĕнче чĕлхе пĕтĕмĕшле глоттогони процесĕнчи тĕрлĕ тапхăрсем витĕр иртет, çавна май, яфет чĕлхисем пĕр-пĕринпе кăна çыхăнса тăракан чĕлхесен хупă

ушкăнĕ мар, кашни чĕлхе ун урлă тухакан стади пулса тăрать. Кунта пĕрремĕш вырăна традицире çирĕпленнĕ пек фонетикăпа морфологи тишкерĕвĕ мар, семантика тухса тăрать.

Н.Я.Марр сĕннĕ лингвистика анализĕ анлă сарăлайман. Яфетидологи, пĕр енчен, совет чĕлхеçисене пуçĕпех компаративизма кĕрсе ӳкессинчен хăтарнă, тепĕр енчен, тĕпчесе ăнлантарса пама май килмен теорисем кăларса тăратнă, чĕлхе пĕлĕвĕ нихăш еннелле те кайма май килмен лакăма лекнĕ. Шăпах И.И.Мещанинов çакăнтан мĕнле тухмалли çул-йĕрсем шырама пуçлать. Унăн вĕрентĕвĕ совет чĕлхе пĕлĕвĕнче çĕнĕ юхăм йĕркелет. Мещанинов Маррăн пĕтĕмĕшле шухăшĕсене тытса пынă пулин те, çавах хăйĕн вĕрентекенĕн теори шухăшĕсенчен уйрăлса кайнă, Марр тĕпе хунă лингвистика тĕпчевĕнчен те пăрăннă.

Лингвистика тĕпчевĕсен традицире çирĕпленнĕ танлаштаруллă истори меслечĕсене критикленĕ май, çак тарана нумай тĕпчесе пĕлнĕ чĕлхесенчен пăрăнса сахал тĕпченĕ чĕлхесем çине куçас туртăм вăйланать. Маррăн чĕлхе идеологи характерĕллĕ пулнин вĕрентĕвĕ тата чĕлхе трансформацийĕнче семантика тĕп вырăнта тăрать тени ăнлав категорийĕ семантикăпа грамматика категорийĕсене йĕркеленĕ çĕрте мĕнле вырăн йышăнасси çинчен вĕрентни патне илсе çитерет.

Мещанинова çак проблемăна татса пама истори енчен тишкернисĕр пуçне пачах та çĕнĕ тĕпчев меслечĕсем кирлĕ пулнă. Çавна май лингвистика проблематикипе ĕçленисĕр пуçне вăл тĕпчев меслечĕсене те тупма тăрăшнă.

И.И.Мещаниновăн наукăри ĕçĕ-хĕлне 3 тапхăра пайлама пулать:

1) 20-мĕш çулсем; ку вăхăтра вăл археологи шыравĕсемпе интересленнĕ, халд чĕлхине тăрăшса тĕпченĕ, хăйĕн тĕпчевĕсене Н.Я.Маррăн "яфет теорийĕпе" çыхăнтарнă;

2) 30-40-мĕш çулсенче вăл пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн теори ыйтăвĕсемпе, тĕпрен илсен, чĕлхесен синтаксис ыйтăвĕсемпе, кăсăкланма пуçлать;

3) 1950 çулта “Правда” хаçат страницисенче пулса иртнĕ дискусси хыççăнхи тапхăр.

Ку дискусси совет чĕлхе пĕлĕвĕн шăпинче питĕ паллă вырăн йышăнать. Дискуссие И.В.Сталин хутшăннă. Çакăн хыççăн чĕлхе пĕлĕвĕнче Маррăн “çĕнĕ вĕрентĕвĕ” хуçаланма пăрахать. И.И.Мещанинов çĕнĕ тĕпчев çулĕсем шырама тытăнать. Вăл ку вăхăтра чĕлхе тĕсĕсене (типĕсене) синхронире морфологипе синтаксис тĕлĕшĕнчен тишкерме тытăнать. Мещанинов “чĕлхе вĕрентĕвĕн” çак енĕсене палăртнă: чĕлхепе общество çыхăнăвĕ, чĕлхепе шухăшлав çыхăнăвĕ, чĕлхесем тĕрлĕ стадисенче аталанни, чĕлхесем типологи тĕлĕшĕнчен пĕр пек е уйрăм пулни, вĕсен пуплев пайĕсемпе предложени членĕсем расна пулни.

Енчен те Маррăн чĕлхесене стадипе типологи тĕлĕшĕнчен сăнласа парасси фактсемпе çирĕплетмен семантикăпа этимологи, шыравĕ пулнă пулсан, Мещаниновăн стади типологийĕ тĕрлĕ структурăллă чĕлхесен предложени тĕсĕсен стратификацийĕ çине таяннă. Предложени тĕсĕсене субъектпа предикат тĕлĕшĕнчен мĕнле пулнине тата морфологи тĕлĕшĕнчен епле палăрнине кура уйăрнă. Предложенин кашни тĕсне тĕплĕн тишкересси 3 пĕр-пĕринпе çыхăннă стадие уйăрассипе (посессивлă, эргативлă, номинативлă) тата сахал тĕпченĕ чĕлхесен материалĕсем тăрăх сăнакан трансформаци çул-йĕрĕпе çыхăннă. Вăл вăхăтра сахал тĕпченĕ чĕлхесем шутне нивх, эскимос чĕлхисем кĕнĕ. Мещаниновăн диахрони типологийĕн концепцийĕпе унăн вĕренекенĕсен ĕçĕсем çыхăннă (Г.А.Меновщиков, В.З.Панфилов, П.Я.Скорик, О.П.Суник), çавăн пекех германистсем те ку концепципе ĕçленĕ: М.М.Гухман, А.В.Десницкая, С.Д.Кацнельсон.

Мещаниновăн нумай ĕçĕ – чĕлхепе шухăшлав çыхăнăвĕ çинчен. Ăнлав категорийĕсем çине те тимлĕ пăхнă.

Обществăри ăнлавсене чĕлхере ăнлав категорийĕсем палăртаççĕ. Ку ăнлавсене чĕлхепе усă курса çырса кăтартаççĕ, вĕсем – чĕлхере хăйĕнче, унăн лексикинче, грамматика тытăмĕнче палăраççĕ. Чĕлхере хăйсем

синтаксис е морфологи категори формисемлĕ ăнлав категорийĕсем грамматика ăнлавĕсем пулса тăраççĕ.

Ăнлав категорийĕсем чĕлхере тĕрлĕрен палăраççĕ. Мещанинов шучĕпе, шăпах вĕсем чĕлхесен шайлаштаруллă тĕпчевĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Ку шухăшсем пĕтĕмĕшле "Соотношение логических и грамматических категорий" статьяра вырăн тупнă. Унта вăл этем хăй шухăшĕсене палăртма тĕрлĕ грамматика категорийĕсемпе усă курнине палăртать. Логика категорийĕсем хăйпĕлтерĕшлĕхне çухатмаççĕ, чĕлхепе шухăшлав çыхăнăвне йĕркелеççĕ, мĕншĕн тесен логика пĕлтерĕшне грамматикăри ăнлавсемпе палăртаççĕ. Грамматика кӳлепи çине туянса шухăшлав (логика) категорийĕсем грамматика категорийĕсем пулса тăраççĕ. Унсăр пуплев йĕркеленмест.

40-мĕш çулсенчен пуçласа ("Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ" кĕнекерен) Мещанинов Н.Я.Маррăн 4 элемент анализĕн методикине сивлет тата танлаштаруллă шайлаштаруллă типологи меслечĕ еннелле туртăнать.

Хăйĕн вĕрентекенĕн глоттогони процесĕн пĕрлĕхĕ вырăнне Мещанинов историри тата хальхи чĕлхесен типологи шайлаштарăвĕн проблемине кăларса тăратать. Расна, пĕр пек мар системăллă чĕлхесене шайлаштарса тĕпченĕ май тĕрлĕ грамматика категорийĕсем мĕнле пулса кайни тата аталанни çинчен нумай ĕç çырăннă, çавăн пекех индоевропа чĕлхисен эргативлăхĕ çинчен калани кăсăклă. Мещанинов сахал тĕпченĕ чĕлхесене сăнама чĕнсе каланă. Ăнлав категорийĕсен вĕрентĕвĕ Н.Я.Маррăн тĕп тезисне улăштарма кирлĕ пулнă.

Мещаниновăн икĕ пысăк ĕçĕ – "Предложени членĕсем тата пуплев пайĕсем" (1945), "Глагол" (1949) – Мещанинов пĕтĕмпех Марр вĕрентĕвĕнчен пăрăннине кăтартать. Вĕсенче грамматика формисене танлаштару-типологи тĕлĕшĕнчен çырса кăтартнă. Ăнлав категорийĕсем (тĕслĕхрен, субъект категорийĕ) вĕсене палăртакан грамматика ăнлавĕсем (подлежащи) пекех чĕлхе универсаллăхне палăртаççĕ. Пуплев пайĕсене вăл лексика ушкăнĕсем тесе ăнлантарать, вĕсене синтаксис тата морфологи кăтартмăшĕсемпе ăнлантарма пулать. Сăмахăн семантики унăн предложенири тĕп рольне

палăртать. Мĕнле те пулин сăмаха пĕр-пĕр пуплев пайĕ вырăнĕнче усă курни унăн малашне уйрăм кӳлепе паллисем пуласса пĕлтерет.

Çапла майпа, пуплев пайĕсем – морфологизациленнĕ предложени членĕсем.

Хăйĕн юлашки ĕçĕсенче Мещанинов грамматикăпа логика шайлашăвĕ çине таянакан синхрони типологийĕ çинчен нумай çырать. Мещаниновăн функциллĕ семантика методикипе морфологи-синтаксис типологийĕ грамматика теорийĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Мещаниновăн наукăпа педагогикăри, обществăпа политикăри ĕçĕ-хĕлĕ нумай енлĕ. Унăн 250 ытла ĕçĕ пичетленсе тухнă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем:

Эламские древности. - П-г, 1917.

Халдоведение. История древнего Вана, включающая древнейшие сведения о Закавказье. Система письма и чтения клинописных текстов халдов-урартов. – Баку, 1923.

Язык Ванской клинописи. II. Структура речи. – Л., 1935.

Новое учение о языке. Стадиальная типология. – Л., 1936.

Общее языкознание. К проблеме стадиальности в развитии строя предложения. Л., 1940.

Члены предложения и части речи. – М.; Л., 1945.

Глагол. – Л., 1949.

Грамматический строй урартского языка. Ч.1-2. – Л., 1958-1963.

Структура предложения. – М.; Л., 1963.

Эргативная конструкция в языках различных типов. – Л., 1967.

Усă курмалли литература

1. Звегинцев В.А. История языкознания XIX и XX веков: В очерках и извлечениях. – М., 1965.

2. Кодухов В.И. Общее языкознание. – М.: Высш. шк., 1978.

3. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979.

4. Мещанинов И.И. Структура предложения. – М.; Л., 1963.

5. История советского языкознания: Хрестоматия. М.: Высш. шк., 1981.

6. Общее языкознание: Хрестоматия / Сост. Б.И.Косовский и Н.А.Павленко. – Минск, 1987.

7. Большая советская энциклопедия. – Т. 16. – М.: Сов. энцикл., 1978.

## 3§. Л.В.Щерба (1880–1944)

**Пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ.** Лев Владимирович Щерба пултаруллă чĕлхеçĕ, академик. Вăл инженер-технологсен çемйинче çуралнă. 1888 çулта Киеври гимназие ăнăçлă вĕренсе тухса Киеври университетăн тĕрĕс ăслăлăхсен факультетне вĕренме кĕрет. Вăл вăхăтра Л.В.Щербăн ашшĕпе амăшĕ те унтах пурăннă. Вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш çулĕнчех хăй кĕнĕ факультетран, мĕн пĕчĕкрен хăй пурнăçĕнче вырăс чĕлхипе литература вĕрентекенĕ пулма ĕмĕтленекен шухăша тĕпе хурса, Санкт-Петербург университетĕнчи историпе филологи факультетне куçать.

1903 çулта Л.В.Щерба университетран вĕренсе тухать. Бодуэн де Куртенэ ăна санскритпа танлаштаруллă грамматика кафедрине ĕçлеме хăварать.

1906 çулта экзаменсене ăнăçлă тытнă хыççăн ют çĕршыва командировкăна каймалла пулать. Вара вăл Лейпцига каять, ун хыççăн Çурçĕр Италие те çитсе курать. Унта вăл хăй тĕллĕн ялсенчи чĕрĕ тоскан диалекчĕсене тĕпчет. 1907-1908 çулсенче Л.В.Щерба И.А.Бодуэн де Куртенэ сĕнĕвĕпе килĕшсе лужа чĕлхинчи диалекта тĕпчет. Епле пулсан та чĕрĕ, пачах ют чĕлхене хăй тăрăшнипе пур енлĕн тĕпчесе пĕлесси Л.В.Щербăн тĕп тĕллевĕ пулса тăрать.

1907 çул вĕçнелле тата 1908 çулта Л.В.Щерба Парижра пурăнать, Ж.П.Руссон экспериментлă фонетика лабораторийĕнче ĕçлесе тĕрлĕ чĕлхесен фонетикине тĕпчет, çав вăхăтрах хăйĕн диссертаци ĕçĕ валли вырăс чĕлхин фонетикипе материалсем пуçтарать.

1909 çулта Л.В.Щерба Петербургри университетăн приват доценчĕ пулма тивĕçлĕ пулать, экспериментлă фонетика кабинетне те ăна шанса параççĕ (хальхи

вăхăтра ку лаборатори Л.В.Щерба ячĕпе хисепленсе тăрать).

Тĕпчевçĕ 1909 çултан пуçласа 1916 çулсен хушшинче ăслăлăх ĕçĕ-хĕлĕнче пысăк ӳсĕмсем тунă. 1912 çулта вăл хăйĕн "Русские гласные в качественном и количественном отношении" ятлă магистр диссертацине хӳтĕлесе пичете кăларать, 1915 çулта вара – "Восточнолужицкое наречие" доктор диссертацине хӳтĕлет.

1916 çулта Л.В.Щерба профессор ятне илме тивĕçлĕ пулать, Петербург университечĕн профессорĕ пулса 1941 çулччнех ĕçлет. Ытти вĕрентӳ тата ăслăлăх çурчĕсенче педагогика тата ăслăлăх ĕçĕсене йĕркелесе пынă çĕрте тăрмашать.

1920 çулсенче Л.В.Щерба тĕрлĕрен ют чĕлхесен курсĕсене йĕркелес тата ертсе пырас ĕçре вăй хурать. Чĕлхе пĕлӳ обществин председателĕ пулса тăрать, хăй йĕри-тавра тĕрлĕрен ĕçре ĕçлекен чĕлхе пĕлӳçисене пуçтарать.

1923-1928 çулсенче Л.В.Щерба редакциленĕ "Вырăс калаçăвĕ" ятлă сборник тăватă хут пичетленсе тухать. Кĕнеке тĕллевĕ – чĕлхе пĕлĕвне халăх хушшинче анлă сарасси. Ку ĕçе аслăрах ăсчахсем (Д.Н.Ушаков, В.И.Чернышев т.ыт.те), вĕсемпе пĕрлех çамрăк ăсчахсем те: С.Г.Бархударов, С.И.Бернштейн, В.В.Виноградов т.ыт.те хутшăннă.

1924 çулта Л.В.Щербăна СССР Ăслăлăх Академийĕн член-корреспондентне суйлаççĕ. Çак вăхăтран пуçланса каять те ĕнтĕ унăн словарь тăвас ĕçĕ. 1940 çулта çак ĕç "Пĕтĕмĕшле лексикографи теорийĕнчи опытсем" ятпа пичетленсе тухать.

1930 çулсенче Л.В.Щербăн "О трояком аспекте языковых явлений и об эксперименте в языкознании" ятлă статья тухать, ку çулсенче Лев Владимирович словарь тăвас ĕçпех ĕçлет, "Француз чĕлхин фонетики" ятлă вĕрентӳ пособийĕ çырать, коми чĕлхин çырулăхне йĕркелесе яма пулăшать. 30-мĕш çулсен вĕçĕнче вăл вырăс чĕлхин грамматикине нормăлас ĕçе хастар хутшăннă, анчах вăрçă пуçăнсан эвакуаципе Номенс хулине лекнипе ку ĕçе вĕçлеймен. Çак хулара вăл "Вырăс çырăвĕн теорийĕ" ятлă ĕç çырать, "Ют

чĕлхесене вĕрентес ĕçĕн меслечĕсем” ятлă кĕнеке те калăплать (1 пайне), ют чĕлхесене вĕрентес меслетсем çинчен статьясем çырать.

1943 çулта Л.В.Щерба наркомпрос институчĕпе пĕрлех Мускава куçса килет те пуçĕпех ăслăлăх, вĕрентÿ тата тĕрлĕ институтсемпе комитетсенче йĕркелÿ ĕçĕ-хĕлне кĕрсе каять.

1943 çулта Лев Владимировича сентябрь уйăхĕнче СССР Ăслăлăх Академийĕн членне суйлаççĕ.

1944 çулхи март уйăхĕнче çĕнĕрен туса хунă СССР Ăслăлăх вĕрентÿ академийĕн чăн членĕ пулса тăрать. Кунта вăл историпе филологи пайĕнче пуçлăх пулса ĕçлеме пуçлать.

. Л.В.Щербăн ĕçĕсем. Ăслăлăхри пултарулăхĕ Л.В.Щербăн тĕрлĕ енлĕ пулнă. Чĕлхе пĕлĕвĕнчи интересĕсен сарлакăшĕ, Л.В.Щербăн таранăн тата оригиналлă аталанса пыракан идеисем ăна совет чĕлхепĕлÿçисемпе пĕр рете тăма май панă. Унăн “О трояком аспекте языковых явлений и об эксперименте в языкознании” ятлă (1931 çулта тухнă) статйинче тата “Очередные проблемы языковедения” ĕçĕнче пĕрлехи чĕлхе пĕлĕвĕ çине еплерех пăхнине туллин çырса панă. Ку ĕçсене Щерба вĕçлесех çитереймен, анчах та хăй вилнĕ хыççăн унăн вĕренекенĕсем вĕсене пичетлесе кăларма май тупнă.

Л.В.Щерба паллă фонолог пулнипе палăрса тăрать. Фонема теорине йĕркелет. Вырăс чĕлхин синтаксис ыйтăвĕсемпе, орфоэпи, лексикографи, ют чĕлхесене вĕрентес методикăна йĕркеленĕ çĕрте нумай вăй хунă, 70 яхăн статья тата темиçе кĕнеке çырнă.

Л.В.Щерба чĕлхен нумай ыйтăвĕсемпе интересленнĕ:

1) чĕлхе пĕлĕвĕн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсем;
2) орфоэпипе фонетика;
3) грамматика;
4) лексикографи;
5) çыру ĕçĕсем, орфографи, транслитераци тата транскрипци ыйтăвĕсем;
6) ют чĕлхесене вĕрентес методика;
7) французский чĕлхи;
8) Пушкинăн поэзи чĕлхи.

Фонемăсен пĕлтерĕшне мĕнле ăнланнине Л.В.Щерба совет тапхăрĕнчи икĕ ĕçĕнче: «Фонетика французского языка» (1937) тата «Очередные проблемы языковедения» (1945) тĕплĕн çырса кăтартнă.

"Француз чĕлхин фонетики" ĕçĕнче Щерба калаçури *уйрăм сасă* ăнлава ăслăха кĕртет. Сасса татсан, хушсан, улăштарсан çĕнĕ сăмахсем е тата пачах урăх ăнлавлă сăмахсем тума пулать тенĕ вăл. Щерба çакăн пек тĕслĕхсем илсе кăтартать: *парк, пар, па, а, Шура, Мура, фура, дура, кура.* Çакăн пек калаçури уйрăм сасăсене вăл фонема тесе калать. Щерба чĕлхери сасăсене виçĕ енчен пăхнă:

1) физика енчен (тембр, вăрăмăшĕ, çӳллĕшĕ т.ыт.те);

2) биологи енчен (сасă кăларнă чухне хутшăнакан пуплев органĕсем);

3) чĕлхе пĕлĕвĕ енчен.

Щерба шучĕпе сасăри текст уйрăм сасăпа пĕр пек мар, унран урăхларах.

Фонетикăн автономилĕхĕ Щербăна фонема ăнлава татах та тарăнрах тĕпчеме хистет, уйрăммăнах çак дифференци паллисене хытăлăх-çемçелĕх, янăравсăррисем-янăравлисем т.ыт.те. пĕр-пĕринчен уйăрни паллă вырăн йышăнать. Вĕсем пĕр фонема теприне хире-хирĕçленипе палăраççĕ. "Кашни фонема,– палăртнă Щерба,– ытти фонемăсенчен уйрăлса тăнипе палăрать. Çавна пула пĕтĕм фонемăсем кашни чĕлхере пĕр пĕрлĕхлĕ хире-хирĕçле системăсем тăваççĕ, кунта тĕрлĕ ушкăнсен тата уйрăм фонемăсен хире-хирĕçлĕхĕ палăрать".

Щерба фонетикăпа фонологи тачă çыхăнса тăнине йышăннă.

Л.В.Щерба ĕçĕсен списокĕ:

1. Русские гласные в качественном и количественном отношении (1942).

2. Восточно-лужицкое наречие (с приложением текстов) (1907-1908).

3. О частях речи в русском языке.

4. Фонетика французского языка (1937).

5. Русско-французский словарь (1936).

Усă курмалли литература


1. Березин Ф.М. История советского языкознания: Хрестоматия. – М., 1988.

2. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979.

3. Щерба Л.В. Языковая система и речевая деятельность. – Л., 1974.


## 4§. В.Г.Егоров (1880-1974)

Василий Георгиевич Егоров ятне чăвашсем кăна мар, пĕтĕм тĕнчери тюркологсем пĕлеççĕ, тĕрĕк, алтай, финн-угор чĕлхисене тĕпчекенсем унăн ĕçĕсемпе анлă усă кураççĕ. Унăн хисеплĕ ячĕ тĕнчери чи сумлă тюркологсемпе пĕр ретре тăрать. Вĕрентсе çутта кăларас ĕçре тата чăваш чĕлхи пĕлӳлĕхĕнче тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн В.Г.Егорова К.Д.Ушинский медалĕпе, «Хисеп Палли» орденпа чысланă, Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ наука ĕçченĕн хисеплĕ ятне панă.

В.Г.Егоров Çĕрпӳ уесĕнчи Энтри Пасар ялĕнче 1880 çулта хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

Пуçламăш шкул пĕтерсен 1892-1895 çулсенче Шĕнерпуçĕнчи икĕ класлă училищĕре вĕренет. Ун хыççăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, И.Я.Яковлев патĕнче ăс-хакăл пухать.

Чĕмпĕртен В.Г.Егоров вĕрентекен пулса çуралнă яла таврăнать, Шĕнерпуçĕнчи хăй вĕреннĕ училищĕре икĕ çул учительре ĕçлет, часах ачасене вĕренмелли кĕнекесем çитменнине туйса илет. Вара вăл хăй чăваш чĕлхине тĕпчеме пикенет, халăхăн чĕлхе-çăвар ӳнерĕн тĕслĕхĕсене пухать, тĕрлĕ çĕрти чăвашсен калаçу уйрăмлăхĕсене сăнама пуçлать. Çав хушăрах чăваш чĕлхипе унăн авалхи кун-çулне тишкерме пĕлĕвĕсем çителĕксĕртерех пулнине те туйса илет. Вара çамрăк вĕрентекен малалла вĕренме картса хурать.

В.Г.Егоров Чĕмпĕрти тĕн семинарине пырса кĕрет, унтан вĕренсе тухсан Хусанта тĕн академийĕнче ăс-тăн пухать. Кунта вăл уйрăмах авалхи грек, латин тата француз, нимĕç араб, перс чĕлхисене тимлесе вĕренет.

Тĕн академийĕнчен вĕренсе тухсан, В.Г.Егорова Раççей элчĕлĕхĕпе пĕрле Сирие яраççĕ, унта вăл Хомс хулинчи вырăс-араб шкулĕсен пуçлăхĕ пулса ĕçлет, çав хушăрах араб чĕлхине тимлесе вĕренет. 1912 çулта вăл Петербург университечĕн историпе филологи факультетне пырса кĕрет. Кунта вăл тĕнче чапне тивĕçнĕ А.А.Шахматов, И.А.Бодуэн де Куртенэ, Л.В.Щерба чĕлхеçĕсем патĕнче вĕренет. В.Г.Егоров Петербург университетне пĕрремĕш степеньлĕ дипломпа пĕтернĕ. Вĕренсе тухсан вăл Алапукана таврăнать, кунти реальнăй училищĕре вырăс чĕлхи вĕрентме тытăнать. Унăн пирвайхи пысăк ĕçĕ, вырăс чĕлхин аваллăхне тĕпчесе çырнăскер, 1916 çулта Воронеж хулинче тухса тăнă «Филологи çырăвĕсенче» пичетленсе тухнă.

1917 çул пуçламăшĕнче В.Г.Егорова халăх училищĕсен инспекторĕ пулса ĕçлеме Златоуст хулине куçараççĕ. Кайран ăна хулари халăха вĕрентес ĕç пайĕн инструкторне лартаççĕ, вара вăл çĕнĕ совет шкулĕ йĕркелес ĕçе пикенет.

1920 çулта Василий Георгиевич тăван çĕршыва таврăнать. Шупашкарта 1921 çулта пĕрремĕш чăваш рабфакĕ йĕркелеме тытăнаççĕ, çак ĕçе В.Г.Егорова шанса параççĕ. Ĕçри пултарулăхĕпе хастарлăхне кура ăна 1923 çулта Хусанта уçăлнă Чăваш педагогика техникумне чĕнсе илеççĕ. Кунта вăл тимлесех чăваш чĕлхин кăткăс ыйтăвĕсене тишкерме тытăнать. Техникумра ĕçленĕ хушăрах тĕпчевçĕ Хĕвелтухăç халăхсен педагогика институтĕнче, каярахпа Тутарсен коммунизм университетĕнче те вĕренет.

1928 çулта Хусанта В.Г.Егоровăн «Чăваш чĕлхинчи уçă сасăсен кĕвĕлĕхĕ» («Гармония глагольных в чувашском языке») ятлă пĕрремĕш пысăк ĕçĕ пичетленсе тухать, унта тĕпчевçĕ чĕлхемĕрти уçă сасăсен çураçулăхĕн уйрăмлăхĕсене ытти тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарса тишкернĕ.

Тепĕр икĕ çултан Мускавра В.Г.Егоровăн «чăваш чĕлхи ăслайĕсен кӳртĕмĕ» («Введение в изучение чувашского языка») ятлă пысăк кĕнеки пичетленсе тухнă.

Паллă чĕлхеçĕн «Чăваш чĕлхи çинчен çырнă ĕçсен кăтартмăшĕ» («Библиографический указатель литературы по чувашскому языку») ятлă ĕçĕ те интереслĕ. Ку пысăках мар кĕнекере В.Г.Егоров чăваш чĕлхи çинчен тĕнчере 1758 çултан тытăнса 1931 çулччен пичетленсе тухнă мĕн пур ăслăх ĕçĕсене май пур таран туллин çырса кăтартма тăрăшнă.

1933 çулта Василий Георгиевича Хусантан Шупашкара чĕнсе илеççĕ те чăваш шкулĕсем валли хатĕрлекен вĕренӳ кĕнекисене редакцилеме хушаççĕ. Кĕçех вăл хăй те пуçламăш шкулсем валли вĕренӳ кĕнекисем çырса хатĕрлет. 1935 çулта унăн пĕрремĕш «Чăвашла-вырăсла словарĕ» пичетленсе тухать.

В.Г.Егоров чăваш чĕлхи пĕлӳлĕхне ĕмĕрлĕхех паллă лексикограф пулса кĕрсе юлнă. Вăл йĕркелесе кăларнă «Чăвашла-вырăсла словарь» (икĕ кăларăмпа 1935, 1954 çулсенче тухнă) тата «Вырăсла-чăвашла словарь» (икĕ кăларăмпа 1960, 1972 çулсенче тухнă) чăваш лексикографийĕнче пысăк событи пулнă.

Паллă тĕпчевçĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕнчи тепĕр пысăк тапхăр Чăваш патшалăх педагогика институчĕпе çыхăннă. Вăл 1948-1966 çулсенче пединститутăн чăваш чĕлхипе литератури кафедринче ĕçленĕ, çав хушăра «Хальхи чăваш литература чĕлхине танлаштарулла истори мелĕпе тĕпчени» темăпа доктор диссертацийĕ çырса пĕтерет, ăна 1951 çулта ăнăçлă хӳтĕлет те филологи ăслăлăхĕсен докторĕ пулса тăрать. Диссертаци пĕр пайне 1954 çулта уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларнă.

1964 çулта В.Г.Егоров «Чăваш чĕлхин этимологи словарьне» пичетлесе кăларать. Çак словаре тĕрлĕ çĕр-шывсенче ĕçлесе тăракан тюркологсем тĕпчесе пысăк хак панă.

Шупашкарта 1967 çулта Чăваш патшалăх университечĕ уçăлсан В.Г.Егорова унта чĕнсе илеççĕ. Ку вăхăта ĕнтĕ вăл 87 пуçтарнă ватă ăсчах пулнă, çапах та паллă тĕпчевçĕ хăй пухнă ăс-хакăла çамрăк ăрăва парса хăварма тăрăшать, историпе филологи факультетĕнче лекцисем вулать.

В.Г.Егоров 1974 çулхи кăрлачăн 25-мĕшĕнче 94 çула çитсе пурнăçран уйрăлса каять. Чăваш çĕршывĕ хăйĕн

мухтавлӑ ывӑлне Шупашкар масарӗнче канлӗ вырӑн парать.

Василий Георгиевич Егоров хывса хӑварнӑ ҫирӗп никӗс ҫинче юлашки ҫулсенче чӑваш чӗлхи пӗлӳлӗхӗн пысӑк керменӗ ӳссе ларчӗ. Ҫак ҫитӗнӳре В.Г.Егоров чӗлхемӗре тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫсен тӳпи вышкайсӑр пысӑк. Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн мухтавлӑ ывӑлне ӗмӗр-ӗмӗр ырӑпа асӑнса пурӑнӗ.

**В.Г.Егоров профессор ӗҫӗсенчи чӑваш ҫырулӑхӗпе литература чӗлхи историйӗн ыйтӑвӗсем**

В.Г.Егоровӑн малтанхи ӗҫӗсенчен пӗри – «Введение в изучение чувашского языка». Ӑна вӑл Хусанта Хӗвелтухӑҫ педагогика институтӗнче вӗрентнӗ вӑхӑтра, 1926-1927 вӗренӳ ҫулӗнче ҫырса хатӗрленӗ.

Пичетленессе 1930 ҫулта Мускаври пичетленсе тухнӑ. Кӗнеке тӑхӑр сыпӑкран тӑрать. Юлашки икӗ сыпӑкӗнче чӑваш ҫырулӑхӗпе литература чӗлхин кӗске историне пӑхса тухнӑ. Унта чӑваш ҫырулӑхне автор виҫӗ тапхӑра пайланӑ: пӗрремӗшӗ – Яковлев умӗнхи тапхӑр, ӑна ҫӗнӗ тапхӑр тенӗ; иккӗмӗшӗ – Яковлев тапхӑрӗ; виҫҫӗмӗшӗ – Октябрь революцийӗ хыҫҫӑнхи тапхӑр.

Василий Георгиевич чӑвашсене Атӑлҫи пӑлхарсен тӑхӑмӗ, тет. Пӑлхарсен ҫырулӑх пулнӑ, анчах вӑл татӑлнӑ. Чӑвашсем Мускав патшалӑхӗпе пӗрлешнӗ хыҫҫӑн пӑлхар ҫырулӑхӗпе мар, вырӑс ҫырулӑхӗпе усӑ курма тытӑннӑ. Ҫавӑнпа та Егоров ҫак ҫырулӑха Атӑлҫи пӑлхар ҫырулӑхӗнчен уйӑрса ҫӗнӗ ҫырулӑх тенӗ.

Н.П.Петров палӑртнӑ тӑрӑх, эпир ҫак ыйтӑва урӑхларах пӑхатпӑр. Атӑлҫи пӑлхарсен ҫырулӑхне авалхи ҫырулӑх, вырӑс тата чиркӳ славян алфавичӗллӗ (Яковлев умӗнхи) ҫырулӑха кивӗ ҫырулӑх, Яковлев йӗркеленӗ ҫырулӑха ҫӗнӗ ҫырулӑх тетпӗр.

Василий Георгиевич чӑваш ҫырулӑхӗ пӗрремӗш чӑваш грамматикинчен (1769 ҫултан) пуҫланать тесе ҫирӗплетет. Н.П.Петров шучӗпе, чӑвашсем вырӑс е чиркӳ славян алфавичӗпе усӑ курасси ҫӗнӗ кӗрешӗн шкулӗсенчен пуҫланнӑ. XVIII ӗмӗрӗн 20-30-мӗш ҫулӗсенче ҫав шкулсенче чӑваш ачисем вӗренни паллӑ. XVIII ӗмӗрӗн пӗрремӗш ҫурринче чӑвашсем хушшинче,

йышлах мар пулин те, чăвашсенчен вырăс сас паллисемпе çырма-вулама пĕлекенсем пулнă. Çакна 1737-1738 çулсенче çырнă вырăсла-тутарла-чăвашла-мордвалла тата вырăсла-чăвашла-мордвалла-çармăсла словарьсенчен те курма пулать.

«Введение в изучение чувашского языка» кĕнекере автор пĕрремĕш чăваш грамматикине, Дамаскинпа Рожанский словарĕсене кĕскен тишкернĕ, XIX ĕмĕрте тата Яковлевччен чăвашла кăларнă катехизис, тăвата евангели, псалтирь, таса турă историйĕ кĕнекесен чĕлхе уйрăмлăхĕсемпе тата Н.Золотницкипе Г.Филипповăн чăваш çырулăхĕпе çырулăх чĕлхине аталантарас тĕлĕшри ĕçĕсемпе паллаштарнă. И.Я.Яковлев çĕнĕ алфавитпа çĕнĕ çырулăх пирки, анатри диалект никĕсĕ çинче çĕнĕ литература чĕлхине пуçласа яни, тĕрлĕ жанрлă кĕнекесем кăларни çинчен каланă. Совет тапхăрĕнче çырулăх тата литература чĕлхи ирĕклĕн, чăрмавсăр аталанма тытăннине палăртнă. Н.Ашмарин, Т.Матвеев, Ф.Тимофеев чăваш чĕлхине тĕпчес, словарьсем кăларас, чăваш грамматикине çырас, орфографине йĕркене кĕртес, литература чĕлхине тасатса çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕç тунине асăннă.

Василий Георгиевич чăваш çырулăхĕн историйĕпе, литература чĕлхи аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе 30-40-мĕш çулсенче те хытă кăсăкланнă. 1934-1935 çулсенче хаçат-журналта умлăн-хыçлăн ултă статья пичетленнĕ. Вĕсенче алфавит, орфографи, терминологи, пуплев культурин, литература чĕлхи аталанăвĕн кун йĕркинчи ыйтăвĕсене хускатнă.

1936 çулта Егоров литература чĕлхин нормисене кодификацилес тĕлĕшрен питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ «Чăвашла-вырăсла словарь» пичетлесе кăларать. Ку словарь, маларах пичетленнĕ словарьсемпе танлаштарсан, чăваш лексикографийĕ литература чĕлхине нормăлас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳ тунине кăтартать.

1940-мĕш çулсенче Егоров 20-мĕш çулсенче хускатнă ыйтусем патне çĕнĕрен таврăнать те вĕсене тарăнрах тĕпчесе пысăкрах калăпăшлă ĕçсем çырса пичетлет («Чувашские словари XVIII века», «Роль И.Я.Яковлева в создании чувашского алфавита и чувашской

письменности», «Первая печатная грамматика чувашского языка 1769 года»). 1951 çулта «Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении» темăпа хӳтĕленĕ доктор диссертацийĕнче те вăл литература чĕлхин историйĕпе çыхăннă ыйтусенчен пăрăнса иртмен. «Понятие чувашского литературного языка. Письменная и устная форма его», «Взаимоотношение литературного языка и местных диалектов», «Разновидности литературного языка. Научный язык и язык художественной литературы» параграфсем тӳррĕмĕнех чăваш литература чĕлхин историйĕпе çыхăннă. «Чăваш литература чĕлхин историйĕ» курса С.П.Горский профессор аслă шкулăн вĕренӳ планне 1951 çулта çеç кĕртнине хисепе илсен, çак чĕлхе ăслăлăхĕн малтанхи никĕс чулне хываканĕсем Н.В.Никольский, В.Г.Егоров, Г.И.Комиссаров тесе шутламалла. Чăваш литература чĕлхин историне чи малтан Никольский революциччен, Егоровпа Комиссаров революци хыççăнхи çулсенче йĕркелеме пуçланă.

**В.Г.Егоров тата чăваш чĕлхин грамматикин танлаштарупа историллĕ тĕпчевĕсем**

Тĕрĕк чĕлхисене танлаштарупа историллĕ меслетпе тĕпчеме пуçăннин историйĕ питĕ вăрăм. Н.А.Баскаков шухăшĕпе килĕшӳллĕн, ку меслетпе тĕпчесе çырнă чи малтанхи ĕçсен шутне Кашгар Махмучĕн «Диван лугат ат-тӳрк» (XI ĕмĕр) сăмах кĕнекисене кĕртме пулать. Çак кĕнекере уйрăм сăмахсене çеç мар, грамматикăри хăш-пĕр формăсене те хурăнташлă чĕлхесенче (уйгур (тĕрĕк), кыпчак, огуз тата пăлхарпа сăвар чĕлхисем) еплерех сăнланнине пайрăммăн палăртса танлаштаруллă çырса кăтартнă.

Чăваш чĕлхин материалĕ танлаштарупа историллĕ тата шайлаштаруллă меслетпе усă курса пурнăçланă ĕçсенче 18-мĕш ĕмĕртен пуçласа «çапăнса» юлни паллă.

Чăваш чĕлхин пĕрремĕш тата иккĕмĕш грамматикисем пичетленсе тухнă хыççăн чĕлхемĕр материалĕпе Раççейри тата ют çĕршывсенчи ăсчахсем танлаштарупа историллĕ тĕпчевсенче анлă усă курма тытăнаççĕ, çавна май чăваш чĕлхин ытти чĕлхесем

хушшинчи чӑн-чӑн вырӑнне усӑмлатаҫҫӗ, чӗлхемӗрӗн аталану ҫул-йӗрне тӗрӗс палӑртма пуҫлаҫҫӗ.

В.Шотт, А.Регули, Й.Буденц, А.Э.Альквист, Х.Фейзханов, Н.И.Ильминский, Н.И.Золотницкий, В.В.Радлов, А.И.Добролюбов, Н.А.Лебедев, Х.Паасонен, Н.Ф.Катанов, Н.И.Ашмарин, Г.Й.Рамстедт, З.Гомбац, В.Котвич, Н.В.Никольский тата ыттисем те В.Г.Егоров чӑваш чӗлхин «анине сухалама» пуҫӑниччен ку ӗҫре чылай тарӑн йӗр хӑварнӑ ӑсчахсем шутланма тивӗҫ.

В.Г.Егорова чӑваш чӗлхине танлаштарупа историллӗ меслетпе ӑнӑҫлӑ тӗпчеме пулӑшнӑ тӗп факторсем ҫаксем:

1. Пуҫламӑш, ятарлӑ вӑтам тата аслӑ пӗлӳ никӗсӗ ҫирӗп пулни, ҫамрӑклах педагогика ӗҫне кӳлӗнни, анӑҫ тата тухӑҫ чӗлхисене теори енчен те, практикӑра усӑ курас тӗлӗшпе те лайӑх пӗлни.

2. Чӑваш чӗлхи историне, унӑн вырӑнти калаҫу уйрӑмлӑхӗсене витӗр курса тӑни.

3. Чӑваш чӗлхине ют ҫӗршывсенче тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫсене май ҫитнӗ таран туллин пӗр ҫӗре пухса аннотациллӗ «Библиографический указатель литературы по чувашскому языку» (1931ҫ.) ятлӑ справочник хатӗрлес тӗллевпе ӗҫлени.

Чӑваш чӗлхин грамматикине танлаштарупа истори аспектӗнче ҫутатассине В.Г.Егоров ятарлӑ ӗҫ халаллана – «Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении» (Чебоксары, 1949), каярах ҫак ӗҫӗн хӑш-пӗр пайӗсем «Материалы по грамматике современного чувашского языка. Ч. I. Морфология» (Чебоксары, 1957) ятлӑ кӗнекене кӗнӗ, анчах, малтанхи пичетленмен ӗҫӗпе танлаштарсан, танлаштарупа историллӗ фактсене юлашки ӗҫӗнче кӑтартни курӑнать. Чӑваш морфологийӗн хӑш-пӗр пайрӑмӗсем (пулӑшу пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем, аффикс морфемӑсем) пирки В.Г.Егоровӑн «Этимологический словарь чувашского языка» (Чебоксары, 1964) кӗнекинче ҫырни пур.

Асӑннӑ ӗҫсене тӗплӗн тишкернӗ хыҫҫӑн ҫакнашкал пӗтӗмлетӳсем тума май пур:

1) Н.И.Ашмарин тата ытти ăсчахсем чăваш чĕлхин танлаштарулла историллĕ грамматики пирки каланисене шута хурса, В.Г.Егоров çак традицие малалла аталантарнă;

2) В.Г.Егоровăн пичетленмен ĕçĕ танлаштарупа историллĕ тĕпчевсен шутне кĕрет пулин те, хăйне евĕрлĕ пулнипе уйрăлса тăрать;

3) В.Г.Егоровăн ĕçĕсем чăваш чĕлхи пĕлĕвĕшĕн çирĕп никĕс шутланаççĕ.

### Усă курмалли литература


1. Ăслăлăх карапĕ // Хыпар. – 2000. – Нарăс, 15.

2. Горшков А. Егоров вулавĕсем [В.Г.Егоров çуралнăранпа 115 çул çитнĕ май] // Хыпар. – 1995. – Çу, 25.

3. Егоров В.Г. Чăвашла-вырăсла словарь. В.Г.Егоров пухнă. 25000 сăмаха яхăн. ЧАССР халăх çутĕç комиссариачĕ шкулсенче усă курма йышăннă. – Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1935. – 734 с.

4. Егоров В.Г. Учебник русского языка. Для чувашской семилетней и средней школы. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1955. – 232 с.

5. Егоров В.Г. Учебник русского языка. Для чувашской семилетней и средней школы. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1957. – 223 с.

6. Егоров В.Г. Русско-чувашский словарь / Под ред. И.А.Андреева. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1960. – 497 с.

7. Егоров В.Г. Этимологический словарь чувашского языка [Предисл. В.Котлеева]. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1964. – 355 с.

8. Егоров В.Г. Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении. 2-е испр. изд. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1971. – 204 с.

9. Егоров Н.И. Манăçми вĕрентекенĕмĕр // Халăх шкулĕ-Народная школа. – 2000. – №4. – С.101-106.

10. Лебакина А.М. В.Егоров критикăн пултарулăхĕ: Диплом ĕçĕ. – 1998. – 23№. ЧПУ, чăваш литературин кафедринче.

11. Петров Н.П. Чувашский язык в советскую эпоху. Развитие социальных функций и литературных норм. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1980. – 208 с.

12. Хусанкай П. Пултару [В.Г.Егорова халалланă сăвă] // Хыпар. – 2000. – Нарăс, 15.

13. Чăваш чěлхи: аваллăхран малашлăха [Конференци материалěсем. В.Г.Егоров çуралнăранпа 120 çул çитнě май]. – Шупашкар, 2000.

## 5§. Г.О.Винокур (1896–1947)

Г.О.Винокур чěлхе пěлěвне аталантарассишěн питě нумай ěçленě. Унăн ěçěсен шучě çěртен те иртет, вěсенче вăл чěлхе ыйтăвěсене çеç мар, литературăпа çыхăннă нумай проблемăсене те хускатнă. Филолог наука аталанăвěн малашлăхне, унăн тěп тěллевěсене витěр курса тăнă, кăткăс япаласене çăмăллăн уçса пама пултарнă, çавăнпа унăн ěçěсем паянхи куншăн та актуаллă.

Григорий Осипович Винокур вырăс чěлхине çав тери юратнă, ку чěлхепе тěлěнмелле илемлě калаçнă. “Русское чувство любви к родному языку, – çырнă Винокур, – представляет собой нечто исключительное. Это не просто любовь, а обожание, страсть, полная преданность, гордая вера”.

1904 çулта Мускава куçса килсенех ашшě ăна К.К.Мазинг училищине вырнаçтарать. Анчах унта вăл нумай вěренмест, хăй ыйтнипе ăна П.Н.Стахов ячěллě гимназие куçараççě. П.Н.Стахов гимназийě вăл вăхăтра Мускаври чи лайăх вěренӳ заведенийěсенчен пěри шутланнă. Кунта авалхи тата çěнě чěлхесене вěрентесси тěп вырăнта тăнă. 1915 çулта Винокур гимназирен лайăх паллăсемпе вěренсе тухать. Малалла университета вěренме кěрсе филолог пулма ěмěтленет. Паллах, университета кěме унăн ăс-тăнě çителěклех пулнă. Ача чухнех вăл поляк чěлхипе ирěклě калаçнă. Гимназире вěреннě чухне латин, грек, нимěç, француз чěлхисене алла илет. Кăшт каярах вара хăй тěллěн акăлчан, славян чěлхисене пурне те тенě пекех, литва, латыш чěлхисене тěплěн вěренет. Çитěнерехпе Григорий Осипович ытла палăрсах кайман чěлхесене те вěренме пуçăнать. Тěслěхрен, ăна тутар грамматики, авалхи еврей словарě тата ытти славистикăран аякра тăракан текстсем кăсăклантараççě.

1916 çулта вара вун тăхăр çулхи Винокур Мускав университетне, историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет. Университетра Г.О.Винокур питĕ тăрăшса вĕренет. Хăйпе пĕрле вĕренекенсене нумай пĕлнипе тĕлĕнтерет.

Григорий Осиповича вĕрентнĕ учительсем: пĕр енчен Н.С.Тихонравов ученикĕсем – М.Н.Сперанский тата П.Н.Сакулин – тарăн пĕлӳллĕ филологсем; тепĕр енчен – Ф.Ф.Фортунатов ученикĕсем – В.К.Поржезинский, В.Н.Щепкин, Н.Н.Дурново, М.М.Покровский, Р.Ф.Брандт, Д.Н.Ушаков, М.Н.Петерсон. Студент чухне Винокур Петроградра А.А.Шахматов лекцийĕсене итлеме çӳренĕ.

Анчах та Винокура Д.Н.Ушаковпа М.Н.Петерсон ытларах килĕшнĕ. Вĕсемпе вăл ĕмĕр тăршшĕпех тачă çыхăну тытнă.

Уйрăмах Григорий Осипович Д.Н.Ушакова юратнă. Д.Н.Ушаков Мускав университетĕнче Ф.Ф.Фортунатов традицийĕсене тăсакансенчен пĕри шутланнă. Д.Н.Ушаков – ученăй-педагог Григорий Осипович пултарулăхне питĕ пысăк витĕм кӳнĕ.

Ушаков Винокур студента тӳрех асăрханă, ăна наука ĕçне явăçтарнă. Григорий Осипович ун патĕнче вырăс чĕлхин историйĕпе диалектологи курсне итленĕ. Çавăн пекех вăл ертсе пыракан Мускав диалектологи комиссийĕн ларăвĕсене çӳренĕ. Каярахпа Винокур Ушаковпа пĕрле вырăс чĕлхи кафедринче ĕçлеме тытăнать. Ăна 4 томлă словарь кăларма пулăшать. Вăл “Словарь Ушакова” ятпа паллă. Винокур словарь ĕçне пит килĕштерсех кайман, апла пулин те, хăй калана тăрăх, Ушаков словарĕпе ĕçленĕ 12 çул ăна малаллахи ĕçре – Пушкин чĕлхин словарьне тĕпченĕ чух – питĕ пулăшнă. Винокур Ушаковран педагогика ĕçне юратма вĕреннĕ. Ушаков витĕмне пулах вăл орфоэпипе орфографи проблемисемпе интересленме тытăннă.

Çапла майпа Д.Н.Ушаков Винокур пурнăçĕнче çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнă. Ушаков вилни çинчен пĕлсен Григорий Осипович çав тери куляннă. Ăна халăх асĕнче нумайлăха хăварассишĕн пĕтĕм вăйне

парса тăрăшнă. Хăйĕн “Русский язык” тата “Русское сценическое произношение” ĕçĕсене ăна халалланă.

Университетра вĕреннĕ чухне Винокур ытларах пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ. Студент вăхăтĕнчех тĕрлĕрен семинарсенче хăйĕн доклачĕсене туха-туха вуласа панă. Тĕслĕхрен, "О языке Мариинского евангелия", "О языке Триоди Моисея Килнина" (рукопись XIII-XIV в.в.), "О синтаксисе Мориса", "О взглядах О.Бехагеля на мелодику и ритмику речи" темăсемпе доклад тунă.

1922 çулта Григорий Осипович университетран вĕренсе тухать. Чи малтанах вăл куçаруçă пулса ĕçлет, унтан преподаватель пулса тăрать.

Винокур хăйĕн наука ĕçĕсенче те, студентсемпе ĕçленĕ чухне те икĕ правилăна пăхăннă:

1. “Наука строится не рассуждениями о ней, а практической работой над материалом. Но эта практическая работа в очень сильной степени облегчается, когда исследователь ясно представляет себе, какой именно материал и для чего, для какой цели он изучает”.

2. “Не может быть подлинного ученого, который неспособен сам обслужить себя со стороны своих потребностей в черновой работе, который не чувствовал бы себя совершенно свободно в атмосфере сырых материалов и так называемых научно-вспомогательных проблем, более того – не считал бы этого своим собственным долгом”.

**Г.О.Винокурăн паллă ĕçĕсем.**. Григорий Осипович Винокур кĕске вăхăтрах питĕ нумай статья, рецензи, кĕнеке çырма ĕлкĕрнĕ. Вĕсенчен паллисем çаксем: “Культура языка”, “Биография и культура”, “Критика поэтического текста” кĕнекесем; “Поэтика. Лингвистика. Социология”, “Проблемы культуры речи”, “Футуристы – строители языка”, “Вольные ямбы Пушкина”, “Язык Бориса Годунова”, “Крымская поэма Пушкина”, “Наследство XVIII в. в стихотворном языке Пушкина”, “Маяковский – новатор языка”.

Г.О.Винокур çырнă “Культура речи” кĕнеке тишкерĕвĕ. Ку кĕнекере Винокур халăха чĕлхе культури тĕлĕшĕнчен воспитани парас тĕллев лартать. “Общее развитие нашей культуры невозможно без культуры лингвистической”, – тет вăл. Çак тĕп шухăш кĕнекен пайĕсене пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса тăрать. “Культура речи” ĕçре чĕлхе пĕлĕвĕпе çыхăннă ыйтусене сўтсе явать. Кĕнеке “О возможности прикладного языкознания” ятлă сыпăкпа пуçланать. Кунта Ф. де Соссюр вĕрентĕвне тишкернĕ. Тĕп тĕллевĕ вара – Ф. де Соссюр вĕрентĕвне малалла аталантарасси. Винокур çапла палăртать: чĕлхе пĕлĕвне синхронире тата диахронире тĕпчемелле.

Кĕнекен тепĕр пайĕнче ученăй стилистика ыйтăвĕсем пирки сăмах тапратать. Кунта вăл Соссюр шухăшласа тупнă пуплевпе стиль хушшинче нимле уйрăмлăх та çук тет. Çак икĕ ăнлав пĕр япаланах пĕлтереççĕ тесе палăртать.

Ĕçĕн малаллахи пайĕсенче Г.О.Винокур хаçат-журнал чĕлхи пирки, футуристсен, НЭП чĕлхи пирки, вулав культури пирки сăмах пуçарать. Пуристсене питĕ сивлет. Вĕсем революцичченхи пулнă традицисемпе пурăнни, “çĕнĕ сăмахсенчен” хăрани Винокура пĕрре те килĕшмест. Çавăн пекех чĕлхери çĕнĕ пулăмсене тиркев куçĕпе пăхмалла марри пирки çырать.

Пуплев культурин ыйтăвĕсем Винокура яланах интереслентернĕ. Унăн тĕллевĕ чĕлхе аталанăвĕн саккунĕсене, унăн функцийĕсене ăнланасси çеç мар, çак саккунсенчен правилăсем йĕркелесе калаçакансем патне çитересси те пулнă

Григорий Осипович чĕлхе тата пуплев культурипе çыхăннă ыйтусемпе тухса калаçма юратнă. Тĕслĕхрен, 1929 çулта хăйĕн “О культуре речи” статйине “Литература хаçатĕнче” пичетлесе кăларать. Çав ыйтупах вăл Малый театрта, Детгизра, МПУра тухса калаçать.

Усă курмалли литература

1. Бархударов С.Г. Григорий Осипович Винокур // Г.О. Винокур. Избр. раб. по русск. яз. – М.: Учпедгиз, 1959.

2. Литературная энциклопедия. – Т.2. – М., 1930. – С.241-242.

3. Петерсон М.Н. Григорий Осипович Винокур // Рус. яз. в шк., 1947. – № 4. – С.72-73.

4. Цейтлин Р.М. Григорий Осипович Винокур. – М., 1965.

5. Памяти талантливого ученого-педагога // Рус. яз. в шк., 1947. – №4. – С.73-74.

## 6§ В.В. Виноградов (1894-1969)

В.В.Виноградов – XX ĕмĕрти филолог, академик. Петроградри историпе филологи институтĕнчен вĕренсе тухнă (1917), А.А.Шахматовăн вĕренекенĕ пулнă. Ленинградри (1920-1929) тата Мускаври (1930-1969) университетсен профессорĕ, МПУ вырăс чĕлхи кафедрин пуçлăхĕ (1945-1969), СССР Наукăсен Академийĕн чĕлхе пĕлĕвĕ институчĕн директорĕ, “Вопросы языкознания” журналăн тĕп редакторĕ (1952-1969).

В.В.Виноградов – XX ĕмĕрти чи паллă филологсенчен пĕри. Уншăн ансăр специализаци, пĕр енлĕ тĕпчев интересĕ ют пулнă. В.В.Виноградов вырăс илемлĕ литературин теорийĕпе, сăвăллă чĕлхепе, стилистикăпа, чĕлхе нормин теорийĕпе, грамматикăпа, вырăс чĕлхин историйĕпе, лексикăпа, лексикографипе питĕ нумай ĕçленĕ.

В.В.Виноградов ĕçĕсем хушшинче грамматика тĕпчевĕсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вăл вырăс грамматикин ыйтăвĕсемпе: морфологипе, сăмах майлашăвĕпе, синтаксиспа аллă ĕç ытла çырнă. Вĕсем вырăс тата тĕнче чĕлхе пĕлĕвĕн ылтăн фондне кĕнĕ.

Чи малтанах кунта çак ĕçсене каласа тухма пулать: “Современный русский язык” (1938), “О формах слова” (1944), “Русский язык. Грамматические учения о слове” (1940), “О грамматической омонимии в современном русском языке” (1940), “О категории модальности и модальных словах в русском языке” (1950), “Понятие синтагмы в синтаксисе русского языка” (1950), “Грамматика русского языка” (1952-1954), “Словообразование в его отношении к грамматике и

лексикологии" (1952), "Вопросы изучения словосочетаний" (1954), "Из истории изучения русского синтаксиса".

Пётём çак ёçсем хушшинче "Русский язык. Грамматическое учение о слове" (1947) уйрăмах паллă ёç.

В.В.Виноградовăн ёçёсенче вырăс грамматикин теорийён тёп ыйтăвёсем вырăн тупнă: грамматика предмечё; сăмах грамматика единици пулни; пуплев пайёсен системи; морфологипе синтаксис пёр-пёринпе килёшсе тăни тата сăмах пулăвё; сăмах пулăвё тата лексика; сăмах тытăмё; синтаксисăн тёп категорийёсем тата вёсем пёр-пёринпе çыхăнни; грамматика системин пётёмёшле иерархийё тата унăн пайёсем пёр-пёринпе çыхăнни.

Вăрçă умёнхи 30-мёш çулсем Винсградовшăн чи йывăр çулсем пулнă. Çав вăхăтрах вёсем унăн чи тухăçлă, чи творчествăллă çулсем шутланаççё.

"О художественной прозе" (М., 1930) кёнеке хыççăн унăн "Очерки по истории русского литературного языка XVII-XIX вв." (пёрремёш кăларăм – М.,1934; иккёмёш кăларăм – М., 1938) тухнă.

"Язык Пушкина" (М.; Л., 1935), "Стиль Пушкина" (М., 1941), "Современный русский язык" (1938), "Стиль «Пиковой дамы»" (1936), "Язык Гоголя" (1936), "О языке Гоголя" (1936), "Стиль прозы Лермонтова" (1941) т.ы.те.

Çак ёçсем автора тёнчипе паллă çын тунă. В.В.Виноградовăн "Очерки по истории русского литературного языка" кёнеке пысăк пёлтерёшлё пулнă.

Тёп ёçёсем:

1. Очерки по истории русского литературного языка XIII-XIX вв.

2. Современный русский язык (1938).

3. О формах слова (1944).

4. Русский язык. Грамматическое учение о слове (1940).

5. О грамматической омонимии в современном русском языке (1940).

6. О категории модальности и модальных словах в русском языке (1950).

7. Избранные труды. История русского литературного языка. - М.: Наука, 1978.

8. Избранные труды. Исследования по русской грамматике. – М.: Наука, 1975.

9. История русских лингвистических учений. – М.: Высш. шк., 1978.

Усӑ курмалли литература

1. Русский язык: Энциклопедия. – М., 1979.

2. Большая советская энциклопедия. – М., 1979.

3. История советского языкознания: Хрестоматия. – М.: Высш. шк., 1981.

## 7§. Е.Д.Поливанов (1891-1938)

Е.Д.Поливанов – паллӑ чӗлхеҫӗ, чӗлхе пӗлӗвӗн теоретикӗ. Хӗвелтухӑҫӗнчи халӑхсен историне, чӗлхисене, культурине тӗпчесе пӗлекен пултаруллӑ та ятлӑ-сумлӑ ӑсчах, нумай чӗлхе пӗлекен ҫын. Унӑн ятне пирӗн ҫӗршывра кӑна мар, ют ҫӗршывсенче те лайӑх пӗлеҫҫӗ. Вӑл чӗлхе пӗлӗвӗнче, педагогикӑра, литература пӗлӗвӗнче, историре пысӑк еткерлӗх хӑварнӑ.

Ученӑй чӗлхесене пур енчен те тӗпчеме тӑрӑшнӑ. Ӑна фонологи, морфологи, синтаксис, лексика, фразеологи, диалектологи, этимологи кӑсӑклантарнӑ. Ҫав хушӑрах вӑл словарьсем, букварьсем, вӗренӳ кӗнекисемпе пособисем хатӗрленӗ. Евгений Дмитриевича чӗлхесен халӑх пурнӑҫӗнчи вырӑнӗ те интереслентернӗ. Ҫавна май унӑн интеллигентсен калаҫӑвӗ ҫинчен ҫырнӑ статьясем кун ҫути курнӑ.

Нумай ӗҫлеме пултаракан ҫын пулни Поливанова чӗлхесене вӗренес тӗлӗшри пултарулӑхне аталантарма пулӑшнӑ, тӗлӗнмелле ҫӗнӗ тата чӑрсӑр тӗллевсем патне илсе пынӑ.

Евгений Дмитриевич Поливанов Смоленск хулинче ҫуралнӑ. Унӑн ашшӗ, Дмитрий Михайлович, хӑйӗн ӗҫне-хӗлне Императорӑн усӑ библиотекийӗн ӗҫченӗ пулса тытӑнать. Каярах пилӗк ҫул хушши гварди ҫар

службинче тăрать, ун хыççăн 30 çула яхăн чугун çул управленийĕнче ĕçлесе пурăнать.

Евгений Дмитриевичăн амăшĕ, Екатерина Яковлевна, тĕрлĕ енпе палăрнă çын. Вăлах кĕнеке-хаçат кăларакан та, çыравçă та, журналист та, тăлмачă та пулнă.

1908 çулта Рига хулинчи Александровски гимназие пĕтернĕ хыççăн Евгений Дмитриевич Питĕрти университетăн историпе филологи факультетне (славянпа вырăс уйрăмне) вĕренме кĕрет. Çулталăкран Хĕвелтухăç академийĕнче ăс пухма пуçлать. Ку вăл Хĕвелтухăç чĕлхисен курсĕ евĕр пулнă. Унта ытларах çар службипе çыхăннă çынсем, дипломатсем, чĕлхесемпе тарăнрах паллашма кăмăл тунă çынсем вĕреннĕ.

Ку вăхăтра историпе филологи факультетĕнче питĕ пултаруллă ученăйсем вĕрентнĕ. Евгений Дмитриевич малтанах вĕсенчен пĕрне суйласа илет, хăйĕн юлашки кунĕччченех унăн вĕренекенĕ пулса юлать. Вăл – Иван Александрович Бодуэн де Куртенэ, çиччĕмĕш теçеткене кĕрекен çын пулнă.

Е.Д.Поливанов Бодуэнăн вĕренекенĕ çеç мар, Л.В.Щербăн вĕренекенĕ те пулнă. Евгений Дмитриевич хăй эксперименталлă фонетика предмета килĕштернĕ.

1912 çулта университетран вĕренсе тухсан Бодуэн сĕннипе Поливанова танлаштаруллă чĕлхесен кафедрине ĕçлеме хăвараççĕ.

Икĕ çул çамрăк магистрант диссертаци çырас ĕçре вăй хурать. Ăна хатĕрлесе çитеричченех нумай вăхăт тата вăй пĕтермелле пулать. Унсăр пуçне çав вăхăтрах лекцисем итлемелле, вуламалла пулнă. Вăл укçа ĕçлесе илес тĕллевпе хĕрарăмсен педагогика курсĕнче çĕнĕ чĕлхесене вĕрентнĕ.

1914 çулта Евгений Дмитриевич Хĕвелтухăç факультечĕн доценчĕ пулса тăрать. Çак çулсенче унăн малтанхи яппун чĕлхин акцентуацийĕпе çырнă ĕçĕсем пичетленсе тухаççĕ. Анчах та, шел пулин те, вĕсене халĕ те пурне те тупса çитереймен.

Поливанов пуринчен малтан яппун юррисенче пусăм пуррине палăртать, пĕрремĕш хут яппун калаçăвĕнчи уйрăмлăхсене тĕплĕн тишкерме пуçлать. Вăл нумай

уйрӑмлӑхсене тӗплӗн тишкерме пуҫлать. Вӑл нумай текст пухать, вырӑнти калаҫу сӑмахӗсене тупса палӑртать. Яппун чӗлхин фонетикин историне тӗпчесе чылай ӗҫ ҫырать. Вӑл яппун тексчӗсене вырӑс транскрипцийӗпе ҫырнине те манмалла мар.

Ҫавӑн пекех вӑл Китай чӗлхин тӗслӗхӗсене вырӑс транскрипцийӗпе ҫырас ыйтусемпе нумай ӗҫлет. Унӑн дунгановеденипе ҫырнӑ ӗҫӗсене те асӑнмасӑр хӑварма ҫук.

Е.Д.Поливановӑн пурнӑҫӗнчи чи кӑсӑклӑ вӑхӑт 1917 ҫултан пуҫланать. Ку тапхӑрта вӑл тӑван халӑхшӑн усӑллӑ ҫын пулас тесе нумай тӑрӑшать. Пӗтӗм Раҫҫейри хресчен депутачӗсен ҫар пичечӗн Кабинетӗнче ӗҫлет. Ҫак кабинетра ытларах салтаксем валли вӗренмелли кӗнекесем хатӗрленӗ, ҫутӗҫ ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑннӑ статьясемпе брошюрӑсем пичетленӗ. Ҫав хушӑрах тӗпчевҫӗ "Ҫӗнӗ пурнӑҫ" хаҫатра та вӑй хурать.

1919 ҫул Поливановшӑн икӗ паллӑ ӗҫпе палӑрса юлать. Пӗрремӗшӗ – вӑл РКП членӗ пулса тӑрать, иккӗмӗшӗ – Питӗр университечӗн ӑслӑлӑх канашӗ ӑна профессора суйлать.

1921 ҫул пуҫламӑшӗнче Е.Д.Поливанов Мускава куҫса каять. Унта вӑл Коминтернти Инҫет Хӗвелтухӑҫ секцийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ пулса ӗҫлет, ҫав вӑхӑтрах университетра вӗрентет. Кӗркунне Коминтерн ӑна Ташкента командировкӑна ярать, унта темиҫе ҫул пурӑнать. Кунта вӑл нумай ӗҫлет. Сыхланса юлнӑ документсем ҫине таянса унӑн ӗҫӗсен хӑш-пӗр ячӗсене палӑртма пулать. Тӗслӗхрен, "Вырӑссем валли ҫырнӑ узбек чӗлхин букварӗ", "Халӑх эпосӗ", "Европа шкулӗсем валли йӗркеленӗ тӗне хирӗҫле калаҫусем". Вӑл кӗнекесенчен хӑшӗсем кун ҫути курма пултарнӑ, сӑмахран, вырӑссем валли ҫырнӑ узбек чӗлхин кӗнеки ("Узбек чӗлхин пӗлӗвӗ"), вырӑс букварӗ ("Мак") т. ыт. те. Вӗренӳ-методика ӗҫӗсем тата статйисем вырӑс чӗлхине наци шкулӗсенче вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫлекенсемшӗн пысӑк пахалӑхлӑ пулнӑ.

Паллах, меслетлӗхе вӗрентес тесен Вӑтам Ази чӗлхисене тӗплӗн пӗлмелле пулнӑ. Ҫак тӗллеве Поливанов кӗске вӑхӑтрах пурнӑҫланӑ. "Ӑслӑлӑх тата Ҫутӗҫ" журналӑн пӗрремӗш номерӗнче "Ташкент

диалекчĕн сасăсен пуххи” ĕçĕ пичетленет. Каярах вăл узбек халăхĕн калаçу чĕлхине тĕпчеме тытăнать, анчах та ку ĕç вĕçленмесĕрех юлать.

Узбек диалектологийĕпе ĕçлекен пĕр тĕпчевçĕ-тюрколог та паянхи кун Поливанов ĕçĕсене асăрхамасăр хăварма пултараймасть.

Революци хыççăн ăслăлăха тĕпе хурса йĕркеленĕ çырулăх чи малтанах якутсен пулнă. 1917 çул вĕçĕнче С.А.Новгородовпа Поливанов букварь пичетлесе кăлараççĕ. 1922 çулта вара азербайджан чĕлхин латин алфавичĕ кун çути курать.

Çак çултах Узбекистанри çутĕç ĕçченĕсен иккĕмĕш съезчĕ пулса иртет. Ку съездра узбек çырулăхне латинизацилес тĕлĕшпе икĕ доклад вуланă пулнă, вĕсенчен пĕри – Поливановăн. Тепĕр çулталăкран Поливановăн турккă çырулăхне халалланă “Латин чĕлхипе çырассин ыйтăвĕсем” брошюра тухать. Ăна Мускавра Хĕвелтухăç институчĕ кăларать. Е.Д.Поливанов çак ĕçе активлă хутшăнать, çирĕм ытла ĕç пичетлет. Пурте вĕсем латинизаци теорипе тата практикипе çыхăннă.

1925 çулта Евгений Дмитриевич ăслăлăх ĕçĕсемпе нумай тата тăрăшса ĕçлет. Вăл пултаруллă ĕçленине В.В.Грузов каланинчен пĕлме пултаратпăр: “Пĕррехинче çуркунне издательствăна Поливанов профессор хăйĕн çĕнĕ ĕçĕсемшĕн аванс ыйтма килчĕ. Анчах çакă палăрчĕ – профессор иртнĕ ĕçне те пурнăçласа çитереймен пулнă. Çавна пула ăна аванс пама килĕшмерĕç. Вара Поливанов хăйне ĕçлеме пушă сĕтел кăтартма ыйтрĕ. Пушă сĕтел тупăнчĕ... Поливанов çак сĕтел хушшине ларса хăвăрт ĕçлеме пуçларĕ. Тăватă сехет хушшинче вăл статья çырма пултарчĕ. Кĕске вăхăтрах лингвистика темипе статья çырма пултарнишĕн издательствăра ĕçлекенсем тĕлĕнчĕç. Пичетленĕ чухне те пысăк улшăнусемех кĕртмелле пулмарĕ”.

Ку статьяна е узбек диалектологине халаллани, е эволюци теорипе çырни тесе шутлаççĕ.

20-мĕш çулсенче Евгений Дмитриевич чĕлхе аталанăвĕпе çыхăннă ыйтусемпе тĕрлĕ ĕçсем пичетлет, докладсем вулать. Ташкентра эволюци теорийĕпе

узбекла пĕчĕкçĕ кĕнеке кăларать. Çакăн пек кĕнеке вăл вырăс чĕлхипе те кăларасшăн пулнă.

Е.Д.Поливановăн эволюци ыйтăвĕсемпе çырнă шухăшĕсем паянхи кун та ăслăлăхшăн питĕ кăсăклă. Тĕпчевçĕсен интересĕ пысăк пулни 1964 çулхи кĕркунне Самаркандра ирттернĕ конференцире Поливанова халалланă докладсенчен те курăнать.

Евгений Дмитриевич нумай чĕлхе пĕлнĕ. Хăй шутланă тăрăх вăл 16 чĕлхене алла илме пултарнă: француз, нимĕç, акăлчан, латин, грек, испан, серб, поляк, китай, яппун, тутар, узбек, туркмен, казах, кăркăс, таджик чĕлхисем. Анчах та ку çеç мар, вăл тата абхаз, азербайджан, албан, ассири, араб, грузи, дунган, калмăк, каракалпак, корей, мордва, тагал, тибет, турккă, уйгур, чечен, чăваш, эстон чĕлхисене (тен, тата ыттисене те) пĕлни паллă.

Поливанов çĕнĕ чĕлхесене питĕ хăвăрт вĕреннĕ. Н.А.Баскаков каланă тăрăх, Нукусра Евгений Дмитриевич уйăх хушшинчех каракалпак чĕлхине алла илме пултарнă. Çак чĕлхепе вăл каракалпак халăхне пĕр йăнăшмасăр доклад вуласа панă.

Е.Д.Поливанов пурнăçĕнчи чи пултаруллă тата кăткăс тапхăр – 1926-1929 çулсем. Çак вăхăтра вăл РАНИОН ертӳçи В.М.Фриче академик чĕннипе Мускава килет. РАНИОНта лингвистика ĕçĕсен ертӳçи пулса тăрать. Мускаври Фортунатов шкулĕн представителĕ, Чĕлхе тата шухăшлав институчĕн лингвистика секцийĕн членĕ, Хĕвелтухăç институчĕн профессорĕ, тăван чĕлхе секцийĕн ертӳçи, лингвистика пайĕн бюро членĕ, каярах РАНИОНти лингвистика секцийĕн председателĕ пулса ĕçлет.

"Чĕлхе çинчен çĕнĕлле вĕрентессине" канонизацилес текен çынсемшĕн Поливанов хаяр тăшман пулса тăрать. Вĕсем çак вĕрентĕве пĕртен-пĕр марксистла вĕрентӳ тенĕ. Çавăнпа та Поливанов вĕсене хирĕç кĕрешнĕ. Çак ыйтăва татса пама дискусси йĕркелеççĕ, каярах ăна "Поливанов дискуссийĕ" теме пуçлаççĕ.

1929 çулта Евгений Дмитриевича хăй йышăнакан должноçсенчен хăтараççĕ. Вара вăл Наркомпрос чĕнĕвĕпе усă курса Самарканда куçса каять. Çак çулах

унăн алçырăвĕсене . пичетлеме чарăнаççĕ. Сăмахран, "Чĕлхе пĕлĕвĕн кўртĕмĕ" ĕçĕн иккĕмĕш томне пичетлеймен пулас, мĕншĕн тесен вăл халĕ те тупăнман. Ку ăслăлăхшăн питĕ пысăк çухату.

1929 çулта тĕпчевçĕ УЗГНИИ лингвистика секторĕн профессорĕ пулса ĕçлет. Çак сектор узбек халăхĕн чĕрĕ калаçăвне тĕпчессине пысăк вырăна хунă пулнă.

1929 çулта йышăннă Вăтам Ази чĕлхисене тĕпчессипе çыхăннă программа пурнăçа кĕрсе пырать. Ку ĕçе пурнăçлас тĕллевпе йĕркеленĕ экспедицисене Поливанов активлă хутшăнать.

УЗГНИИнче Евгений Дмитриевич педагогика тата редакци ĕçĕсене пурнăçлать. Вăл "Ăслăлăх шухăшĕ" журналăн корректурине вулать, кĕнекесем йĕркелес ĕçе хутшăнать. Уйгур семинарĕн ертўçи пулса тăрать. Вырăс тата ют чĕлхесене вĕрентес методикăпа консультацисем ирттерет, вĕрентекенсен хатĕрленў курсĕнче ĕçлет, пуçламăш шкулсем валли вырăс чĕлхипе программа проектне йĕркелет. Çав вăхăтрах вăл аспирантсене вĕрентет, пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ тата вырăс чĕлхин ăслăлăх грамматики предмечĕсемпе лекцисем вулать.

1934 çул вĕçĕнче Евгений Дмитриевич Фрунзе хулине куçать, унта вăл педагогика институтĕнче ĕçлет, ытларах кăркăс тата дунган чĕлхисене тĕпчет. Кунсăр пуçне этнографине, литературăна, фольклора нумай тишкерет.

1937 çулхи пуш уйăхĕнче Е.Д.Поливанова арестлеççĕ, часах вăл çĕре кĕрет.

Çулсем иртеççĕ, самана улшăнать. Тĕрĕслĕх çиеле тухать. 1963 çулхи пуш уйăхĕнче Евгений Дмитриевич Поливановăн таса ятне тавăраççĕ.

Е.Д.Поливановăн паллă ĕçĕсем:

1. Узбек чĕлхине вĕренмелли кўртĕм курс – Ташкент, 1925.

2. "Мăкăнь" – вырăс букварĕ. – Ташкент, 1926.

3. Туркка çырулăхĕнчи латин чĕлхин шрифчĕн ыйтăвĕ. – М., 1923.

4. Узбек чĕлхин кĕске грамматики. – Ташкент, 1926.

5. Узбек халăхĕн йăлипе культурин уйрăмлăхĕсем. – Ташкент, 1926.

6. Китай чĕлхин сасă тытăмне кĕскен сăнласа пани. – М., 1927.

7. Чĕлхе пĕлĕвĕн кўртĕмĕ: Хĕвелтухăçпа çыхăннă аслă вĕренў заведенийĕсенчи вĕренекенсем валли. – Л., 1928.

8. Хальхи китай чĕлхин грамматики. – М., 1930.

9. Марксистла чĕлхе пĕлĕвĕшĕн. – М., 1931.

10. Пусăм пĕлтерĕшĕ тавра. – М., 1971.

Усă курмалли литература

1. Алпатов В. Три япониста // Знание – сила. – 1992. – №1. – С.105-113.

2. Крысин Л.П. Евгений Дмитриевич Поливанов – социолог языка: К 90-летию со дня рождения // Рус. яз. в шк. – 1981. – №2. – С.98-103.

3. Ларцев В.Г. Евгений Дмитриевич Поливанов: Страницы жизни и деятельности. – М., 1988. – С.5-7.

4. Леонтьев А.А. Евгений Дмитриевич Поливанов и его вклад в общее языкознание. – М., 1983. – С.5-17.

5. Поливанов Е.Д. Избранные работы. Труды по восточному и общему языкознанию. – М., 1991. – С.7-9.

6. Поливанов Е.Д. Статьи по общему языкознанию. – М., 1968. – С.7-30.

## 8§. А.И.Смирницкий (1903-1954)

А.И.Смирницкий вырăссен паллă филологĕ тата чĕлхеçи пулнă.

Александр пĕчĕк чухне ўкерме питĕ юратнă. Çак таланта унăнне пурте асăрханă. 10 çул тултарсан ачана Юон ятлă ун чухнехи паллă художник хăйĕн шкулне вĕренме илет. Каярахпа Александр Архипов патĕнче пĕлў илнĕ. "Манăн ача художниках пулать", – тесе шутланă Мария Николаевна Смирницкая, Александрăн амăшĕ. Вăл çамрăк чухне, Бестужевсен курсĕнче вĕренсе тухнăскер, ялта учительница пулса ĕçленĕ. Мария Николаевна чĕлхепе литературăна питĕ юратнă, ăна пулах Александр та чĕлхепе тата литературăпа

интересленме пуçлать, 1920 çулта Мускав университетне историпе филологи факультечĕн романпа германи чĕлхисен уйрăмне вĕренме кĕрет. Анчах та вăл техникăна та, ўкерес ĕçе те манса кайман. Вĕреннĕ вăхăтра техника ĕçĕпе кăсăкланма, ўкерме вăхăт тупнă, аслă математикăна та вĕреннĕ.

Мускав университетне Смирницкий 1924 çулта вĕренсе пĕтерет. Университетран вĕренсе тухсан панă свидетельство çинче, экзамен тытнă ытти предметсем хушшинче çакăн пек чĕлхесем пур: латин, гот, нимĕç, швед, акăлчан.

1926 çултан пуçласа 1929 çулччен Смирницкий РАНИОНта (Раççей Ассоциацийĕн обществăлла наукăсен ăслăлăх тĕпчев институчĕ) аспирантурăра вĕреннĕ. Унта унăн акăлчан тата авалхи скандинави чĕлхисемпе занятисем иртнĕ. Аспирантура вĕренсе пĕтерсен Смирницкий институтрах ĕçлеме юлать. Вăл унта пĕрремĕш разрядлă ăслăлăх сотрудникĕ пулса ĕçлет. Педагогика ĕçĕ-хĕлĕпе А.И.Смирницкий 25 çул хушши ĕçлет. Мĕн-мĕн туман пулĕ паллă чĕлхеçĕ çак вăхăтра: акăлчан чĕлхин историйĕпе, германи тата гот чĕлхе пĕлĕвĕн кўртĕмĕпе хальхи акăлчан чĕлхин историйĕ предметсемпе Мускав университетĕнче лекцисем вуланă, Мускаври философи, литература тата истори институтĕнче, ют чĕлхесен педагогика институтĕнче ĕçленĕ, аспирантсен ăслăх ĕçĕсене ертсе пынă, кафедра пуçлăхĕ те пулса ĕçленĕ, Чулхула, Минск, Харьков хулисене лекцисем вулама çўренĕ.

1940 çулта Смирницкий акăлчан филологийĕн кафедрин профессорĕ ятне илнĕ. 1941 çулта Мускав патшалăх педагогика институтĕнче ют чĕлхесен кафедра пуçлăхĕ, 1942 çултан пуçласа Мускав университетĕнчи филологи факультетĕнче романпа германи чĕлхисен пĕлĕвĕн кафедра профессорĕ пулса ĕçлеме пуçлать, 1946 çулта вара ăна çак кафедра пуçлăхне лартаççĕ. Çав вăхăтрах Александр Смирницкий Ăслăлăх Академийĕн Чĕлхе тата шухăшлав (мышление) институтĕнче наука сотрудникĕ пулса ĕçлет. 1950 çулта Наука Академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕн институчĕ уçăлать. Унта Смирницкий

германи чёлхисен секторне йёркелесе ертсе пырать, Мускав университечĕн аспиранчĕсемпе те ĕçлет.

Смирницкийĕн педагогикăри ĕçĕ-хĕлне наукăпа тĕпчев ĕçĕ-хĕлĕнчен уйăрса илме май çук. "Лекцисем вуламасăр, тарăн шухăшлă, çĕнĕ те ĕнентерӳллĕ чĕлхе материалĕсем паракан ыйтусемсĕр пурнăç пĕлтерĕшĕ çук", – тенĕ Смирницкий. Унăн пĕрремĕш хут пичетленнĕ ĕçĕ аспирантурăра вĕреннĕ чухне скандинави чĕлхипе çыхăннă тĕпчев ĕçĕ пулнă. П.П.Свешниковпа пĕрле Смирницкий ют çĕршыв çыннисене вĕренмелли вырăс чĕлхин учебникне кăларать. Ку кĕнекере вырăс чĕлхине мĕнле вĕрентесси тата глагол тĕсĕсем çинчен каланă. Глагол тĕсĕсем çинчен калакан пайне Смирницкий хăйĕн тĕпчев ĕçĕсене тĕпе хурса çырнă. Хальхи акăлчан чĕлхин курсне темиçе çул хушши вулани паллă чĕлхеçĕне çакăн пек кĕнекесем кăларма май панă:

1) Объективность существования языка. – М., 1954.

2) К вопросу о слове. – М., 1954.

3) Лексическое и грамматическое в слове. – М., 1955.

Смирницкий наукăра питĕ принциплă çын пулнă. Чĕлхе пĕлĕвĕшĕн питĕ йывăр самантсенче вăл хăйĕн шухăшĕсене çине тăрсах хӳтĕленĕ, нимĕнле компромисса та (килĕшĕве те) пăхса тăман.

Тĕпчевçĕ çав тери сисĕмлĕ тата тимлĕ çын пулнă. Çавăнпа та вăл наукăра пулса иртекен тавлашусене, хирĕçӳсене, калаçусене сӳтсе явма юратнă. Çак тавлашусемпе хирĕçӳсем çĕнĕрен те çĕнĕ шухăшсем, наука материалĕсем çырмалли çулсем уçса панă.

Смирницкий хăй хыççăн нумай ĕç хăварнă: пичетлемеллисем, алçырусем, кĕскен çырса пынисем, шутласа хунă тĕрленчĕксем, лекци конспекчĕсем. Çак материалсенчен хăшĕсем пичетленсе те тухман, шухăшĕсем те малалла аталанайман.

Чĕлхепе шухăшлав шайлашăвĕнчи татса паман ыйтусем, чĕлхен объективлăхĕ, чĕлхе единицисем, лексика тата грамматика ыйтăвĕсем – ытларах çак темăсем çине таянса ĕçленĕ паллă чĕлхеçĕ.

Чӗлхе ӑҫта тата мӗнле пурри ҫинчен Смирницкий ӑнланмалла та уҫҫӑн ӑнлантарса панӑ: чӗлхе чӑнах та пуплевре палӑрать. Чӗлхе хайне кӑна тивӗҫлӗ обществӑлла пулӑм, вӑл пуплевре хайнеевӗрлӗ: чӗлхен шал енӗ сасӑра тӗвӗленет, тулаш енӗ вара пуплеври янӑравпа, ҫыннӑн пуҫӗнчи шухӑшлавпа та ҫыхӑнса тӑрать.

Смирницкий каланӑ тӑрӑх, чӗлхепе пуплев пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Чӗлхе пуплевре ҫуралнӑ сӑмахсемпе, сӑмах формисемпе, тулли предложенисемпе пуянланать. А.Смирницкий Соссюр шухӑшне уҫса пама пултарнӑ. Соссюр йӑнӑшӗ чӗлхепе пуплеве уйӑрнинче мар, чӗлхепе пуплеве тӗрӗс мар уйӑрнинче пулнӑ.

Смирницкий 3 тӗслӗ чӗлхе пайрӑмне уйӑрать:

1) конкретлӑ-материаллӑ единицӑсем (пуҫламӑш единицӑсем): морфемӑсем, кӑткӑс единицӑсем, сӑмахсем, фразеологи единицисем;

2) тытӑм единицисем;

3) интонаци единицисем.

А.И.Смирницкий авалхи исланди чӗлхине питӗ хытӑ юратнӑ, унпа нумай ӗҫленӗ: синтаксисӗпе статьясем ҫырнӑ, ҫак ӗҫе тӗпе хурса авалхи германи чӗлхисен курсӗ валли ҫӗнӗ материалсем пухнӑ.

Смирницкий хӑйӗн “Объективность существования языка” кӗнекинче чӗлхепе пуплев шайлашӑвӗ ҫинчен пӗтӗмӗшле ҫырса панӑ. Смирницкий пуплеве татӑклӑ янӑравпа конкретлӑ чӗлхе пӗлтерӗшӗн ҫыхӑнӑвӗ тесе палӑртать, чӗлхе вара пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑракан единицӑсен пӗрлӗхӗ тата вӗсем хушшинчи ҫыхӑну, тет. Чӗлхе пуплевре нумай енлӗ палӑракан компонентсен пӗрлӗхӗ. Енчен те пуплев хутшӑнма пултарни пулсан, чӗлхе вара хутшӑну хатӗрӗ пулать. Чӗлхепе пуплев пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, чӗлхе пуплевре аталанать.

Смирницкий ҫавӑн пекех чӗлхен тӗп единицине – сӑмаха – вӗрентес е тӗпчесе пӗлес ӗҫре нумай вӑй хунӑ. Сӑмах, ун шучӗпе, лексика единици те, ҫав вӑхӑтрах грамматика единици те пулать. Сӑмахӑн универсаллӑхӗ (нумай тӗрлӗ пулни) сӑмахра лексика тата грамматика енӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑнинче палӑрать. Сӑмахра лексика тата грамматика

пĕлтерĕшĕсен ҫыхăнăвĕ унăн форма тĕлĕшĕнчи тулли йĕркеленĕвĕ патне илсе ҫитерет, унăн чĕлхере усă курнă чухнехи ҫирĕплĕхне парса тăрать. Сăмахăн форма тĕлĕшĕнчен килекен тулли йĕркеленĕвне палăртса, Смирницкий сăмахăн уйрăмлăхĕ тата пĕрпеклĕхĕ ҫинчен калакан кăткăс ыйтăва анализ тăвать (уйăрса тĕплĕн тишкерет). Вăл сăмах формисене (кӳлеписене), типоформăсене, грамматика формисене (кӳлеписене) уйăрса палăртать. Сăмах форми тесе мĕнле те пулин грамматика формипе чăн сăмах хушшинчи ҫыхăнăва палăртать (деревня – именительный падеж единственного числа), типоформа тесе паллă грамматика формипе сăмахсен грамматика типĕсем хушшинчи ҫыхăнăва, сăмахăн конкретлă пĕлтерĕшĕнчен пăрса ярса, калать (город, поселок, дом – именительный падеж единственного числа мужского рода). Грамматика форми хăйĕн тытăмĕнче сăмахсен тĕрлĕрен типĕсене пĕрлештерсе тăрать.

Грамматика пулăмĕсене тишкернĕ чух шалаш енне – хутшăну пĕлтерĕшне тата тулаш енне - ҫак хутшăнăва улшăнура тата сăмахсен ҫыхăнаслăхĕнче палăртса калассине шута илмелле.

А.И.Смирницкийăн паллă ĕҫĕсем:

1. Чĕлхе пуррине тĕрĕс ҫутатни. – М., 1954.
2. Авалхи акăлчан чĕлхи. – М., 1955.
3. Акăлчан чĕлхин лексикологийĕ. – М., 1956.
4. Акăлчан чĕлхин синтаксисĕ. – М., 1957.
5. Акăлчан чĕлхин морфологийĕ. – М., 1959
6. Танлаштаруллă истори меслечĕ тата чĕлхесен хурăнташлăхне палăртни. – М., 1958.

Усă курмалли литература

1. Медникова Э.М. Александр Иванович Смирницкий. – М., 1967.

2. Кондрашов Н.А. История лингвистических учений. – М.: Просвещение, 1979.

## 9§. Б.А.Серебренников (1915-1989)

Б.А.Серебренников – академик, паллă чĕлхеçĕ, тюрколог, финно-угровед, пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн специалисчĕ. Чĕлхеçĕн ячĕ тата ĕçĕсем пирĕн çĕршывра кăна мар, унăн тулашĕнче те анлă палăрнă.

Тĕпчевçĕ 1931-1933 çулсенче Мускаври çĕн чĕлхесен институтĕнче нимĕç чĕлхин куçаруçи пулма вĕреннĕ. Кунпа çеç çырлахман, Мускаври истори, философи тата литература институтĕнчи филологи факультетĕнче ăс пухнă. 1940 çулта, институт пĕтерсен, Серебренников классикăлла чĕлхе тата литература специальноçне алла илнĕ. Çав çулах вăл çара кайнă. Аслă Аттелĕх вăрçине пĕрремĕш кунĕнчен пуçласа юлашки кунччен утса тухнă, тăшмана хирĕç çапăçнă. Çапах та вăл чĕлхе пĕлĕвĕпе интересленме пăрахман. Фронтран таврăнсан Серебренников Мускав патшалăх университетĕнчи филологи факультечĕн индоевропа чĕлхисен танлаштаруллă грамматики кафедри çумĕнчи аспирантурăра вĕреннĕ. 1949 çулта вăл кандидат диссертацине хӳтĕленĕ (диссертаци теми: “Артикль теорийĕн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсем тата авалхи грек чĕлхинче артикльпе усă курассин семантика йывăрлăхĕ”), çав кафедрăрах аслă преподаватель пулса ĕçлеме пуçланă. Ученăйăн тĕнчекурăмне, пĕлĕвне, пултаруллăхне шута илсе 1950 çулта Борис Александровича СССР Наукăсен Академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕн институчĕн директор çумĕ пулса ĕçлеме сĕнеççĕ. 1953 çулта вара вăл Наукăсен Академийĕн член-корреспонденчĕ пулса тăрать, темиçе çул хушши Чĕлхе пĕлĕвĕн институтĕнче директор пулса ĕçлет. Çак институтри икĕ пайăн: пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн тата финно-угор чĕлхисен секторĕсене ертсе пырать. 1956 çулта вара Серебренников “Категория времени и вида в финно-угорских языках пермской и волжской групп” ятлă доктор диссертацине хӳтĕлет. Ку ĕç монографи евĕр 1960 çулта пичетленсе тухнă. 1985 çулта ăна СССР Наукăсен Академийĕн чăн членне суйлаççĕ.

Б.А.Серебренниковăн диссертаци ĕçĕ финн-угор чĕлхе пĕлĕвĕпе, уйрăмах мари чĕлхипе çыхăннă

малтанхи чи калăплă ĕçсенчен пĕри шутланать. Мари чĕлхипе интересленме вара Борис Александрович тахçанах пуçланă. Сăлтавĕ вăл перм чĕлхисен историне юратса тĕпченинче пулас. Çак ушкăна кĕрекен коми чĕлхине вара вăл мĕн ачаранах пĕлнĕ. 1952 çултах Серебренников "О видовых значениях прошедшего очевидного и неочевидного в лугово-восточном марийском языке" ятлă статьяпа конференцире тухса калаçать, 1955 çулта унăн "О природе прошедшего неочевидного времени в пермских и марийских языках" ятлă çĕнĕ ĕçĕ кун çути курать.

Сăмах май çакна асăнса хăвармалла: финн-угор тата тĕрĕк чĕлхисене лайăх пĕлни, танлаштаруллă-истори меслетне аван чухлани, анлă, пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлӳлĕхĕ Борис Александровича тĕпчекен йывăрлăхсене тĕрĕс татса пама, нумай енлĕ япаласен расна пĕлтерĕшĕсене уçса пама май панă. Тĕслĕхрен, Б.А.Серебренников мари чĕлхинче грамматика вид (тĕс) категорийĕ çук, сăмах тăвакан суффикссемпе тата хутлă глаголсемпе йĕркелекен тĕс класĕсем (видовые классы) çеç тесе çирĕп ĕнентернĕ. Унсăр пуçне мари чĕлхе пĕлĕвĕнче вăл чи малтан авалхи мари чĕлхинчи падежсен системине чĕртсе тăратас тесе тăрăшса пăхнă.

Унăн тата тепĕр ĕçне палăртса хăвармалла: "О современной и древней системе марийских падежей" статья (1964). Серебренников кунта авалхи мари чĕлхинче 12 падеж пулнине ĕнентерет. Каярахпа унăн шухăшĕсене И.С.Галкин кăшт çĕнетет, тата 3 падеж тупса палăртать. Çапла вара пĕтĕмĕшле мари чĕлхинче 15 падеж пуррине кăтартма май килет.

Пысăках мар, анчах анлă та кăткăс ыйтусене пăхса тухакан "Валлийская конструкция и проблема происхождения суффикса родительного падежа в уральских языках" (1965) статьяна асăнса хăвармасăр иртме çук. Кунта автор камăнлăх падеж аффиксĕ пулса кайнине пачах çĕнĕлле ăнлантарать. Ку суффикс, автор шухăшĕпе, локатив суффиксĕнчен те мар, паллă ячĕн камăнлăх суффиксĕнчен те мар – комитатив-инструктив суффиксĕнчен пулса кайнă. "Два спорных вопроса сравнительной грамматики финно-угорских языков

(“Финн-угор чӗлхисен танлаштаруллӑ грамматикин икӗ тавлашуллӑ ыйтӑвӗ”) (1959) статйинче Б.А.Серебренников балтика-финн чӗлхисенчи тулаш вырӑн падежӗнчи *–л* элемента *(-ла)* сӑмах тӑвакан суффиксран пулса кайнӑ тесе шутланакансене) мари чӗлхинчи танлаштару падежӗн *–ла* суффиксӗпе тӳр килтерсе пӑхать. Унсӑр пуҫне, ҫав суффикса Серебренников финн-угор чӗлхисенче те тупса палӑртать. “О некоторых проблемах истории финно-угорских языков” (“Финн-угор чӗлхисен историйӗнчи хӑш-пӗр ыйвӑрлӑхсем ҫинчен) (1982) статьяра Серебренников урал чӗлхинче *–л* суффикслӑ падеж пур текен шухӑша пит ӗнентерӳллӗ малалла тӑсать. Ҫак статьяра *–л* суффикслӑ падежа чӗлхеҫӗ экстралокатив ят парать. Серебренников пысӑках мар, ҫапах та тарӑн шухӑшлӑ “Из истории некоторых морфологических образований марийского языка” (“Мари чӗлхинче хӑш-пӗр морфологи пулӑмӗсем пулса кайнин историйӗнчен”) (1963) статйинче мари чӗлхинчи тӗрлӗрен морфологи пулӑмӗсен историне пӑхса тухать.

Б.А.Серебренников “На ненецкие и марийские темы” (1969) пит интереслӗ те витӗмлӗ статйинче авалхи мари чӗлхинчи нумайлӑх хисепӗн -т кӑтартӑвӗ ҫухалнин тӗрӗс сӑлтавне тупса палӑртать. “Об одном тюркизме в финно-угорских языках Волго-Камья” (“Атӑлпа Кама тӑрӑхӗнчи финн-угор чӗлхисенчи тюркизм пирки”) (1971) статйинче вара вӑл мари чӗлхинчи *-ак, -ат* палӑрту татӑкӗсене чӑваш чӗлхинчи *-ах, -та(-те),* тутар чӗлхинчи *-да(-дэ)* татӑксемпе танлаштарать. Ку шухӑша Серебренников “О значении и происхождении выделительных частиц *-ак* и *-ат* в марийском языке” (“Мари чӗлхинчи *-ак* тата *-ат* палӑрту татӑкӗсен пулса кайнипе пӗлтерӗшӗ”) (1975) статйинче малалла тӑсать.

Б.А.Серебренниковӑн мари чӗлхинчи историллӗ фонетика ыйтӑвӗсене пӑхса тухакан статйисем те пысӑк пӗлтерӗшлӗ: “Мари тата чӑваш чӗлхисенчи <а> сасӑн историйӗ” (1957), “Финн-угор чӗлхисен танлаштаруллӑ грамматикин икӗ тавлашуллӑ ыйтӑвӗ ” (1959), “Мари

чĕлхинче иккĕмĕшле <с> пулса кайнин сăлтавĕсем" (1964) т. ыт.те.

Урал вокализмне пăхнă май Б.А.Серебренников "Урал вокализмĕн аталанăвĕн хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем" (1965) статйинче урал чĕлхисене тăватă пая уйăрать: 1) вăтам; 2) арктика; 3) перм; 4) мари. "Чĕлхесем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни (субстрат ыйтăвĕ)" (1955) статйинче вара вăл марипе чăваш чĕлхисен материалĕсем тăрăх пĕтĕмĕшле чĕлхе субстрат пăтăрмахне татса парать. Кунта вăл мари тата чăваш чĕлхисем пĕр-пĕрне витĕм кӳни çинчен çырса кăтартать. Каласа хăварас пулать: Б.А.Серебренников хăш-пĕр ĕçĕсене чĕлхесен хутшăнăвĕсене халалласа çырнă.

Б.А.Серебренниковăн И.Исанбаевпа пĕрле çырнă "Хĕвелтухăçĕнчи финн-угор чĕлхисем тата вĕсем Атăл тăрăхĕнчи тĕрĕк чĕлхисен историйĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулни" (1979) статья кăсăк. Авторсем удмурт, мордва, мари чĕлхисем тĕрĕк чĕлхисенчен йышăннă элементсем историллĕ фонетикăшăн пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартаççĕ тата тĕрĕк чĕлхисенчен кĕнĕ йышăнусен хронологи тапхăрне палăртма пулăшаççĕ. Пĕтĕмĕшле тата танлаштаруллă чĕлхе пĕлĕвĕн, финн-угор, тĕрĕк чĕлхисен специалисчĕ Б.А.Серебренников XX ĕмĕрти чĕлхе пĕлĕвĕн йывăрлăхĕсене ăнăçлă тишкерсе тухса татса парать: чĕлхе аталанăвĕн историллĕ процесĕ, чĕлхен обществăри вырăнĕ, чĕлхе тата шухăшлав, шалти закона пăхăнса тăракан чĕлхе тытăмĕ, типологи тата чĕлхесен теориллĕ никĕс (тĕп) классификацийĕ. Б.А.Серебренников çырса кăтартнă меслетлĕх принципĕсем тата чĕлхе вĕрентĕвĕн теорийĕ "Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ" (1970-1973) ятлă виçĕ томлă ĕçĕнче палăраççĕ (ăна ГДРта икĕ хут кăларнă, венгрла тата болгарла куçарнă).

Борис Александрович 350 ытла ĕç пичетленĕ, вĕсен хушшинче çакăн пек монографисем: "Финн чĕлхин грамматики. Фонетика тата морфологи" (1958), "Перм чĕлхисен историллĕ морфологийĕ" (1963), "Мордва чĕлхисен историллĕ морфологийĕ" (1967), "Чĕлхе системин хăйтĕллĕнлĕх аталанăвĕ пирки" (1968), "Компаративистикăра пулма пултаракан никĕссем"

(1974), "Чĕлхе пулăмĕсене материалистла пăхни" (1983) т.ыт.те.

Б.А.Серебренниковăн ĕçĕсем:

"Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ. Чĕлхен шалти структури" (1972), "Финн-угор чĕлхисен историпе типологи тĕпчевĕ" (1978), "Чĕлхери çын факторĕн вырăнĕ: чĕлхе тата тĕнче ўкерчĕкĕ" (1988), "Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă-историллĕ грамматики" (1986), "Чĕлхесен хутшăнăвĕ çинчен" (1955), "Финн-угор чĕлхисен хăш-пĕр йывăрлăхсем çинчен" (1982), "Атăлпа Кама тăрăхĕнчи финн-угор чĕлхисенчи пĕр тюркизм пирки" (1971), "Мари чĕлхинче хăш-пĕр морфологилле пулăмсем пулса кайни историйĕнчен" (1963), "Финн чĕлхин грамматики. Фонетика тата морфологи" (1958), "Мари чĕлхинче иккĕмĕшле [с] пулса кайнин йывăрлăхĕсем" (1964), "Мари чĕлхинчи падежсен хальхи тата авалхи системи" (1964), "Мари чĕлхинчи *-сен* тата *-ат* палăрту татăкĕсем пулса кайни, вĕсен пĕлтерĕшĕ" (1975), "Мари тата чăваш чĕлхисенчи [а] сасăн историйĕ" (1957), "Урал вокализмĕ аталанăвĕн хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем" (1965), "Хĕвелтухăçĕнчи финн-угор чĕлхисем тата вĕсем Атăл тăрăхĕнчи тĕрĕк чĕлхисен историшĕн пĕлтерĕшлĕ пулни" (1979), "Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ" (3 томпа, 1970-1973), "Чăваш тата мари чĕлхисенчи изоглосса" (1953), "Коми-зырян, удмурт тата мари чĕлхисенчи хăш-пĕр интереслĕ формăсем çинчен" (1958), "Урал чĕлхисенчи Валли конструкцийĕсем тата камăнлăх падежĕн суффиксĕ пулса кайни" (1965) т. ыт. те.

Усă курмалли литература

Галкин И.С. Академик Б.А.Серебренников и марийское языкознание // Вопросы марийского языка: Грамматика и лексикология. – Йошкар-Ола, 1986.

## 10§. А.Н.Кононов (1906-1986)

2006 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче Андрей Николаевич Кононов академик çуралнăранпа 100 çул çитет. Вăл 55 çул хушши тĕрĕк тата тухăç халăхĕсен

чĕлхисене тĕпченĕ. Тĕрĕк чĕлхисен грамматика тытăмне, лексикологине, этимологине, текстологине, тухăç халăхĕсен историйĕпе этеплĕхне тĕпчесе çырнă ĕçсен авторĕ.

Кононов тĕпчевĕсенче сайра тĕл пулакан, наукăра пурте ăнланса илме пултаракан пулăмсем палăраççĕ. Тюркологи историйĕпе тухăç литературин пĕлĕвĕнче ăсчах тимлемесĕр ирттернĕ енсем çук.

Андрей Николаевич – вырăс классикăлла востоковеденин тата тюркологири Радлов традицийĕсен тивĕçлĕ представителĕ.

Унăн ăслăлăхри тĕнчекурăмĕн пуçламăшĕ çинчен калас пулсан, çакна палăртса хăвармалла: А.Н.Кононова тюрколог-чĕлхеçĕ пек йĕркеленме П.М.Мелиоранский ăсчахăн творчествăлла эткерĕ пулăшнă. П.М.Мелиоранский пуçласа тюркологире тĕрĕк чĕлхисен грамматика формисемпе синтаксис конструкцийĕсен хăйнеевĕрлĕхне тата тĕп уйрăмлăхĕсене шута илме тытăнать. Шăп та çак тĕллевсене кăларса тăратать Андрей Николаевич хăйĕн çак ĕçĕсенче:

Туркkă чĕлхин грамматики (1941)

Узбек чĕлхин грамматики (1948)

Хальхи туркkă литература чĕлхин грамматики (1956)

Хальхи узбек литература чĕлхин грамматики (1960)

Тĕрĕксен VII-IX ĕмĕрсенчи руна палăкĕсен грамматики (1980)

Андрей Николаевичăн тĕрĕк историйĕпе çырнă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçĕсене "Тĕрĕк чĕлхисене Раççейре вĕрентессин историйĕ: Революцичченхи тапхăр" (1972, 1982), "Совет тюркологĕсен библиографи словарĕ: Революцичченхи тапхăр" (1974, 1989) икĕ кăларăмпа тухнă хайлавĕсенче вулама пулать.

Кононова хăйĕн пĕтĕм наука ĕçĕсенче тĕрĕксен культурин тĕрлĕ палăрăмĕсем кăсăклантарнă. Ытти тĕрĕк ăсчахĕсемпе авторĕсен алçырăвĕсене пичете хатĕрлес ĕçе хутшăнать. Çавăн пекех вăл Алишер Навоин ("Возлюбленный сердец", 1948) тата Абу-ль-Гази-хан ("Родословная туркмен", 1958) сочиненийĕсен

пĕтĕмĕшле тексчĕсене ăнлантарса çырать. Андрей Николаевич ăслăлăх ертӳçи пулни те ун пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Вăл активлă хутшăннипе Бакура ăслăлăх академийĕн “Совет тюркологийĕ” ятлă журнал 1970-1994 çулсенче тухса тăрать. 1973 çулта СССР Наукăсен Академийĕн литературăпа чĕлхе академийĕ çумĕнче совет тюркологĕсен комитечĕ йĕркеленет. Комитет йĕркелес шухăша Кононов сĕннĕ. Журнал тата комитет тюркологсене пĕрле пĕтĕçтерме пулăшнă. Енчен те Андрей Николаевич хальхи тюркологи тытăмне хăй куçĕсемпе курас пулсан, йăлана кĕнĕ пулăмсемпе пĕрлех çĕнĕ палăрăмсене те курнă пулĕччĕ. Пурнăçĕн юлашки çулĕсенче унăн тĕрĕк чĕлхин пĕлĕвĕпе, литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕпе, халăх сăмахлăхĕпе йăлана кĕнĕ юхăмпа çырнă паллă ĕçсем кун çути курнă. Раççей Наука Академи институчĕн тата Кăркăстан тĕпчев институчĕн ĕçтешĕсен пĕрлĕхлĕ ĕçĕ – “Манас” 4 томпа икĕ чĕлхепе пĕрремĕш хут пичетленсе тухать. 1995 çулта Бишкекра тĕнчери чи пысăк эпосăн çуралнă кунне, 1000 çулне, паллă тунă. 1992 çулта Хусанта тĕнчери тюркологи конференцийĕ иртнĕ. Çавăн пекех 1996 çулхи авăн уйăхĕнче Уфа хулинче 7-мĕш конференци иртнĕ. Çак вăхăтра журнал тухма пăрахать тата комитет саланса каять. Ăслăлăх коллективĕсем пĕрлешсе наци ыйтăвĕсемпе ĕçлеме тытăнаççĕ. Якутире, Пушкăртра, Тутарстан республикинче, Чăваш республикинче наци академийĕсем йĕркеленни те паллă самант.

Раççей Федерацийĕнчи тĕрĕк халăхĕсене аталантарас тесе РФ наци тата регион политики енĕпе ĕçлекен министерство 1994 çулта патшалăх программин “Возрождение и развитие тюркских народов России” концепцине йышăнать, 1995 çулта Раççейри тĕрĕк халăхĕсен конгресĕ йĕркеленет. Конгресс Раççейри тĕрĕк халăхĕсен чĕлхине тата культурине аталантарас программа хатĕрлет. 1996 çулта министерство 1-мĕш тĕрĕк патшалăхĕ йĕркеленни 1450 çул çитнине халалласа ăслăлăх конференцийĕ иртterет.

А.Н. Кононов академик – ăсчах тата ăслăлăх ертӳçи. Андрей Николаевич Кононов ăслăлăхра 30-мĕш çулсенче палăрнă. Çак вăхăтра совет востоковеденийĕнче чаплă ученăйсем ĕçленĕ: С.Е.Малов, А.Н.Самойлович, Н.К.Дмитриев, В.В.Бартольд, И.Ю.Крачковский. Вĕсем Кононова ăслăлăхра палăрма пулăшнă. Кононов Ленинградри тухăç халăхĕсен институтĕнче вĕреннĕ вăхăтра çак ыйтусем тĕп вырăнта пулнă: тĕрĕк чĕлхисен грамматикине, тĕрĕк çырулăхĕн палăкĕсене тата сăмахлăхне, тĕрĕк чĕлхисен историне алтаистика, историографи, тюркологи тата востоковедени ыйтăвĕсене тĕпчесси.

Тĕрлĕ пулăмсене истори енчен тишкерни – Кононовăн тĕпчев ĕçĕсенчи тĕп уйрăмлăхсем. 1931 çулта вăл Ленинградри Тухăç институтĕнче вĕрентме тытăнать. 1934 çулта Ленинградри патшалăх университетĕнче вĕрентет, тухăç факультечĕн тĕрĕк филологийĕн кафедрин пуçлăхĕнче вăй хурать, тухăç факультечĕн деканĕ пулса ĕçлет. Вăл темиçе ăрури тюрколог-тĕпчевçĕсене вĕрентсе кăларнă: вĕсем пирĕн çĕршывăн тĕрлĕ ăслăлăх тата педагогика учрежденийĕсенче вăй хураççĕ. 1943 çултан пуçласа Ленинградра пĕлӳ илнĕ тюркологсем – пурте Кононовăн вĕренекенĕсем. Тĕпчевçĕ шкулĕ витĕр темиçе теçетке ăслăлăх кандидачĕсем тата докторĕсем тухнă. Вăл вĕренекенсене хăйĕн специальноçне çеç мар, çыннăн ырă енĕсене те хаклама вĕрентнĕ.

Андрей Николаевич туркка тата узбек чĕлхисен грамматикине тĕпченĕ, мĕншĕн тесен вĕсен çырулăх историйĕ пуян. 1934 çулта Х.Джевдетзадепе пĕрле "Хальхи туркка чĕлхин грамматикине" çырса хатĕрленĕ. Унта вăл туркка чĕлхин грамматикине тата тĕрĕк грамматика системин пĕтĕмĕшле тĕпчевĕсене кĕртнĕ. Кăшт каярах, 1941 çулта, "Туркка чĕлхин грамматики" пичетленсе тухать. Унта туркка чĕлхин фонетикине тата грамматикине туллин çырса панă. Çак лингвистика тишкерĕвĕн мелĕпе вăл малаллахи ĕçсенче усă курнă.

1940 çулта Кононов Алишер Навоин “Махбуб-ул-Кулуб” хайлавăн пĕтĕмĕшле текстне çырнă. Ку хайлав писателĕн пултарулăхне тĕпчес ĕçре пысăк вырăн йышăнать.

1956 çулта “Туркă литература чĕлхин грамматики” пичетленсе тухать. Çак ĕçĕн чи паллă уйрăмлăхĕ – грамматика формисен семантикине тарăн тишкерни. Ку мелпе усă курса Кононов япала ячĕпе паллă ячĕсен, паллă ячĕпе наречисен пĕр пеклĕхĕсене тупса палăртать. Сăмах пулăвĕн системи пурри пирки вĕсене кашнинех уйрăм пуплев пайĕ пек пăхмалла, тет. Ыйтусене синтаксис енчен тишкерни кирлех мар, пуплев пайĕсен морфологине тĕпчени те çителĕклĕ тесе шутлать.

Тĕпчевçĕ тĕрĕк чĕлхисен литература палăкĕсемпе ĕçлет. Абул Гази çырнă “Родословная туркмен”, “Книга моего деда Коркута” огуз паттăрлăх эпосне тĕпчет. 1958 çулта “Родословная туркмен” ĕçĕн пĕтĕмĕшле текстне пичетленĕ, унта хайлавăн вырăсла куçарăвĕсĕр, грамматика очеркĕсĕр, историпе филологи комментарийĕсĕр пуçне Вăтам Ази историне, лингвистика тата историпе культура ыйтăвĕсене татса пани пур. 1962 çулта Кононов В.М.Жирмунский академикпа пĕрле тĕрĕк халăхĕсен “Книга моего деда Коркута” эпосне пичете хатĕрлет. Ку кĕнекене вăл питĕ нумай ăнлантару тата вырăс вариантне кĕртнĕ. Вырăсла В.В.Бартольд академикпа пĕрле куçарнă.

Малаллахи ĕçĕсене Кононов узбек чĕлхин грамматикине тĕпчессине халалланă. Чи паллă ĕçĕ – “Хальхи узбек литература чĕлхин грамматики”. Ăна вăл 1960 çулта пичетлесе кăларнă. Кунта вăл узбек чĕлхин грамматика пулăмĕсене тĕрĕк чĕлхи пĕлĕвĕн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсемпе пĕр рете лартать. Ку ĕçе ытти нумай тĕрĕк чĕлхисен грамматикине тишкерекенсем лайăх йышăнаççĕ. Кононовăн ĕçĕсен уйрăм ушкăнне вырăс востоковеденипе тата тюркологийĕн историпе çырнă статьясем тата монографисем кĕреççĕ. 1972 çулта Кононов “Раççейри тĕрĕк чĕлхисене вĕренессин историйĕ. Революцичченхи тапхăр” пичетлесе кăларать. 1974 çулта вăл тăрăшнипе “Совет тюркологĕсен библиографи словарĕ. Октябрьчченхи тапхăр” кун çути

курать. Çавăн пекех Кононов тĕрĕк чĕлхисен синхрони тата диахрони грамматикин тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе ĕçлет. Унсăр пуçне унăн çак ĕçĕсене палăртмалла:

"Показатели собирательности-множественности в тюркских языках" (1969).

"Опыт реконструкции тюркского деепричастия на *п / б*", (1969).

"Некоторые проблемы исторического синтаксиса тюркских языков" (1973).

"Из наблюдений над синтаксисом надписи Тоньюкука" (1973).

"О семантике слов *кара* и *ак* в тюркской географической терминологии" (1954).

"К этимологии слова *огул* "сын" (1958).

Ку ĕçсенче Кононов морфологи, синтаксис, лексикăн хăш-пĕр ыйтăвĕсене çутатса панă. Тĕрĕк чĕлхисен историне тарăннăн тĕпчес тесен алтаистика тунă çитĕнӳсене тишкермелле, тĕрĕк, монгол, тунгус-маньчжур чĕлхисене шайлаштарса пăхмалла. Ку ыйтăва Кононов "Актуальные тюркские заметки", "Некоторые итоги развития советской тюркологии и задачи советского комитета тюркологов" ĕçĕсенче лайăх уçса панă.

В.В.Радлов, П.М.Мелиоранский, А.И.Самойлович, С.Е.Малов тюрколог-востоковедсене Кононов ырăпа асăнать. Вăл ертсе пынипе Ленинградра паллă вырăс тата совет тюркологĕсене халалланă пĕтĕм Союзри тюркологи конференцийĕсем иртнĕ. Конференци материалĕсен пĕтĕмлетĕвĕсене 6 пухха кĕртсе Кононов редакциленĕ.

45 çул хушшинче Кононов теори тата ятарлă тюркологипе хатĕрленĕ лекцисем нумай вуланă. Ку вара çамрăк ăсчахсем хатĕрлес ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Теори курсĕсем хушшинче çак ĕçсене асăнса хăвармалла: "Грамматика турецкого языка в научном освещении", "История турецкого языка", "Памятники древнетюркской письменности", "Введение в тюркское языкознание".

Андрей Николаевич – талантлă ăслăлăх ертӳçи. Нумай çул хушши вăл Ăслăлăх Совечĕн председателĕнче тата тĕрĕк-монгол уйрăмĕн кабинечĕн

заведующийĕнче вăй хунă. Темиçе хутчен ăна Ленинградри патшалăх университечĕн тухăç факультетне ертсе пыма суйланă. Çавăн пекех, Андрей Николаевич – тĕрлĕ ăслăлăх хаçат-журнал редколлеги членĕ, тюркологипе çырнă нумай ĕçсен редакторĕ. Кононов хăйĕн ĕçĕсене ют çĕршыври тĕрлĕ конгрессенче тăратнă. Тĕслĕхрен, Лондонра, Мускавра тата Парижра иртнĕ тĕрлĕ халăх востоковечĕсен конгресне, Анкарара Турккă лингвисчĕсен пĕрлĕхĕн съездне хутшăннă.

А.Н.Кононов ĕçĕсем ăслăлăхра пысăк пĕлтерĕшлĕ, тĕнче ăслăлăхĕнче совет тюркологийĕн ятне çӳле çĕкленĕ. 1958 çулта Кононова НА член-корреспондентне, 1974 çулта НА чăн членĕ пулма суйлаççĕ. Кононов тĕрлĕ правительство наградисем илме тивĕçлĕ пулнă: икĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Халăхсен Туслăхĕн, "Хисеп Палли" орденсем, тĕрлĕ медальсем, алтаистика тĕпчевĕсемшĕн Блунингстон университечĕн ылтăн медалĕ.

Усă курмалли литература

1. Иванов С.Н., Тенишев Э.Р. Памяти академика Л.Н.Кононова // Изв. АН СССР. Сер. лит. и яз. – 1996. – Т.55, №6. – С.47-49.
2. Кляшторный С.С. К 70-летию академика А.Н.Кононова // Изв. АН СССР. Сер. лит. и яз. – 1976. – Т.35, №5. – С.477-478.
3. Насилов Д.М., А.Н.Кононов (К 70-летию со дня рождения) // Филол. науки. – 1976. – №4. – С.124-125.
4. Тенишев Э.Р. Академик А.Н.Кононов – ученый и организатор науки // Сов. тюркология. – 1976. – №3. – С.68.

## 11§. Н.А.Баскаков (1905-1993)

Николай Александрович Баскаков Грязовец хулинче вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн 1925 çулта Мускав университечĕн историпе этнографи факультетне вĕренме кĕрет, В.В.Бартольд, В.А.Гордлевский академиксен, А.Н.Максимов, В.К.Трутовский профессорсен лекцисене итлет. В.А.Гордлевский вара Баскакова наука ĕçĕпе кăсăкланса каяс ĕçре пысăк витĕм кӳрет.

1929 çулта университет пĕтерсен 25 çулхи çамрăк ученăй Каракалпак наукăпа тĕпчев институчĕн этнологи секцийĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. Уншăн пĕтĕм пурнăçĕн тĕпчев объекчĕ – каракалпак чĕлхи пулса тăрать.

1930 çулта пичетленнĕ пĕрремĕш ĕçĕ каракалпак чĕлхин орфографийĕпе çыхăннă. Каярахпа "Каракалпак чĕлхин кĕске грамматики" пичетленет (Турткуль, 1932). Çак ĕç темиçе çултан "Каракалпак чĕлхи" ятлă тĕпчев пулса тăрать. Вăтам Азие этнограф пулса кайнăскер, Мускава лингвист пулса таврăнать. Николай Александрович Баскаковăн малаллахи ĕçĕсем Мускаври аслă вĕрентӳ учрежденийĕсемпе çыхăннă.

Николай Александрович – нумай енлĕ аталаннă этем, унăн интересĕсем тĕрлĕ енлĕ. Хăй пурăннă чухнех питĕ нумай наука статйисем тата тĕрĕк чĕлхисен фонетика, морфологи, синтаксис ыйтăвĕсемпе çыхăннă грамматика очеркĕсен серине çырса хатĕрлет, пичетлет. Маларах сахал тĕпченĕ каракалпак, алтай, турккă, хакасс, нухай, çĕнĕ уйгур, гагауз, кăркăс чĕлхисемпе çырнă ĕçĕсен йышĕ чылай Баскаковăн.

Лексикографири ĕçĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк. Уйгурла-вырăсла (М., 1947), вырăсла-каракалпакла (М., 1948), хакасла-вырăсла (М., 1958), вырăсла-туркменла (М., 1956), вырăсла-нухайла (М., 1956), нухайла-вырăсла (М., 1963), каракалпакла-вырăсла-полякла (М., 1974) тата ытти словарьсен редакторĕ пулнă Николай Александрович.

1960 çулта Мускавра тухнă "Тĕрĕк чĕлхисем" ĕçĕ хăйĕн тĕпчевĕн пĕтĕмлетӳллĕ монографи ретĕнче пĕрремĕшĕ пулса тăрать. Çак монографие, икĕ кăларăмпа, патшалăх университечĕсем валли учебник пек пичетленĕ. Ун ячĕ - "Тĕрĕк чĕлхисен вĕрентĕвĕн кӳртĕмĕ" (М., 1952; М., 1969).

Николай Александрович Баскакова чĕлхесен типологилле характеристикипе çыхăннă ыйтусем яланах интереслентернĕ. Тĕрĕк, монгол, тунгус-маньчжур чĕлхисен генетикăлла тăванлăх проблемипе интересленмесĕр пултарайман вăл. Асăннă чĕлхесен танлаштаруллă-историлле тĕпчевне ирттернĕ хыççăн вĕсен аталанăвĕн ултă тĕп тапхăрне тупса палăртать:

1) Алтай тапхăрĕ. Ку тапхăрта монгол, тĕрĕк, тунгус чĕлхисен пĕр пĕтĕмĕшле кăк чĕлхи пулнă. Кайран вара алтай пĕрлĕхĕ тунгус-маньчжур тата тĕрĕк-монгол чĕлхисем çине пайланса каять;

2) Хун тапхăрĕ (IV ĕмĕрччен);

3) Авалхи тĕрĕк тапхăрĕ (V-X ĕмĕрсем);

4) Тĕрĕк халăхĕпе чĕлхисем йĕркеленнĕ тата аталаннă тапхăр (X-XVI ĕмĕрсем);

5) Хальхи тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсем йĕркеленсе аталаннă тапхăр (XVI-XIX ĕмĕрсем);

6) Тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен наци йĕркеленĕвĕн тапхăрĕ (XIX ĕмĕр вĕçĕ - XX ĕмĕр).

Палăртнă шухăш çӳлерех асăннă монографисенче тата икĕ томпа тухнă "СССР халăхĕсен чĕлхисем" (М., 1966) кĕнекере пур.

"Труды Н.А.Баскакова говорят не только за себя, но в известной мере и за состояние советской тюркологии. Красной строкой будет вписана в историю тюркологии 55-летняя деятельность Николая Александровича Баскакова",- тесе çырать М.Р.Федотов.

Николай Александрович Баскаков ĕçĕ-хĕлĕн нумайенлĕхĕ пирки каланă май тĕрĕк чĕлхисем валли çырса хатĕрленĕ алфавичĕсемпе орфографийĕсене, наци шкулĕсем валли кăларнă методика рекомендацийĕсене асăнса хăварас пулать. Николай Александровичăн алфавит, правописани, орфоэпи, терминологи ыйтăвĕсемпе ирттернĕ тĕпчевĕсем пĕтĕмĕшле тĕрĕк чĕлхисен тĕпчевĕн шайĕнче паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак ĕçсене асăнса хăварсан вырăнлă пулать: "Шор, хакас алфавичĕсемпе çыхăннă ыйтусем", "Нухай орфографийĕн правилисен пуххи", "Вăтам Азири тĕрĕк чĕлхисен грамматика терминологийĕпе çыхăннă ыйтусем", "СССР халăх чĕлхисен терминологийĕн паянхи шайĕ".

Наука ĕçĕпе пĕрлех Баскаков вĕрентӳ ĕçĕнче тăрăшса вăй хурать. 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вăл КУТВри тĕрĕк чĕлхисен кафедрин доцентĕ, каярахпа Наукăпа тĕпчев тĕп педагогика институтĕнче аспирантсен ĕçĕсене йĕркелесе пырать. 1938-1950 çулсенче ученăй Нариманов ячĕллĕ Востоковедени

Институчĕн уйгур чĕлхи кафедрин доценчĕ пулса ĕçлет (кунта вăл хальхи çĕнĕ уйгур чĕлхисен курсĕсене, уйгур диалектологине, Вăтам Ази литература чĕлхи дисциплинăсене вĕрентет). 1942-1948 çулсенче вара Н.А.Баскаков Мускаври педагогика институчĕн алтай чĕлхипе литератури кафедрин ĕçĕ-хĕлне ертсе пырать (хальхи алтай чĕлхипе, алтай литературипе, чĕлхе пĕлĕвĕн кӳртĕмĕпе лекцисем вулать). Чылай аспирант Н.А.Баскаков шкулĕнче тюркологи кӳртĕмĕ, авалхи тĕрĕк чĕлхисем спецкурс лекцийĕсене итленĕ.

Нумай çул хушши ертӳçĕ ĕçĕсенче вăй хунă Н.А.Баскаков. Вузсемпе шкулсене пулăшу паракан консультаципе методика комисси председателĕнче, наци чĕлхисен аталанăвĕн йĕркисене тĕпчекен Наука совечĕн председателĕн çумĕнче, тюркологсен комитечĕн, Ленин тата Патшалăх премийĕсене парас енпе ĕçлекен комисси, “Совет тюркологийĕ”, “Чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем”, “ОЛЯ хыпарĕсем” т.ыт. журналсен редколлеги, ВАК чĕлхе пĕлĕвĕн комисси, СССР НА Чĕлхе пĕлĕвĕн институчĕн, СССР НА Востоковедени институчĕн, РСФСР педагогика наукисен Академийĕн наци шкулĕсен Институчĕн ăслăлăх совечĕн, доктор диссертацийĕсене хӳтĕлес ĕçри спецсовет ĕçĕсенче активлăн вăй хурать.

Усă курмалли литература

1. Поцелуевский Е.А., Тенишев Э.Р. Николай Александрович Баскаков: Филолог // Сов. тюркология. – 1980. – №2. – С.87-88.

2. Поцелуевский Е.А., Тенишев Э.Р. Н.А.Баскаков: К 85-летию со дня рождения // Сов. тюркология. – 1990. – №3. – С.106-108.

3. Поцелуевский Е.А., Тенишев Э.Р. Н.А.Баскаков // Сов. тюркология – 1985. – №2. – С.95-97.

4. Севортян Э.В. Советский тюрколог // Сов. тюркология. – 1975. – №3. – С.73-75.

Ыйтусемпе ĕçсем

1. Чĕлхе наукинче Н.Я.Марр мĕнпе палăрса юлнă?

2. И.И.Мещанинов Н.Я.Марр вĕренекенĕ е ăна хирĕçлекенĕ пулнă?

3. Л.В.Щербăн чĕлхе ăслăлăхĕнчи пултарулăхĕн тĕрлĕ енлĕ пулнине мĕнпе ăнлантарма пулать?

4. Л.В.Щерба фонетикăна фонологи пирки мĕн каланă?

5. Г.О.Винокур Д.Н.Ушаковăн вĕренекенĕ пулнине мĕнпе ĕнентерме пулать?

6. В.В.Виноградовăн вырăс чĕлхе ăслăлăхĕнчи тÿпине мĕнле хаклама пулать?

7. Е.Д.Поливанов чĕлхе эволюци ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçĕ хăçан тата мĕнле чĕлхепе пичетленсе тухнă?

8. А.И.Смирницкий чĕлхе ăслăлăхĕнчи кăсăклăхĕ мĕнле-мĕнле чĕлхесемпе çыхăннă?

9. Б.А.Серебренниковăн пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕпе çыхăннă ĕçĕсене асăнăр.

10. XX ĕмĕрти тюркологи аталанăвĕ мĕнле хушаматсемпе çыхăннă?

11. А.Н.Кононовпа тата Н.А.Баскаковăн тĕп ĕçĕсене асăнăр.

## Тупмалли

Кӳртӗм ........ 3
I сыпӑк. Лингвистика вӗрентӗвӗн историйӗ. ........ 6
1§. Авалӑхри классикӑлла филологи ........ 6
2§. Авалхи Грецири тата Римри чӗлхе пӗлӗвӗ ........ 9
3§. Александри грамматикин системи ........ 17
4§. Авалхи Римри чӗлхе пӗлӗвӗ. Антика чӗлхе тӗпчевӗн пӗлтерӗшӗ ........ 19
5§. Наукӑпа искусство чӗрӗлсе аталанма пуҫланӑ тапхӑрти чӗлхе пӗлӗвӗн аталанӑвӗ (вӑтам ӗмӗрсемччен тата вӗсем хыҫҫӑн) ........ 21
6§. Араб чӗлхе пӗлӗвӗ аталанни ........ 22
7§. Кашгар Махмучӗ – пирвайхи тюрколог-энциклопедист ........ 23
8§. Чӗлхе пӗлӗвӗ XV-XVIII ӗмӗрсенче аталанни. Универсаллӑ логика грамматики ........ 30
9§. Халӑхсем хутшӑнмалли пӗрлӗхлӗ чӗлхе тӑвас туртӑм. Чӗлхене истори тӗлӗшӗнчен танлаштарулла мелпе тӗпчес ыйтусем ҫурални ........ 33
10§. Славян ҫӗршывӗсенче чӗлхе пӗлӗвӗ аталанни ........ 36
11§. М.В.Ломоносов пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ ........ 37
12§. Танлаштарулла чӗлхе пӗлӗвӗ аталанни ........ 42
2 сыпӑк. Пӗтӗмӗшле чӗлхе пӗлӗвӗ пуҫланса кайни ........ 53
1§. В.Гумбольдтӑн чӗлхе философийӗ ........ 53
2§. А.Шлейхерӑн чӗлхе концепцийӗ ........ 59
3§. Чӗлхе пӗлӗвӗнчи психологизм. А.А.Потебня ӗҫӗ-хӗлӗ ........ 62
4§. Младограмматиксем тата младограмматизм ........ 69
3 сыпӑк. XIX ӗмӗрти чӗлхе пӗлӗвӗ ........ 74
1§. Хусанти лингвистика шкулӗ тата унӑн ертӳҫи И.А.Бодуэн де Куртенэ ........ 74
2§. Н.В.Крушевский (1851-1887) ........ 85
3§. В.А.Богородицкий (1857-1941) ........ 93
4§. Мускав лингвистика шкулӗ ........ 98
5§. А.А. Шахматов (1864-1920) ........ 106
6§. А.А.Шахматовӑн «Хальхи вырӑс литература чӗлхин очеркӗ» ӗҫӗ XII сыпӑк. Япала ячӗ ........ 108
7§. А.М.Пешковский ........ 110
8§. Фердинанд де Соссюрӑн чӗлхе (лингвистика) концепцийӗ ........ 117
4 сыпӑк. Прагӑри лингвистика (чӗлхе пӗлӗвӗн) шкулӗ ........ 128
1§. Структура лингвистики (структурализм) ........ 128
2§. Глоссематика (Дани структурализмӗ) ........ 132
3§. СШАри дескриптивлӑ чӗлхе пӗлӗвӗ ........ 134
5 сыпӑк. Чӗлхен эстетика концепцийӗ (К.Фосслер) ........ 140
6 сыпӑк. Этнолингвистика. Социолингвистика ........ 143
1§. Эдуард Сепир ........ 143
2§. Наум Хомский ........ 151
7 сыпӑк. Чӗлхе пӗлӗвӗ совет саманин 20-50-мӗш ҫулӗсенче аталанни ........ 154
1§. Н.Я.Марр пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ тата вӗрентӗвӗ ........ 154
2§. И.И.Мещанинов (1883–1967) ........ 158
3§. Л.В.Щерба (1880–1944) ........ 164
4§. В.Г.Егоров (1880-1974) ........ 168
5§. Г.О.Винокур (1896–1947) ........ 176
6§. В.В.Виноградов (1894-1969) ........ 180
7§. Е.Д.Поливанов (1891-1938) ........ 182
8§. А.И.Смирницкий (1903-1954) ........ 188
9§. Б.А.Серебренников (1915-1989) ........ 193
10§. А.Н.Кононов (1906-1986) ........ 197
11§. Н.А.Баскаков (1905-1993) ........ 203

50 = 00